**Шупашкар — 2014**



**Михаил СЕНИЭЛЬ**

**Çырнисен пуххи**

**Виççĕмĕш том**

# УЯВ ЁШНИ

***Сăвăсемпе поэмăсем***
***1958—1976***

**Шупашкар — 2014**

ББК 84(2 Рос-Чув)-5
УДК 821.512.111
С 31

**Михаил СЕНИЭЛЬ**
**Çырнисен пуххи. Виççĕмĕш том. Уяв ĕшни.** Сăвăсемпе поэмăсем. 1958—1976. — Шупашкар, 2014. — 712 с., портрет.

ISBN 5—87677—046—9
© М. Сениэль, 2014

# 1958

## КĂНТĂР ÇИЛĔ

Кăнтăр çилĕ вĕрет, кăнтăр çилĕ.
Кăнтăр çилĕ вĕрет кĕркунне.
Чи юратнă самант килсе çитрĕ —
çил лăскать кăлкан пек çӳçĕме.

Пит-куçа, кăкăра — уçă, сиплĕ.
Те хĕвел çурхилле кулнипе,
кăнтăр çилĕ, лĕп çил, кăнтăр çилĕ,
ачашлать те лăпкать анне пек.

Пулчĕ кăшт йӳçĕрех пурнăç манăн.
Тиврĕ ир аякра çӳреме.
Нумай мар та, çапах çупăрланă...
Халăм çук кӳренме аннене.

Çав кашни çупăрлу асра юлчĕ
тĕнчери чи хитре кĕвĕ пек.
Иксĕлмесĕр çунать кĕвĕ вучĕ
ĕмĕрхи факел пек, хĕвел пек.

Çӳçĕмрен те лăсканă. Вара çав...
Вăл та юлчĕ таçта инçене.
Анне мар, мĕн тăвас, анне мар халь,
çил лăскать кăлкан пек çӳçĕме.

*1958*

## ДОЯРКА

Тӗл пулма васкас-ха терӗм,
вӑрттӑн вырӑна ир ҫитрӗм.
Час-ши, час-ши, ҫывӑхскерӗм,
эс килен кунта, савниҫӗм?

Ҫавӑрать юра каҫ ҫилӗ
вальсри пек, сӑпайлӑн, ҫепӗҫ.
Ҫӗн клуба — хӗрпе каччийӗ —
кайӑпӑр тӗл пулнӑҫемӗн.

Ташлӑпӑр вара пит чаплӑ.
Эс те ташӑ юратан вӗт?
Пуҫӑм ҫаврӑнсан, эп чарӑп
кӑшт сана, кулса ытарлӑн.

Санӑн куҫунта курас теп
ӑшӑ туйӑм, ҫутӑ ӗмӗт.
Санпала пӗрле пулас теп,
савнӑ ҫыннӑм, эпӗ ӗмӗр.

Ҫавӑрать юра каҫ ҫилӗ.
Эс студент, поэт эс, тусӑм.
Иртерех доярка ҫитрӗ —
тепринче чӗнмесӗр тухмӑп...

*1958*

## ХĔР ЮРĂÇА

Юррун асамĕсем чуна пырса тивеççĕ.
Çут ĕмĕт çуратан эс чĕрере.
Пурте калаççĕ: савнăçлă вăл теççĕ,
юрла-юрла теç ĕмĕр ирттерет.

Тасан та килĕшӳллĕн, çуттăн, ыррăн
сассу ялан çынсемшĕн янăрать.
Анчах та тăхтăр... савнăç çеç-и юрă?
Хĕнпе асап сахал-и юрăра?

*1958*

## ПĂХМА КĂНА...

Шутлан пуль кулянать тесе.
Çук, çук, кăшт çеç... иртет...
Эп хам пĕлместĕп, мĕн шырап.
Мĕскер-тĕр чун кĕтет.

Хăш чух, тен, кулянать чие,
тăкса шап-шур çеçке?
Вăл та пулин пăхма кăна
салхуллă тет иккен...

*1958*

## ТАЛАНТ ÇУК ПИРКИ ӲПКЕЛЕШНИ

Мĕне шанса мĕскер кĕтетĕп?
Талант пулмарĕ, пулмĕ те.
Вунсаккăрта эп. Ватă эпĕ.
Тултараймарăм ĕмĕте.

Ниме тăманлăха туймашкăн
эп мĕншĕн хал çитертĕм тин?
Ман пек чухне «Нарспи» çырмашкăн
ăçтан пултарнă Кĕçтенттин?

Тен, вăхăт айăплă? Пĕлместĕп.
Мĕнре шырас ун айăпне?
Мĕн курăттăм тупса илес-тĕк?
Епле тупас ăна, епле?

Ман пурнăç — пăлтăр-палтăр тăвăл.
ăнланаймастăп тĕнчене.
Кĕвĕлеме хăрап, мĕн тăвăн,
чунра кĕтсе капланнине.

Кил-йыш ĕçне-хĕлне пĕлетĕп,
пĕлеп ял-йыш ĕçне-хĕлне.
Мĕн-ма, чĕреçĕм, ĕсĕклетĕн?
Шут пур кама ӳпкелеме?

*1958*

## КУÇĂХАСРАН ХĂРАКАН ХĔРСЕНЕ

Темĕн те шутласа кăларатăр...
Нимĕн чул хаяр мар манăн куç.
Сирĕнтенименсе, мĕн вара, куç ан уç?
Култаратăр, хĕрсем, култаратăр.

Шăтарас пек пăхман. Нуши çуккă.
Пурĕпĕр пĕлес çук çын ăсне.
Вăхăт çитĕ, паллană Мишукăр
сăмсине утлантарĕ пенсне.

Вăт ун чух асăрханăр. Чадрасăр ан курнăр.
Куç ӳкерĕп. Тăват куç ӳксен,
ватăличчен курак пек унăн-кунăн
кăранклатăр сар каччă кĕтсе.

*1958*

## ЛИДА

Ĕмĕт пек çап-çутă çăлтăр
çутатать çул инçĕшне.
Çăлтăр мар, çап-çамрăк Лида
килнĕ-тăнă пиччĕшпе.

Тус вăл тус-ха, ăнланатăп.
Йăмăкĕ — епле, ăçтан?
Уйрăлас самант çитет те,
аллине хыт чăмăртап.

Хĕрача-пике вăтаннă,
куçĕ çулăм сирпĕтет.
«Ну, мĕнех, сыв пулăр», — теп те,
шăппăн: «Сывă пулăр...» — тет.

*1958*

* * *

Тул ҫути — хура вăрман ҫинче.
Эп пӳртре ҫутăсăрах ларатăп.
Вăрманҫи сип-сивĕ фонĕнче
умăмри хурăнсене куратăп.

Хурăнсем мĕскер кăна тӳсмен!
Кĕленче чĕреллĕ ҫурҫĕр ҫилĕ
кĕҫĕр уйрăмах кичем те ҫилĕллĕ.
Тăкăрлăк пăч-тĕттĕм те тискер.

Йĕппеле чиксен те куҫ курмасть.
Ăшă пӳлĕмре те сивĕ, сивĕ.
Кĕленче чĕреллĕ ҫурҫĕр ҫилĕ
туйăнать хама лăсканăнах.

Ҫаралаҫҫĕ ҫамрăк хурăнсем,
шăннă ҫĕр ҫине тумне сараҫҫĕ.
Шухăшлатăп та, вĕҫсе анаҫҫĕ
вĕсен мар, яш чунăн ҫулҫисем.

Килтĕм эп вăрман леш енĕнчен.
Пӳлĕмре ҫутăсăрах ларатăп.
Ма ҫутас? Ҫутсан та, ҫутмасан та,
сутăнчăк пике — куҫ умĕнчех.

*1958*

## ÇУРХИ

Ăнлан, юлташăм, ăнлансамччĕ...
Савни пирки — урăх чухне.
Хавас-ши, çук-ши каçхи сачĕ
çак хĕлĕхсен çепĕçлĕхне?

Чие тураттине кăшт сир те
иртсем кунта, çывăхарах.
Нихçан илтменнине эс илтĕн
театра каймасăрах.

Унта пĕлмеççĕ, каламаççĕ
пире савса ыр кĕвĕсем.
Пĕр эпĕ çеç чăн-чăн асамçă.
Ĕнен, юлташăм, ĕненсем.

Енчен те эсĕ ĕненсессĕн
хĕлĕхĕмсен хĕрӳлĕхне,
шур уйăха пуçпа лекмесĕр
эп çитĕп çăлтăрсем патне.

*1958*

* * *

Ман санпа ăнăçмасть калаçу.
Эс манран ютшăнан хĕлĕпех.
Çĕрĕпех ыйхă çук, ыйхă çук
юрату çĕнтерсе илнипе.

Тыткăнра эп, анчах аманман.
Чун сисет чăн тивлет, чăн илем.
Çавăнпа тăрăшмастăп тарма,
тыткăнрах пурăнассăм килет.

Кантăкри туп-тулли уйăх — эс.
Йăлтăратăн, анчах ăшшу çук.
Пĕçертмест йăл куллу, çут куçу,
ютшăнатăн манран хĕлĕпех.

Хĕвел пек ялкăшма мĕн хушмасть?
Мĕншĕн вут-кăвару тĕлĕрет?
Тапратсамччĕ пĕрре ялкăшма,
хăтарсамччĕ çурма тĕттĕмрен.

Сивĕ, сивĕ — шур уйăх çути.
Сивĕ, сивĕ — урам, çут тĕнче.
Палăрать уй енче çил чуппи,
курăнать вĕççĕр-хĕрсĕр инçет.

*1958*

## ХУЛАРИ ТĂКĂРЛĂК

Хăй çутас умĕнхи вăхăтра, кĕркунне,
çакăнта çӳреме юрататăп.
Тĕксĕм те пысăк çурт крыльцине,
алăкне сăнаса, эп итлеп çӳллĕ, ватă
çăкасен ыйхăллă сассине.

Çумăр пĕрĕхкелет. Çил килет хăш чухне.
Çулçăсем, йĕп-йĕпе çулçăсем,
çатлатаççĕ аллея асфальчĕ çине.
Йĕпенетĕп самай, çӳресен-çӳресен.

Хам çавна ним сисместĕп. Кĕрхи ĕнтрĕкре
темĕнле вăрттăн сас ăшăтать чунăма,
темĕнле ыр сăнар чĕреме çупăрлать.
Те чăнра эп çӳреп, те çӳреп тĕлĕкре?

Шкул-ши ку, çак кив çурт, шкул та мар-ши?
Шкул пулсан, эп туяп, алăкран хĕрача тухмалла.
Сумкăпа. Сунчăкпа. Эп ăна ăсатасшăн.
Кам эс, кам? Кам каçхи крыльцаран анмалла?

*1958*

## ЛАНТĂШ

Сĕм вăрманта шур кĕмĕл лантăш
эп татрăм ахаль мар иккен —
сана валли, юратнă тантăш,
сана валли, маттур пике.

Сип-сивĕ сывлăм йăлтăр-йăлтăр
йăлтăртатать чечек çинче.
Ах, ан силле, упрантăр, çунтăр, —
хĕвел тин çеç тухать. Инçе...

Вылятăр чĕрĕлĕх, тасалăх
хĕвел шевлиллĕ сăнунта.
Эп, тусăм, ĕмĕр асăнмалăх
хăварăп çакă саманта.

*1958*

## ЭСĔ

Эс манăн чи илемлĕ юрă,
чи пысăк ĕмĕт, çут тĕллев.
Курсассăн та санпа çеç курăп
чи ырă пурнăç, чăн телей.
Чуну чĕнмест, мĕне пула-тăр,
илтесшĕн мар хĕрӳ кĕлле.
Тен, çук вăл сан? Тен, шăннă шатăр?
Сана хурлатăп эп, хурлатăп...
анчах... çапах та юрататăп.
Эп сансăр — вилĕ чĕрĕллех!

*1958*

## ВУТĂШ

Сăвва вута эп пăрахтăп,
чĕресĕр-чунсăр савнине —
çырма çине пĕрле тухап та —
чи вăйлă юхакан çĕре.

Унта питех пуç каçăртаймĕ.
Унта парк мар, урам та мар.
Ку — урăхла Чистай урамĕ.
кунтан çăмăлах мар тарма.

Кунта вăл пăрахаймĕ, ахăр,
улăштараймĕ тепринпе.
Ку хутĕнче эп хам пăрахрăм.
Инкек... анчах та — пĕр инкек.

Кичем пулса çитсессĕн мансăр,
тен, чунăн çивчĕ шăрпăкĕ
юр юрлĕ, уйăх хăпарсассăн,
пыма чĕнсе — вутăш-пике.

*1958*

## МУЗА

Атте-аннесĕр тăлăх ача мар эп.
Анчах, час-час çăтаттăм та куççуль,
ачашласа лăпканине курса пулмарĕ,
ачашлани сиенлĕ тетчĕç пуль.

Ерçӳ çитменрен мар, ерçӳ çитме пултарнă.
Çулсем те пысăк марччĕ, пиллĕк-улттăра, —
çапах ачашламан. Мĕнрен хăранă?
Эп ӳсрĕм, аталантăм унсăрах.

Аманчăк чунлăскер, пĕчченлĕхре йăпантăм
тем тĕрлĕ шухăшпа. Хуйха-суйха
çынна эп каламан, хамра усраттăм,
ямарăм никама та çывăха.

Калас килменрен мар, калас килетчĕ,
ай-хай епле уçса парас килетчĕ чунăма.
Иккĕленӳ, шанманлăх пĕтеретчĕ.
Анне, тен, шанчăклăччĕ... Хăяйман.

Туяттăм эп: мĕскер-тĕр пурччĕ шанчăкли,
мĕнне ăнланаймастăм, тăн çукрахчĕ.
Урам кӳрентеретчĕ-и, килте-и тăрăхлатчĕç,
хута кĕрсе пуçран шăлать такам алли.

Çырма та, вулама та вĕренсен,
хута кĕрекене, о мĕн тери хĕрӳлĕхпе, палларăм:
вăл хут та кăранташ, вăл муза ман, мăнтарăн,
вăл — сăввăмсем, ман чун пек сăввăмсем!

*1958*

## КИРЕМЕТАЙ

*Киремет — парне кӳрекен*
*таса вырӑн.*

В. Митта

Урӑх турра пуҫҫапнӑ май
Киремете ял-йышӑм маннӑ.
Ҫухалнӑ — Киремет. Упраннӑ —
Киреметай.

Ҫак вырӑн ҫырмаҫи. Кашлаҫҫӗ
шур хурӑнсем ик енӗпе.
Сар ҫӑкасем те канашлаҫҫӗ,
салху пуссан, пӗр-пӗринпе.

Пур катӑркас, пур хурама.
Аялараххӑн — ҫӗмӗрт, ҫирӗк.
Ачалӑхра кунтан та ирӗк
кӗтес эп урӑх тупайман.

Хавхаланса парне кӳреттӗм
Киремете хам кунсене:
хавасланса ҫисе ҫӳреттӗм
пуҫ пӳрне пек ҫӗр ҫырлине.

Серте те пултӑран ӳсетчӗ,
кӑшкарути, упа кӗпҫи.
Мӗн чухлӗ вӗт кӑмпа ӗречӗ
тухатчӗ ҫакӑ ҫырмаҫин.

Авăрсенче çӳретчĕ пулă.
Ĕлĕксенче хăяхсенче,
тен, çăрттансем те пулнă пулĕ,
анчах халь улшăннă тĕнче.

Киреметай чечекĕсем!
Сирĕн пекки пулман, пулмасть те.
Мĕскер вăл георгин, мĕн астра
эсир асамлăн чӳхенсен.

Ялăмра мар, кунта эп ӳсрĕм.
Мана сыхларĕ Киремет.
Эп тăнлăччĕ, анчах чарусăр
ачаччĕ. Чунăм кӳренет.

Тавра пĕрре çынсем пуçтарăнчĕç.
Ха! Килĕштерчĕç кĕввĕме, —
тем мурĕ Киремет тыттарчĕ
çăка шăхличĕ вырăнне.

Çав парнене хакла пĕлмерĕм —
йĕпе сăмсаллă апăрша.
Киремете парне кӳмесĕр
нумай çӳрерĕм аташса.

Киремете асăнсанах
чунра çĕн вăй тапса хăпарчĕ.
Эй, Киреметĕн вăй-хăвачĕ,
пуççапăп ĕмĕрне сана!

*1958*

## ÇĔРЛЕХИ ШĂПЛĂХ

Çĕрлехи тĕттĕм шăплăх — тĕпсĕр тинĕсĕн тĕпĕ.
Пусарать-хĕстерет пур енчен вăл мана.
Хускалмасăр выртатăп, сӳтетĕп, сӳтетĕп
шухăшăн çăмхине, тăвăна-тăвăна.

Çил вылять. Çулçăсем сас параççĕ. Çанталăк уяртнă.
Çутăсем мĕлтлетеççĕ тĕнче хĕрринче.
Мĕльюн куç хам çине пăхнине эп туятăп.
Вилĕмĕн куçĕ те пур вĕсен хушшинче.

Пултăрах. Чăрсăрлăх та хаваслăх
çуратать ун çути. Эп кулатăп унран.
Çыврас çук ĕнтĕ тек, сывă пул, вырăн, аслăк,
иртерех кĕнĕ эп урамран.

Ту пуçне, ту пуçне уттарам-ха,
тухатланнă куçпа тинкерем шыв çине.
Çĕрлехи чĕрлĕхре эп виçем-ха вăраххăн
чун вăйне, чăн поэтлăх вăйне.

*1958*

## ЧИСТАЙ ПАРКĔ

Чистай паркĕ, сана кăмăллатăп
çынсăр чух. Эп пĕччен — пысăк, çӳллĕ, яштак.
Эп пĕччен — чи хитри. Талантпа та,
чун вăйпе те маттур та пуçтах.

Ытлашши чаплă мар та çи-пуçăм,
хĕрсене ăмсантармĕ тес мар.
Савнăçпа йăлкăшать мăшăр куçăм.
Шутламастăп та пуç усма.

Каç пулать. Парк кĕрлет мусăкпа.
Танцплощадка, эстрада, аллея
пăлханать хулари çамрăкпа.
Тĕлсĕр-йĕрсĕр çĕтет ман пĕчченлĕх телейĕ.

Парк тулли яш ача. ăслă, паттăр
кашниех. Пысăк. Çӳллĕ. Яштак.
Сăн-питпе те хитре. Талантпа та,
чунĕпе те — маттур та пуçтах.

Курăнатăп эп пĕчĕк те мĕскĕн.
Çийĕм-пуçăм — чухрах катемпи.
Мăшăр куçăм салху тӳпе тĕслĕ.
Чистай паркĕ, çакна эсĕ мĕншĕн
уçса патăн-ха халĕ тин?

*1958*

## ТĔТТĔМ ÇĔР

Кам мана мăйăмран пуртăпа касас тет?
Эп хавас, кас.
Тĕттĕмĕн тупсăмне тупас пек лаштра хурăн
кашлать,
тупаймасть.

Тӳпере пĕр чĕпкуç мĕлтлетет,
çĕтет.
Сивĕ çил хаш! сывлать те умра,
каллех шăп урам.

Калăн çав: эпĕ мар, маншăн каç шухăшлать.
Кулăшла!
Тĕттĕм çĕр тупсăмне пит паха
ăнланатăп-ха.

Леш касри мĕскĕн сурăх сасси
чĕрене — çĕçĕ вĕçĕ.
Тăмана кăшкăрать — килнĕ чăх тытасси.
Пурнас çук чăхă кĕçĕр.

Тĕттĕмре инçетри курăнмасть. Ах, курасчĕ.
Тĕттĕмри тăлăх сас мĕн сасси? Ах, пĕлесчĕ.
Йăлт пĕлесчĕ, курасчĕ, хĕрӳллĕн çырасчĕ
юрату поэми, вилĕмсĕр чун сонечĕ.

Каç сып-сывă выртса, ир çинче сыв тăрсассăн
туйăнма пăрахни кулянтарчĕ мана:
çавăнпа эп хамран нумай хут мăнă, аслă,
Айăпли кам-ши? Эп? Е каçхи тăмана?

*1958*

## ТАВАХ

Тавах сире, мана типшар сунакансем.
Эсир, кашни йăнăшăмах шута илсе,
куна-çула виçетĕрччĕ. Таçтах çитейместсе
аван кураттăрччĕ, чунран хĕпĕртесе.

Нумайăшĕ сиртен ман тусчĕ. Тус марри те
саламлăн пуç сĕлтетчĕ, тĕл пулсан.
Яр уççăн юнаман пĕри те,
ал панă, эпĕ ал парсан.

Ун чух эп хама хам та хуçа марччĕ,
шăпам пирки ним чухлĕ шутламан.
Пĕррехинче сасартăк çăмăлттайлăх тарчĕ,
мăнаçлăх, тарăху капланчĕ ман.

Çав самантра эп çĕнĕрен çуралтăм,
вутлантăм эп. Çĕклет çӳлтен-çӳле
сасартăк шăтса тухнă ик çунатăм...
Тавах сире, туссем, тавах сире.

*1958*

## ЭТЕМ ХĂРАХХИ

«Туртса илех... Епле караппăл!
Пики аван-ха, чуптуман.
Кирлех пулсан, тепре паратăп,
виççех ыйтсан та шалккă мар.

Вĕсемсĕр те ĕнсе хыçма та,
ларса канма та вăхăт çук.
Тепĕр тесессĕн, мĕн тăватăн
студенткăпа? Ĕç çынĕ туп.

Выç хырăмна хуть тăрантарĕ,
кĕпӳ-йĕмне те астукалĕ.
Ку хăй те йĕмсĕр... Мĕн тăван?
Укçа илекенни аван».

Мана çапла ăса вĕрентрĕ,
студент, çĕн пĕлĕш, Казанков.
Эп пӳлĕнтĕм, сиксе вĕрерĕм.
Дуэль! Дуэль! Çапла — закон.

Анчах чĕннĕ çĕре пымарĕ.
Каларĕ: «Эс — начар хĕрарăм.
Пур-ши санран мĕскĕн айван,
хĕрарăмшăн çапăçакан».

*1958*

## УСАЛ СУНАКАНСЕНЕ

Май çеç çук. Хатĕр сирĕн чукмар,
çивчĕ çĕçĕ, кастет, вĕри пуля.
Курăпăр: кам манка, кам вуççех манка мар,
кам ăçта çитесси те часах паллă пулĕ.

Ирсĕрсем! Мĕншĕн уççăн тухмастăр?
Ма пит-куçăр чăн мар, мĕншĕн маска?
Тăрса тухăр ума йĕркерен.
Ма хăратăр чечен этемрен?

Хыçăмран йĕрлекен, ан васка-ха, ан тарăх.
Кăшт утам-ха, утам-ха, утам.
Тен, халех те ӳкмешкĕн пултарăп.
Такăнмасăр утмасть-çке никам.

Ват анне пехилне манас марччĕ.
Пĕтĕм шанчăк аннеçĕм çинче.
Йăвансассăн, сиксе ман тăрасчĕ
тăшмансем утланса лариччен.

Йĕрĕнетĕп сиртен, йĕрĕнетĕп.
Кураймастăп чунран, чĕререн.
Йĕмĕп мар хуçăлсан, йĕрĕп эпĕ,
анчах йĕрĕп куççульсĕр, пĕччен.

*1958*

## «СĔТ»

Анкала, аншарла,
сăмакун, шимакун,
ханша, ашак,
чӳпĕк пуç, чалăш куç,
лĕпсĕркки, ухмаххи,
бригадирски, шоферски,
тумлаканни, юхаканни,
урнă ĕне сĕчĕ.
Çак «сĕтпеле» Ахваниç
пуçлăха хĕсĕнчĕ...

*1958*

## ЧĔКЕÇĔМ, ТАВРĂН

Эрех лачакине путсан,
этем — сив хĕл, мĕскер-ха урăх?
Аçу çур кун тăмастчĕ урă,
чĕнместчĕ ăшшăн нихăçан.

Хура-шурра кăтартрĕ ĕнтĕ.
Ачалăху пылак пулман.
Хула, ĕç-пуç мĕнне ир пĕлтĕн,
тăван килте чăтма çукран.

Халь шухăшлап: яла манман-ши,
манман-ши чун кĕввисене?
Килтен тутли пулманччĕ маншăн,
тухса кайсан ют çĕрсене.

Тек ача мар, савниçĕм, эпĕр.
Аçу. Мĕнех аçу? Имшер.
Иртнишĕн ĕнтĕ... килĕшер.
Хамăр пата пăхма илетпĕр.

Кунта ял-йыш, колхоз уй-хирĕ...
Тӳпийĕ çутă та тăван!
Ĕçлесчĕ те хăватлă, çирĕп —
чи çывăх çынсăр мĕн тăван.

Чĕкеçĕм, таврăн, çывăхскерĕм.
Пăч-пач çыру чуна тыллать.
Çитсем, савни... Чĕрем çĕнтерĕ
епле хĕне те санпала.

*1958*

## КĂВАЙТ

Уçланкăра кăвайт ташлать
хĕп-хĕрлĕн çĕрхутах, çунатлăн.
Сӳнмест — ăна эс ан ятла.
Сӳнсе лармасть, çаплах çунать вăл.

Тĕлĕнмелли кунта çукрах:
çапне хурсан ма чактăр çулăм?
Ах, йывăр йĕкĕте, ах, ах,
шăлне çыртсан та çирĕп чунлăн.

Ах, йывăр яшă çамрăка —
чĕре вутне нимпе чараймăн.
Тĕлпулусем — çав çапă майлă.
Савнийĕ — пăрчăкан.

Пуç каçăртма пăхать пике,
каччи те пуç пĕкесшĕн мар-тăр.
Çаппи çеç пĕттĕр, тек çунмасть-тĕр
кăвайт, сӳнсе ларать иккен.

*1958*

* * *

Çук çур та, шăпчăк та çак пĕчĕк хулара,
пур йывăç пӳрт, вăл — манăн çуркунне.
Унпа пĕрле кĕрет тĕлĕксене
чун савнă хĕр ара.

Кĕрхи сив çумăр çĕрĕпех лӳшкет.
Юрла-юрла çил-тусăм йăпанать.
Пуç каçăртса тертлентерет мана
чун савнă чиперкке.

Эп ĕнтĕ халь, Чистай хули, нихçан
сана манаймăп, манăн çуркунне:
тиркерĕ тĕлĕкре те пĕркунне
чун савнă пăрчăкан.

*1958*

## ЛАЙĂХ АЧАНА

Мĕн-ши юрату ачашăн?
Ир-ха, тăмăп пĕлтерсе.
Çамрăк тус, маттур ачашăм,
тем ан кур савам тесе.

Кĕвĕçмелĕх çук поэчĕ,
ан ăмсанччĕ эс мана —
тыткăнлать пур çар пилочĕ
хулари хĕрачана.

Çамрăк тус, маттур ачашăм,
тем ан кур савам тесе.
Ан çиллен мана «ачашăн»,
летчик пул эс, итлесем...

*1958*

## ХУЛА ÇĔРЛЕ

Тумла пат-пат тумлать.
Чăштăртатать сар çулçă.
Ман пĕчĕкçĕ хула
çĕрле илтес те çук-тăр.

Вĕт çумăр пĕрчисем
питрен пырса çапаççĕ.
Скверта çил ачисем
унта-кунта кумаççĕ.

Пралук йăл-ял! тăвать.
Çут сӳннĕ, тĕттĕм питĕ.
Васан шăнкăртатать.
Ял пек хуламăр пирĕн.

Пур пĕр завод. Чуна
çĕклентерет. Хавассăн
васкатăп сменăна
эп — çумăра пăхмасăр.

Васкатăп. Çил хухать.
Сивве сиссе шур уйăх
хур пек чăмса тухать
сĕм пĕлĕтрен — пуç урлă.

Хулам çӳçенчĕк ман.
Вăл сисĕнкĕ, хăрать вăл
çĕр пит тĕттĕмрен мар,
пит шăп, пит лăпкăран-тăр.

Йăлтах илтет хулам,
унран çивччи те çук-тăр.
Тумла пат-пат! тумлать,
чăштăртататать сар çулçă.

Йăн сас та çуккипе
хĕрӳн чĕтрет янравлăх,
анне чĕтренĕ пек
эп вилесрен хăранăн...

*1958*

# 1959

* * *

Тулта сенкер март... Сан енне
саламлăн сĕлтет вăл пуçне.
Туятăн хаваслăх
тата пыл пек яшлăх,
курсассăн умра çуркунне.

Туятăн хаваслăх
тата пыл пек яшлăх,
пырсассăн пĕр вăрттăн тĕле —
пĕлсен те пит лайăх:
март çитĕ-и, май-и,
çук, таврăнмĕ иртнĕ телей.

*1959*

## ВУТЧУЛЬ

Ман алăра вутчуль.
Ăна манса,
тăратăп эпĕ
шухăша кайса.

Çулу тивсен,
вутчуль илет хăват —
хĕлхем йăлтăртататать,
кăвар хыпать.

Сана эп куртăм та,
тен, сисрĕн пуль,
чĕрем хĕлхем сапать,
чĕрем — вутчуль.

*1959, март*

## ЧĔКЕÇ ЧĔПĔ КĂЛАРСАН

Чĕлхи çемçе пултăр тесе,
чĕкеç чĕпĕ кăларсан,
кирлĕ мар сарçу сĕрмешкĕн
чĕкеç чĕппин чĕлхине.

Çу сĕрни вăл пушă япала.
Чĕкеç çемçе чĕлхеллĕ яланах.

Вĕлле хурт уйăрсан, çĕн вĕллене:
«Ĕçле!» — тесе ан вĕрент.
Вĕрентни вăл пустуй япала.
Пыл хурчĕсем ĕçчен яланах.

Ачу-пепкӳ самайлансан,
тӳрккес, наян пулмасран,
чĕкеç туйĕ çине кăлар,
ĕç шавне те итлеттер.

Чĕкеç çемçе чĕлхеллĕ яланах.
Пыл хурчĕсем ĕçчен яланах.

*1959, март*

## АКСУ ВАЛЬСĔ

Хĕвел анса пытаранчĕ...
Тӳпе хĕрри вутра
кĕрхи Аксу урамĕнче
каç пулнă вăхăтра.
Сив çумăр пĕлĕчĕсене
сăнаççĕ хунарсем,
ним те чĕнмеççĕ вĕсене,
çунаççĕ мĕн ирччен.

Чарусăр çил сирет çулса...
Çук манăн савăнни:
урăххипе çӳрет пуль çав,
килмерĕ чун савни.
Мĕскершĕн туслăх татăлчĕ?
Кичем çак самантра
кĕрхи Аксу урамĕнче
каç пулнă вăхăтра.

*1959*

## МЕДСЕСТРАНА

Çепĕç сăну салхуллă.
Ах, кăкăрăм... туймасть ыратнине ним чуль.
Мĕскер питех тĕпчетĕн? Çитĕ... Кул-ха...
Куратăн вĕт: тӳсетĕп, çук куççуль.

Пултăн эс телей те савнăç
эп чирлĕ кунсенче.
Ачапчалла айванлăх? Тĕрĕс мар! Пăхсам эс:
вăл пур-и куçсенче?

Çунать чĕре — вутама пек пăлхавлă,
чакать чун сĕмлĕхĕ, тарать.
Пулин эс вăтăра çывхарнă,
эп пуснă вунтăххăра.

*1959*

## ПАЛАТĂРА

Кантăкра — ирхи çутă.
Кантăкра — лăпкă юр.
Ма чунра çутă çук-ши?
Ма ялан хурлăх пур?

Ахаль кун-и, уяв-и,
чӳрече çеç умра.
Хăш чухне çеç туятăп
хама хам урамра.

Кантăкра — ирхи çутă.
Кантăкра — лăпкă юр.
Эп кĕтеп... Килес çук эс...
Эп çаплах саншăн ют.

Эс мăн кăмăллă... Пурпĕр
куллен-кун тăванрах.
Илсе кил, тусăм, пурнăç,
илсе кил хăвăртрах.

*1959*

## ЮРАТУ ПĔТНИ

Ман хыççăн та унпа паллашĕç —
хитре хĕре камах хурлать.
Тамара чухлĕ çук, паллах, вăл,
анчах та ун пекех курнать.

Эй, яшлăх, шанчăксăр хĕрарăм,
пуçтахлататăн яшсене.
Кама савса кама юратрăм,
текех пустарчĕç вут çине.

Çук юрату. Пачах юлмарĕ.
Вăл пурччĕ, килчĕ пĕтмелле:
çут хуртшăн хыпăнчĕ Тамара,
эп утрăм çăлтăр патнелле.

*1959*

## АЧАЛЛĂ АРĂМ

Халь те асрах ачаллă пĕр хĕрарăм:
манасшăн — манаймастăп, ак инкек.
Вăл тунсăхлă, вăл ытарми Тамара
кӳреннĕ пек салху пăхать. Хĕрарăм:
мĕн-ма? Çак ыйтупа тухать тинке.

Пĕрне савас, савас пĕрне кăна,
хитре те тарăн юратса курасчĕ.
Ыйха çĕтертĕм эпĕ тахçанах —
яш чĕресем çапла çуна-çуна
çурхи каçра çĕн юрăсем хураççĕ.

Ах, таврăнинччĕç çавă вăхăтсем —
ялти автан та шăпчăк сассисем.
Пĕр иртĕхмесĕр, çылăхсăр эп хатĕр
унпа юмахлама, савап тесе.
Хăй çук, çапах ăна куçран, куçран пăхатăп...

*1959*

* * *

*Казначеев хуначие*

Училище хĕрĕсемех
епле хитре, çап-çамрăк.
Хуть те хăшне суйла —
кам мĕнлине пĕлетĕн.
Итле-ха, Казначей, ачамккă,
ма крупзавод таврашĕнче çӳретĕн?
Текех çав секретаршăпа супатăн?
Хăвна тен пуль,
сан нухратна савать вăл.

Кам çеç хыçран чупмарĕ, васпати!
Хитре пулман та, илĕртӳллĕ пулнă.
Ан таврăн, флирт! Пăхма хал çитрĕ тин
романтикла çунса хумханнă тапхăрти
маттур вăйсен кал-кал çăлкуçĕ урлă.

*1959*

## ЧИПЕРККЕСЕМ

Хавaслă мар эп ахальтен-и,
астарчĕç — кĕртрĕç çылăха.
Пăхсан: епле чипер хĕр тейĕн,
анчах... ясар, тур çырлахах.

Итлен те, лайăх пуплешеççĕ.
Кăшт йăнăшрăн — каять яту.
Яш чух реххетленес-ха теççĕ.
Çав ыр киленĕç — юрату.

Сахал-и, шăккалат та çинĕ,
эрех те ĕçнĕ самаях —
чун-чĕрисем пăрланчăк, сивĕ,
хаш! сывлани чăн мар, суя.

Çук, сана мар вĕсем хаклаççĕ,
сан укçуна. Айван эс ху:
спектакль мар-çке пурнăç пач та,
чăнах иртет-çке яшлăху.

Шăп пилĕк çул пĕрне юратрăм,
нихçан кĕмерĕм айăпа.
Çук, улăштарчĕ хĕр хĕрарăм
мана пин çурă укçапа.

Вунпиллĕкрех çапла «ĕçлет» те.
Ир мар-и ку, екким романч?
Пĕри те ĕнтĕ кĕвĕçме те,
савма та тек пултараймасть.

Çапах ăна эп тав тăватăп...
Пит шанчăклă пулма та эп,
савма та, акă, пултаратăп.
Ĕмĕрлĕхе çак пил теер.

*1959*

## ТĔРМЕ САЧĔ

Кашни садах чунран саватăп.
Кашни садах — Чистай илемĕ.
Вутла çунса чечек сунать, ав,
мана телей. Ма чун çĕкленмĕ?

Яш ĕмĕрĕм манпа утать.
Эп йăл кулап. Чечек, эп шухă.
Кунта... урăххисем кунта,
пуçа кĕреççĕ урăх шухăш.

Ах, мĕскĕн сад... Ман куçăмра
ахаль-и эс куççулĕ пултăн:
путан çĕршывăм сад марах,
чечекленмест, утти ун — кутăн.

*1959*

## ПĔЧĔКÇЕÇÇĔ ХУЛА

Чулман Атăл, сана
ырăпа асилеп.
Пĕчĕкçеççĕ хулу —
чĕререх. Савăк эп.

Хĕрача унта юлчĕ.
Çăлтăр тейĕн, пăхсан.
Сӳнмĕ унăн сăнарĕ
чунăмра нихăçан.

Тĕмсĕлсе тунсăхлатăп
инçетре хальччене
çав кăвак куççене эп,
Атăл хумĕсене...

*1959*

* * *

Çул инçе. Ăшăнсан, чей ĕçсен,
çĕнĕрен çĕкленетĕп. Эс шăппăн чаратăн:
— Çакăн пек сивĕре... Лав та çук. Итлесем,
çĕр хута ан çӳре. Çывăр, вырăн саратăп.

Уйăх çутă. Ламппа сӳнтермесĕр
хывăнмастăп — хĕртен вăтанса.
Çирĕме çитнĕ çеç пулĕ эсĕ.
Йăл куллу ăшă, лăпкă, таса.

Эпĕ вунсаккăрта. Пурнăç ирĕк.
Эсĕ ман савни мар, кăмăл çук.
Аннесем, аннесем туслă пирĕн.
Аттепе туслă пулнă аçу.

— Вера, ма пĕчченех?
— Анне — Хусанта.
Таврăнмасть çакă уйăх иртмесĕр.
Сивĕ... ых...
— Пуç çинчен витĕн эсĕ.
— Эс те, Мишшă... ман пек салтăн та.

Сан пекех-и? Сан пек пултараймăп...
Куртăм кантăк тĕлне эс тăрсан:
каç кĕпи — çут тĕтре. Тĕтре айĕ...
Çут тĕтре айĕнче... хуп-хура çăлтăр сан.

Çӳç-пуçна салатмашкăн тесе карăнса,
астумасăр кĕпе те çĕклерĕн...
Кĕлеткӳ яштака, çутă, лăпкă, таса.
Ун илемĕ — Венера илемĕ.

*1959*

* * *

Хăш та пĕри, те кулянать, те хĕпĕртет,
пĕрне-пĕри хавассăн йĕкĕлтет:
«Иртет вĕт вăхăт, вăтăрта, эй, турă,
эс те, тăванăм, эпĕ те».
Ун пек этемсенчен тăрап эп уйрăм,
ачаранпах ытла та çивĕч туйрăм:
çул иртнинче хаваслăх çук пĕртте.
Кăçал мана тулать вунтăхăр çул.
Çулсеренех чуна кичем, кичем те йывăр.
Ăнланма çук темле инкек куллен-кун çывăх.
Ялан çапла. Çаплаччĕ ача чух.
Ачалăхра ачаччĕ-ши эп, çук-ши?
Асапсăр кун курмарăм, мĕн тăвам.
Юратрăм çынсене, хĕрхентĕм, вĕççĕр çунтăм
татса парас тесе пĕр ыйтăва.
ăçтан шăтать танмарлăх, тĕрĕсмарлăх,
тымарĕпе кăкланă пулниех?
Мĕн-ма час-час чыслă çын мар карма çăварлăн
çӳлте хăлаçланать, кăкăр çапса çине-çинех?
Эп çавăнпа куллен-кунах темле инкек туятăп.
Кĕрет вăл ман çине, пĕлместĕп кар тăма.
Пĕлсен, шеллемĕттĕм чи юлашки юна та —
вунтăххăрти пурнăçăма!

*1959*

## УКРАИНА ХĔРĔ

Чӳречери сан силуэт
хура хутран касса кăларнă
кĕлеткене асилтерет.
Малта — каçхи урам хунарĕ.

Ореол пек çут кантăк санăн
тăринччĕ кĕçĕр çĕрĕпех.
Ырра çыхлантăм-ши, Оксана,
санпа, полковник хĕрĕпе?

Хăш чух ирччен алла кышлатăн
каçхи улах кĕтессенче.
Хăш чух вара тула пуçна та
эс кăларасшăн мар темччен.

Чистай шăпчăкĕсен кĕрлевĕ
тавралăха кисретнĕ чух,
мĕн хĕлĕпех пĕрле çӳренĕ
шух хĕрача, манпа эс çук.

Пĕлеп: шкулта часах экзамен.
Шуххисене те авĕ вăл.
Чунрах эс, чĕререх, Оксана,
сан тĕлĕнти çут ореол.

Ытараймасăр юрататăп
вĕт шăлсенчи хаярлăхна,
ахаль чухне те, юрăра та
асăннине хăв халăхна.

*1959*

## ЙĂНĂШ

Анмăттăм эп Атăл хĕррине,
илĕртсе выляççĕ хумĕсем.
Савмăттăм Чистай хĕрĕсене —
вутăш-пике пек хитре вĕсем.

Ăнланап-ха эпĕ, ăнланап:
пĕррене кăна савни паха.
Кĕртмелле пулман çак хулана
ман йышши хĕрӳллĕ ухмаха.

Çамрăклах çапла сапаласан,
ман чунран мĕн юлĕ малашне?
Пин асап çапах та — пин асап,
инçетри пĕр тусăм калашле.

Çук! Пĕриншĕн çеç асапланам,
витĕр юратса çунса каям.

*1959*

## КУБА СИМФОНИЙĔ

Музыкăна питĕрсе тытма çук.
Пĕтĕм тавралăх — музыка.
Çын вилсессĕн, выртать вăл çынпа та:
шăплăх та — музыка.
Манăн симфони — ĕмĕр симфонийĕ.
Ку вăл — симфони ля мажор.
Ку вăл — этем хăй камне ăнланнийĕ,
çĕрчăмăрĕн пульсĕ сикни.
Тĕнчипех илтĕнет çак симфони.
Хĕвел...
Ах, хĕвел шартарать куçăма!
Эпĕ — Этем.
Акă манăн симфони:
эпĕ — этем — савăнап хĕвелпе,
парăнма шутăм çук çавăнпа.
Эп — этем — çапла тăвăп:
çĕрнĕ кив мул тĕнчи
лăштăр та лаштăр ишĕлĕ-анĕ,
пур галактикăна вĕçсе кайĕ
чи вăйлă,
чи çутă,
чи çепĕç,
чи хĕрӳллĕ,
чи çĕнтерӳллĕ симфони.
Ку вăл Тĕрĕслĕх симфонийĕ пулĕ.
Чун-чĕре ĕсĕклет ман.
Чун-чĕре йăл кулать ман.
Утравăмçăм! Патриа!
Паян ĕмĕрсен тăллине эпĕ татрăм.

Ирĕклĕ!
Тинех эп — кубинец! Чăн-чăн кубинец!
Курăр, çынсем.
Итлĕр, çынсем!
Туйăр, çынсем:
кам самант та пулин ирĕк курнă,
ăна çĕнĕрен сăнчăрлаймăн.
Эпĕ нумай хапсăнмастăп.
Эпĕ курасшăн çунатăп
Мир тата Пурнăç.
Этем! Пурăнма эс çуралнă,
эс ĕçлемешкĕн çуралнă.
Илтетĕр-и эсĕр, çынсем?
Мир кирлĕ сире.
Çирĕп тытăр ăна.
Ку вăл сирĕн
чи ырă,
чи аслă симфонийĕр пулĕ.
Ку вăл —
чи хăватлă,
чи çутă,
чи çепĕç,
чи хĕрӳллĕ,
чи çĕнтерӳллĕ симфони,
Тĕнчепе Этемлĕх симфонийĕ...

*1959*

## ЕПЛЕ МАЙПА?

Куллен вулатӑп эп ӑна, туятӑп тарӑн,
анчах ӑнланаймастӑп ӗмӗрне:
анне ҫураличчен поэт епле пӗлме пултарнӑ
эп аннене мӗнле юратнине?

Ҫут тӗнчере атте вӑл вӑхӑтра пулсассӑн
ҫыртма йӗмлӗ ҫич-саккӑрти ача,
епле майпа поэт манпа суймасӑр,
чунран шанса, хӗрӳллӗн калаҫать?

Эп ҫамрӑклах сӳнессине епле пӗлме пултарнӑ?
Ҫеҫке ҫурмасӑрах типессине?
Хыпса ҫунатӑп, шухӑшлатӑп тарӑн
ун пек курас тесе пулассине...

*1959*

## АЙĂПЛИ

Юлнă эпĕ çĕтĕк ала пек.
Çамрăк тухтăр, ырă-ырă вырăс,
çурăмран лăпкаса аллипе
пĕлтерет: «Айăпли — йĕксĕк вирус».

Кулянать те ӳкĕнет анне:
«Упрайман... Пĕчĕклех шăнтса пăсрăм.
Вĕри чир çыпăçрĕ миçе ăстрăм,
çыпăçрĕ ӳпкине».

Масарти ват Емкке ӳкĕнмест.
Вăрçă пынă. Емкке-бригадир,
тăхăнса сивĕре тиха тир,
хăвалать, хăвалать, хăвалать аннене ĕçлеме.

Çумăрта хăвалать, тăвăлра хăвалать.
Трактор çук. Лаша çук. Кӳл ĕне...
Эп пĕлеп мĕншĕн эп кив ала.
Çилленме сăлтав çук аннене.

*1959*

## СЕСТРА

Эп çывăрман, çыврам пекки тăватăп.
Йăвашшăн хăй çунать пуç вĕçĕнче.
Палатăра манпа эпир тăваттăн,
анчах та çĕр чĕртетĕп эп пĕччен.

Килет-и, çук-и хальхинче? Килсенччĕ.
Сестра, шур акăш, пирĕшти, килсем...
Вуниккĕ ма çапмасть халь те сехечĕ?
Ма халь те лăпланмаççĕ чирлисем?

Килсен паян, паллах, эп йынăшмастăп,
ĕнерхи пек, утияла сире-сире.
Паян çыврас пулать... Паян сывлатăп ассăн,
ăна ятран чĕнсе тĕлĕкĕмре.

Вăл пĕчĕк ывăç тупанне хурсассăн
вут пек пĕçерекен çамка çине,
тата тепре хаштах сывлатăп ассăн.
Вара... вара эп сывă ирчченех.

*1959*

## ÇУТĂ ИР

Çĕр иртет те килет çутă ир.
Манăн сывлăх ăçта? Ма килмест?
Асăмрах, асăмрах тăлăх хир.
Çав хирте — масарта — çĕр хĕрес.

Тĕне кĕртнĕ мана ик хутчен,
çавăнпа та хĕрессĕр пытармĕç.
Хам туятăп пулсан та вăтанăç,
хĕрес тăрĕ ман пуç вĕçĕнче.

Нихăçан, ниепле, ним хака ман анне
парас çук чунăма шуйттана,
ун патне тамăка, сăмала хуранне,
ĕмĕрне ярас çук вăл мана.

Аннерен тăрăхлаймăр эсир.
Хăйĕнчен култарсах тăмĕ-ха вăл сире.
Ман сӳнмен-ха куççем, ман ĕçлет-ха чĕре...
Çĕр иртет те килет çутă ир.

*1959*

## ЕРÇЕЙМЕНРЕН

Мана вилĕм тахçанах сăнанă,
эп ерçейменрен анчах тăхтать.
Виçмине вилсе кайма эп маннă
тус йăл куллине мухта-мухта.

Çырăвне илсе, хĕпĕртесе ĕнер
пуçăмра пулман «çул каясси».
Кĕмĕл пек сасси, савни сасси,
çыру витĕр, çыру витĕр илтĕнет.

Вăхăт çук паян та иртенпех:
умăмра ларать тус-хĕрача.
Кӳршĕ хуларан вăл сиккипех
вĕçсе килнĕ васкаса!

*1959*

## ШУХĂШ — ĔМĔТ

Кун-çул татăласран, аннем, хăратăп.
Ним усăсăр эп кайăп харама.
Сиен пулать çынна та, хамăра та.
Хăрамăттăм — сăлтав пур хăрама.

Инçе янрамаллаччĕ — янраймарăм.
Ытла та хăвăрт çитрĕ шăпланма.
Çĕршывăм умĕнче ман пысăк парăм,
парса татма тӳр килеймерĕ парăма.

Чăваш ятне çӳлтен-çӳле çĕклесшĕн
эп пурнăп тенĕччĕ çисе ун çăкăрне.
Юратнă, ĕмĕтленнĕ, сӳннĕ ĕçшĕн
чĕре çунать, аннеçĕм, çӳçенет.

Сана ыр кăтартасшăнччĕ эп — ывăл, —
пуласшăнччĕ хастар та ĕçчен çын,
каласшăнччĕ: «Çитет, кансам, кансам,
ан ывăн».
Ӳссе çитсен, ват амăшне пăхать ачи...

*1959*

## ПУЛЬНИЦАРА

Сестра, ачаш ытамăр
çĕклерĕ тӳсĕме.
Куратăр вĕт, ма ыйтатăр
ĕç-пуç мĕнлисене.

Умра тăрать сăнарăр —
те чăн, те тĕлĕкре.
Çак майăн та сăнарăм
пит-куçăр тĕлкĕшне.

Мĕншĕн салху пăхатăр?
Шел? Вунтăххăрта анчах?
Апла сӳнет чăнах-тăр
пурнăçĕ сăвăç-ачан?

Сӳнмест! Поэт вилет-и
шухă çын çĕççинчен.
Курăр-ха: комсомол билечĕ
юнлă пĕр вĕçĕнче.

«Тискер кайăка» тартмарăм,
хуптартăм «зоопарка».
Ĕçĕме пĕчĕкрен пуçларăм,
кайĕ-ха хĕрӳ, парка.

Çавна шанни — вут кайăк —
сирет чун тĕттĕмне.
Сестра, килĕре ан кайăр,
сирĕнсĕр пульница — тĕрме.

*1959*

## ХĂВАТ

Эп тантăшсемпе ялта пĕр пек шутра,
япăхрах та, тен, хăшпĕринчен.
Çăпата хуçма пĕлетĕп çичĕ пушăтран,
тăхăр пушăтран, вуниккĕрен.

Юсама пĕлетĕп урапа-çуна.
Выльăх-чĕрлĕхе те тивĕçетĕп.
Пултарап пура тума, хăма çурма,
тĕшмĕртеп тата ытти ĕçе те.

Утпала çӳреп çĕр çĕмĕрсе.
Юрă-ташăра çуках ман пек чăваш!
Кĕрешӳ вăйĕи пуçлаççĕ йĕкĕтсем —
вăт кунта эп малта мар, йăваш.

Инçете юлап вело-урапапа.
Инçете юлап чупсан çуран.
Пыл-сăра ĕçме, туртма табак
пулаймарĕ ман, хевте çукран.

Ман хăват урăххинче. Ман чун
ял тесессĕн ялкăшмасăр тăраймасть.
Пĕр никам яла ман пек хĕрӳн,
вилес пек хĕрӳн юратаймасть!

*1959*

## УЙĂХЛĂ КАÇ

Хаваслă тĕлĕк, ырă тĕлĕк
тĕнче тӳлеккĕн тĕлленет.
Палатăна кĕрсе, ман тĕллĕн
çут уйăх шăппăн тĕлĕнет:

«Мĕскер тума çап-çамрăк каччă,
пӳртрен тухмастăн çĕр хута?
Пăхсамччĕ кантăкран, тухсамччĕ —
сая яратăн вăхăта».

Стена çинче тăрать иртмесĕр
ялан пĕр тĕрлĕ кинокадр.
Пăхап ăна куçа илмесĕр:
те хурама вăл, те çăка.

Çара турат силленкелет те
вут хыптарать чун-чĕрене.
Туяп уç çил вылянине.
Туяп: çулпа, туссем, килетĕр.

Çанталăк кайнă çур енне.
Туссем, кулатăр, калаçатăр,
çĕкленнĕ кăмăла хуçатăр,
манса юлташăр ăçтине.

*1959*

# ЭП ÇӲРЕКЕН САДРА

Куратăп эп: вăйсем ман пысăк мар,
тен, чĕрĕк ĕмĕре те ытлăн-çитлĕн çитмĕç,
анчах та эп ӳстернĕ ырă çимĕç
нихçан тивĕçлĕ мар ятне сутма.

Таса чунран упрарăм йывăçне.
Таса чунтан шăвартăм, эмеллерĕм.
Шăтасшăнччĕ çумне мăян та эрĕм...
Çакна асра тытмашкăн çимĕç тивĕçлех.

Çук çăткăнлăх эп çӳрекен садра.
Пур юрату, хавхалану, çут яшлăх.
Ачашлăх пур эп çӳрекен садра,
сайра, çавтер сайра, тĕл пулакан ачашлăх.

*1959*

## ЙĂМĂК

Иртенпех эп сывлатăп çăмăл.
Пӳлĕм туйăнать аслăрах.
Иртенпех, иртенпех пĕчĕк йăмăк,
Лиза — çутă йăмăк — асăмра.

Вăл юрла-юрла тумлантарать-тĕр
халĕ хăйĕн Буратинине,
тумлантарнă май тăнран ярать-тĕр
ăс парса пуçтах пуканене:

«Пиншакна ан хыв, шарфна ан салт,
вут тавра ан чуп халех çарран.
сурăх сĕлкĕше анса кайсан,
пичче пек ан сик шыва хыçран».

Пурçăн çӳçлĕ çивчĕ хĕрача,
ылтăнран та ылтăн ăслă чун,
ах, хăçан киле çитсе, хăçан
çупăрлĕ сана ухмах пиччӳ...

*1959*

## АН ЮЛ

Ăрăскал çуккишĕн, çамрăк тусăм,
иртерех пуль тетĕп хурланма.
Халĕ çеç-ха сĕлĕ çирĕ утçăм,
ывăнман-ха çивчĕ урхамах.

Ут ырмасăрах çулран хăрас-и?
Чуптарас пулать-ха сиккипе.
Уттаврашĕ çирĕп, тăрантасĕ
ярăнать вĕр-çĕнĕ сăпка пек.

Сăпкинче вара сиксе илме те,
тĕлĕрсе илме те пит аван.
Е этем илтмен шăв-шав çĕклетĕн —
алхасни те кирлĕ, мĕн тăван.

Васкар мар-ха, тусăм, васкар мар-ха.
Тем инçех юлман вĕт-ха, чăнах.
Пархатар пĕтсессĕн урхамахăн,
пур-ха пирĕн вутлă çилçунат.

Пирĕнтен асли те васкамасть те.
Васкамасть, вăт ват кăркка, айван.
Хăшпĕри пире чылай кая хăварчĕ,
пурпĕрех куçран çухалайман.

Тĕрĕс — пит инçе пĕр икĕ-виçĕ
халсăрланнă çăмăл юланут.
Пăх та кур! Иртетĕп çиçĕм çиçнĕн.
Эп иртсен, эс те манран ан юл.

*1959*

## ИЛЕМПИ

Тăван аппа пек çывăх эсĕ,
чи ырă юлташ пек юмарт.
Çут сассуна çумра илтмесĕр
чи лăпкă каç та лăпкă мар.

Телей тени пурах пулсассăн,
çак самантсем вăл чăн телей.
Эс ăнланан мана сăмахсăр,
хавхалататăн, хӳтĕлен.

Ташăсенче чи хӳхĕм, капăр
мăшăрсенчен пĕри эпир:
мĕншĕн тесен ăста ташлатпăр,
мĕншĕн тесен эс — илемпи.

Санран хитререхне курмастăп
эп икĕ çул çак таврара.
Çӳçӳ çумне тиретĕн астра.
Çĕррӳ йăлтăртатса тăрать.

Эп гимнаст мар, ак, эс гимнастка,
чипер аппаçăм, черкке куç.
Калассине йăлтах калас-тăк,
эс манăн чи юратнă тус.

Эп инкекреччĕ. Кунĕн-çĕрĕн
астурăн туслăх тивĕçне.
Эс хушрăн та, эп юлтăм чĕрĕ,
чуптурăн та, эп сыв веçех.

Блока вула-ха теттĕм эпĕ.
Хĕрӳн вулаттăн эс Блока.
Мария, эп сана чĕнеттĕм
пĕрле пулма яланлăха...

Пĕрре çапла бал-маскарадăн
сасси ăшне каяс чухне
çĕррӳ çине пăхса тăратăп,
ытараймасăр мерченне.

Сасартăк шăппăн асăрхарăм...
ал тӳртĕш... юнтымар çыххи...
ват çын алли... Хĕр мар, хĕрарăм...
вунçич çул мар, миçе çулхи?

Куçа тартса хавас сăмах
вăйпах пуçларăм, ачашлантăм.
Капла пăхсан — çыхха эп мантăм,
хамра вара — çыхах, çыхах.

Карт! сикрĕн, хытă çӳçенсе.
Йăлт сисрĕн, чăтрăн, палăртмарăн.
Манпа тек урăх ташламарăн,
ал султăн, тăтăн сĕвенсе.

Унтан уттартăн буфета.
Эрех кĕленчине вăраххăн
уçса, тем шутласа, хăраххăн
эс лартăн, ĕçрĕн çĕр хута.

Лапка-лапка юр çăвакан
сас-чӳсĕр урама тухсассăн,

хăрлатрăн ÿсĕррĕн: «Пацан!
Тасал çумран, юлам курмасăр!»

Хăмсартăн, кайрăн сулăнса.
Текех эп сан патна пымарăм.
Аллейăпа, тÿрккес хĕрарăм,
танккарăн хăтсăр юрласа.

Сана эп вăрçрăм, ÿпкелерĕм
çаплах савса, çаплах çунса.
Теме ылхантăм, ĕсĕклерĕм
улман-улман куççуль çăтса.

*1959*

## ÇУРХИ КУШАКСЕМ

Ту-ту-ут! тутарчĕ пăрахут.
Эп Хусанта пĕрремĕш хут.
Есенина пула туслашнă
лейтенантпа эп ыталашнă.

Килте, тет, арăм çук, командировкăра.
Атьсем — ялта. Хам кайнă ирĕке.
Анчах та, акă, «çурлитровкăран»
тĕпне кăштах юлсан, килсе кĕрет пике.

— А! Люба! Сывă-и, тăванăм,
ĕçсем мĕнле? Мĕнле сывлăхусем?
Эпир кунта пăртак тăлланнă,
ан çилленсем, ан çилленсем.

Ку манăн тус, провинцири поэт,
аван ача, анчах туртмасть, ĕçмест.
Столицăна сăмах тăрăх пĕлет,
ăна каçпа хула кăтарт-ха эс.

«Ку арăм йăмăкĕ, студентка, —
лешĕ тухсан, тĕртет юлташ. —
Вăхăт пулсан, кăмăл пулсан, паллаш.
Вĕçтерĕр кинона, ак ил вун тенкĕ».

...Анчах эпир кĕместпĕр кинона.
«Хура кӳлле» анса аллейăпа утатпăр.
Çĕн хĕрача хулран тытать мана.
Пушмак кĕллийĕ вĕттĕн шаклатать ун.

Тĕттĕмленет. Çутаççĕ хунарсем.
Мĕнле амак? Кашни утăмранах — кушак!
Çунаççĕ куçĕсем, шăлаççĕ хӳрисем.
Чăнах та, мĕн тума кун чул кушак?

Эп Хусана кушак туйне килмен.
Кала-ха, Люба, мĕн шуйттанĕ?
Мĕн-ма улаççĕ, ма шăртланнă?
Юрласчĕ пĕчĕкрех, хуллен.

Хулран çакланнă çамрăк Люба
ахăлтатса кулса ярать,
вăраххăн чуптăвать, хăюсăр,
ыталаса илсе măйран.

Ачашшăн йăпшăнать. Хаваслă.
Эп ăнланса илеп тинех
çурхи каçра мĕн-ма çĕр саслă
кушак отрячĕ аснине.

*1959*

## ĂНĂÇУ

Куллен кĕте-кĕте ыратăп.
Тата мĕн чул шанас, кĕтес?
Ыран килет теме, ыран та,
паянхиллех, килес çук эс.
Эй, ăнăçу! Ăçтан эс çитрĕн?
Мĕнле сăн-сăпатпа, хăçан?
Çуках пулсан, çурал-ха, çитĕн,
пĕтме ан пар-ха шанăçа.
Ан иксĕлсем, чун вăй-хăвачĕ.
Хăватсăр чунăн çулăм çук.
Пĕртен-пĕр ăнăçу тăвасчĕ,
анчах — чи чаплă ăнăçу...

*1959*

## АВТОЭПИГРАММА

Хамидулла, тусăм, эпĕр иккĕн
алттă-биш малайлар булдык иккен,
йăнăш çулпа кĕрсе кайнă иккен,
медучилищĕне пырса лекниккен.

Умра купа-купа этем шăмми:
пуç купташки, аяк пĕрчи, ал туни.
Эх, иптешĕм, иптеш ӳкĕн-ан ӳкĕн —
медучилищĕне килсе лекниккен.

Шăмми-шакки çăва патне, пуçтарăпăр.
Акушерство çитсе çапсан, ăçта тарăпăр?
Хамид, эпи карчăклар бĕз иртеге.
Медучилищĕсем çак иккен.

Кăвакарса кайса, лăхăр-лахăр
манран кулсам эсĕ, санран эп кулам.
Пăрах кĕнекӳне, ларса юр юрлар-ха
вунсаккăрти икĕ эскулап.

*1959*

## ПĂРУ ПĂХАКАНА

Çитер, ĕçтер, лăпка, пуçран шăл,
шăнтса ан яр, чиртен сипле...
Куççуль те, савăнăç та саншăн
кун пек ĕçре вăл тем чухлех.

Пăру тени çемçешкерех çав,
Ачаш — алри ача пекех.
«Ан кай пăхма», — сивлет элекçĕ,
анчах эс килтĕн пурпĕрех.

Хĕрӳллĕ — тăрăшу вучахĕ,
çунан вутти — тӳр кăмăлу.
Чараймĕ пурăнăç тумхахĕ,
телейлĕн йăлкăшĕ куллу.

Парăнмасассăн çеç ӳсетпĕр.
Ĕçе саватăн кăмăлтан.
Малта мĕнле шăпа кĕтсен те,
хальхи шăпу хăв аллунта.

*1959*

## ЮРАТНĂ ПИКЕ

Çырушăн вăрçать, каçармасть те,
ăçтан-ха пултарĕ савма.
Куçран нихăçан та пăхмасть вăл,
чуна куллипе ăшăтмасть.

Кăвайт, пĕр хутчен кĕлленсессĕн,
тепре çунаймасть ниепле.
Чĕре вара ман ним йĕркесĕр:
кĕлрен те калла чĕрĕлет.

Çӳлте çăлтăрсем йăлтăраççĕ,
анчах та пĕри — çутăрах.
Нумайăш хĕрсем çунтараççĕ,
пĕри ытларах çунтарать.

Куçран нихăçан та пăхмасть вăл,
чуна куллипе ăшăтмасть.
Эх, çамрăк ача, ма туймастăн,
каç-каç шухăшлан ăсатма?

Илемлĕ те ырă чечекшĕн
пыл хурчĕ сĕрлет темиçен.
Эпир çеç юратнă пикешĕн
туспа сивĕнместпĕр веçех.

Тамара, Савкаçăн салтакĕ
чунна килĕшетчи чăнах?
Тамара, итле-ха, ялтах, тен,
саван леш чипер ачанах?

Ун чух эп сире кансĕрлемĕп.
Мĕнех, тек кала: «инженер» —
кулса-шӳтлесе-и, пĕлеймĕн,
каçпа эп клуба кĕрсенех.

Мана тем пекех çав сăмах та.
Мана çын хальччен юратман,
куçран нихăçан та пăхман вăл,
чуна кулăпа ăшăтман.

*1959*

## ХĔВЕЛ АННĂ ЧУХ

Хĕвел «куян çине утланнă»,
çĕр хыçнелле кайса пырать.
Горизонтра тӳпе вутланнă,
пушар алхаснă пек курнать.

Хирте чупса çӳрет комбайн.
Вырать, вырать хастар Ванюк.
Анăçалла пăхса куç айĕн
шутлать вăл: «Пĕлĕт тавраш çук.
Мĕн-ма çав каç тени килет-ши
сывлăмĕпе чăрмав кӳме...»

Каять хĕвел, анчах пĕлет-ши
Ванюкăн шухăш-кăмăлне?

*1959*

# 1960

## АВГУСТРА ТА...

Август маншăн та çур мар. Эп пурпĕр:
«Ырă» вăл, — теесшĕн, — çур пекех».
Августра та юрăсем янраççĕ,
хăш чухне янраççĕ çĕрĕпех.
Августра та пурăнатпăр эпĕр
пĕр-пĕрне шанса та ĕненсе,
эрнипех хăш чух тĕл пулаймастпăр:
е пĕри, е тепĕри инçе.
Элеватор, çул, йĕтем... Çук вăхăт.
Пурпĕрех каç тунсăх çуратать.
Пурпĕрех çак ĕçлĕ августа та
çур пекех саватăп, юратап...

*1960*

* * *

*Олжас тусăма*

Çак пурнăçăн шак хытă мăйăрне
катайăн-ши? Катаймăн ĕмĕрне.
Пĕри калать: кататăн, тет. Хăй ĕненмест.
Тепри пачах çăвар уçас темест.

Анчах — чĕнет инçет, тĕллев чĕнет хитрен.
Тула чăматăп эп, кĕрлет тулта апрель.
Çилсем вĕрсе иртеççĕ ваш! та ваш!
Кĕрлет апрель, утса килет юлташ.

Калать кулса: «Чунра — тăван Арал,
умра — тĕллев, чи аслă генерал.
Тĕллевсĕр çын катаймĕ ĕмĕрне
çак пурнăçăн шак хытă мăйăрне».

*1960*

* * *

Хама хам эп чăн-чăн çын тесен,
эп сана каçарма тивĕç мар:
сутăнчăклăн туслăх пĕтерсе,
пăрахтартăн эс чуна уçма.

Алăсем ман вăйсăр усăнаççĕ.
Эп пуçларăм салху пурăнма.
Пултăм-тăтăм хамшăн хам ултавçă —
мĕнпурне савса, савмастăп никама.

*1960*

## ССЫЛКĂРИ МИТТА

Тăван çĕршыв, Чăваш çĕршывĕ,
эс каласамччĕ, пĕлтерсем,
мĕн-ма ялан сахаллăн сывă
сан чи хĕрӳ поэтусем?

Кам айăплă? Мĕн-ма çӳреççĕ
ним хӳтĕсĕр? Ăçта хӳтти?
Йăлл! çĕкленеççĕ те сӳнеççĕ,
сӳнми çунаç сӳнсессĕн тин?

Вĕсем çуннин чăн янăравĕ
ӳсет мĕн-ма нумай кайран:
поэтусем пит япăхран-и
е ху ытла та япăхран?

Сана саватăп эп, саватăп,
туяп: татах та савмалла.
Çĕршыв, çĕршыв, хăçан сăваплăп,
хăçан кӳренмĕп эп, кала?

*1960*

## ЙӐРӐМ ÇУТӐ ӲКРĔ ПĔЛĔТЕ

Хӑрӑм пек хура
каçхи тĕнче.
Те тĕтре,
те çумӑр пĕрĕхет?
Тĕттĕме çурса,
сӑрт хыçĕнчен
йӑрӑм çутӑ ӳкрĕ пĕлĕте.
Ак — тепре,
лешне хĕреслесе,
тӳпене хыпашласа иртет.
Тен, сӑрт хыçĕнче прожекторсем,
самолет вĕçет таçта çӳлте?
Çук,
унта мӑн çул.
Çав сӑрт урлах
стройкӑна çӳреççĕ
машшинсем.
Эп çапла çутӑсене вулап:
«Мир те Ĕç.
Ан пулччӑр вӑрçӑсем».

*1960*

## МОРЯК САЛАМĚ

Пин салам, пин спаççипă хам ӳснĕ ене!
Ĕмĕрне те манаймăп эп Атăл шывне.
Ытарми ĕмĕтпе авăрланнă, хавас,
ун хĕрне эпĕ пынăччĕ — пĕчĕк чăваш.

Кам-ха ĕнтĕ юратмĕ хăй ӳснĕ ене?
Чунăма палламан хĕрача йăл кулли
туйтарсан пĕринче çамрăк вăхăт мĕнне,
тăванланчĕ пушшех Атăл шурă хули.

Пит патвар аталантăм. Чĕнсе тинĕсе,
канашлатчĕç манпа юханшыв хумĕсем.
Ĕмĕте пурнăçларăм. Телейлĕ, хавас,
тинĕссем сухалатăп халь — пысăк чăваш.

Шăппăн, çепĕççĕн халь тунсăхлатăп, инçе,
Атăл хумĕсене, çĕрлехи вутсене.
Шухăшпа çав сăпай хулана эп вĕçеп.
Тĕл пулатăп вара кăн-кăвак куççене.

*1960*

## ТĔЛЛЕВ — УМРИ ÇУТĂ

Пĕччен пулнăран-и, çултан çĕтсе пытăм.
Йĕр çук, юлташ çук. Ăçталла каймалла?
Сасартăк, ак, тухрĕ ума йăлтăр çутă.
Тӳпе пикенсех çӳлтен çăнăх аллать.

Çут курнăранпа çирĕп шанчăк çуралчĕ,
вăй-халăм та хутшăнчĕ ман, тупата.
Пăсмасть кăмăла каçăн тĕксĕм халачĕ,
ыр ĕмĕт тăван анне пек йăпатать.

Маяк та, юлташ та халь ĕнтĕ мăнтарăн
умри çак вуткуç, вăйсăр çеç пулин те.
Юр тинĕсĕ анлă, юр тинĕсĕ тарăн.
Çитес вырăна пурпĕрех эп çитеп.

*1960*

# УЙĂХ ХĔРĔ

*Баллада*

Таçта çити çулсем хывать
тĕпрен çĕнелнĕ Вырăс çĕрĕ.
Шывне ăсма манса тăрать
Ракета курнă Уйăх хĕрĕ.

Хĕрӳ салам Çĕртен илсен,
ăçтан-ха тĕлĕнмесĕр тăтăр?
Çав салампа хĕпĕртесен
Хĕвел, ытти нумай пин çăлтăр?

Хальччен кун пеккине курман.
Ак самана, ак вăхăт çитрĕ!
Пике ыйтать: «Чипер хăнам,
ку инçĕше епле-ха сикрĕн?»

«Çаплах, — тет лешĕ, тарават, —
манра — çут Ирĕклĕх хăвачĕ.
Эс пурнакан çак таврана
çав вăй мана йăтса хăпарчĕ.

Юмахсене чăна çаврать
канашлă халăх — Вырăс çĕрĕ...»
Шывне ăсма манса тăнлать
каланине сар Уйăх хĕрĕ.

*1960*

## РОМАНТИК

Кăçал анчах училище пĕтернĕ
романтикла ача, Хастар Çемен.
Шыв кайăкĕ пурнаймĕ шывсăр тенĕн,
савать вăл океан-тинĕссене.

Стамбул, Гавана, Рио де Жанейро...
Чылай çĕре çитесшĕн рулевой.
Ĕнер кăна-ха тăхăр пăт çĕклейрĕ.
Морякшăн чи кирли тет сывлăх, вăй.

Юлташшăн палуба çăвать типтерлĕн
леш чирлесе ӳксессĕн ăнсăртран.
Çĕрле. Ав рубка. Тĕттĕме тинкернĕ
унти çынни Çемен. Вăл — вахтăра.

Юлхавланса ятне ямасть яш каччă,
кăшт çамрăкки анчах ăна пăсать:
канма манса, ĕç хыççăн тăсса ячĕ
нумай тӳмеллĕ пысăк купăса.

Яланлăха пырса вырнаçнă евĕр
«Хисеп хăми» çинчен туха пĕлмест.
Кунран-кунах чун патĕнчи тĕллевĕ
хывса пырать иккĕленӳ тумне.

Ята çĕртсен, паллах, юта каяймăн,
çĕршыв ятне упрас пулать таса,
лере туссем тупса пĕрле юрлаймăн
Мире те, Туслăха та мухтаса.

*1960*

## ÇАМРĂКСЕН ĔÇКИНЧЕ

Эппин çĕклер-ха черккине.
Шăпланăр, тăрăр, ешĕл халăх!
Ĕçер-çиер-ха асăнмалăх
хисеп туса аслисене.

Хуçа, сана чыс та мухтав,
анчах ĕçетĕп мăшăрушăн!
Инкеçĕм, саншăн, сывлăхушăн.
Иртме сунатăп çĕр çултан.

Халь кил хуçишĕн тултарар,
тепри — ачи-пăчишĕн пултăр.
Тĕппи, тĕппи ĕçсе парар,
черкке тĕпне тумлам ан юлтăр.

Шампанскине ĕрет тухсан,
атьсем (урра), коньяк уçар.
Çитет çуйăхăшса ларса,
тавай юрлар, тавай ташлар!

Эх, тăпăр-тăпăр-тăпăртăк!
Эй, Кулине! Эй, Марине!
Пӳртри мăн пӳлĕм тăвăр-тăк,
каятпăр кай енне.

Ыратпăр та ташша çапса,
чĕнет пире каллех сĕтел.
Хуплу ак, çийĕр юратсан.
Ак пулă, ак кĕсел.

Уҫар-ха ҫӗн кӗленчине,
коньяк ярар черккесене.
Аса илер-ха туссене,
аса илер савнисене.

Ытах персе ӳсӗрличчен
аннесене те манас марччӗ.
Кала-ха, Кӗркури пичче,
ҫын турӗ кам пире, ăс пачӗ?

Эппин чыслар аннесене.
Тавайăр, тăрăр, ешӗл халăх!
Ӗҫер-ҫиер-ха савăнмалăх,
хисеп туса аслисене!

*1960*

## ВĂЛ

Çын пӳрт мар, ăшне кĕрсе пăхаймăн:
тул енчен куран та, шал — темле.
Эп вара, вăл пулинех ман майлă,
час ăнлантăм йĕксĕк этемме.

Сăмахпа канфет вăл хыптарать,
ĕçĕпе — йӳç наркăмăш парать.

*1960*

## ШУРĂ ПИОН

Гитарипе пĕрле юрлать гитарăçă,
куç сиктермест вăл шур пион çинчен.
Мĕн тĕрлĕ туйăмсем пулмарĕç ун
хăй тупнă юрринче!
Пур шанчăк, кĕвĕçӳ, çут тарăх пур.
Ай-хай чечен кĕвви, ай-хай чечен.
Хăçантанпа çапла пуçларĕ-ха
асап кӳме чечек?
Мĕне пула-ши вăл, рапсоди пек,
çавтер хускатнă çын чунне?
... Сире те-и
пион тавраш асапчĕ, тен,
ман çулсенче чухне?

*1960*

## КĔТНИ

Кĕр кунĕ мар чĕкеççĕр юлчĕ,
ку — илтрĕм эп: «Каçар, сыв пул».
Океан мар, ман чун пăлханчĕ
ман чун, ыйха татса тем чул.
Санра ман савăнăç та, терт те
ачалăхри самантсенчен.
Чылай юлташ курса ирттертĕм,
сан пеккине курман хальччен.
Сĕм пĕлĕт явăнса юхать-и,
хуплать-и каç хитрен, хуран,
ума эс тĕрлĕрен тухатăн:
е çăлтăр эс, е çӳç туран.
Сан куçусен хĕмне çĕнеймĕ
çăлшыв е чĕркĕмĕл çути.
Сан уттуна нимле çитеймĕ
чи чаплă пикесен утти.
Ĕç хыççăн çырмана ансассăн
пите çума, Малтивĕçе,
ката енчен килет пĕр сасă —
таса, тĕлĕнмелле çемçе.
Сан сассупа танлаштараймăп,
сан чухлĕ вăл пултарас çук.
Йăпаннă, çуннă эп, пуç тайнă
сан юррусем шăраннă чух.
Тата асра çап-çуттăн юлнă
шкула пĕрле çӳренисем,
сан умăнта епле хăюллă
курăнайма тăрăшнисем.
Хам пурпĕрех ни вил, ни чĕрĕ

пулаттăм çепĕç вальссенче!
Аксун вунпилĕк çулти хĕрĕ,
çавна пĕртте сисместĕнччĕ!
Кĕр кунĕ мар чĕкеçсĕр юлчĕ...
Мĕн-ма — «каçар»? Мĕн-ма — «сыв пул»?
Океан мар, ман чун пăлханчĕ,
ман чун, кĕтсе сана тем чул.
Халь те çавах, чи çывăхскерĕм,
сана кĕтетĕп тилмĕрсе,
пур йывăç-курăк кĕтнĕ евĕр
хĕвел тухса çĕкленессе.
Каллех пĕрле пуласчĕ пирĕн.
Ман сансăр пурнăç — пурнăç мар.
Эс манăн çутçанталăк ирĕ.
Вăй-халăм эс.
Телей эс ман...

*1960*

## ШУХӐШСЕМӖН ЮХӐМӖ

Шуçӑм ытамне ман ыйӑх вӗçнӗ,
йӑлӑнса чӗнсен те таврӑнмасть.
Шухӑшсемӗн юхӑмӗ ик тӗслӗ,
çут тӗсне хурийӗ хуплаймасть.

Эп тӑрап çилле шӑнараймасӑр.
Сӑнӑм те шап-шурӑ, те хӑмач.
Хӑрӑм тӗс юхать ним хӑрамасӑр,
çут тӗсе çапах та хуплаймасть.

Саншӑн çын сӑмахӗ ылтӑн пулчӗ.
Ан пӑлхан, ан тӗлӗн те ан сир.
Мӗн тери юлташлӑ та татуччӗ,
пӗр-пӗрне çухатрӑмӑр эпир.

Мӗншӗн-ши халь те хаяр чӗремӗр?
Мӗншӗн-ши? Мӗскер тума эппин
тӗл пулмасӑр çакӑн чул çӳрерӗмӗр,
пӗр-пӗрне манасшӑн мар эпир?

Шуçӑм ытамне ман ыйӑх вӗçнӗ,
шухӑша пула килме хӑймасть.
Шухӑшсен юхӑмӗ икӗ тӗслӗ,
çут тӗсне хурийӗ хуплаймасть!

*1960*

## ХУСКАННĂ ЧУН

Каçару эп ыйтмашкăн тивĕç пĕр çынран.
Эп халиччен пит пуç пĕксех кайманччĕ.
Çав йăлана халь сӳрĕк кăмăл манчĕ,
çав йăлана пăрланчăк чунăм манчĕ,
пуçăм çурăлать хуйха ниçта хума çукран.

Чĕркуçленсе тăма эп тивĕç. Тăтăм эп.
Тĕрĕслĕх евĕр таса çын чĕнмерĕ.
Те тархаслу чĕри тĕпне çитмерĕ,
те эп хам пĕлмерĕм çитерме.

Телей тени мĕнле япалара?
Телей? Эп пурпĕр канăçа кĕреймĕп.
Эп каплипе телей тупса илеймĕп.
Телей ман чирлĕ, совĕçре ларать.

Хисеплĕр, чыс упранăн упрăр чăн-чăн çынсене.
Чун витĕр ыратать: эп чăн çынсен тăшманĕ.
Çынсем, çынсем, истори хăй хушман-и
çăтмах та килĕшӳ кӳмешкĕн çĕр çине!

Эх, шанчăк, шанчăк, эсĕ çук пĕрре те —
манран таран тем анлăш утăмпа.
Çын чĕринче эп ыр ята вĕлертĕм,
усалли пурнать çавăнтанпа.

*1960*

## ТАНТĂШĂМСЕНЕ

Мана курсассăн çуталать сăн-питĕр,
калаçнă тăршшĕсем чăн тăванла, чипер.
Тантăшăмсем, сире хисеплĕн питĕ
салам ярап паян çĕн çулăн ячĕпе.

Пĕрне сиртен, çав хушăра, мĕскер çитмест-тĕр:
тăшман тесе шутлать мана айван этем.
Шутлатăрах, эп чĕптĕм çилленместăп.
Салам ăна та. Урăхла мĕн тем?

Тата... тен, салама пĕр Хĕрача илтеймĕ.
Кам иккенне пĕлен юлташăмсем,
кĕрсе пĕлтерĕр, салам янă тейĕр,
мĕн ĕмĕр ан çӳретĕр çилленсе...

*1960*

## ХĔВЕЛСЕМ

Уйрăлать санпала ĕнтĕ парта.
Çитĕнтĕн. Ĕçӳсем кăшт ăнмаççĕ.
Чĕрӳне кăкрунтан çăлса парăттăн,
анчах та сана ăнланмаççĕ.

Хыпăнса эс ӳкетĕн. Хӳтлевсĕр.
Эсĕ те вĕсене ăнланмастăн.
Хăш чухне куççульне чараймастăн,
хăш чухне тавăратăн шеллевсĕр.

Чăнлăх ку. Пăрăнса-и иртейĕн?
Ĕç-пуçсем вĕçсĕр-хĕрсĕр тăраççĕ.
Пĕлĕтри шевле пек çын телейĕ.
Шевлесем йăлт! сикеççĕ, тараççĕ.

Куртăм эс çуннине чăн малтан.
Çав майпа хама çĕнĕлĕх кӳтĕм.
Туйрăм савăнăç, туйрăм хӳтĕ,
туйрăм пурăнăç яш кăкăрта.

Таврăнчĕç инçетри шевлесем
сан патна, ман пата хĕмленсе.
Чĕртрĕмĕр вĕсенчен хĕвелсем —
поэзин чипер ачисем...

*1960*

## ТАМАРА — ДЖУЛЬЕТТА

Çырана киле-киле çапаççĕ
сивĕ сăнлă Атăл хумĕсем.
«Мĕншĕн-ши пит хуйхăллă ку каччă?» —
сăнаса иртеççĕ пикесем.

Мĕншĕнне ăçтан пĕлме пултарĕç —
сăлтавне çамка çине çырман.
Кĕçĕр те-çке пăрахут пулмарĕ,
кĕçĕр те килмерĕ шăллăм ман.

Шăллăма кăна чуна уçатăп...
Сăмахлатăп кăмăл туличчен
эп унпа кăна хуть те хăçан та
ачаран юратнă хĕр çинчен.

Çырана киле-киле çапаççĕ
сивĕ-сивĕ Атăл хумĕсем.
«Мĕншĕн-ши пит хуйхăллă ку каччă?» —
тетчĕрех тĕл пулнă пикесем.

Вĕсенчен, тен, кашниех пĕлмест те,
иксĕлмест пĕрремĕш юрату.
Манăн пурччĕ ача чух Джульетта,
халĕ те ăшрах сăнарĕ ун.

Çивчĕ çĕçĕ мар кун-çул тăшманĕ,
çын сăмахĕ тĕп тăвать çынна.
Эх, Джульетта — манăçми Тамара,
пăсрĕ çын сăмахĕ кун-çулна...

Кăнтăртан вĕрет кĕçех çил ăшшăн.
Чӳхенеççĕ Атăл хумĕсем.
Хама хам шанмарăм эп пĕр хушă:
«Пăрахут Перьмран пулать», — тесен.

«Мĕншĕн юр юрлать хаваслăн каччă?» —
тĕлĕнсе иртеççĕ пикесем.
Çитрĕ «Сибиряк». Порта тухаççĕ.
Тинкереп. Чим, шăллăм кăтрисем!

«Сывлăх, ĕç-пуçсем епле?» — темерĕ,
кĕсйине ухтарчĕ тăрăшса.
Эс çырни... Малтан эп ĕненмерĕм,
ĕненме тӳр килчĕ вуласан.

Ан шиклен, конверчĕ уçманскерччĕ.
Шăллăм ним тăмарĕ тĕпчесе.
«Çакăн пек çынна та вĕçертсессĕн,
эс тăмсай пулатăн», — терĕ çеç.

— Элексантăра тухать çав, — тетĕп.
— Тьфу! — тет шăллăм, хытă тарăхать. —
Элексантăр? Эпĕ ĕмĕрне те
халь каçармăп çавă анчăка...

Куç умпе сăнсем шуса иртеççĕ.
Сăнару, суймастăп, тап-таса.
Шухăшсем килеççĕ те килеççĕ
пĕлĕт пек, хумсем пек хупласа.

Эп, ачалăха аса илсессĕн,
çĕнĕрен çуралнăпа пĕрех.

Ман пурне те, Хусана кил эсӗ.
Юратса тӗл пулӑпӑр, хитре.

Эпӗ кутӑн ҫын, ман кӑмӑл хытӑ.
Пурӗпӗр-ҫке, пурӗпӗр хамах
хальхинче, Тамара, ирӗк ыйтӑп
ал памашкӑн, эп, пуҫтах ухмах.

Пур пулни-иртнишӗн ним шавламӑп —
сӑнару ҫап-ҫутӑ, тап-таса.
Пирӗн кунҫулран никам кулаймӗ,
элеке тӑкатпӑр таптаса.

«Мӗншӗн тунсӑхлать ҫак сӑвӑҫ-каччӑ?» —
тӗлӗнеҫҫӗ Атӑл хумӗсем.
Сӑвӑҫсем савнишӗн тунсӑхлаҫҫӗ,
чӗрисем ҫунаҫҫӗ хӗмленсе.

*1960*

## УРАЛТА

Хитре Свердловск аллейисем
Каçхи çиле тус тунă çулçă.
Тĕл пултăм тĕрлĕ площадьсем,
пĕри ытла та асра юлчĕ.
Йăм-хĕрлĕ явлăк-çулăмпа
вăл сулчĕ те, унта эп утрăм —
васкарăм çирĕп кăмăлпа —
çитсессĕн пысăк факел куртăм.
Сӳнми çак вут... ун çутинче
чул палăк çыруне вуларăм.
Тем чухлĕ ят унта çиçет
пуç хунă паттăр коммунарăн.
Çил-тăвăл мар ват Уралта,
хăватлă вăрçă кĕр-кĕрленĕ.
Тухатпăр тенĕ пусмăртан
хĕн-хурлă халăх, кар çĕкленнĕ...
Чăваш ачи, Шупашкартан —
вилтăприне эп пуç таятăп,
ун канлĕх сыххинче тăран
Урал сывланине туятăп.
Сассăрсене, пауэрссем,
вăл çирĕм çухрăмран мар илтĕ...
Свердловскăн йышлă площадьсем,
пĕри чуна хускатрĕ питĕ.
Нихçан сӳнми вут умĕнче
тăрса хĕрӳн çапла каларăм:
«Атте çыврать Мускав панче —
миçемĕш çул... çыврать çаплах вăл.
Юнпа, чунпа, ӳт-пĕвĕмпе
çичĕ юта эп кураймастăп».
Çав курайманлăх, факел пек,
ăшра сӳнмест те, лăпланмасть те!

*1960*

## АННЕМЕ

Салтак амăшĕ пек, çĕрĕпех çывраймарăн,
тухрăн шурăмпуçпех ăсатма ывăлна.
Каяс çул çывăх мар... Куççульне тытайса
                                        чарáймарăн,
пехиллерĕн чипер каялла таврăнма.

Йăвунтан çамрăклах вĕçме пӳрнĕ пулсан та,
йăнăшмарăм — чĕппӳ. Ан кулян, ан хăра.
Сăнару умăмрах. Хăш чухне ӳркенсе пуç усап та,
тап-таса куççулӳ çутăлать асăмра.

Тилмĕрсе, ват аннем, çĕрĕпех çывраймасăр
ан кĕт-ха эс халех аякри ывăлна.
Вĕренсе çын пулам-ха. Ним чул хуйхăрмасăр
тивлет сун ялăма чип-чипер таврăнма.

*1960*

# 1961

## ÇĔНĔ ТУСĂМА

Тен, çавăнпа çĕтет хастарлăх,
туссем ăнмаççĕ-ха пĕртте:
епле мăн кăмăллă, хатарлă,
епле айван вĕсем пурте.

Нихçан та эпĕ пултараймăп
суя чунпа сăвăлама.
Эп никама та астараймăп,
анчах пăрахмăп перама.

Епле аван чун пусармашкăн
асаплă музăпа пĕрле:
вут кĕрлесен — лăплантармашкăн,
кĕрлемесен — кĕрлеттерме.

Ах, тусăм, ма çаплах пăлхантăм
сана курсан, çунап, çунап.
Мĕншĕннине пĕлместĕп хам та.
Каçар, каçар, тавах сана.

*1961*

## ЙĔКĔТ

Кирлех-ши çӳç маçтăрĕсем
хитре çынна?
Çиçеççĕ шурă шăлусем,
куçу çунать.

Куçкĕскинчен пăхмасăрах
пĕлен — хитре.
Кашнин, сана курсассăнах,
хĕвел — питре.

Пăхан суя кулăпа мар
пурин çине.
Туспа хавас халаплама
çур çĕрченех.

Ыр тунипе мухтанмăн эс,
анчах — илтен:
«Сăнпа та вăл, чунпа та теç
аван этем».

Кăмăлсене çĕклентерен
юрăсемпе.
Пĕртăван пек тату çӳрен
хĕратьсемпе.

Кăштах шутлаççĕ тĕрĕс мар
тантăшусем
пĕр вăхăтрах виççе савма
пулать тесе.

Калам пăртакçă тӳрлетсе
эп вĕсене:
«Нумайăшне вăл куç хĕсет,
савать — пĕрне».

*1961*

## ЛЕНИН ÇУЛĔПЕ

Пӳрнĕ теççĕ мана вăрăм ĕмĕр...
Пуян мар эп, çуккă ылтăн-кĕмĕл, —
улпут мар. Хресчен атте-анне
сăпкама сиктернĕ манăнне.
Эх, атте, атте, чăлах салтак.
Эх, анне, анне, чĕре ăшши...
Шухăшлап та, чунăм ыратать,
асăмран каймасть вăрçă нуши.
Астăвар-ха хывăх çăкăрне,
çирĕпрех пусар-ха çĕр çине!
Çулĕ — çăмăл мар та — тĕрĕс пирĕн,
ма тесессĕн Ленин тĕрĕс, çирĕп.
Иртерех çав кайрĕ, иртерех.
Куллен-кун пире вăл кирлĕрех.
Иксĕлми манра вăйсем, мал ĕмĕт.
Ленин çырнă мана чаплă ĕмĕр.

*1961*

## АН ПӐШӐРХАН ЭС, АННЕМӖР

Сывӑ пул, кӑвак ҫӳҫлӗ аннӗмӗр.
Сывӑ пул, хӗвел чунлӑ анне.
Умлӑн-хыҫлӑн пире ӑсататӑн
инҫете, тӗнче куҫӗ умне.

Ҫул кайма кам пӗр нимсӗр тухать-ха?
Хак парса хак ҫитми парнӳне
эс пиллен — Юрату тата Ҫынлӑх —
кӑкӑр сӗчӗпеле панине.

Сан пилӳ вӑй-хала хурҫӑлатрӗ
Улӑп евӗр пулса кӗрешме.
Ҫӗршер тӗрлӗ тӑшман вӑрттӑн, уҫҫӑн
пире вилӗм тӗрри эрешлет.

Уҫҫӑнах хӑратсан — сых тӑратпӑр.
Вӑрттӑнне мӗскерле туймалла?
Парти съезчӗ сивленӗ Инкекӗн
каяшне мӗскерле ҫулмалла?

Улӑштарнӑ сӑнне вӑл халь ӗнтӗ.
Юррисем те веҫех урӑхла.
Мӗн кӗтет-ши? Кив вӑхӑт кӗтет вӑл,
чӗрене тивертесшӗн тӑхлан.

Ун пек вӑхӑт килмест. Ҫӗрчӗ. Ҫӗтрӗ.
Тӗлӗрет ылхануллӑ тӑхлан.
...Ан пӑшӑрхан эс, аннемӗр,
пирӗншӗн ан пӑшӑрхан.

*1961, ноябрь*

* * *

Вера, Вера, асамат кĕперĕ
хăваларĕ ячĕ çиçĕме.
Паçăр темĕн пит ыйхах килмерĕ,
пуçăма хуртар-ха чĕрçине.
Çумăр иртиччен кăшт тĕлĕрем те,
тĕлĕкре пĕр сана çеç курам.
Чуптуни тĕнченĕн тĕрлĕрен тет,
эпĕ чуптăватăп çамкаран.
Аслă та тĕреклĕ пирĕн хӳшĕ.
Кунтарах куçар-ха уруна.
Эсĕ пурăнмастăн вĕт пĕр хушăн,
эпĕ те хамшăн çеç мар пурнап.

*1961*

* * *

Пĕррене анчах савар тени вăл догма,
вăхăтлăх манни вăхăт иртни çинчен.
Савнисем нумайччĕ — асран тухнă,
эп теейменп ача пек çинçен.

Ма тесессĕн манăн лăпкă сасă —
баритон, чăн-чăн арçын сасси.
Ма тесен, хĕвел анса ларсассăн,
Савкаçра кĕтет мана савни.

Иртнисем те чĕререх пурнаççĕ,
хальхисем те çывăх та маттур.
Тĕрлĕ майлă пикесем пулаççĕ,
лайăххи те темĕн чухлĕ пур.

Сахал мар çынна эп чун уçатăп
кăмăлне ытарайман енне.
Ултава çеç, ултава нихçан та
юратаймăп, ĕмĕр-ĕмĕрне.

*1961*

* * *

Хыт йăнăшатăп, хытă йăнăшатăп.
Тиркевĕм çук савманнине те, савнине те:
паллашнă-паллашман хĕрӳллĕн туслашатăп,
унтан та хăвăртрах пуль сивĕнетĕп.

Пĕрин кăна тискер те тĕпсĕр айăп
эп çаплинче. Асра вăл ылхану пек юлчĕ.
Мĕн курăп малашне, ăçта эп кайăп?
Сахал-и çын кулать, сахал-и кулчĕ?

Чунпа эп шанчăксăр та халсăр ĕнтĕ.
Хăçан пурнас-ха хамăн чĕрĕк ĕмĕр?
Пăхса ытарайми ахахăн-ĕнчĕн
эс марччĕ-и хыпса çунаттăн, ĕмĕт?

Сан вырăнна халь акă юр çăвать
лапка-лапка, чĕнмесĕр, тăтăш, хăвăрт.
Манпа — пике. Кĕл сăнлă. Ют çавах.
Куçусем? Пĕлместĕп. Симĕс-и е хăмăр...

Итле-ха, шанчăксăрлăх. Халсăрлăх, итле:
чĕрĕлсе тăрам-и камитле,
тĕл пулам çĕн хĕрача. Хитре
юрату пуçлам пирвайхилле!

*1961*

## ЯШЛĂХ ИРТСЕН...

Пĕркеленчĕклĕ пит якалсанччĕ.
Çамрăккăн вылясанччĕ куçсем.
Каялла халь эсир таврăнсанччĕ,
яшлăхри шуçăмсем, инçетри шуçăмсем.

Вĕçсĕр тăрăттăм эп куç илмесĕр,
тăранаймăттăм пурпĕр пăхса.
Айван пулнă, айван: ним хĕрхевсĕр
янă эпĕ сире хуса.

Урăх шуçăм курма ĕмĕтленнĕ,
Мĕнлескер вăл? Паллах, пĕлмен.
Тĕнче тăрăх çĕтсе çӳренĕ,
килсе тухнă тăван килех.

Пĕлеймен сывласса хăш чух ассăн,
утнă утăмсене тиркесе:
çамрăк вăхăт çухалчĕ пĕр чапсăр,
ним тĕллевсĕр, ахаль тесе.

Каялла халь эсир таврăнсанччĕ,
яшлăх шуçăмĕсем, инçетри шуçăмсем,
урăх пулĕччĕ чун хăвачĕ,
урăхла — шухăшсем, ĕçсем...

*1961*

## КАÇХИ ХУЛАРА

Утатăп эп бульварăн-тротуарăн,
пырса тухап çынсем нумай çĕре.
Куçа лăпкать йăваш та лăпкă фара.
Çывăхăмрах ачашшăн тем çӳрет.

Пĕрре килет, тепре килмест утассăм
каçхи чăштăртатуллă тĕнчере:
каять пек чи кирли, каять тăхтавсăр.
Çывăхăмрах ачашшăн тем çӳрет.

Мĕскер-ши вăл чăн-чăн кирли? Пĕлесшĕн
ăна, ăш çуннăран, эп çав тери.
Каçармĕ, вăрçĕ-ха мана пĕчченшĕн,
кулянчăк çын ку тейĕ хăшпĕри.

Час-час мĕн пек çут çăлтăрсем ӳкеççĕ,
сĕм пĕлĕтсем хупласçĕ уйăха.
Хальччен çавна курман иккен тиркевçĕ.
Курман пулсассăн курĕ, туйĕ-ха.

Ах, уйăх, уйăх, ĕмĕрхи асамçă,
шăрантарса пăхать çӳл тӳперен.
Неон пуканесем умра выляççĕ.
Çывăхăмра... ачашшăн тем çӳрет.

*1961*

## ЮР ТАСАЛĂХĔ

Эй, юр тасалăхĕ, пирвайхи юр тасалăхĕ,
мĕн чул асап кӳретĕн эс мана!
Шур тĕс çапать çап-çамрăк сăнăма.
Эй, çут тасалăхăн ытарайми асамлăхĕ,
эс сиплĕх мар, эс çĕçĕ чунăма.

Мĕн чухлĕ тăрăшрăм санăнни пек тасалăхшăн,
анчах çĕнтерейменрĕм хама хам.
Хама эп упраймарăм халăхшăн,
çав майăн улталарăм халăха.

Ну кам-ха ăшталантăр, кам ăнлантăр...
Кашни чупать хăй тĕрлĕ нушапа.
Кама черкке те çук, кама кăмкан пек алтăр.
Ниме тăман çыннах реххет шăпа.

Ах, çав пĕтсе пĕте пĕлмен ниме тăманлăх.
Хăй пур ялан, пире çеç пĕтерет.
Пирвайхи юр та хăш чухне тăманлă,
тăманĕ, хыт асса, тусанпала хуралнă.
Çав юр, атьсем, мĕне-ши пĕлтерет?

*1961*

* * *

Ан тив, суха тăвам.
Мĕнех. Мĕнле сиен...
Ан тив, плебей пулам,
чунпа патриций эп.

Э, çитрĕ. Ыткăнар-ха
çил ачисем патне:
тулта — шăхлич те арфа,
виола та кларнет.

Сенкер çилсен концерчĕ
арасланать тулта.
Иртни кичем кунсемччĕ,
мĕскер кĕтет малта?

Ĕнтĕ мĕскер кĕтсен те,
эп — юрăç, чăн поэт.
Эсир плебей тесен те,
çавах патриций эп.

*1961*

* * *

Хурласассăн ĕлĕк питĕ хурланаттăм.
Пĕвĕмри пур клетка, пĕтĕм атом
вĕреме кĕретчĕ. Вăй-хăватăм
ураганччĕ. Симĕссĕн-кăваккăн
темĕнччен асатчĕ аслă тинĕс,
шăплансан та лăпланас теместчĕ.
Мĕн вăл хурлану, мĕскер сехмечĕ?
Ма эп халь кирек хăçан та тикĕс?
Çĕнессе ытла ĕненнĕрен-ши,
хурлакан çынпах килĕштеретĕп,
çывăхах ăна илештеретĕп?
Е çул иртнĕ май ăс кĕнĕрен-ши?

*1961*

* * *

Вăхăтлăха кĕрсе тухасшăн
кам çĕмĕрнĕ-ха çăрана?
Кам пĕр çĕклемлĕх ут çуласшăн
таптанă ешĕл çарана?

Çăри юсанĕ, пӳрт шăпланĕ,
çаран тӳрленĕ хăй майпе,
анчах та санăн чун суранĕ
хăçан сипленĕ çавăн пек?

Çын илĕм-тилĕм çамрăк чух
епле сасартăк сипленсен те,
илтсе çĕр тĕрлĕ калаçу,
кайран вăл сахал мар вистенĕ.

Пĕр ăстрăм киленӳшĕн татнă
çеçке çеç çурнă шур чечек,
мĕн савнăçпа çаплах çиçетĕн
хаваслă, ырă та чечен?

*1961*

* * *

Тăратăн эсĕ çичĕ хĕр тĕшне.
Чăн сăмаха ним çилленмесĕр йышăн:
вĕт шăлусен çивĕччĕшне
эп кăмăллап вĕсем юр пек шурришĕн.

Çыртнишĕн-алхаснишĕн мар...
Нивушлĕ çавтерех кăварланатăн?
Анчах мĕн-ма сӳнсе кăмрăкланать-ха
çав кăвартан ман ӳт-пӳри кăвар?

Эс чуптăван пуçу ыратиччен,
ун чух та пĕтĕмпех тăранаймастăн.
Ĕнсе кайма пулать, вăрахлăха юлас-тăк
сан аллусен ытамĕнче.

Нумай-и-ха, пире Ромеопа Джульетта
тесе калатчĕç, ним кулмасăрах.
Халь çавă вăхăт та, ик çутă ят та —
сентименталлĕ мыскара.

*1961*

## ЧĂТĂМЛĂХ

Эп кĕтни çитмерĕ, ĕç ăнмарĕ —
усăнчĕ çунатăм лăштăрах.
ăслă-и ман пуçăм, ăслă мар-и,
чĕрере кăшт ăс тени пурах.
Пурăнар-ха. Хĕн курни те кирлĕ.
Ырлăх хакĕ мĕн хакне пĕлер.
Йывăр хыççăн çăмăлĕ те килĕ,
савăнăç вăл хуйхăпа пĕрле.
Эп çакна юнăмпала туятăп
юратса тĕллевĕн инçĕшне.
Паян эпĕ чăтăмлăх туянтăм,
ăнăçу туянăп малашне.

*1961*

* * *

Мессалина пек асса пурнасшăн
çуралман хĕвеллĕ сар хĕрсем.
Кăшт пулин те ирсĕре тухасшăн
çӳремеççĕ чăн-чăн йĕкĕтсем.

Хĕрĕ сивĕнсен вĕсем йĕреççĕ
йĕкĕтле, куççульсĕр, вăрттăнла.
Манаймасăр вуншар çул çӳреççĕ,
чараймаççĕ вутлă тăвăла.

Эпĕ хам та çавнашкал тупраллă,
Шанчăклăх хуралĕнче тăрса,
тус ятне мĕн ачаран упрарăм,
халĕ те вăл çăлкуç пек таса.

Хăш тĕлте аташрăм, йăнăш кайрăм?
Кĕçĕр мĕншĕн унпа мар, санпа?
Мĕншĕн халь вăл мар, эс, ыр хĕрарăм,
çывăхрах мана чунпа, сăнпа?

Эпĕ санăн тупсăмна пĕлместĕп,
сан шăпушăн вĕççĕр хурланап.
Юлашки хĕмне эс шеллеместĕн.
Хам мĕн парăп уншăн эп хăвна?

*1961*

* * *

Пусрăнчăк ман юррăм, пăтрашуллă,
ача чух юрлаттăм янкăсрах.
Йăлкăшасшăн мар шевлесĕр куллăм,
ача чух кулаттăм хавасрах.

Сисĕм те мăкалнă, пиçĕ ăс та
палăртасшăн мар пиçĕлĕхне.
Мĕн-ши пулчĕ? Хам та пĕлейместĕп.
Чим... тĕттĕмлĕхре такам хӳхлет.

Ма хӳхлет? Ку маншăн — тимĕр читлĕх.
Эп унта çунатăп пĕр-пĕччен.
Кирлĕ мар! Çĕнмешкĕн вăхăт çитнĕ!
Читлĕх çĕтĕ! Йӳç пĕччелĕх иртĕ!
Хӳхлесси çухалĕ çĕр çинчен!

*1961*

* * *

Мĕн чухлĕ пурăннă — ним туманпа пĕрех.
Кун хыççăн кун иртет, иртет.
Юлатăп вĕçеймесĕрех
чĕпле аманнă кăйкăр пек.

Чуна касать куçран калу.
Епле шанатчĕç... Тăн еплеччĕ...
Вăй-хал шывсиккки пек вĕретчĕ.
Ак халь — тĕтре те аркану.

Нивушлĕ-ши мана хакланă
ытла та çăмăл-çăмăлттай?
Нивушлĕ халăм ӳсмĕ манăн
çунатăмсем сипленнĕ май?

*1961*

* * *

Эп пĕлместĕп: мĕн туртать мана
сан патна? Чеченлĕх? Çămăлттайлăх?
Икĕ уйăх курмасассăн, туйăнать
курман пек шăпах икĕ çулталăк.

Чеченне, паллах, эс çав тери чечен.
Мĕн каламалли... Анчах пĕртен-пĕр мар-çке!
Хитресем вуншар иртеç куç умĕнчен.
ăмсанатăп... Чĕрене пымаççĕ.

Темĕн ытлашши, темскер çитмест.
Çămăлттайлăхĕ те хăтсăр çămăлттайлăх.
Уçă кăмăллă, сăпайлă, тусăм, эс,
çămăлттай пулсан та, ырă, лайăх.

Сыхланса калаçасси асра та çук,
ма тесессĕн сутăнчăк çын мар эс.
Эпĕр иккĕн ахăлтатнă чух
яланах пире çынсем ытараймарĕç.

*1961*

* * *

Ман пекки вуншар-тăр пулнă санăн?
Эпĕ хам та сан пеккисенне
пĕрре мар прическине юсанă,
çӳп тасатнă, çӳп ерсен тумне.

Татăлсан чăлхин капрон çиппийĕ,
хуйхăрнă пĕрле эп пĕрре мар.
Кашнинех ĕненнĕ, савнă питĕ,
çав каçах тивсен те уйрăлма...

Çырмаçи. Каçхи вăрман кĕтесĕ.
Иккĕн çеç эпир уçланкăра.
Леш енче машинăсем иртеççĕ.
Пĕвере шур çăлтăр шакăрах.

Типĕ çулçăсем çинче ларатăп,
кăмăл çук, хал çук патна пыма.
Мĕншĕн-ши ялта та, хулара та
сирĕнпе çеç макăртрăм чуна?

Тунсăхлă ӳтне хупла, тăванăм,
кил кунта, куçран пăхсам, кала:
эс уйрăлсанах мана йăлт манăн,
ман хăçан, епле манăçмалла?

*1961*

* * *

Сан куç хӗлхемӗсен ӳпкевӗ
аркатрӗ тӑнӑç-канӑçа,
анчах ытла та эп çил евӗр,
ытла та тусӑнкӑлӑ çав.

Манпа ыр кун курма та пулмӗ:
паян — кунта, ыран — лере,
тата эп питӗ пӑтрашуллӑ —
курнӑçланса тертлентереп.

Кашни сӑмахшӑн, вак-тӗвекшӗн,
тен, хатӗр эп чӗрре кӗме.
Хама çӗнсессӗн, çӗнтересшӗн
час-час перетӗп мӗскӗне.

Ниме тӑманлӑхшӑн шеллеççӗ.
Ниме тӑманлӑх — ман хӳтлев.
Çакна йӑлтах туймастӑн эсӗ,
Чӗрӳн ыр ултавне итлен.

Ӗнен мана, ӗнен, пӗлетӗп
хама санран эп аванрах.
Эс хытӑ йӑнӑшнӑ. Пӗрре те
тӳррен пӑхмашкӑн ан хӑра.

Мана çапла чӑн мар курни вӑл
малашнехи вил юрату.
Чӑн юрату упрантӑр сывӑ.
Хӑтар мана эс, урӑх туп.

*1961*

* * *

Çырă çŷçлĕ тусăм, лăпкă тусăм,
сансăр эпĕ тăлăх та пĕччен.
Иртес çук капан пек пĕлĕт-тунсăх,
каяс çук эс куçăм умĕнчен.

Кŷренсен те сасă хăпартман эс.
Хăв йĕрсессĕн те, туту кулать.
Халĕ тин сана чĕрем-и манĕ?
Ĕнтĕ шанчăкăм та эс кăна.

Ăшă сăмахпа йăпатаймарăм,
савăнăç кŷмерĕм, — хурлăх çеç.
Сан умра таттисĕр манăн парăм.
Манăн чыс, ман кŷтнĕ совеç эс.

Пурăнăç çине йăвантараймăп,
пурнăç айăпсăр ман айăпра.
Нишлĕлĕх — ак чăн-чăн пысăк айăп.
Эпĕ айăплă чунра кăвар çукран.

Темĕскер çухатрăм, тем шырарăм
вĕççĕр ыткăнса енчен-енне,
тин эп витĕр куртăм, тин ăнлантăм
чи хакли пĕр эсĕ иккенне...

*1961*

* * *

Puриншĕн те кунта эп ют.
Чĕнмеççĕ çыннисем. Урамĕн
каллех ним тараватлăх çук.
Пуриншĕн те кунта эп ют,
анчах юта та хăшĕ юп курать-мĕн.

Эс алă сĕлтрĕн, ăшшăн йăл кулса.
Куçа чарса хыçран эп пăхса юлтăм.
Çынсем, урам — саламлă та таса,
пĕр нимĕн туйăнмасть халь юттăн.

Ял хĕрринчи ем-ешĕл çеремре
пĕччен тунсăхлакан, эс пурнакан çурта
çĕрле те, кăнтăрла та эп çӳреп,
мĕншĕн тесен чĕреçĕм ман — унта.

Çĕрле çут чӳречӳ йăлтăртатать
сĕм тӳпери Венера-çăлтăр пек,
юн хĕрĕвне ыйтать, ыйтать, ыйтать,
сӳнмест эп пымасан мĕн çĕрĕпех.

*1961*

## ТАВТАПУÇ

Кӑмӑлне мухтатӑн, лайӑх тетӗн.
Пӳ-сине, сӑнне, тумне-юмне
пӗлӗте çити йӑтса çӗклетӗн,
юмахри тӗспе паратӑн куç умне.

Куртӑм эп сӑнне те, пӳ-сине те.
Хӗр тупнишӗн ӗрехмет, пускил.
Чим... эс ма ӑна мана сӗнетӗн?
Пит маттур-тӑк, хӑвӑн валли ил.

*1961*

* * *

Пĕр çĕрте ларма эп кăлăк чăххи мар-ха,
пурнăçа яш чух нумай курса çӳрес.
Çул çӳрен каска якалнă тет. Кулам-ха:
тĕк выртаканни вара çĕрет.

Яп-яка-и эп, пĕлместĕп, яка мар-и,
факт: сăпкаллă мотоцикл манăн çук.
Комсомол ĕçне яла ярсан, тăмарăм
хирĕçсе те çемçелсе сарçун.

Эп шултра укçа санран нумай илеттĕм,
халь сахал илеп пĕр виçĕ хут.
Ăшунта манран кулатăн, ăссăр тетĕн,
ял, колхоз вăл саншăн — тарăху.

Пуç мими сан хăвăн та тем мар-мĕн,
халиччен çĕпре мĕнне те пĕлмесен.
Хур кăвас çĕпресĕр — вăл ăнса хăпармĕ,
çăкăр та çиеймĕн пĕçерсе.

Йӳçĕ çĕпре пек çĕклесшĕн тĕрмешетпĕр
çамрăксем айван хуçалăх «чустине»,
тĕллеве пĕлсе ĕçлетпĕр, кĕрешетпĕр,
эс вăйна хуран пĕр ху çине.

Яп-яка-и эп, пĕлместĕп, яка мар-и,
факт: сăпкаллă мотоцикл манăн çук —
комсомол ĕçне яла ярсан, тăмарăм
хирĕçсе те çемçелсе сарçун.

*1961*

## ЧАЛĂШ ÇУМĂР

Чалăш çумăр кантăка
хупăрларĕ,
хĕвел хĕртĕвне инçе
хăваларĕ.

Уй, çаран, ката сăнне
таткаларĕ,
асамат кĕперĕпе
пĕр ташларĕ.

Канăç çук йĕпе тĕссен
çумăр айĕн.
Кăмăла çĕклет çут сий —
шунă майăн.

Чаплă кĕвĕ ман чĕре
илтрĕ авă, —
тулли шăплăхра чуна
çунтарать вăл.

Хĕвел анас умĕн çав
кĕвĕ юхрĕ,
кунăм пĕтнĕн мар хама
пурпĕр туйрăм.

*1961*

## САЛТАК АЧИСЕМ

Çурхи çумăр хыççăн пур йывăç та капăр —
çĕнелнĕ сăн-пичĕ, кĕпи.
Хавас калаçатпăр, хавассăн пăхатпăр.
Ăçта-ши çул тытнă эпир?

Каçне хапăллар-и, çуртне ыр сунар-и,
хапхи умĕнче — хĕрача.
Мана-ши куç хыврĕ, сана-ши сăнарĕ?
Çапах та хăçан курнăçар?

Куратпăр, чĕнмест вăл, кулать çеç йăвашшăн
тута хĕррипе те куçпа.
Эпир çак хĕре яланах астăвасшăн,
пире те астутăр каçпа.

Çурхи çумăр хыççăн пур йывăç та капăр, —
тумла-и, куççуль-и тăкать...
Пурте яш эпир, пăхăнма халь пыратпăр —
ят тухнă кайма салтака.

*1961*

## ПИЛЕШ

Çураçнă хĕр, хурланă хĕр —
пилешĕмĕр, пăхсан.
Ӳкĕнĕçпе хупланнă-тăр
тиркевçисем кайран:

йăваш, именчĕк те çемçе —
кĕрхи вĕт çумăрсем;
каларĕç сăвă шăппăн çеç —
хăюсăр каччăсем;

тăпăртатса пĕр вырăнта,
вăраххăн алланса,
мерчен те çакрĕç, ахах та
пике çине ансат.

Тăнлать, тăнлать каччисене,
калла кайма хушать.
Телейлĕскер, хыт çӳçенет,
хĕп-хĕрлĕн йăлкăшать.

*1961*

## ИНҪЕТРИ ҪĂЛТĂР

Лайăх-и ман йăла, лайăх мар-и пĕрре те,
каҫсене эп ялан пĕчченех ирттеретĕп.
Те сăпайлă, те ҫук ĕнтĕ ҫак: мĕн тума-тăр,
инҫетри ҫăлтăра куҫ хĕссе йăл кулатăп.
Вăл вара, ăш сăмах ачашланă хĕр евĕр,
хитререх йăлкăшать, шӳтлесе тăнăҫемĕн:
«Манăҫа хăварманшăн, — тет, — туслăх сĕнеп.
Ху часрах килме тух, салама илсенех».

*1961*

## ТРАКТОРИСТКА

Çĕршыв çийĕн вĕçнĕ çăхан çарĕ,
Мускав енне талпăннă тăшман.
Куллен-кун хăрушă фронт хыпарĕ.
Чăтнă халăх, çĕннĕ, парăнман.

«Парăнмастпăр!» — Зоя касса татнă.
«Парăнмастпăр!» — тенĕ ыттисем.
Ялăмра, çакна илтсен, хăватлăн
вут-хĕм сапнă Лиза куçĕсем.

Çамрăкскерĕн, пӳ лутра пулсан та,
чунĕ — çирĕп, ĕмĕчĕ — çап-çут.
Ачапча пуçпа çав хĕр сасартăк
çӳрете пуçланă хурçă ут.

Фронталла каяс тесе аптратнă.
Çул çитмен. Мĕн фрончĕ. Ан калаç.
Харсăрскер вара хускатнă трактор,
пулнă тăнă колхозра сухаç.

Килнĕ йывăр. Лиза туйса илнĕ:
тăрăшулăх пур та, хал çукрах.
Пĕр ăна кăна-и йывăр килнĕ, —
сыв арçын йалт пулнă вăрçăра.

Ак пĕр яшĕ юлнă патронсемсĕр,
чĕр юнпа хупланнă, пĕвенсе...
Лиза, çакă хыпара илсессĕн,
çулçă евĕр ӳкнĕ чĕтресе.

Чĕрине тытса хуллен ахлатнă:
канлĕ çывăр, вилĕмсĕр салтак,
трактористка пурнăçĕ саклат пек
пулĕ саншăн, çĕрĕмшĕн, — йăлтах.

Ир шар курнă çын хĕне çĕнтернĕ.
Шăл çыртса та хуйхă пытарса,
тракторне куллен вăл кĕрлеттернĕ, —
пуринчен те иртерех тăрса.

Халь те акă, çамрăк пулмасан та,
сăнĕ лăпкă, ĕмĕчĕ çап-çут.
Манас çук вăл: еплерех сасартăк
çӳрете пуçларĕ хурçă ут.

Асилсессĕн чун хыт ыратать çав.
Канмалла та, шел тет трактора.
Савнине вăл халь те юратать-ха,
манаймасть пуç хунă паттăра.

Çамрăк паттăр юлнă патронсемсĕр,
чĕр юнпа хупланнă, пĕвенсе.
Лиза, çакă хыпара илсессĕн:
«Парăнмастпăр, — тенĕ, — ĕненсем...»

«Парăнмастпăр, — тенĕ, — çĕнтеретпĕр,
пурпĕрех тĕп пулĕ выç тăшман.
Çуралман чура пулмашкăн эпĕр,
пуç усма та эпĕ çуралман!»

*1961*

## ИКĔ КĔПЕР

Мĕскер вара питех... кĕпер — кĕпер.
Ун пеккисем çут тĕнчере вуншар-тăр, —
чулпа чукун пĕрлешĕвĕ... Çавтер
çĕн кĕпере кăна мĕн-ма мухтатăр?

Ак эп пултараймастăп, хуть вĕлер,
çумрах пур чух кĕпер-пенсионер,
кив кĕпере манса чунсăрланма.
Эп шухăшлă. Эп тивĕç ăнланма.

Кивви, йывăçранскер, паян кунччен
этемĕн тусĕ пулнă çĕр çинче,
пĕрле мĕн чухлĕ тӳснĕ унпала
тӳсмелле мар тем тĕрлĕ тăвăла!

Ялан çĕнтернĕ, сирнĕ инкеке.
Васкань вăхăт, пынă сикĕпе.
Халь те васкать, васкать, урăхланман.
Тавах, кĕпер, май çук сана манма.

Çĕнни халь çитĕнчĕ. Курар ăна.
Каçса пăхар. Тӳсессĕн туйăнать.
Вунна вăл кайтăр, çиттĕр çирĕме,
çынна çеç ан пăрахтăр çӳретме.

Çӳретĕп эп, çирĕмрискер, хĕрпе,
каç-каç утса иртетĕп кĕперпе.
Саркаланса юхать Мăн Çарăмсан,
пĕр пусрăнса юхать, пĕр çаврăнса.

*1961*

## 1962

* * *

Çитменлĕхĕм ман çитмĕл. Майсăр-шывсăр
ман пурнăç-тăрнăç, сӳрĕк темĕнле.
Эп ыр сăмах илтмен те темелле.
Эп сăнсăр, чĕмсĕр, шӳт ăшшисĕр.
Анчах мансамччĕ пурпĕр хурлама.
Ăнлан мана, тăванăм, кур мана,
çупăрласам тӳрремĕн, çакă халлĕн.
Эп маттурланăп, çĕнĕрен çуралăп.
Çĕнелĕ манăн пĕтĕм самана...

*1962*

## ХĔР ПОЭТ

Юратмашкăн пĕлни —
чи хитри çĕр çинче,
тенĕ сăвăç-пике,
ункă-ункă кăтраллă
тутлăн йăл кулакан
таса чунлă Сафо.

Эрех тĕлĕкĕ витĕр
шухă лирик Алкей,
канăç çĕтнĕ яш çын,
Сафона чысласа
сăвăланă хĕрӳн.

Леш — Алкейшĕн пулман.
Хĕр Фаоншăн çеç çуннă.
Сивĕ, чаплă Фаон
Сафоран кулнă çех.
Туйăмсен хăватне
нимĕнле чараймасăр,
чул сăртран тинĕсе
сиксе вилнĕ пике.

Хĕр поэт калани
пурăнать хальччненех:
юратмашкăн пĕлни —
чи хитри çĕр çинче.

*1962*

## ÇУЛÇĂСЕМ

*Эрхипе асăнса*

Çулçăсемшĕн телей — кăнтăр çилĕ,
çĕрлехи аслати, çумăр лаш-лашкани,
хăйсемпе пĕр пулса каçăн-ирĕн
чĕвĕлти кайăксем шавлани.

Çулçăсемшĕн кăварлă хаваслăх —
шăплăхри ăшă кун, çут хĕвел.
Шутламан та, кĕтмен те малашлăх
пуçласса «Вăхăт çитрĕ» кĕвве.

Çулçăсем кичем мар пурăнатчĕç:
куляну, вăйă-кулă, ĕçлев...
Халĕ, ак, йывăçран уйрăлаççĕ
чĕрлĕхе нихăçан килмесле.

Вăхăт çитнĕ иккен, ним тăваймăн —
çутçанталăк саккунĕ çапла.
...Ешĕлле ӳксе çĕтнĕ нумайăн.
Ешĕлле. Вăхăтсăр. Çамрăкла.

*1962*

## СӐНМӖП ЭП

Мӗншӗн ӑнлансан та ӑнланмастӑн
эп пӗр саншӑн ҫутнӑ сӑввӑма?
Эсӗ вӗт тиркен, кӑмӑлламастӑн.
Шикленетӗн эс мана савма.
Маттурланмӗ тетӗн эс, ҫӗнелмӗ.
Санӑн вӑхӑт ҫук мана шанма.
Эпӗ парӑмра юласшӑн мар:
сӳнмӗп эп, ҫӳлтен-ҫӳле ҫӗкленӗп,
анчах ҫунӑп ӗнтӗ саншӑн мар.

*1962*

## ШУРĂМПУÇ

Таса та çутă — шурăмпуç!
Ача-пăча ăна савмасть-и,
ăна курсан хăш! сывламасть-и
ват çын — кăвак е шурă пуç?

ман кӳршĕ çеç пĕртен-пĕрре
шурăмпуçне хапăлламан.
Вăл та пулин, çав кăсăк кӳршĕ,
çут тĕнчене-ха çуралман.

Шурăмпуç пек ман чун хавалĕ
тасаччĕ, çĕкленетчĕ çуттăн
çӳлтен-çӳле, хыпса çунса.
Анчах ак — тăвăл! Çиçĕм! Çумăр!
Тăкать, тăкать, аçа çапса!

Шавларĕ пурнăç океанĕ.
Печĕ те ӳкрĕ чун хавалĕ —
хумсен вĕревĕ туртрĕ илчĕ.
Çухалчĕ чун-хавал, путать.
Çил касă хыççăн касă килчĕ.
Пĕтнехчĕ чун-хавал, пĕтнехчĕ.

Мĕн ку — шаплатрĕ ун умне?
Çăлав Ункийĕ ку шаплатрĕ.
Чим, мĕн-тĕр çырнă ун çине,
ах, мĕн-тĕр çырнă, мĕн-тĕр çырнă...
«Талвир». Кĕскен кăна: «Талвир».
Тӳс, шăпăрлан, ан пут, ан вил.

...Эй, шуçăм, шуçăм, шурăмпуç,
сана ача-пăча савмасть-и,
сана курсан хăш! сывламасть-и
ват çын — кăвак е шурă пуç?

Ман кӳршĕ çеç пĕртен-пĕрре
шурăмпуçне хапăлламан.
Вăл та пулин, çав кăсăк кӳршĕ,
тем курăнмасть-ха, çуралман.

Каллех ман чун хавалĕ — шуçăм...
Пăхап та тăвăл чарăнсассăн,
тавра мĕн чуль Çăлав Унки!
Анчах пĕри кăна — Чăн Сасă,
чăн çывăх Хăтару Унки!

*1962*

* * *

Пурччĕ шанчăкăм ман, юлашкиччĕ.
Халь вăл çук — илчĕ кӳршĕ ачи.
Тишкерӳллĕ пикешĕн тӳр килчĕ
çил хăвман, сăв çырман ăслă çын.

Сутăнаслăх пыл мар та... Тӳсетĕп...
Шăл çыртса... Палăртмасăр... Иртет...
Ĕçӳнте тĕрĕсмарлăх сиссе-тĕр,
кӳршĕм, эс курайманлăх кĕтен.

Курайманлăх... Ачашăм, айван эс,
ешĕл йĕкĕт, телейлĕ ача.
Ĕнтĕ тин мĕн тума курайманлăх
çирĕм икĕ çулти сăвăçа?

Вăхăта парăнмалăх çухалчĕ.
Таврăнмаççĕ çулсем каялла.
Ман савнийĕн савнийĕ, яш каччă,
çав куна эсĕ те курмалла.

Ан кĕт, ан кĕт манран курайманлăх.
Эсĕ кăмăллă, лайăх этем.
Ăнланатăн-и, çук мухтанмалăх,
сан та çук, манăн та, нимĕн те...

*1962*

## СОЛЬВЕЙГ ЮРРИ

Çын çине малтанхи хут эп тухрăм.
Çуркунне! Ăçта çитсен те савăк!
Ăшă куç çути те, ăш салам та пухрăм.
Сольвейг мар пулсассăн та, эп Сольвейг.

Пычĕ тăчĕ ман çума пĕр каччă.
Вăл кулмарĕ, эпĕ йăл кулсан та.
Сăн ун чух ман çулăм, юн кăварччĕ.
Сольвейг эпĕ, Сольвейг мар пулсан та.

Кăварлатрĕ те çухалчĕ... Иртрĕ ĕмĕр.
Мĕн чарать сана, тăванăм, кам ямарĕ?
Тĕлĕкре кăна текех пĕрле çӳрерĕмĕр, —
култăм эпĕ, вăй вылярăм, эс кулмарăн.

Пурпĕрех кĕтетĕп те шанатăп.
Эс килен-ха, çитеймен — çул вăрăм...
Хĕл тулта. Шăнатăп эп, шăнатăп.
Те тăман çӳрет тулта, те вăрă...

*1962*

* * *

Çырупа пĕрле тюльпан чиксе эс янă.
Эс тусем çинче ăна пуçтарнă.
Кăнтăр çуркуннин ăшă саламĕ —
инçетрен вăл килнĕ, тунсăхланă.
Тин çеç татнă тейĕн, чĕп-чĕрех,
ĕнтĕ ешерет ман чĕрере.
Эсĕ кам: Наада? Хамаспюр?
Е ман хамăн урăх пери пур?
Урамра вĕçет — те юр, те мамăк.
Юрату мĕскер: çăтмах е тамăк?
Ĕнтĕ мĕн пулсан та, çурçĕрте çуралнă,
Ширазра эп ăрăскал шыраймăп.
Сывă пул, тăванăм, сывă пул.
Чĕремре тюльпан, чунра шур юр.
Пуçăмра тем чухлĕ шухăш пур.
Курасах тесессĕн килсе кур.

*1962*

## АСЛĂ САККУН

Пуçне уха-уха юрланă
саккун çинчен Ухсай пиччемĕр.
Паян черет çитмен-ши манăн?
Питрех тăван ку кĕвĕ-çемĕ.

Çĕр хут, пин хут мухтатăп эпĕ:
саккун хĕвеллĕ пирĕн, ылтăн.
Çав саккунпа кал-кал çӳретĕп.
Саккун тивлечĕпе çын пултăм.

Асаттесем курман ни çутă,
ни ăш сăмах, — мăнтарăн пурнăç.
Тырпул — ырхан... ăна та сутнă
укçи çукран, «тĕнче» çак пулнă.

Çĕр хут, пин хут мухтатăп эпĕ:
саккун хĕвеллĕ пирĕн, ылтăн.
Çав саккунпа кал-кал çӳретĕп.
Саккун тивлечĕпе çын пултăм.

Халь пысăкра «йăваш чăваш» та.
Культурăллă, хастар та капăр.
Ахальтен мар, тĕнче курмашкăн
ун уçлăхне çити каять вăл.

*1962*

## УНИВЕРСИТЕТ

Шăхличиччĕ-ха ун чух эп,
хăрасса-мĕне пĕлмен,
пĕлнĕ пуль те, пулнă чухăн
пăрахутшăн тӳлеме.

«Лекрĕн-и, мулкач? — тет боцман,
шыраса çук билета. —
Эсĕ йĕркене, княç, пăснă...
Мĕн? Университета?..»

Ахăлтатрĕ боцман-шывçă,
лахăлтатрĕ пур матрус...
Тĕп хула, пирвай куруçăн,
ай хитре иккен, атру.

Хусантах-çке каç каçларăм.
Тĕл пулса Ульянова,
студента, чылай куçларăм,
каçăртса эп янаха.

Кулянса та илтĕм мар-и:
ман мехел хăçан çитет?
Çитĕнтĕм — асран каймарĕ
чаплă университет.

...Шур колоннăсем — ĕретĕн.
Лецине çӳреп ирпе,
ăмсанса, савса иртетĕп —
хам пĕртте студент пек мар.

*1962, сентябрь*

## ВИВА КУБА!

Кубăран мул ĕмме тек май çук —
çĕнĕ вăхăт!
Çавăнпа хурахсем хĕмленеççĕ
пит сăххăн
пĕтерме Кĕрешӳ утравне.
Çук, пулаймĕ
çавăрма киввине!
Кубăна кĕме çук.
Куба — хупă.
Ун çине тапăнсан, вăр-хурах
тупĕ тупăк.
Парăнмасть паттăр чунлă,
гитарăллă Куба —
ĕçăсти, юрăсти.
Ирĕк пурнăç та мир
тĕнчипех сывă пултăр!
Пĕччен мар, пĕччен мар янăрать «Вива Куба!»
пурăнать, пурнĕ те революциллĕ Куба
ĕмĕрех
тĕнчере!

*1962*

## ПĔР МИСТЕРЕ

Çул хыççăн çул, ватти çитсе, каять пиртен,
историе кĕрет яланлăх пурăнмашкăн.
Çĕр тĕрлĕ Крюгер-мӳкĕр йӳп курманшăн
эпир пăшăрханса ӳкместпĕр-ха пĕртте.

Кĕнекинче, пуш сăмаха кавле-кавле,
тăшман пире айван, илемсĕр тенĕ.
Эй, ăслă пуç, итле, калам тӳрремĕн
эпир мĕнлескерне, эпир камне.

Чи чаплă Вырăса чунран сума суса,
кашлать пĕрле лартса ӳстернĕ Туслăх сачĕ.
Çĕрчăмăрĕ тавра вĕçмелĕх çунат сарчĕ
чăваш, ыттисемпе куçа-куç пурăнса.

Хавхаланса паян тӳр кăмăллă тĕнче
чăваш ачи çине пăхать ытараймасăр.
Эй, мистер, ху каларăш, «аслă раса»,
чăваш малта санран чылай инçе!

*1962*

## САЛАМ

Еплерех пурнатăр-ши, аннемĕр?
Эп сывах. Салам сире, салам!
Пĕр эсир хаваслăх ман чĕрешĕн,
пĕр эсир калама çук аван.

Халăмсем-и? Майĕпен пурнатăп —
хăтсăр мар, хĕртен те сăпайрах.
Вĕренсе те начар мар пыратăп —
пуласах килмест вĕт-ха кайра.

Пуç ан ватăр, ыйăха ан татăр:
ӳссе çитрĕ ывăлăр тахçан,
вĕренет пулсассăн та, вăл маçтăр
ĕçлесе хăех тупма укçа.

Пĕр енчен кăна чаплах пулмарĕ,
сахалрах пултарчĕ пулăшма,
леш ĕçрех ĕçлес-тăвас тумарĕ.
Мĕншĕн тетĕр? Кăмăлĕ туртман.

Эс хăвах сисетĕн пуль, аннеçĕм,
çывăх саншăн Павăлу (атте)...
Юратман тус пек ман пулчĕ ĕçĕм,
пăрăнтăм эп чун савманскертен.

Эп поэт чăнах пулатăп терĕç
Хусанкай, ытти ят-сумлисем.
Эп ун чух йăлт мухтаса пĕтерĕп
мунчуна, чейне, йăлтах, пĕлсем.

Аттене те-çке, сана та мухтăп.
Мухтăп килĕме, ик хурăна.
Эсĕр маншăн нянька пулнă, тухтăр,
вĕри юнлă тунă-çке мана!

Эп нихçан та ят ярса çӳремĕп,
ял ятне, чăваш ятне ярса.
Вăл капла та вăл çапла теейместĕç,
ачăра сивлеккĕн хурласа.

Еплерех пурнатăр-ши, аннеçĕм,
сăнăр-питĕр савăнăçлă-ши,
çамрăк йăмăксем епле çӳреççĕ,
ватă асаннем мĕнлерех-ши?

Шăллăмсем те асăмрах. Çара та
кайнă, ав, пĕри: «Салтак», — тет, —
хыт тарлать»,
Хăй çапах, кăшт çырнă хушăра та,
ăслăн аслă шкул çинчен шутлать.

Еплерех пурнатăр-ши, аннеçĕм?
Эп сывах. Çĕн Çул çитет! Салам!
Пĕр эсир хаваслăх ман чĕрешĕн,
пĕр эсир калама çук аван.

*1962*

# ЧЫС

## *Поэма*

### Пĕрремĕш курăну

*Инçетри тус.*

Чаршав ерипен уçăлать. Сцена çине çемçен сенкер çутă ӳкет. Сĕрме купăспа Штраусăн «Çурхи сасăсем» вальсне каласçĕ. Тин çеç çулçă кăларнă хурăнсем патĕнче — вăрăм сакă. Сцена паçăрхинчен ытларах çуталать. Музыка хулленленет. Эстрада çине кĕске çивĕчĕсене кĕрен бантсем çыхнă шурă кĕпеллĕ вунçиччĕсенчи хĕрачапа хура костюм тăхăннă арçын ача инçетри кĕтесрен майĕпен, хавхалануллăн тухаççĕ. Каччă питĕ пăлханни палăрать. Вăл сцена умнелле, куракансен еннелле пырать. Хĕрĕ, сцена варрине çитерехпе, хурăн çумне таянса айккинелле шухăшлăн пăхса юлать. Хытă мар хĕрӳ сасăпа ача монолог вулать:

Тухса эп килтĕм таçтан инçетрен.
Пăхмарăм вăхăтăм çукки çине.
Туссем çине те алă султăм эп.
Кунта эп çитрĕм таçтан инçетрен,
ма тесен сана курас килет.

Кĕрен бантсемлĕ пĕчĕк çивĕтсем,
каллех ĕнтĕ ытарайми çӳретĕр
манра мусăк пулса, мусăк пулса кăна —
чун хĕлĕхне сĕркĕч пулса сĕретĕр —
телей пулса кĕретĕр кунăма.

Каллех, каллех санпа иртетпĕр иккĕн.
Пăлханнипе сăн-питĕм — шурă пур.

Пăшăлтатаççĕ тусусем пĕр чиксĕр:
«Вилет... Поэзи шалкăмĕ çак пуль?»

Хам чысăма хама хăюллăн кӳтĕм.
Пирвайхилле çĕнелчĕ юррăм ман.
Мĕн-ма тесен, унччен-и, халь е ӳлĕм
сана ман пек никам та юратман.

Туссен кулли — тем мар. Лере — ялйышчĕ.
Утатпăр алла-аллăн тытăнса.
Пĕрремĕш хирĕçӳ... Вăл пулнăччĕ пит йӳçĕ.
Текех ан тухтăр урăх тупăнса.

Хуллен çеç: «Ма çырмарăн?» — теп илемсĕр.
Ку кам сасси? Ку манăн сасă мар.
Эс йăл кулатăн; ырă, лăпкă эсĕ.
Çут шухăшна татмарĕ ман сăмах.

Пит савнăçлă çӳçӳ те сан, куçу та.
Пĕччен пек эс. Эс хăвпа ху анчах.
Чуну, сăну, йăлт, пĕтĕмпех, эс çутă.
Ай-вай! Çĕтсе эп кайрам-çке пачах.

Ман тĕксĕмленчĕ пуçăм. Çĕтрĕм эпĕ.
Ах, кайрăм эпĕ, кайрăм çухалса.
Ах, Марине! Тăванăмçăм, тивлетĕм!
Эс ăнлансам! Пăхсам куçран, пăхсам.

Каччă монолог вуланă май хĕрача сăпайлăн çывхарать. Малалла сăвăра каланă пек роль вылять: ача ытамне шăппăн пырса куçĕнчен вăраххăн пăхса илнĕ хыççăн монолог пĕтичченех шурă конверт

тытнӑ аллине ун кӑкӑрӗ ҫинчен илмест. Именнипе питне айккинелле ҫавӑрать. (Ку роле балерина вылямалла).

Ку — чечек мар вӑраххӑн хура ҫеҫке ҫурчӗ,
ку — хӑрпӑксем ҫӗкленчӗҫ; лӗп ҫил мар, туту
тем пӑшӑлтатрӗ, чӗнчӗ, ӑшшӑн кулчӗ:
кил, сӗртӗнсем, чупту, чупту, чупту.

Ку — кӑкӑрӑм ҫине ларман шур кӑвакарчӑн,
ку — шӑппӑн пырса выртнӑ шур аллу, шур хут.
«Эп ҫыртӑм, — терӗн, — ярaймарӑм, темӗн чарчӗ.
Эс ан ҫиллен. Каҫар. Ан пул салху».

Вальс вӑйланать. Хӗрача, ачашланса, тусӗн кӑкӑрӗ ҫине пуҫне чикет.

Тӗттӗмленет.

### Иккӗмӗш курӑну

*Маринен ӑсатман ҫырӑвӗ.*

Сцена ҫуталать. Инҫетрен кӗвӗ илтӗнет. Ҫав паркри вӑрӑм тенкелех. Ун пӗр вӗҫӗнче ларакан арҫын ача Марине ҫырӑвне вулать. Марине ҫук — вӑл юр кайнӑ хыҫҫӑн тухса тулнӑ чечексене татма пӑраннӑ. Акӑ ҫавӑ ӑсатман ҫыру, ача ӑна питӗ юратса вулать:

Ӗнер ӗҫрен таврӑнтӑм та,
вахтер: ҫырусем килчӗҫ терӗ.
Ман ятпа та. Пӗрре.
Ман ятпа та... Чӑнах. Чӑн-чӑнах.

Эпӗ тӗлӗнтӗм темшӗн.
Пӳлӗме кӗриччен пӑхса пытӑм, уҫмарӑм.
Ӗнтӗ пирӗн ҫинчен каллех юптараҫҫӗ ялта.
Лява ҫавӑнпа ҫилленсе ҫыру янӑ пуль терӗм.

Епле савăнтăм эпĕ, уçсан!
Малтанхи йĕркине курсанах,
мана ăшшăн туйăнса кайрĕ.
Ылттăнăм, тенĕ. Аннемĕм çапла
калатчĕ мана яланах.

Ну, юрĕ. Çырам малалла.
Эс мĕнле-ха вара асилмешкĕн шут тытрăн?
Манпала пит сахал-çке калаçнă?
Сан çинчен шухăшлаттăм кăштах.

Эс вара... эсĕ шухăшламан-тăр?
Ниепле манаймастăмччĕ эп.
Кунта та ялан асăнаттăм.
Пурăнма вăрахчен вĕренеймерĕм.
Майĕпен, пĕчĕккĕн хăнăхрăм.

Ирĕк кунта килтинчен пилĕк хут.
Никам та вăрçмасть çĕр каçа çухалсан та,
анчах кăмăл çук, шухăш çук
çĕр каçа çухалса çӳремешкĕн.

Кирлĕ мар пĕр никам та мана.
Ахаль те ят кайнă, ят кайнă.
Пурпĕрех эс мана ăнланаймăн.
Ман пекех эсĕ те — ачапча.

Эп сана илĕртнĕ, пăснă ятна.
Çилленетĕн мана ыр ятушăн çунса.
Лайăх мар калаçу. ăнланаймăн та эсĕ.
Аранах манса пĕтнĕччĕ те.

Ака ёнтĕ каллех шухăш, шухăш.
Лява, шухăшлатăп, юрать-и?
Чипер пурăнмашкăн хушатăн.
Атте те çаплах хушать.
Ман мĕскер тумалла-ха тата?
Ирĕксĕр тивĕ чипер пурăнмашкăн.

Ыйтам-ха, вара Нинине ма пăрахрăн?
Мĕнле-ха ёнтĕ апла вăл?
Пĕрне пăрахсан, тепĕрне пăрахсан,
хăвна тивĕçне те тупаймăн.
Тен, сана вăл, Нини, хăй пăрахнă?
Хăш чухне хĕрачи пăрахсан та юрать.

Тата мĕн çырас-ха? Ачамккă,
куç та хупăнать пулĕ ёнтĕ?
Манăн та çывăрас килет питĕ.
Вун сехет. Уйăх çутă... Сыв пул.

Ёçрен çывăрса юлас марччĕ.
Фоткуна ярса пар. Эпĕ халь
улăштартăм ята. Маринеччĕ те ĕлĕк,
халĕ ят урăхланчĕ — Марина.

Кĕвĕ паçăрах чарăннă ёнтĕ. Лява ура çине тăрать. (Актерăн пур çĕрте те, вуланипе пĕрлех, роль та выляс пулать). Тĕттĕмленет.

Виççĕмĕш курăну

*Тепĕр çыру.*

Çуталать. Каçса кайса шăпчăк юрлать, чак-чак-чак! тăвать, шăхăра-шăхăра илет. Юрра итленĕ май Лява сцена тавра майĕпен те шухăшлă утса çаврăнать, варринче чарăнса пуçне çĕклет те: «Тепĕр

çыру», — тет. Касă çил вĕрсе илет, хурăнсем шавлама пуçлаççĕ.

Ма кун пек пулса тухрĕ-ха пирĕн?
Çӳреттĕмĕр епле хитре.
Мĕн кăна каласа пĕтермерĕç
е вăрттăн, е тӳрех питрен.

Мана вăл пуçа та кĕмен.
Хăлхана çеç кĕретчĕ пăртакçă.
Куççуле никама кăтартас темен,
чун çунса, туртăнса ырататчĕ.

Пусĕпе шутласан, ырă çын
нихăçан ят ярас, суяс çук.
Нихăçан сапас çук кăраççын
вут çине, аннене пытарни
виçĕ талăк анчах иртнĕ чух.

Элекçĕсене тахçанах мантăм эпĕ.
Эсĕ те вĕсене ан ил асна.
Эпир ĕнер çеç паллашнă пултăр.
Хуламăрсем те — расна.

Çапла... Анчах эпĕ çыратăп:
пĕр кун курманни вунă çул курман пек.
Паян акă санран хыпар илтĕм,
туйрăм ху ман пата килнĕ пек.

Санпала ман мĕн чуль калаçас килет,
утас килет санпа пĕрле мĕн чуль.
Шухăшсем... Ĕмĕтсем... Куçăхаççĕ пуль,
çав майпа çухалаççĕ те пуль...

Юлашки йĕркесене каланă хушăра пĕр ывăç чечек татнă Марине кĕрет. Чечек çыххине вăл васкамасăр кăна Лявана пырса парать. Лява телейлĕ, анчах питĕ шухăшлă. Иккĕшĕ те куракансем енне çаврăнаççĕ. Маларах утса тухаççĕ, пуç таяççĕ...

Киянов композитор илемлетнĕ «Чечексен вальсĕ». Вăл пулмасан, лирикăллă урăх кĕвĕ те юрать.

Артистсем сцена çинчен каяççĕ. Музыка çаплах илтĕнет.

Чаршав

*1962 çул, Хусан*

# УЯВ ЁШНИ

*Поэма*

Уяв-çинçе — çимĕкпе утăçи хушши, ĕççĕр вăхăт. Уйчӳк кунĕ уяв пуçланать, уяв тесе калакан праçнике уяма тытăнаççĕ.

*Н.И. Ашмарин*

...ку балет та, опера та мар, ку — пурнăç. Мĕн вăл опера, мĕн вăл романс! Вĕсенчен пулать-и çак ĕмĕр çамрăк çуркуннен ырă шăршине вĕçсе иртен ĕмĕрсемшĕн ачашшăн хуйхăрнине витĕрех систересси-туйтарасси!

*Н. Гарин-Михайловский*

## 1. УЯВ? МĔН ВĂЛ УЯВ?

Тин çеç ирттернĕ çураки.
Çумкурăкĕ тапранайман-ха.
Канас. Çыврас. Чим, кам ухмахĕн
пĕр вĕçсĕр килтĕр çыврасси?

Ĕçер-çиер-ха, савăнар.
Кашни килтех сăри хаяр-тăр.
Паян килте, ак, пухăнар,
ыран хăта патне каятпăр.

Унтан вырсарникун çитет.
Вырсарникун уйчӳк тăватпăр.
...Чăваш çапла мĕн ĕмĕртен
ĕçре те, ĕçкĕре те паттăр.

Уйчӳк халь çук. Пусмаççӗ вӑкӑр.
Тӗшмӗшленмеççӗ ытлашши.
Аваллӑхӑн ыр юлашки —
уяв, ахаль ирттернӗ вӑхӑт,
Миккулӑмпа Питрав хушши.

Çук... ӗç тени кӑшт тупӑнать-ха
уяв чухне те, мӗн теес,
анчах уяв çаплах пурнать-ха,
асамат пек çиçсе ялтрать-ха,
çаплах-ха тутӑх витеймест.

Çакна пӗлмен чӑваш, ан тӗлӗн.
Ватти-вӗттин чӑн чун пахи —
уяв вӑййи кунта икӗ тӗрлӗ:
каçхинехи,
кӑнтӑрлахи.

## 2. КАÇХИ УЯВ

Çурхи чипер ача, хӗвел,
юсанкаларӗ те пӑртакçӑ,
ирччен килмесӗр çӳреме
Çӳлти Хӑва хыçне пытанчӗ.

Тем шухӑшлать Çӳлти Хӑва
каçхи тӳлеклӗ ӗнтрӗк витӗр:
те манаймасть çухатӑва,
те ырнӑ, ыйӑх килнӗ питӗ.

Ытарлӑн тӗлӗрет пӗччен.
Эппин: ыр каç! Сыв пул, вӑрманӑм!

Никам та çук çулсем çинче.
Тусан та паçăрах лăпланнă.

Хирсем, сăртсем — вăрттăнлăхра.
Шăпăлтатмасть çут Саврăш шывĕ.
Ун йăлтăркки сĕм шăплăхра,
çӳл çырантан пăхсан, сип-сивĕ.

Кăшт ăшăнать — патне пырсан.
Анатăп... Акă кĕмĕл саслăн
шăнкăртатма пуçлать хаваслăн
пĕве çинчи пур-çук васан.

Йăр! юхакан «çинçе» шыва
ачаранпах эп чуна патăм.
Шапасене те юрататăп —
вĕсем çĕкленĕ шăв-шава.

Анчах çав «халăх» кĕçĕр çук,
шыв тĕпĕнче канаççĕ пулĕ.
Канать пуль рак, канать пуль пулă.
Çырансенче та çук сас-чӳ.

Шăнкрав ырми шăнкăртатуçăн
(мĕн тĕрлĕ ырă тамаша!)
кăкăр тулли çăтатăп уçă
каçхи çӳçенчĕк сывлăша.

Манатăп тĕнчене... Сасартăк
çак тăлăх çемĕпе тинех
хĕрӳллĕ сасă, тунсăх сасă —
юрланă сасă илтĕнет.

Ак ĕнтĕ иккĕмĕш. Нумайййăн.
Сас ян! килет те ян! каять.
Хăватлă хор! Ăçта сăрнайăм?
Уяв! Ялта — каçхи уяв.

## 3. УЯВ ВĂЙЙИСЕМ

Утмастăп эп, вĕçсе пыратăп.
Алра нăрт-нарт! тăвать баян.
Çынсем те утнине куратăп.
Юлман иккен-ха эп кая.

Эй, ĕмĕрсен парни, янравĕ,
усрап чĕремĕн варринче, —
уяв, эс чунăн шăнкăравĕ
ачалăхри самантсенчех.

Эс чун юрри, телей саманчĕ.
Ир амаланнă туйăмсен,
хĕрӳллĕ шухăшсен çуначĕ,
ăшра ялан вутсем çунаççĕ,
сан сассуна эп итлесен.

Каç пулчĕ — уява тараттăм.
Туссемпеле тĕккелешсе,
ял варринче курса тăраттăм
карти-карти шур акăшсем.

Юхатчĕç те юхатчĕç çавă,
пире илетчĕç картана.
Ах, кăсăк! Ах, илемлĕ, чаплă!
Ах, аппасем, çук кам кăна!

Пире пуçран та ачашлатчĕç,
шăлса яратчĕç сăмсана.
Çут уйăх шăвăнса тухатчĕ,
мерчен сапатчĕ таврана.

Çурхи çеçке шăрши туртатчĕ
«шăхличсене» уçланкăна.
Çĕклем-çĕклем çĕмĕрт турачĕ
шап-шурă кăпăк пек курнать.

Епле маттуррăн парнеленĕ
эпир чечек — аппасене.
Епле ăнланнă, хисепленĕ
эпир вĕсен каччисене.

Ӳсерехпе эп хам пуçларăм
кĕме уяв вăййисене.
Ӳсерехпе эп хам юрларăм
ытарайми юррисене...

Ак ĕнтĕ çитрĕм. Çамрăк халăх
вуншар саспа шăрантарать
чун хурланмалăх, савăнмалăх.
Баянăмçăм нăрт-нарт! тăвать:

«Вăрманта куккук сасси çук,
çавăнпа вăрман илем çук.
Уявра пирĕн савни çук,
çавăнпа уяв илем çук.

Пĕлтĕр çулнă çарана
паккусĕнчен паллатăп.

Хам савакан ачана
карттусӗнчен паллатӑп.

Ан тух, шапа, шыв хӗрне
тӑрӑ шыва пӑтратса.
Ан кай, савни, леш касса
ман чӗрене ҫунтарса.

Куккук ятӑм пахчана
сарӑ чечек суйлама.
Куҫӑма ятӑм ирӗке
сарӑ ача суйлама.

Куккук, хирте ан авӑт,
хир вӑрман пек янрамасть.
Савни, манпа ан калаҫ,
ӗлӗкхи пек чун савмасть».

Уяв кӗвви ҫӗр тӗрлӗ пирӗн.
Хам та сисмен, чӗлӗхӗмсем
тепӗр тунсӑхлине чиперрӗн
шӑрантараҫҫӗ пикенсех:

«Шывра шапа кӑшкӑрать,
шыв типессе сиснӗ пуль.
Ялта йытӑ пит вӗрет,
хӗр каяссa сиснӗ пуль.

Ни уяр мар, пӗлӗт мар,
кӗҫӗр ҫӑвас ҫумӑр пек.
Ни сарӑ мар, хура мар,
эпир каяс ача мар.

Сакăр хуран сĕт çакрăм,
каçчен вĕреме кĕмерĕ.
Сакăр ялта пĕр ача —
эп ӳсессе кĕтмерĕ.

Эп çыхнăччĕ шур тутăр,
анне пачĕ хурине.
Эп савнăччĕ саррине,
турă çырчĕ хурине.

Çӳçеллĕ пурçăн тутăра
сӳтсе çума шухăш пур.
Хам начар пулсассăн та,
лайăха кайма шухăш пур».

Пĕр вăхăта кăшт лăпланать.
Яшсем килеççĕ те килеççĕ.
Вĕçсе çитмешкĕн уява
мăн мотоциклсем кӳлеççĕ.

Кӳршĕ ялсем нумай. Хĕрсем
каччисемпе. Сĕрлет уяв.
Кулаççĕ. Калаçаç хĕрсе.
Кашни хăйне маттур туять.

Ак карталанчĕç çĕнĕрен
ытарайми вуншар шур акăш.
Çурхи каç пек вĕсем чечен,
каллех яшсемсĕр карталанчĕç:

«Чупа-чупа, ай, чул пухрăм,
мунча чулне юрĕ-ши?

Çак Саврăшпуç, ай, ачисем,
кире пуканне юрĕç-ши?

Уххи, уххи, ай, хурхуххи
хăçан урама шăтни пур?
Пирĕн ялăн, ай, ачисем
хăçан уяв туни пур?

Чĕнтĕрлĕ чиркӳ ту çинче,
мĕлки хура шыв çинче.
Ачисем уяв патĕнче,
кăвак куçсем хĕр çинче.

Тăкки-такки ан пусăр,
çĕр кисренет, ачисем.
Хĕр куçĕнчен ан пăхăр,
хĕр вăтанать, ачисем.

Çаран çинче сар чечек,
кĕрсе татăр, ачисем.
Сар чечек пек уява
кĕрсе юрлăр, ачисем.

Улма йывăç ут юпи,
ут кăкарни илемлĕ.
Аслă урам варринче
уяв туни илемлĕ.

Мĕншĕн ут çулма тухмастăр,
çаран ӳсмест тетĕр-и?
Мĕншĕн уява кĕместĕр,
уяв иртмест тетĕр-и?

Ан ишĕл, çыран, ан ишĕл
эпир каçса кайиччен.
Ан авланăр, ачисем,
эпир ӳссе çитиччен».

Çитет капла тăрса, атьсемĕр.
Каçĕ иртессĕн туйăнать.
Пируссене часрах сӳнтерĕр,
тавай-ха кĕрĕр уява...

Тем анлăшĕ карталанаççĕ,
пыраç маттур юхса-чупса.
Юрри пĕтсен, ташла пуçлаççĕ, —
яратăп баяна тăсса.

И-эх! Çеммийĕ мĕнлерех!
Тухсам, пикеçĕм, варнерех.

Уяв карти чăл-пар саланчĕ.
Хастар автан пек каçрăлса,
Вăта касри хусах Сан Санччă
тухать сиксе, ура явса.

Яш-кĕрĕм ал çупать. Кулаççĕ.
— Эх, йăмăксем! — тет леш, вĕçет.
Сан Санч сасси, вăл тапнă ташă,
ах, илтĕнет-çке леш вĕçе!

— Мишша, вальс, — тет тус-Элекçей.
Эп тусăм кăмăлне ăнлантăм.
Тархасшăн, чĕн, ташла, тăванăм.
юрат текех пĕр Мариçе.

Ман хамăн пурăнăç ăнмарĕ.
Тамуç, хĕр-вутăш пек Тамара,
кайса çухалчĕ тĕнчене,
çухалчĕ те хыпар тумарĕ.

Вальсне те нумай мар ташланă,
пĕрле те утнă пит сахал.
Кăшт астусан вăрман кашлавĕ,
тен, астăвать çав туслăха.

Шкултан ялне эп ăсататтăм
ăна Раща вăрманĕпе,
туяттăм хӳтĕлевçĕ-паттăр
патша хĕрне хăтарнă пек...

Вальс хумĕ çавăрать пĕр хăвăрт,
пĕр çĕклесе илет ачаш,
вăраххăн чӳхенет пĕр вăхăт.
Унтан — кĕмсĕртетет анчах.

Хĕрачасен çӳç банчĕсем
атьсен пичĕсене лăпкаççĕ.
Ачашшăн куçсенчен пăхаççĕ
хĕвел пекех хĕрачисем.

Ытараймасăр çурхи уйăх
шур хурăн урлă карăнать.
Ялти яш-кĕрĕм туйĕ-çуйĕ
балет ташланăн курăнать...

Ак ĕнтĕ, чим! Тăхта! Мĕн пулчĕ?
Саланчĕçĕ каллех чăл-пар.

Ман тĕл пуш-пушă тăчĕ юлчĕ.
Унта-кунта мĕлке чупать.

Тăрать хĕрсен сасси, атьсем
çинçен хăватлă шăхăрнийĕ,
хускатнă мотоциклсем
пĕр тикĕссĕн мăрăлтатниййĕ.

Хĕрачасем картан-картан
ăсанчĕç те тапратрĕç юрă.
Ним тумалли те çук ман урăх.
Вут тĕлкĕшет яш кăкăрта.

Савниллисем савнисемпе,
ман пеккисем хыçран уттарчĕç.
Хĕрсем асамлă сассемпе
ĕнтĕ инçе-инçе юрларĕç:

«Çирĕк тăрри çиле май,
атьăр, хĕрсем, киле май.
И атьăр, хĕрсем, киле май.

Атьăр: каяр, киле каяр,
сехет вунпĕрмĕш çурри.
И сехет вунпĕрмĕш çурри.

Санăн та çук, манăн та çук
киле ăсатаканни.
И киле ăсатаканни.

Вăрманалла кĕрсе кайрĕç
йĕнерленĕ учĕсем.
И йĕнерленĕ учĕсем.

Ман чĕрене çунтараççĕ
сыв пул тенĕ сăмахсем.
И сыв пул тенĕ сăмахсем».

...Каçхи уяв ырăлăхне,
ун хурлăхне курса ӳсетпĕр.
Уяв майпен пĕтет вăл тетпĕр,
ăнланаймасăр ял чунне.

Уяв — ял чунĕ йăл кулни.
Нивушлĕ вăл кулми пулать-ши?
Уяв — ял чунĕ кулянни.
Нивушлĕ вăл тек кулянмасть-ши?

Уяв — çынсем хĕпĕртени
çуркуннене ытараймасăр.
Уяв — çынсем вăй-хал пухни
малти ĕçĕсене манмасăр.

Каллех калам, уяв вăл — юрă,
чăваш чĕрийĕн юррисем.
Вăл — çамрăклăх. Вăл — чăн-чăн ырă
ĕмĕтсемпе йăпанусем.

Иккĕленӳ чăл-пар саланчĕ.
Уяв! Мĕн пур санран пахи,
чи яшă вăхăтсен саманчĕ,
чи хаклă самантсен пуххи!

## 4. КĂНТĂРЛАХИ УЯВ УМĔНХИ КАÇ

Çурхи кунсем хĕвеллĕ, ăшă.
Çурхи каçсем — илемлĕрех.
Каçхи чечен тӳлеклĕхре
асамлăх ытларах пек маншăн.

Ката вăрманĕ хыçĕнчен
шуса тухать те хĕрлĕ уйăх,
урам, çырма, уй-хир те улăх
çамрăкланать ун питтинче.

Анчах хĕллехи пек çӳле
хăпараймасть каçхи хăна.
Иртет вăрман тăррипеле,
тӳпе хĕррипеле кăна.

Курмил вăрманĕ — Курмилле —
çырма енче, ялтан виç çухрăм.
Ун умĕ, айлăм, çутă-çутă —
çиçсе выртать тĕлĕнмелле.

Халех анса пĕр вăхăта
çарран эп чупăттăм унта
нимле хуйха та астумасăр,
пуласлăхшăн та хăрамасăр.

Эп ĕçĕттĕм кĕмĕл тĕтре.
Хĕпĕртесе алхаснăçемĕн
сас шăнкăравĕ инçетре
ян! янрĕччĕ, эп кулнăçемĕн, —

çырмасенче те варсенче,
Курмиллери ĕшнесенче.

Эп ачаланăп, эп вăтанăп,
тĕтресене кĕрсе çухалăп.

Эп çавăнпа каç-каçĕпе
пулса каяп такам тухатнăн,
Микуç мучи айăккипе
Савкаçалла кайма тухатăп.

Çак çырмари сукмакĕ ырă
мана утма пĕчченлĕхре.
Йĕри-тавра — тем тĕрлĕ тырă,
çырма юхать çирĕклĕхре.

Ĕçсе çăл шывĕ шанчĕ шăлăм.
Пĕрремĕш вар инçех те мар.
Ку — тарăн варăн кĕçĕн шăллĕ,
çапах та кансĕр улăхма.

Лапам çыран çинче тăратăп.
Пĕве таппийĕ — ейӳ пек.
Пуç пĕкнĕ çӳçесем тăваттăн
шыва пăхаççĕ йĕркипе.

Хум ыйăхпа шăпăлтатать.
Лере çырма кукри. Унта та
шывра ик-виç çӳçе утать.
Ах, калăр-ха, ăçта утатăр?

Ейӳ урлах — çут çул шеп пит.
Эх, çав çулпа чупса каçасчĕ.

Чул çуптарап та, ун чуппи
мана ирĕксĕрех култарчĕ.

Сиксе вăл кайрĕ шапа пек
çав эп каланă уйăх тărăх,
куçран та çĕтрĕ çаплипех.
Ах, шывĕ-çке... Лĕп ăшă, тăрă.

Пĕве енче — ват çирĕксем.
Ун хыçĕнче — тискер, пăч-тĕттĕм.
Тарăн вара пырса эп кĕтĕм,
хаштах сывларăм çӳçенсе.

Ак çӳллĕ çыранпа утап,
хаваслăн юрă шăхăратăп,
мĕлкесенчен кăштах хăратăп.
Сас-чӳ пулсан хăрап хытах.

Ак ĕнтĕ — аялта — хăвалăх.
Пĕлеп: унта каллех — çăлкуç.
Ай-уй, пĕлмесĕр, пĕтрĕ пуç,
пурах унта хăналанмалăх.

Лява унта кĕрсе пытаннă,
миçе хутчен-ши, Виттаран.
Çур ял ăна каç-каç шыранă
пĕççе çапса тупайманран.

Витта юлташĕсем чупатчĕç
питомникрен арман таран,
вăрман, масар, — ним хăварман.
Тупсан, паллах, «тытса çакатчĕç».

Мĕн-ма шыранă-ха ăна?
Мĕн-ма çапла хаяр йĕрленĕ?
Çакна пултарĕ калама
çап-çамрăк хĕрача Ирена.

Алран-алла тытса пĕрре
çыран хĕрнех чупса ансассăн,
илтеççĕ сасă, чаплă сасă,
тем пысăккăш ват çирĕкре.

Чим... шăпчăк. Килнĕ вăл кăçал та.
Ай-яй, епле шăрантарать!
Халь çеç тавралăх шăпчĕ, акă
кĕрлет асамлăх таврара!

Лява, ăçта эс? Ма çук эсĕ?
Ирена-Уйăхпи, ăçта?
Ма сассу çук, килсе çитместĕн?
Çит. Лявана, мана вăрçтар.

Анчах Лява инçе. Килеймĕ
çак самантрах вăл вĕçтерсе.
Хаваслă шăпчăк та киленĕ
вĕсемсĕрех сас çиçтерсе.

Эп çăмăллăн яла кĕретĕп,
çунат хушнă пекех туяп.
Ух, савкаçсем, епле кĕрлетĕр!
Ыран — кăнтăрлахи уяв.

Пурте пĕр харăс «Шевелюк»
хăватлăн килтерсе юрлаççĕ.

Çак каçсенче кунта тухаççĕ
Укаx аппа, Хветуç, Пăлюк.

Арçын сасси те сахал мар.
Саврăшпуçне те илтĕнет-тĕр.
Çитнĕ-çитмен эп те кĕретĕп
вăй выляма та юрлама:

«Шыв, шыв тулли, шыв тулли,
шевелюк, айлюлли,
çыранĕ епле чăтать-ши?
Шевелюк, айлюлли,
çыранĕ епле чăтать-ши?

Куçăр курса, чун савса,
шевелюк, айлюлли,
чĕрĕр епле чăтать-ши?
Шевелюк, айлюлли,
чĕрĕр епле чăтать-ши?

Сурăхсем хытă макраççĕ,
шевелюк, айлюлли,
элле кĕтӳ анать-ши?
Шевелюк, айлюлли,
элле кĕтӳ анать-ши?

Хĕрсем мĕскĕннĕн юрлаççĕ,
шевелюк, айлюлли,
элле уяв иртет-ши?
Шевелюк, айлюлли,
элле уяв иртет-ши?

Авӑт, куккук, хытӑрах,
шевелюк, айлюлли,
чарӑнасси инҫе мар.
Шевелюк, айлюлли,
чарӑнасси инҫе мар.

Юрлӑр хӗрсем хытӑрах,
шевелюк, айлюлли,
уяв иртесси инҫе мар.
Шевелюк, айлюлли,
уяв иртесси инҫе мар.

Авӑт, куккук, авӑтах,
шевелюк, айлюлли,
ыраш пиҫсен чарӑнан.
Шевелюк, айлюлли,
ыраш пиҫсен чарӑнан.

Эх, мӑнтарӑн уявӗ,
шевелюк, айлюлли,
Питрав ҫитсен чарӑнать.
Шевелюк, айлюлли,
Питрав ҫитсен чарӑнать.

Ҫитес Питрав ҫиттӗр-ха,
шевелюк, айлюлли,
така пусса ҫиййӗпӗр.
Шевелюк, айлюлли,
така пусса ҫиййӗпӗр.

Ӳсес ача ӳстӗр-ха,
шевелюк, айлюлли,

тухăпăр та кайăпăр.
Шевелюк, айлюлли,
тухăпăр та кайăпăр».

...Ик-виçĕ кивĕ юрă хыççăн
шыв пек юхма пуçлать çĕнни.
Вун çухрăма та пуль яр-уççăн
каять уяв кĕвви-çемми.

Çаплах-ха «кулянать» уяв.
Юррийĕсем вăрах та тунсăх:
палăркалать арканнă туслăх,
урăххине те чун туять.

«Юман варри»[1] туса илеççĕ.
Кăштран чупаç картан-картан.
Тата кăштран шăпчăк-чĕкеçĕн
çуйăхакан тĕле тухан.

Çаксем йăлтах пĕтсен, хавассăн
алă çупса, ура тапса,
шалти ик мăшăра мухтаççĕ,
лешсем хултан-хула явсан.

Вĕлтĕртетеççĕ мăшăрсем,
ах, пӳлĕнеççĕ сывлăшсем,

[1] «Юман варри» тунă чух вăйăри çамрăксем, алран-алла тытса юрă юрласа çаврăннă май, васкамасăр йывăç варри евĕрлĕ, ункăн-ункăн, пĕр чăмăра пухăнаççĕ. Унтан çав майпах саланаççĕ.

ах, çăмăл, ой!
Ах, çăмăл, ой!

Çак вăхăтра çап-çут урамăн
тӳп-тӳрĕ такăр çулĕпе
вĕçсе анать çунатлăн (кам вăл?)
ним сасăсăр велосипед.

Вăйăрисем «кĕпер» тăваççĕ,
пĕр ĕрете тăрса тухса.
Часах ик-виç ача пыраççĕ
çак «чĕкеçе» асăрхасан.

Витта! Мĕнле пурнан, Витта?
Мĕн-ма пĕрре те курăнмастăн?
Тем çӳреместĕн тек юта?
Тен, Савкаçа кăмăлламастăн?

Атьсем пĕр хушă ахăраç,
вара тусне йыша чĕнеççĕ.
Кĕрет те Саврăшпуç «чĕкеçĕ»,
урапине чăш! шăтараç.

Çакна вăл халлĕхе пĕлмест.
Юрлать вăл «Красна девица».
Хăпăттарать хаяр, тӳрккес,
хавхаланса та савăнса.

«Цасем» пĕтсен палан çинчен,
кăшт вырăсла сăмах кĕртсе,
пĕри баспа, тепри çинçен
янăратаççĕ киленсе.

Тĕп ушкăн хĕвел май утать.
Хăрах, хăпса, тупать те мăшăр,
вăй картине хирĕç каять,
кущран пăхса илет те ăшшăн.

Эп ушкăнпа пĕрле утап.
Çут çӳçлĕ хĕрача Наттуççă
кăлт! тĕкрĕ пĕр-пĕччен пыруçăн.
Тухатăп. Мĕн тăвас тата...

Калать:
— Мана йĕрлет Витта.
Ав кĕçĕр те манпах вăл супнă.
Мĕн кирлĕ-ши ăна, йытта,
манра мĕн идеалĕ тупнă?
«Палан» пĕтсессĕн вальс пулать.
Кун хыççăн — ял тавра каяççĕ.
Кăнтăрлахи уяв ум кaçĕ
мана эс кăшт пулăшмалла.
Каçран кĕреттĕм ытти чух,
паян кăштах çӳрес килет-çке.
Атьсем темех ун майли çук,
эс ан шиклен, сана тивмеççĕ...

Кăштран, чăнах та, çепĕç вальс
çерем çине чĕнсе шăранчĕ.
Ачи-пăчи, пур хĕрупраçĕ
вальс ташлама чунран хавас.

Наттуççăна Витта чĕнет.
Леш пăрăнать. Мана ал çупрĕ.

Витта мана сасартăк çупрĕ,
эп ним сиссе юличченех.

Пуçланчĕ кайрĕ харкашу.
Пире пĕр вуннăн уйăраççĕ.
Витта сăмси... юнне чараççĕ...
Шыратăп кепка, кепка çук.

Наттуççă тупрĕ «калпака»,
хăвалăха пыр терĕ, тарчĕ.
Хветя юнарĕ, кĕвĕ чарчĕ,
чупса килет, ав, ман пата.

Анчах ăна кунта ямаççĕ.
Ман сахал мар кунта туссем.
Виттапала Хветя-баянçă
епле тăраççĕ-ши тӳссе?

Ак çитрĕ кĕтнĕ «Айлюли».
Атьсем, хĕрсем ĕрет-ĕретĕн
хускалчĕç, юрласа илемлĕн.
Ку — ял тавра тапранмалли[2].

«Атăр, каяр леш касса, леш касса,
и, и, айлюли, пайлюли,
ваттисене вăрçтарса.
Ваттисене вăрçтарса, вăрçтарса,

---

[2] Кашни урамрах тенĕ пек чарăна-чарăна уяв тăваççĕ. Кăвак çутă киличченех çапла. Унтан тĕп уяв вырăнне çаврăнса çитеççĕ те, тепĕр ăстрăм выляса кулнă хыççăн, саланаççĕ.

и, и, айлюли, пайлюли,
сасăсене янратса».

...Шкул сачĕ. Шăпчăк шăхăрать.
Йĕр пытарсаваскатăп эпĕ
хăвалăха, часрах, часрах,
мĕн-ма васкатăп-ши, пĕлместĕп.

Пĕр савăнать чун, пĕр хăрать.
Хăвалăхăм, тăван хăвалăх,
хĕрачасем мĕн евĕр халăх? —
йӳне илеç, йӳне параç.
Ялан ун пек юрать ăраç?

Уйăх таçта Акташ енне
кайма пуçтарăннă сас-чӳсĕр.
Кăмăл пăлханнипе эп ӳсĕр,
çитетĕп ял вĕçне тинех.

Хыçра илтеп шăв-шав, чупатăп.
Мăн телефон юпи çумне
сĕвеннĕ Наттуçа куратăп.
Мĕлке ӳкет пике çине.

Алран-алла тытса, сăмахсăр,
анатпăр аната часрах.
Алсем вĕри, питсем çунаççĕ,
анчах темме Лява асра.

Наттуççă-Надя, пĕр хĕр теççĕ
эс аçупа аннӳн, ачаш.

Атьсем мана тытса хӗртеҫҫӗ,
ҫитменнине Витта — юлташ.

Вӑйран кайса хулран таянчӗ.
Куҫран пӑхать. Мӗскер тата?
— Ну мӗн? Кала. Мӗн кирлӗ, Надя?
— Мишша, сана эп юратап.

Ох, ҫав шӳтҫӗсене. Шӳтлеҫҫӗ,
кайран яраҫҫӗ шухӑша.
Лекет те темӗн эсремечӗ,
майпен кӑвар хыпать ӑша.

Эй, чарӑн, чарӑн мӑшкӑламашкӑн.
Сана, ав, шӑпчӑк та шанмасть.
Мӑйран ан пӑв, кай, кай, ан ашкӑн,
ан тарӑхтар-ха чунӑма.

Ҫухалнӑ ҫивӗтӗнти бант?
Эп астуман. Хӑҫан ҫухалнӑ?
Ирех тӑратӑн та тупан.
Тем мар... Мӗн... тутӑр-им, чӑлха-им?

Наттуҫҫӑ, эс миҫе ҫулта?
Вунулттӑра? Сыв пул, тӑванӑм.
Ман сан патна ӳпкев ҫук та,
ӗненменни касать, тӑварлӑ.

Пулар пит туслӑ юлташсем.
Хутна кӗме ялан эп хатӗр.
Хӳтлевҫӗ пулӑп, ҫав паха та,
пиччӳ те пулӑп, килӗшсен.

Наттуççă тек чĕнмерĕ манăн.
Йăр-йăр юхаç куççулĕсем.
Юри эп çаврăнса пăхмарăм.
Пăхсан — тăрать вăл ал сĕлтсе.

Пытаннă уйăх. Тухăçра
çĕкленчĕ шурăмпуç. Тӳпенĕн
хăни — тăри — ирех пуçлать
хăй юррине çавтер илемлĕн.

Яла çитсе кĕрсен илтеп:
куккук сас пачĕ ращара.
Ак ĕнтĕ эп ларап килте,
ирхи хĕвеллĕ пахчара.

Кĕрлет каçса кайса автан.
Янравлă сас. Хаваслă. Сиплĕ.
Тен, чăнласах автан сасси пуль?
Тен, ман чĕре ку авăтать?

## 5. КĂНТĂРЛАХИ УЯВ

Хĕвел самай инçе. Каçкӳлĕм.
Урамсенче унта-кунта
чипер тумланнă илĕртӳллĕ
çап-çамрăк хĕрача утать.

Пурте васкаççĕ уява,
хиртен дояркăсем çитеççĕ.
Нумайăш кайрĕç туялла —
Ильин Кришша хĕр кӳнĕ теççĕ.

Тамарăшăн унпа эп пĕлтĕр
харкашнăччĕ. Кăçал вара,
çак хирĕçӳ яланлăх пĕттĕр
тесе пуль, каччă авланать.

Шкул патĕнче çерем çине
ерминкке пек капланнă халăх.
Пур пирĕн халăх туй тумалăх,
уяв тумалăх та çитет.

Арçын атьсем ах! пуçтахланнă,
кĕреççĕ уява татса.
Çинçе шăхличĕ маçтăрланă,
акаци пăрçине çурса.

Чăтмалла мар хыт çухăртаççĕ.
Хĕрсем хуплаççĕ хăлхине.
Аппăшĕсем хуса тытаççĕ
шăхăракан шăллĕсене.

Эпир пĕчĕк чухне ку çеç-и...
Хурах пекех çӳреттĕмĕр:
хĕрсем куççульпеле йĕретчĕç,
çапсан çерçи çăмартипе.

Вĕри Санькки хушнипеле
эпир Чечек Тарйишĕн пулнă
шуйттан ачисемпе пĕрех.
Пĕр сыв кĕпи юлмарĕ унăн.

Элекшĕн... Эх, ачу-пăчу.
Кайран çапах çав хĕр каçарчĕ.

Хама эп ĕнтĕ хам хуçаччĕ...
Алхаснă. Ним тума та çук.

Хĕрсе каятчĕ кĕрешӳ.
Ялан вара Эрхип юлташăм
çĕнетчĕ, паттăра юлатчĕ.
Хăш чух тухатчĕ харкашу.

Хĕрачасем пиртен хăратчĕç
вĕлтĕренрен хăранă пек.
Ялти пур йыт-качка ăрачĕ
пиртен таратчĕ урнă пек.

Пахчасене те кĕмен мар,
анчах — тăхтас-ха, иртерех-ха.
Халь те пултарĕç хăлхана
пăрса татмашкăн... Кеххĕм, кеххĕм...

Эрхипчĕ пирĕн утаман.
Ăна маттурлăхех пĕтерчĕ.
Пульницаран вăл тухайман,
хăпман хăруш инкекĕ-терчĕ.

Эрхип, Эрхип, чарусăр çеç-и,
эс лайăх тусчĕ, кăшт — поэт.
Каллех те чĕкеçсем вĕçеççĕ,
уяв ĕшни пире кĕтет.

Анчах эс килес çук, юлташăм,
тĕл пулас çук Мариçӳпе —
ачашшăн калаçса утаймăн
раща-вăрман çулĕсемпе.

Мариç халь урăхпа. Хитрен
нимскер пулман пекех çӳреççĕ.
Сасси — пикен, чĕлхи — чĕкеçĕн.
Утти те çав-çавах — пикен.

Пиртен хăран хĕрачасем
ӳссе çитсе качча та кайрĕç.
Кĕçех вĕсен йăмăкĕсем
хавассăн уява тухайрĕç.

Ялти кăнтăрлахи уяв
яшсемшĕн вăл чăн-чăн экзамен.
Ватсем утман иккен туя,
нумайăш уява ăсаннă.

Çитмĕлсенчи асаннесем
кам хĕрĕ мĕнлине сăнаççĕ.
Кĕпин, саппунĕн, чăлхисен
пахалăхне, хакне суртлаççĕ.

Сассисене, пӳне-сине
асăрхамасăр хăвармаççĕ.
Ихĕлтетни илтĕнсенех
сăпайлăх çукшăн тарăхаççĕ.

Мăнуксене сăнанă май
хăйсен хĕр чухнехи илемĕ
тухса тăрать те... ӳпкелеймĕç,
хăйсем те йăнăшнă нумай.

Каччăсене те хыт пăхаççĕ.
Ташланине, юрланине,

кăштах пулсассăн та хурлаççĕ.
Аса илеç аттесене.

Вĕсем сатуртарах-мĕн пулнă,
анчах пуç хунă çамрăкла.
Асаттесем — тата хăюллă,
сăпай, хитре. Ялан çапла.

Пӳрен-сирен — кăрнатир пек,
яштак та çӳллĕ, ытараймăн,
анчах вĕсем те вăрçа кайнă,
кайсан, çухалнă пуçĕпех.

Асаннесен чĕрисенче
ялан çирĕмсенче çӳреççĕ.
Çул шучĕ темех мар чĕрешĕн.
Асаннесем те çав енчех,

çирĕмсенчех. Эх, ĕмĕр, ĕмĕр.
Ак эпĕ çирĕм пĕррере.
Яш кăкăрта кăвар пек ĕмĕт,
кăвар пек туйăм чĕрере.

Ав ушкăнра анне тăрать.
Санюк аппа, Витта апайĕ,
тем каласа йăл култарать,
кăмăлĕсем хаваслă, лайăх.

Тен, килĕшнĕ кĕпемĕрсем,
çӳçĕмĕрсем, çĕн брюки, туфли.
Ян! янратса юрланисем
мăшăрĕсен майлах, тен, тухнă?

Пăхса ӳстернĕ ачаран,
çын куç умне тăмалăх тунă.
Малтан — чупаттăмăр çарран,
ак халĕ — куç савмалăх пулнă.

Мĕн чухлĕ савăнăç сирте
эпир çапла чипер ӳснишĕн.
Ыр аннесем, эсир, тус-йышăр,
мĕн çеç тӳсмен-ши ĕмĕрте!

Пĕлетĕп эп, Санюк аппа
йĕрессине кулать, пĕлетĕп.
Куратăп витĕрех пурне те:
иртейнĕ ĕмĕр асаппа.

Вунтăххăрти упăшкине
шăп çакă кун вăрçа ăсатнă.
Килте мĕн чул кĕтсен, çунсан та,
таврăнайман Иван килне.

Çуралнă тет Витта Иванччă
хăрушă вăрçă пынă чух.
Ӳссе çитет Витта Иванччă —
унран телейлĕ йĕкĕт çук.

Витта Иванччăпа ташлатпăр
хирĕçĕве тахçан манса.
Витта Иванччăпа юрлатпăр
сасса шăнкрав пек янратса.

Аннемĕрсем кулса тăраççĕ
эпир çаплишĕн тĕлĕнсе.

Пăхсан — куççулĕсем тухаççĕ
иртнисене аса илсе.

Пулас кинĕсене курасшăн
çунни те палăрать — пăхсан.
Ах, аннесем, ах, ан аташăр,
çукрах вĕсем, ан çунăрсам.

Кăнтăрлахи уяв аван вăл.
Ан тив, сăначчăр ват çынсем.
Ан тив, Ильин Кришша авлантăр,
авланаймасть мехел иртсен.

Аслисене савăнтарар-ха
самантлăха пулсассăн та.
Ан тив, аннӳ сан асăрхатăр
хăй сассине сан сассунта.

Хăй юррине асилтĕр шăппăн,
чи хитрине, чи уççине.
Сар ачапа хăй шăкăл-шăкăл
çурхи каçра калаçнине.

Яш-кĕрĕм ял тавра кайсассăн,
хыçăмăртан пăхса юлса,
кăшт кулянса сывлатăр ассăн,
çамрăклăхне ăса хурса.

Леш касăра, инçе, юрлаççĕ
ак «Краçинкра çилюна»[3]

[3] Уяв ял тавра кайнă чух юрламалли юрă.

Аннемӗрсем куҫҫуль шӑлаҫҫӗ.
Шухӑшласан пуҫ ҫаврӑнать.

Кӑнтӑрлахи уяв аван вӑл,
мӑн ӗшнере — уйрӑммӑнах.
Эп пӗчӗкрен унпа тӑванлӑ,
унта вӑййи те уҫӑрах,

хавас та ирӗк. Ваттисем
кашни хусканӑвах хакласшӑн
уяв тавра пӑхса тӑмаҫҫӗ,
тем тӗрлӗ шухӑш вӗҫтерсе.

Ӗшне, уяв ӗшни, сана эп
хальччен мӗн-ма сӑвва кӗртмен?
Эс яшлӑхӑн тулли сӑнарӗ,
сана куҫран эп вӗҫертмен.

Каҫхи уяв, такам та сисӗ,
вӑйӑсемпе ҫавтер пуян.
Вӑл генеральнӑй репетици,
спектакаль — кӑнтӑрлахи уяв.

Эп тепӗр хут ӑна сӑнламӑп:
ҫаплах юрлаҫҫӗ юррине,
ҫаплах кулаҫҫӗ куллине,
каҫхи майлах сӑвви, саламӗ.

Ҫаплах каяҫҫӗ ял тавра,
калле кив вырӑна килеҫҫӗ.
Пур мотоцикл-велосипечӗ
айӑккинче кӗтсе тӑрать.

Баян калаттарса çаплах
пĕр мана çеç чĕмрен яраççĕ.
Çунать ташласшăн хĕрупраçĕ,
купăсçисем вара çукрах.

Мĕн пур пекки волейболла
клуб патĕнче хĕрсе çапать.
Ырсассăн хăппăл-хаппăлах
уяв ĕшнинеллеваскать.

Ял çумĕнче — раща. Ăшне
кăштах кĕрсессĕн — мăн ĕшне.
Яш-кĕрĕм çавă ĕшнере
çуллен-çулах çĕр çĕмĕрет.

Раща хĕрри. Лаштра юман
кĕтсе илет пуçне пĕксе.
Ялта пĕр çамрăк та юлман.
Уяв карти ӳсет, ӳсет.

Мăн ĕшнене часах кĕмеççĕ,
шавлаç малтан «алкумĕнче».
Лăскатăп мусăк инструменчĕ
кăмпаллă тунката çинче.

Мана темме пусать салху.
Ку мĕн амакĕ, мĕн амакĕ? —
Каллех, каллех асра Тамара.
Чĕрен ун мĕскерле саккун?

Часах, ак, вăхăт ут çулма.
Тен, ут çулса кичемлĕх çĕтĕ?

Тинех тӳр килӗ, тен, вӗр-ҫӗнӗ
чунпа уяв уявлама?

## 6. УЯВ ЁШНИ

Июнь пӗтсен, вырсарникун
каять кӑнтӑрлахи уяв.
Ҫынсен пуҫланчӗ каникул,
эп кунӑм пӗтнӗ пек туяп.

Эп вӗренме кӗресшӗнччӗ —
нимскер юлман-ҫке пуҫӑма.
Савнийӗме илесшӗнччӗ —
кунта та манӑн ӗҫ ӑнман.

Паян чуна вӑрман паха.
Кӑкӑр таран чавкапуҫне те,
серте лексессӗн сертене те,
ҫырла тивсессӗн ҫырлине те
чӑш! чаш! ҫулап та пӑрахап.

Паккус-паккус ёшнесенче
ыр шӑршлӑ курӑк ӳксе юлчӗ.
Ҫилпе вӗлтӗртетет те ҫулҫӑ,
ҫиҫет ӑш кулӑ питсенче.

Тем ҫӳллӗш ват ҫӑка айне
кермен пек хӳшӗ ӳссе ларчӗ.
Унтах шур тӗтӗм хӑлаҫланчӗ, —
типме ҫакар кӗпесене.

Йӗм пӗҫҫине кӑшт типӗтсен те
ирхи шӑрҫа пек сывлӑмран

пуласах çук нимле сиен те.
Чей вĕретер çав самантра.

Манпа Витта та килĕшет.
Мариç те, Элексей те хатĕр.
Эп хурлăхан çулçи пухатăп —
кам хурлăхансăр чей ĕçет.

Вут умĕнче хĕртĕннĕ чух
ирхи апат туса илетпĕр.
Паян уяв вĕт-ха теетпĕр,
уяв çинчен çеç калаçу.

Ак бригадир килсе çитет
сăпкаллă мотоциклпа.
Йĕм пĕççисем типеççĕ те,
пур каччă çĕкленет çулма:

«Салам сана, Ванькка пичче.
Çырла нумай. Кил, çырла çи.
Начальник эс. Сан ĕç кичем.
Ытла аван — ут çуласси.

Анчах каçпа пире эс яр
тĕлпуллашма уявпала.
Паян кăнтăрлахи уяв
нивушлĕ пирĕнсĕр пулать?»

Канмасăр шăп кăнтăрлаччен
вăрман шавларĕ, кулчĕ, çулчĕ..
Текех шĕпĕлтетмерĕ çулçă.
Тăварлă тар юхать питрен.

Çанçурăмсем пиçсе хĕрелнĕ.
Хĕрсем кулаççĕ атьсенчен.
Хĕрсем сулхăнтарах çӳренĕ,
упраннă ӳт пиçессинчен.

Шап-шур, çăп-çăмăл кĕписем,
косынкисем вĕлтĕртетӳçĕн,
хĕн курнă атьсене те уçă —
йăлтăртатаççĕ куçĕсем.

Ăмăртланса çулаççĕ утă.
Атьсен ма йывăр çависем?
Хĕрсен мĕн-ма вĕсем çап-çутă,
кервентерех паккусĕсем?

Ярăнайса çулаççĕ утă,
тăван колхозăн утине.
Хаваслă шӳт те, калаçу та
татти-сыпписĕр илтĕнет.

Кăнтăрлана ларма пыраççĕ,
каллех мана лекет баян.
Апатлансан выртса канмаççĕ,
кĕр-кĕрлесе пуçлаç уяв.

Хĕрачасем ялтравлă кулă
янăратаççĕ инçене.
Кĕпĕрленсе пĕр ушкăн хурăн
сĕлтет ем-ешĕл тутăрне.

Хĕрачасем, ак, пĕрлешеççĕ
çав хурăнсен ушкăнĕпе.

Чĕлтĕртетеççĕ, вĕлкĕшеççĕ
сип-симĕс тутăр, шур кĕпе.

Çак вăхăтра ман асăмра —
уяв ĕшни, уяв ĕшни.
— Ау-ау! Уа, урра! —
янрать унта пырсан кашни.

Уяв ĕшни... Мухтав сана...
ма вăхăт пит хуллен иртет-ха,
мĕн-ма хĕвел çаплах çӳлте-ха?
Ахаль чухне вăл час анать.

— Ванькка пичче, машшин — хăçан?
— Машшин? Ав çитрĕ. Хыпаланăр.
— Сыв пул, сыв пул, сыв пул, вăрманăм.
Васка, машшин, ан юл каçа!

* * *

Утмастăп, кайăк пек вĕçетĕп.
Мĕн чухлĕ халăх уявра!
Ун анлăшне куçпа виçеймĕн,
тĕлĕнтерсе халтан ярать.

Тăван яш-кĕрĕм коллективĕ
картан-картан чӳхеннĕ чух
Шупашкартан ансамбль килнĕ,
тесен те çылăх пулас çук.

Ташша сĕвет Витта. Ун хыççăн
тухать те харсăр Элекçей,

ăна пӳлеççĕ иккĕн-виççĕн,
тухма чĕнеççĕ Мариçе.

Наттуççă та килмен-ши? Калăр...
Ĕшнен хĕвеллĕ енĕнче
мĕн чухлĕ хĕрача, пăх-халĕ,
татать, татать çырла, чечек.

Пĕлме те çук: чечекĕ хăшĕ?
Хăшсем тата хĕрачисем?
Памаççĕ-ши пĕрер пуçкăшăль,
çемçе чĕлхепеле чĕнсен?

Вăшт! пăрănса айăккине,
хĕрачасем патне пыратăп.
Тен, усала ку? Тен, ырра та:
пурте пăхаççĕ ман енне.

Пĕри кăна асăрхамарĕ.
Ун алтупань çинче çиçет
шур лĕпĕш. Хĕр вĕрет. Курнать вăл
хăй те вĕçессĕн кĕç-вĕçех.

Ярт! тăнă та — епле илемлĕ,
епле тытать хăйне черчен.
Чечеклĕ шур кĕпи çĕкленнĕ
чылай çӳле чĕркуççинчен.

Ах, çутçанталăк, скульптор-гений,
тавах сана, тавах, тавах,
эс тивĕç вĕççĕр мухтава.
Ман тĕллĕн çеç кăштах ӳркеннĕ.

Халь ун пирки шавламăпăр.
Ах, лĕпĕш, ан кайсам вĕçсе...
Ах, чи хĕрӳллĕ сăввămсем...
Ах, пӳлĕхĕм... сывлама пар.

Ах, чунăм кайрĕ ирĕлсе.
Ку кам-ши, балерина мар-ши?
Чим, патнерех пырас йăвашшăн.
Ку... ку... вăй парăр, ырăсем...

Роден, килсем! Епле натура...
Шур мрамор, савăнса йĕрсем.
Епле гармони, линисем.
Сăмах çитмест, атьсем, ах турă...

Тути çак хĕрĕн — йĕрĕлче.
Прическийĕ... а ля Бабетта.
Пăхатăп куç ывăниччен.
Çук, кирлĕ мар нимле балет та.

Ак лĕпĕш вĕçрĕ. Хĕр-пике
кулса ярать савăннипе,
савăннипех вăл алă çупрĕ,
шур лĕпĕш хыççăн чупрĕ, чупрĕ.

Ирена-çке! Анчах Наттуççă
унран çич хут илемлĕрех.
Кăлкан пек çӳçĕ — хӳхĕм пурçăн —
ăна пушшех ыр сăн кӳрет.

Кунран-кун туйăнать тăваннăн.
Кăвак — куç çулăмĕн çути.

Кӗҫ-вӗҫ кулас пекех тути
пиҫсе ҫитсе тасан тӑртаннӑ.

Ӗлӗкхилле йӑлт мантарса
вӑл пӑхтарать пӗр хӑй ҫине.
Пуҫкӑшӑльсем тӑхӑнтартса
тӑрать вӗт-шак ачасене.

Пӳрнеске пек хӗрачасем
чечек киле-киле параҫҫӗ.
Чупса ҫырла ҫисен-ҫисен,
арҫын атьсем те пыркалаҫҫӗ.

Пӗр ушкӑнӗ, ав, чӗрӗп тытнӑ,
Тепри — юман кӑмпи чӗртет.
Ӑвви хыпать те, тӗтӗм тутлӑн
сӑмсасене ҫитсе кӗрет.

Ҫул ҫинелле усаҫҫӗ шӗшкӗ —
май пӗттӗр каялла тухма.
Ҫӑка ҫине хӑпарнӑ «шӗшлӗ»
ҫӳлтен уяв ҫине пӑхма.

Наттуҫҫӑ, сывӑ-и, Наттуҫҫӑ?
Кӳр-ха, кӑшт эп те пулӑшам.
Каҫар мана, юлташӑм, туссӑм,
итле ман тӳрӗ шухӑша:

хӗвел кайсах пырать, уяв
килес ҫула часах ӑсанӗ —
ҫуркуннене. Ӗшне асамӗ
чакать, кичемлӗхе туять.

Ак çитĕ вăхăт: пĕтĕ вăйă,
яшсем уттарĕç килелле
янраттарса туй кĕввине
уяв кĕвви пекех пит вăйлăн.

Йăнăшасран кашнийĕн чун çук.
Турат та тытмĕç кайнă чух.
Пуçкăшăлĕ, патак е çулçă
алра никамăн пулас çук.

Çаврăнма мар хыçалалла,
шухăшламашкăн та хăрушă:
вилетĕн çаврăнсассăн. Хушăн
çакна кашни астумалла.

Астумалла çемьешĕн те.
Ман кăмăла килет çак тĕшмĕш
йăла, айванлăх, тĕлĕнтермĕш...
Каять уяв, алне сĕлтет.

Ялта кĕтӳ те кĕнĕ ĕнтĕ.
Макăркалаççĕ сурăхсем.
Хапха уçаççĕ хуçисем.
Урамсенче — тусан та ĕнтрĕк.

Уяв ĕшни те тĕксĕмленнĕ.
Вуткуçĕ — унăн варринче,
юман кăмпи. Вăл тĕтĕмленĕ
ĕшне — шăпах. Уяв инçе.

Йăлт пĕтрĕ, иртрĕ, тăхтамарĕ.
Чĕнмест куккук, тăри чĕнмест.

Тĕнче тӳлеккĕн тĕлĕрет.
Текех аса килмест Тамара.

Иртни нихçан та таврăнмасть.
Вунçич çулхи ыр ĕмĕр халĕ —
çăра кăна çемçе сухаллă.
Васкать-çке вăхăт, мĕн тăвас.

Ыр ращари утма çулсем
çăра курăкпала пĕркеннĕ.
Шăнкăравне тăкма пикеннĕ
аппа пек ырă лантăшсем.

Каçхи шĕшкĕлĕхре çут хурт
симĕсленсе йăлтăртатни те
кунта, мĕн чуль утсан та, çук.
Çук шăхăрни. Тата ытти те...

Малта-ха çак. Пророк пекех
ăна куратăп йĕркипех,
курса, куçăмсемпе калатăп.
ăнлантăн эсĕ пĕтĕмпех.

Наттуççă, савнăçăм, куççулĕм,
пыратăп сан патна чупсах.
Пăлханчĕ чунăм, хыпрĕ çулăм.
Айта вăййа, айта часрах.

Шанманлăх шаннă. Ĕненетĕп
кашни çӳç ылтăн пĕрчине,
çӳçри хĕвел пайăркине.
Хавхаланатăп, тĕлĕнетĕп.

Тӳпе пек тарӑн куҫусем
сӑпай пулмашкӑн вӗрентеҫҫӗ,
телей сунаҫҫӗ вӗҫӗмсӗр,
тӳрех пӑхса иментереҫҫӗ.

Пур-ши манран та маттурри?
Эс ҫӗнӗлетрӗн, ырӑлатрӑн.
Хальччен яланччӗ эп туратлӑ,
пулмастӑмччӗ ҫынсен хурри.

Ҫитет, ҫитет туратланса.
Сана нихҫан та кӳрентермӗп.
Хӑв хур тусан, шӳтпе ирттерӗп,
ҫилленӗве унтах манса.

Уяв пӗтет. Айта вӑййа.
Эпир-и ҫамрӑк илӗм-тилӗм?
Е урӑх мӑшӑр килнӗ тӑнӑ?
Пытарар мар чунри вӑя.

Пулар туссем, пулар юлташлӑ
чӗре тапма чарӑниччен.
Хӑй, уяв пек, иртсен те яшлӑх,
шевли вылятӑр виличчен...

## 7. УЯВ КАЛЛЕХ

Июнь тек ҫук, июль умра.
Эп, улпут пек ҫывра-ҫывра,
паян ҫут тӗнчене йӑлт маннӑ.
Шӑп тӑхӑр сехетчен лаҫра
шӑналӑк ӑшӗнче йӑваннӑ.

Уяв каллех. Çапах çынсем
кулмашкăн пуçлĕç лăхăл-лахăл.
Пырса питрен шыв пĕрĕхсен,
сиксе эп тăтăм хăпăл-хапăл.

Тухса сĕнккерĕм çырмана.
Каçатăп тепĕр урама.
Çĕн тумлă инкесем пĕр ушкăн
хавасланаççĕ çакă куншăн.

Çула пӳлет ик хĕрупраç.
— Эс, Михаля, ăçта тапраннă?
Мĕн-ма куçу-пуçу тăртаннă?
Мĕн-ма çӳхе туту кулмасть?

Ирĕксĕрех кулса яратăп.
Чупса тараççĕ пикесем.
Часах эп çырмара юхатăп,
ишеп, чăматăп пикенсех.

Пулатăп тин çуралнă пек,
хумсен ытамĕнчен тухсассăн.
Куçа курнать-мĕн йĕркипе
иртни, эпир шута путсассăн.

Çĕмĕрт çеçки вĕçсе пĕтсен,
шуралнăччĕ чие те груша.
Чӳхеннĕччĕ садра пĕр хушă
шур улмуççи, кăвак сирень.

Ирпе-ирех унта çӳреттĕм
чупса, кĕпесĕр-мĕнсĕрех.

Ик пăтлă киресем çĕклеттĕм
пулас тесе тĕреклĕрех.

Хул-çурăма çирĕплетесшĕн
ярса тытаттăм гантельсем.
Пилĕкĕме çинçелетесшĕн
тăваттăм упражненисем.

Каяттăм велосипедпа
тухса уя-хире вун çухрăм.
Çуран та сахал мар эп чупрăм,
калас-тăк, çавă сăлтавпах.

Хитре пулас тесе пите
сывлăмпала ялан çăваттăм.
Пиçĕлетес тесе ӳте
куç уçсанах шыва чăматтăм.

Чун-чĕрене килентерсе
баян тăсса ярса юрлаттăм.
Хĕратьсене юрас тесе
саламлă сăвăсем çыраттăм.

Ăса-пуçа çирĕплетме
эп тытнă тĕрлĕ философи.
Пурнайăн шухăшсăр епле?
Чунна мăк пусĕ, вилĕм сăхĕ.

Поэзисĕр май çук темме.
Тăри юррисĕр те май çукчĕ.
Каçхи пĕт-пĕлтĕк путене
сасси те маншăн çутă-çутă.

Çăка чечекĕ, ыр чечек,
пыл шăршипе ӳсĕрлтерет.
Çĕршерĕн ылтăн хурт вĕçет
çумри çăкалăха, хире.

Ыраш та пулчĕ шăркара.
Ыраш хушши — сукмак. Ун тăрăх
епле утаттăм шăп та тăлăх,
пухса кăвак утмăлтурат.

Каç-каç «юрларĕç» шапасем.
Шапасене сума суса, эп
шăпчăксене те ыр сунатăп.
Чĕнмеççĕ, кайнă шăпчăксем.

Лĕп çумăрсем чаш-чаш! чашларĕç.
Сывларĕ тарăннăн тĕнче.
Чечекленӳ часах пуçларĕ
иртмешкĕн çиллĕ кунсенче.

Тĕтре юхать. Хĕвел пăхать.
Иртет тĕтре. Садсем те ĕнтĕ
кичем. Çеçкеленсе иртternĕ.
Вăрман çеç тулăх та паха.

Унта кĕрсен кашни курать
куçа ачашлакан картина,
хавасланса йăл-йăл кулать.
Çав картинпа ун кăмăл тулнă.

Ĕшне тавра хурал тăрать
лаштра юман та ват çăка.

Кунта килмен çын таврара
хальччен пулман, халь те çуках.

Ӳсеççӗ тӗрлӗ чечексем,
шурри, сарри, кӗреннисем.
Кăваккисем те питӗ йышлă,
пăхса тăраççӗ тӗлӗнсе.

Утма çултан кăшт пăрăнсан,
пуçне таять шур кӗмӗл лантăш.
Эп лантăша та кăмăллатăп,
татса илетӗп чарăнса.

Ӗшне тулли çырла, çырла:
ак çӗр çӗрли, хăмла çырли.
Тен, çавăнпа кунта çулла
ача-пăча ӗшне тулли.

Куçа курнан илемӗ те,
чунри илемӗ те мухтавлă,
анчах та çав илем ултавлă —
хăш чух сасартăках пӗтет.

Шанатăп эп: пӗркунхи пек
вăл хальхинче тарса çухалмӗ.
Шанатăп: пирвайхи тӗспе
ӗшне телейлӗхпе çуталӗ.

Телей, телей, ӗмӗт патши,
сана кураттăм урăхла эп.
Ыйтать тăртаннă чун ăслайӗ:
унта Наттуççă пымӗ-ши?

Малтан вăл маншăн çунчĕ темшĕн.
Вара, сасартăк, пăрахса,
Ляваннипе чĕри пĕрлешрĕ.
Эп кайрăм шутсăр тарăхса.

Хăвалăха шала кĕрсе,
çерем çине вĕсем вут хунă.
Кичем пулман, гитара пулнă,
аккорчĕ тăнă кĕрлесе.

Лява калать: «Ун пек çын эпĕ
Тамара хыççăн тĕл пулман.
Мана çав ахаль мар хĕнеттĕн.
Тамару сан, Мишша, чикан.

Кармен теттĕн-и-ха, чиканккă,
савнисене вылятнă çеç?
Вăт, санăн чун варли, Тамарккă,
хĕрӳлĕхпе Кармен веçех».

«Çапла, — теп Лявана салхуллăн, —
текех пире вăл пулас çук.
Унни пек сас, унни пек кулă
эпир нихçан та илтес çук...»

Хăвалăхра Лява юратнă
пăхса ларма пике çине.
Леш шухăшлăн хуллен юрланă
тĕршĕнейсе çăка çумне.

Ача хĕре ăнланайман:
чуптума мар — патне яман,

çывăхарах та хуть ларман.
Лява хĕре чуптăвайман.

Илемлĕ пирĕн Саврăш енĕ.
Вăрманĕсем хитре, хитре.
Хĕрачисем принцесса евĕр.
Сар çӳçĕсем — шăп пилĕкрен.

Çапла вăл пулнă вăрçăччен те.
Вунçиччĕри пĕр хĕр ялан
юлташĕпе те, пĕр-пĕччен те
вăййа çӳренĕ — уява.

Сирень çеçки тытса вăл тăнă
айăккинче кăшт именсе.
Çутатнă уйăх, кĕмĕл тăкнă.
Хĕр тем сăнанă çӳçенсе.

Ăна та курнă, асăрханă
çап-çамрăк чунăн тунсăхне,
патне пымашкăн май шыранă,
çитсе те тухнă хĕр умне.

Кĕрнеклĕ, йăрăс пӳллĕ каччă,
вăл пулнă теççĕ ман сăнлах:
«Пĕр туратне пире парсамччĕ», —
тесе ыйтать кула-кулах.

Ман копиййĕм пулмасăр, шельма,
хура кăтраллă çав этем:
пике ахальтен мар çӳçеннĕ —
халь те пулин сатур аттем...

Уяв! Хавассăн çĕрхута
ачалăхра сан сăпкунта
сикнишĕн çеç сана мухтас-и! —
çут тĕнчене çуралмасассăн,
епле сикейĕттĕм унта?!

Çакна пĕлсе шыраса тупнă
атте чи ыр кăмăллине,
йăлт ăнланса шутласа хунă
эп тĕнчене килессине.

Çакна пĕлсе чунран юратнă
атте çап-çамрăк мăшăрне.
Çакна пĕлсе мана çуратнă
вунсаккăрти чипер анне.

Пин те пĕр таймапуç сире,
атте-анне! Эп ĕмĕр манмăп
сăваплă ырă ĕçĕре,
сана — уяв, сана — вăрманăм.

Мухтав та чыс, уяв, вăрман!
Эсир — çут савăш институчĕ.
Эп тĕнчене килеес çукчĕ
вĕсем унта пыман пулсан.

Эп кăна мар, çур ял. Тен, пĕтĕм...
Ĕçре чухне ерĕçеймен.
Историсем мĕн чухлĕ пĕлтĕм
камсем кама савни çинчен!

Камсем мĕнле юратнисем те
памаççĕ канăç чĕрене.
Сас-чӳсĕр хăçанччен çӳретĕп?
Çитет чĕнмесĕр çӳреме!

Ман йăх айван йăх мар. Чухлаççĕ
ялти çынсем çакна аван.
Юман — мăн асаттемĕн ячĕ,
мăн асаннем вара — Турхан.

Ку каламасăрах йăлт паллă.
Сăлтавĕ çуккă тавлашма.
Çур ял ытла кунта Юман вăл.
Вĕçкĕнленни те кулăшла.

Сăмах пулать Юман Каврийĕн
ваталăх ывăлĕ çинчен,
яш йĕкĕтĕн кал-кал юррийĕ
янăраса кайни çинчен.

## 8. «ВĂРМАН АЙĔНЧЕ...»

Маттур та ăслă Кĕркури
тĕнче нумай касса çӳренĕ.
Ăçта çитсессĕн те иртмен-мĕн
ялта çуралнă чун хурри.

Минсулăва вăл юратать,
анчах хĕр темшĕн пăрăнасшăн.
Çĕрме пуян — пике-хĕр ашшĕ
лавкка тытать, арман тытать.

Лавкка. Арман. Мĕнех мулу.
НЭП вĕçленет те, çук та эсĕ.
Тен, аçупа пĕрле пĕтесшĕн
эс те, хĕвелĕм-Минсăлу?

...Каç. Лăпкă. Уçă. Уяр мар.
Ял варринче уяв юрлаççĕ.
Туртать çапах та çурхи каçĕ.
Ача уттарчĕ уява.

Çитсен хĕре тĕл пулаймарĕ.
Пĕлтерчĕç вăрттăн: «Килĕнче
ларать тыткăнри пек, мăнтарăн,
ват ашшĕ-амăш хушшинче.

Каçпа ниçта та кăлармаççĕ,
çураçмалла тет, мĕн тăвас,
Христус тĕнне пит кураймаççĕ,
шыраç тĕне кĕмен чăваш.

Пуяннине. Анчах эс, тусăм,
«чăваш» та мар, пуян та мар».
Ăнланчĕ Кĕркури: «Пуç усмăп.
Хăйпе епле-ши тĕл пулар?»

Ак тепĕр каç. Ача кăшт суйрĕ:
пуç усмасть мар, хытах усать.
Хĕре çураçĕç, çитĕ туйĕ,
ăна хăварĕç намăса.

«Ах, Минсăлу, тухсам, тухсамччĕ,
епле кĕтетĕп эп сана.

Юратмасан та йӑл кулсамччӗ,
илттер шӑнкрав пек сассуна.

Кӑмӑллӑ мар пуянӑн туйӗ
мана, Каврийӗн ачине.
Патна ҫывхармасан та туйӑп
чунун сипетлӗ ӑшшине.

Тепре анчах сана курасчӗ.
Тен, пуплӗпӗр малтанхилле?
Тен, куласран ял хӗрупраҫӗ,
каллех уттарӑпӑр хире?

Тен, лӑпкӑ ҫиллӗ аслӑ улӑх
унчченхиллех кӗтет пире?
Тусна эс мантӑн, тупрӑн урӑх,
анчах манаймӗ ман чӗре.

Сар ҫӳҫӗм, кӑвак куҫӑм, чунӑм,
пӗве хӑви пек пӳ-сине,
пӗрле ирттернӗ каҫсене
асаилсе нумай эп ҫунӑп.

Сӑмах эс патӑн ахалех.
Эп хам та тӗнче касрӑм тӗлсӗр.
Тен, ҫавӑнпа салху эп кӗҫӗр,
хаваслӑ мар яланхилле.

Ҫук кӑмӑл купӑс калама.
Каллех, ак, сӗлӗ пуҫ кӑларӗ.
Мӗн-ма-ши тус пулсах юлмарӑн,
«эп — санӑн» терӗн-ҫке мана?

Ытла та çамрăк вăхăт çав.
Пĕтерчĕ шухăшсăрлăх мар-и?
Тупа туни ниме тăмарĕ.
Кĕмерĕ ĕмĕт пурнăçа».

Çапла шухăшласа вăл çитрĕ
тăкăрлăкран уяв тĕлне.
Вăл сунчĕ сывлăх шурă питлĕ
вăййа кĕмен пикесене.

Пĕр хĕрачи хуллен каларĕ:
«Ах, ăшă, Кĕркури, аллу.
Пикмуш йăмри патне чуптар эс,
унта час пырĕ Минсăлу».

Пикмуш йăмри — лаштра йăмра.
Ак шур мĕлке хуллен çывхарчĕ.
Яш Кĕркурийĕн чун çуначĕ
ваш! варкăшрĕ. Пике — умра.

Каччи хĕре савасшăн пулчĕ
чĕрин мĕнпур хăвачĕпе.
Каçхи йăваш шевле пек кулчĕ
чĕнмесĕр Минсăлу чипер.

Кăлкан пек çӳçĕ — хумлă-хумлă.
Пĕрреллĕ хулăн çивĕтне
кăкри çине илсе вăл хунă,
шур явлăк тытнă аллине.

Çинçе ун пилĕкĕ. Çӳл кăкăр.
Пăлханнипе хĕр пӳлĕнет:

«Ах, Кĕркури... Ах, чăрсăр кăйкăр...
Каçар, каçар, ан кӳренех,
ах, кирлĕ мар...»

Хуллеççĕн, çирĕп
сирет качча хăй çумĕнчен:
«Тахçан калас тени тин çитрĕ.
Пулсам юлташ, пулсам пичче.

Ятла мана, эп икĕпитлĕ.
Анчах... текех эс савни мар.
Пĕр чĕререх пурнаймăр иккĕн.
Чăн чун туртни, савни, Сахар.

Сахара мар атте парасшăн.
Эс илтнĕ: эп тĕне кĕмен...»
Ĕсĕклесе илет хĕр сассăр.
Чăнкăртатать çут шӳлкеме.

Тек Кĕркури кунта тăмарĕ,
уттарчĕ пусран çапнă пек.
Чун йĕчĕ, тăнлавсем тăнлатрĕç,
килте тем çырчĕ çĕрĕпех.

Юман Каврийĕн пĕчĕк пӳрчĕ
ирпе çуратрĕ çĕн поэт.
Ку сăвă мар, ку юрă пулчĕ —
чисти симфони пек кĕрлет.

Ирччен мĕн чухлĕ çурчĕ хут,
мĕн чуль çырса мĕн чуль хуратрĕ.

Поэт хăйĕнчен хăй хăрарĕ.
Чĕри — кăварччĕ. Куçĕ — вут.

Хĕрӳн шырарĕ кĕввине.
Хуткупăс тупманне чун тупрĕ:
пĕр ыр çемме ирпе, ах турă,
хăй майлă çавăрчĕ тинех.

Çак юрă хĕрĕх çул ытла
чăваш чунне ыраттарать,
чун-чĕрене пĕр çулăмлать,
тепре вĕри хăват парать.

Халь ĕнтĕ Кĕркури хăй çук.
Сахар та вилнĕ. Минсăлу
тултарчĕ аллă сакăр çул.
Çук çамрăклăх. Кичем. Салху.

Халь Кĕркурийĕн юррине
юрлаççĕ урăх ăрусем.
Хурса чĕремĕн варрине,
юрлатăп эп те, итлĕрсем:

«Вăрман айĕнче, Саврăшпуçĕнче,
эп çуралнă чăваш ялĕнче.
Вунсаккăрта чух юратрăм хĕре,
астумастăп хăш вăхтрине.

Мăнкун иртетчĕ, çимĕк çитетчĕ.
Эп купăспа вăййа тухаттăм.
Сарă çӳçлĕскер, кăвак куçлăскер,
астăвап-ха: епле ташлатчĕ!

Аслă улăхра лăпкă çил вĕрет
эп сар хĕрпе çӳренĕ чухне.
Сĕлĕ хумханса пуç кăларнă чух
сăмах пачĕ «эп — санăн» тесе.

Çитрĕ кĕркунне, ӳкрĕ шурă юр,
çитрĕ манăн çунмалли вăхăт.
Манăн сар хĕре ашшĕ килĕнчен
парас терĕç пуян ывăлне.

Авалхи йăла, тĕттĕм пурăнăç,
çураçтарчĕç хĕре ирĕксĕр
çĕр аллă тенкĕ ылтăн укçалла,
çиелтен виç витре эрехле...»

Тата пĕр икĕ-виç халап
ярса пама та хатĕр эпĕ,
анчах кăмăлăра пĕлетĕп,
кĕскелĕхе те хапăллап.

Супĕлтетӳ йăлăхтарать.
Çапах та мыскараç Яккушăн
шăла йĕрме юрать пĕр хушă.
Ку — кивелми кив мыскара.

Якку илтет: ун йăмăкне
Аксу енне вăрласшăн килнĕ.
Лешсем чее. Якку та — тилĕ.
Тартать вăл йăмăкне килне.

Хăй, хĕрача тумне алхапăл
тăхăнкалать те, — урама.

Умран та вăл хыçран та капăр.
Яштак. Сухалсăр. Хăрамасть.

Юлташĕсем кайса выртаççĕ
Аксу енне, кĕпер айне.
Уяв пĕтсессĕн мыскараçă
вĕтĕлтетсе утать килне.

Тăкăрлăкра пĕррех хуплаççĕ
тытса «сар хĕрĕн» çăварне.
Малта пĕр кӳршĕ хĕрупраçĕ
илтсе юлать çухăрнине.

Сăпкаллă тăрантас чĕкеç пек
ярăнайса пырать хитре.
Кĕпер патне вĕççе çитеççĕ.
Яшсем тухаççĕ хӳтлĕхрен.

Хăва хулли пек пиçĕ «хĕрĕ»
авкаланать, турткаланать,
тапса сирпĕнтерет пуçхĕрлĕ
çумри кĕрнеклĕ ачана.

Çăва патне хĕрӳ-качку!
Пуç сывă чух тарса ӳкесчĕ...
Ватсем калаççĕ: пăрăç пекчĕ
пуçтах та шухă хĕр-Якку.

Вуншар ялтан пырсан яш-кĕрĕм
Аксу ялне ерминкке каç,
чи чаплă каччăсем сар хĕршĕн
юна ӳкеççĕ, çапăçас.

Арҫын ача сасси туймаҫҫӗ
пӗри те «хӗр» калаҫнинче.
Кӗрлет, шавлать Аксу Тукасӗ,
уяв сасси каять инҫе.

Ҫапла йышши Якку пӗтет-и,
нихҫан ниҫта та аптраман.
Ҫитет пуль халлӗхе, ҫитет пуль:
ҫырсан — Якку хӑй пӗр роман.

Ун пеккисем халь курӑнмаҫҫӗ.
Хӗр вӑрласси те халӗ ҫук.
Тӗпре халь — юрату хӑвачӗ,
татулӑх, чыслӑ калаҫу.

Лява, юрат, юрат, ан ӳкӗн,
аслаҫунтан ирттер, пӑлхан.
Ахаль-и эс Якку мӑнукӗ!
Шалт тӗлӗнтер пур халӑха!

Кӑҫал татах эс илемленнӗ.
Паян уяв, чи юлашки.
Сана ыр пирӗшти иленнӗ,
чӑн чиперри те ҫамрӑкки.

Вӗҫне-хӗрне тухса пулмарӗ
ҫӗр тӗрлӗ шухӑш картинчен.
Сухал хырса ҫӗнеличчен,
апат кӑп-кап хыпкаличчен
уяв ялтан та ӗнтӗ кайрӗ, —
кӗпе-йӗме утюгличчен.

Ял вĕçĕнче юрланă юрă
каймарĕ, юлчĕ чĕрере.
Ачи эп, салхурах та, йăрă —
персе те çитрĕм ĕшнене.

Ырми-канми ача-пăча
шырать тин тĕвĕленнĕ мăйăр.
Унтах, ăна шыранă майăн,
тем сăлтавпа тек çапăçать.

Вĕт-шакăрсем, ав, ярăнаççĕ
çуйăхашса чуччу, чуччу.
Пысăккисем те вăйăра çеç
тăмаççĕ-мĕн, Лява та çук.

Сулахайри утма çулпа
вĕсем кĕрсе кайса çухалнă:
Наттуççă тумĕ шур çухаллă,
Лява кĕпин те шур çуха.

Юрлатпăр çĕмĕрсе айвай!
Хура вăрман ян-ян! тăвать.
Килсе тухать часах Лява.
Тавах сана, Лява, тавах.

Мухтавлă хĕр-Якку мăнукĕ,
тархасшăн, ак сана — баян.
Хулсем сураççĕ, тыт-ха, нуккă,
мана çитет пуль теп паян.

Наттуç килсен Лява баянĕ
уйрăммăнах хитре янрать.

Кама мĕн кирлине туять вăл,
ахаль чухне çеç шаярать.

Кала-кала кĕç ĕшенет те,
кама? каллех мана парать...
Хĕвелури çур ĕшнене те
çутатаймасть, кайса пырать.

Уçланкăра утса çӳрерĕм.
Пухса пĕр ывăç шур чечек,
Наттуççăна парас-ха терĕм,
анчах та ютшăнчĕ вăл тек.

Хама калап: Мишша, айта-ха
кунтан каятпăр, вырăн мар,
ларар та ыткăнар пуçтаххăн,
асар-писеррĕн ыткăнар.

Тарас пулать часрах тесе
эп мотоцикл патне пыратăп,
мотоцикла вăр-вар пăратăп,
тухатăп хыт мĕкĕрттерсе.

Хыçра юлать питомник пулнă
ял çумĕнчи лаштра вăрман.
Сассен кĕрлевĕпе вăл тулнă,
уяв юрри каять ян! ян!

Хам, вăйăран инçе пулсан та,
ăсра тӳме шăк-шак пусатăп:
шак-шак шаккама,

шакки тума юрамасть,
туту санăн пит çӳхе,
хыт чуптума юрамасть.

Савăнасран инçе пулсан та,
ăсра шутлатăп савăнсах хам:
хыт, хыт çилленме,
хыт çилленме юрамасть,
тусăн чунĕ пит чечен,
çапса хуçма юрамасть.

Вара икке хуçатăп эпĕ
вĕчĕрхенӳн çут çĕççине,
ял çумĕпе вĕçсе иртетĕп,
персе тухатăп шоссене.

## 9. ТАЙМАПУÇ!

Ман йăх айван йăх мар. Чухлаччăр
çакна çынсем теп пит аван.
Юман — мăн асаттемĕн ячĕ,
мăн асаннем вара — Турхан.

Пирте тавăру мар, ачашлăх
арасланать чылай чухне.
Çĕклет кӳлешӳ мар, мăнаçлăх
çав самантра поэт чунне.

Поэтсене тиркетĕр эсĕр
вĕсем çунатлă пулнăран.
Тиркенипе юрра кĕретĕр,
вара пурнатăр юрăра.

Тен, эпĕ юрăпах чыслаймăп
сире, Наттуççă, Минсăлу.
Сăвва — кĕртсе хăварăп лайăх.
Çак пулĕ ĕмĕр асăну.

Сана кураттăм урăхла эп,
телей, телей, ĕмĕт патши,
паян — курмастăп, тăрăхлатăп.
Паян тиркев — чĕре ăшши.

Поэтсене, çынсем, тиркетĕр
вĕсем хĕвеллĕн çуннăран.
Хĕвелсĕр хăвăр тилмĕретĕр
юр та пăр, çумăр çунăран.

Тиркенипе мана çĕклетĕр
çап-çут мăнаçлăх тӳпине.
Тиркенипе илсе çӳретĕр
поэзи, шухăш тĕнчине!

Пин те пĕр таймапуç, туссемĕр,
тĕпрен илсен аван çынсем.
Шанатăп: çитĕ кун, тиркемĕр.
Шанатăп: çиçĕç куçăрсем!

Çав кун чуна телейлĕ тăвĕ:
кашнин çуталĕ йăл кулли —
ăнланĕ те мана астăвĕ
чăвашăн ялĕ те хули...

*1962 çул, май-июнь.*
*Саврăшпуç*

# 1963

## ĔМĔТРИ КУРĂНУСЕМ

Эй, эсир, ытарма çук
ĕмĕтри курăнусем,
эпĕ яланах туятăп
пурнăç çутине сирте:
пурнăçра ертсе пыратăр
паллăмарлăха сирсе.
Эп, хама сире парса,
хумханатăп, тертленетĕп.
пур-ши вĕçĕр-хĕррĕр сирĕн,
о, пăхса ытарма çук
ĕмĕтри курăнусем!

*1963*

## ХУСАНТИ УНИВЕРСИТЕТРА

Апрель иртет. Çилсем пăрахрĕç
ши! шăхăрма, у! улама.
Апрель иртет. Темрен хăрарĕç.
Тен, кайрĕç урăх хулана?

Эп хăрамастăп, эп каймастăп...
Епле тӳлек те уçă кун.
Эп «уламашкăн» пăрахмастăп,
«шăхăрасси» те ман — саккун.

Пĕр лекцирен хуса кăларнă.
Тепĕринчен эп тартăм хам.
Нерон — тиран, Гитлер — гиена,
кам-ши Чингис е Патти хан?

Ыхы-хы-хы... Кăна кам тен?
Йăнăш нумай, çапах — аттемĕр?
Эсир вара, юлташ доцент,
тăмсай. Кунтан мала иртеймĕр.

Персе пăрахнă ик мĕльюн
чи чаплă, чыслă çирĕп гварди —
Ильич тупри, Ильич хăвачĕ...
Мĕн чухлĕ юн, мĕн чухлĕ юн!

Пымастпăр урăх итлеме.
Эсĕ — пĕччен. Эпир — нумаййăн.
Час эпĕр мар, доцент, эс кайăн
пире хĕрӳллĕн питлеме.

Унччен — çӳре-ха шиксĕр, лăпкăн
чул стенасенĕн хӳттинче.
Çӳре... Ирех-çке халăх лăккă
Ульянов палăкĕ панче.

*1963*

## ЮРАТНĂ ПОЭТ

Поэтăн тунсăхĕ, хуйхи
мĕн-ма нумайййине эсир
çынла ăнланăр, çывăххăн:
вăл пирĕнте чи ырăсем
часрах çĕнтернине курасшăн.
Хăй кун-çулне ялан пăлхавлăн
вăл ялкăштарнă çавăншăн.

Кун-çул сурансăр, çухатусăр мар,
анчах ӳт-пĕвĕн мĕскерле суранĕ
танлашĕ чун суранĕпе!
Хаштах сывлатпăр та, тепри тӳрех:
эс — пессимист теме пăхать.
Кам ĕмĕр йăл кулса çӳрет-ши?

Эп поэта-и тĕл пулатăп,
çырнисене вулатăп-и хĕрӳн,
туяп: мещенлĕхĕн мĕнпур имçамĕ —
табак, эрех тавраш, савни —
йĕрке сăвви тĕшне тăраймĕ.

Шăтаççĕ сăвăççем куллен
тем тĕрлĕ-тĕслĕ кăмпасем
ăш çумăр хыççăн тухнă евĕр.
Пуртех кăмпи çимелли мар:
пур лайăххи, япăхраххи.
Ниме тăманнисем нумай.

Эп сӳпĕлти сăвăççене
ултавçăсен шутне картатăп.
Поэт тени поэт пулсан —
пул шухăш-туйăмăн хуçи,
тĕнче хуйхи-суйхин хӳтлевĕ,
тӳр чăнлăхăн ялавĕ пул.

*1963*

## ÇЫННĂМСЕМ...

Пурнăçа пуçтах пурнасчĕ.
Каласа пама пултарччăр
малашри ăрусене
манăн пурăнăç çинчен
чĕрепе хыпса çунса,
ӳстермесĕр, пытармасăр,
мăнкăмăллăн та хăватлăн.

Эп, çынсем, сире саватăп
çуттăн-çулăмлăн, тасан.
Телее пула хавассăн
хатĕр эп куççуль тăкмашкăн
сирĕн ăшшăра туйса, —
шиклĕ асапра вăраххăн
кĕтнĕ амăшĕ килсессĕн,
тунсăхпа ачашлăх витнĕ
уçă сăн-пите курсассăн
ачапча макăрнă пек.

Çыннăмсем, эп ăнтăлатăп
сирĕн сиплĕ ăшшăра.
Ĕненетĕп —
сирĕн ăшшăр
тӳрĕ кăмăлпа хакланă
ятăма
ырлассине.

*1963*

## ХĔРАЧАСЕМ

Хĕрачасем, эсир пиртен вуншар хут лайăх.
Çивĕтсене эсир çеçкелететĕр хăюпа,
çап-çутă ирсенче, шкула васкană майăн,
шаклаттарса пыратăр пушмакпа.

Хăю çыхман чухне те ытарма çук капăр
пуçтарма пĕлетĕр çӳçĕре.
Туфли мар хăш чух, кив атă тăхăнатăр,
пурпĕрех илемĕр сисĕнет.

Çĕнĕ яланах, маттур курнатăр
тирпейлĕ çипуçпа, хавасла сăн-питпе...
Ыррăн тумланма та, ярăнса утма та
пĕлейместпĕр эпĕр сирĕн пек.

Мĕн пытарам, камран-ха пытарас?
Эпĕ хам латтисĕр, эпĕ хам услап.
Йăмăк кӳренет: «Така пек çăмламас,
кассам çӳçне, пăхма та вăтанап».

Вĕренӳ пирки çăвар уçма та намăс.
Сирĕнсĕр эпир мĕскер-ши? Нуль.
Эпĕ хам куллен миçе задача харăс
(химии, физика) çырса илместĕм пуль?!

Шкулти каççем... ăçтан, ăçтан тупам-ши
чи ырă, чи телейлĕ сăмахсем,
мĕнпе танлаштарам, епле мухтам-ши,
каллех теем-и: «чаплă юмахсем»?

Ҫав каҫсене эсир, хӗрачасем, килетӗр
шур платьепе, шур туфлипе. Эпир,
шӑпӑрлансем, пӗлместпӗр ниепле те:
те эсӗр — музыка, те музыки — эсир.

Вальс лӑпланмасть. Хӑюсӑр пухӑнатпӑр.
Ларатпӑр. Вӑхӑт, вӑхӑт ҫӗкленме.
Кунта вара, кирлӗ мар чух, хыт вӑтанатпӑр,
чӗре шаккать, хал ҫук ташша чӗнме.

Хапхара виҫшерӗн-тӑватшарӑн
хуралта тӑратпӑр тӑрӑшса,
ӑсатма ыйтатпӑр пит япшаррӑн.
Алхасать те кӗвӗҫӳ пушарӗ,
автан пек ӳкетпӗр тытӑҫса.

Чӗлӗм те туртатпӑр, чӑрсӑр та ҫӳретпӗр.
Сивӗ сӑмахпа йӗртетпӗр хӑш чухне.
Шанчӑклӑ туссем пулсамӑр тетпӗр,
хамӑр шанчӑксӑр ҫине-ҫинех.

Хӗрачасем, эсир пиртен вуншар хут лайӑх...
Ҫивӗтсене ҫеҫкелететӗр хӑюпа,
ҫап-ҫутӑ ирсенче, шкула васканӑ майӑн,
шаклаттарса пыратӑр пушмакпа.

Шкултан килсен, тупмасӑр нимӗн айӑп,
аннӗр пуплет: «яшка»... «урай»... «кил-ҫурт»...
эсир, хӗрачасем, пиртен вуншар хут лайӑх,
чӑннипе калас-тӑк, ҫӗршер хут!

*1963*

* * *

Çырă Люся. Шурă юр...
Тĕлпулу васкатрĕ уйрăлма.
Инçетре хĕрӳллĕн юрлама
чĕремре пин кĕвĕ пур.

Ал паратăп, кайрăм, сывă юл.
Сапалать, тăкать хĕвел хăй куллине.
Курăнать ун витĕр куç умне
савăк Люся, шурă юр.

Чĕремри çав ырă пин кĕвве
юрласа кăтартăп таврăнсан.
Илĕн-ши кĕтсе çаплах хавас кулса,
Люся, Люся, — çут хĕвел?

*1963*

## СУЯЛĂХ

Куçран пăхса, чуна мĕн чул тĕпчерĕн эс.
Синкерлĕн çатăрлать ăна сăнун хĕрў асамĕ.
Парăнас мар пирки манра пырать экзамен.
Епле çĕнес сана — епле вĕçерĕнес?

Çитетпĕр эсĕ чĕннипе Казанка çыранне.
Хыçра шур Кремль, çерем — тин шăтнă курăк.
Чĕремçĕм тем сисет. Мĕскер? Пĕлместĕп. Курăп.
Тăнлатăп эс çуркуннене епле юратнине.

«Пытанакан хĕвел... — тенисене илтетĕп, —
тĕтрелĕхре шăпăлтатан хумсем... инçет...»
«Юрас шутпа калатăн-çке, суятăн, — тетĕп
эп ăшăмра, — суян куç умĕнчех».

Сив кăмăлпа, чееленсе пуплерĕн
этемĕн тупсăмĕ çинчен, чăн тĕрĕслĕх çинчен,
пĕр нимĕн ытлашши кала пĕлмерĕн
çавнах пĕркун сана эп хам каланинчен.

Куçран пăха-пăха, чуна мĕн чул тĕпчерĕн эс.
Ма пытарас, ăна аван эс пĕлтĕн.
Итлетĕп сăмахна, тăнланăн пĕлтĕр, —
пуш-пушшăн илтĕнет... Епле вĕçерĕнес?

*1963*

# ТӐ̆ПЕ

Эсĕ тĕпсĕр те, ҫыpансăр та.
Эсĕ улшăнчăк, медуза евĕр.
Ĕнтĕ, Рерихла пăхмасăр та,
тĕсне аван куратăп эпĕ.
Ним сасăсăр эс, сасăсăр.
Анчах ҫĕнтер-ха тавлашса сана!
Эп ахăлтатса кулсассăн тин
«вĕҫне тухать» сăмах:
«Ҫăлтăрусемпе выля-ха та,
питех мухтанмасан та юрĕ, —
вĕҫет этем ытла хытă,
самант! — унта ҫитсе те тăрĕ.
Теттӳсене пуҫтарĕ те,
мĕнпе вара, мĕнпе йăпанăн?»
Каҫар, тӳпе... ахаль вăрҫтартăм эп.
Хирĕҫер мар. Каҫар, тăванăм.
Эсĕ тĕпсĕр те, ҫыpансăр та.
Пиншер ҫул сана ҫукчĕ ҫĕнме.
халĕ, Рерихла пăхмасăр та,
куратăп сăнунти ҫĕнне.

*1963*

* * *

Пикесемшĕн çунаттăм, çунаттăм,
çавăраттăм. Сӳнетчĕ пушар.
Вилесле усăнатчĕ çунатăм.
Пурăнаттăм эп питĕ начар.

Çитиччен çеç хавасчĕ, çитсессĕн
тунсăхлаттăм инçе çĕрсенче.
Кăмăлтан пуçăнсах, чун кӳтсессĕн,
йăлăхаттăм кал-кал ĕçсенчен.

Çавăн пек хама хам ăнланмасăр
тĕнчере эп çӳрерĕм нумай.
Телее эс, мĕн чухлĕ ан хапсăн,
илейместĕн тытса кирлĕ май.

Акă таврăнтăм эпĕ киле.
Çĕкленсе утатăп çĕнĕлле.
Кăкăрăм сывлать пăхаттирле.
Пăхкалатăп кăйкăр чĕппилле.

Пĕринчен-тепри хĕрӳ, чипер
шăранса тухаççĕ сăвăсем.
Çырă çӳçлĕ ыр хĕрачине
вĕсене паратăп именсе...

*1963*

* * *

Çил-тăманлă сивĕ тĕттĕм çĕрĕн
кутамккаллă ывăннă çынни
талпăнчĕ çаплах-ха, пусрĕ çирĕп.
Умĕнче ун — çутăсем сӳнни.
Юлашки хăйçути те çухалчĕ...
Çитеймерĕ. Кăлăх — талпăнни.
Халĕ çеç кулянăвĕ сахалччĕ —
хупăрларĕ вĕçĕ курăнми.
Ыткăнуллă чун-хавалăн терчĕ —
вăхăтра çитмесĕр хур пулни.
Çул çынни çап-çамрăкчĕ, поэтчĕ.
Чĕрине касать кая юлни.

*1963*

* * *

Ял хӗрри ҫӑкалӑх,
ҫулҫӑ та ҫерем.
Ирхи тӗтре витӗр
хӗр-пике ҫӳрет.
Ҫакӑнта ҫухатнӑ
ҫӗркаҫ Марине
ҫивӗт вӗҫ бантне те
хаклӑ шӑрҫине.
Шӑрҫине вӑл тупрӗ,
тупрӗ хӑюне.
Пӗрне ҫеҫ тупмарӗ,
пӗрне ҫеҫ, пӗрне...

*1963*

## ХĂШПĔРИСЕНЕ

Мĕн тума çапла терех
шухăшăр, ăнлавăр ансăр!
Çав айван ансăрлăха
кăларас тесе тӳрре
генисем çинчен хăравсăр
сăмахлатăр сарлакан.
Мĕн тери... шеллеп сире.

*1963*

## АТӐЛ ХӖРРИНЧЕ

Хӗрӗх сакӑр сехет
кулянчӗҫ хумсем:
тарӑннӑн сывларӗҫ,
кама-тӑр шеллерӗҫ.
Тен, ытларах та?
Эп текех итлемерӗм.
Эп кайрӑм пӑрахса.

Хӗрӗх сакӑр сехет
ҫӑкасем сулланчӗҫ,
ҫавах ешермерӗҫ.
Ҫеҫкесӗр лантӑшсем
ҫеҫке ҫурса ӗлкӗреймерӗҫ.
Тен, ытларах та сулланчӗҫ,
тайӑлчӗҫ, хумханчӗҫ.
Анчах эпӗ курмарӑм.
Эп кайрӑм пӑрахса.

Хӗрӗх сакӑр сехет
чӗртрӗ кӑвайт тата туслӑх
урӑхпа, манпа мар,
эп юратнӑ хӗрарӑм.
Тен, ытларах та.
Ӑна эпӗ пӗлместӗп.
Эп кайрӑм пӑрахса.

*1963*

## КИНСЕНЕ ХӲТӖЛЕСЕ

Эй, аннемӗрсем, çунатăмăрсем,
çамрăк кинӗрсен ват хунямисем,
тăнлăр та мана, ай, каçарăр-ха:
çемçе мар чӗлхем, ан ӳпкелӗрсем.
Вăл ăçтан, ăçтан çемçе пултăр-ха
эсӗр кулленех кăмăла пăссан?
Темшӗн куçăхать, вăрттăн тарăхать
хăшпӗри сиртен ывăл авлансан.
Темшӗн ăшă мар «çӗн çынна», кинне,
хăй кин пулман пек нихçан, ӗмӗрне.
Ывăлпа кинӳ савсан пӗр-пӗрне,
иккӗш те хăвна хисепре тытсан,
мӗн-ши, мӗн амак тата кирлӗ-ха!
Хурлăх мар пуль-çке хитре пурăнсан?
Йăл кулать аннем, çыр, çыр тет, вăрç тет,
пӗлем мар хăртма — ил вырăс-кин тет.
Эх, аннем, аннем, ан шӳтле, ан кул,
эсӗ лăпкă та, пурте ун пек мар.
Эй, аннемӗрсем, çунатăмăрсем,
Гитлер вăрçинче арсăр юлнисем,
тăлăх ывăлсем çитӗнтернисем,
тӗрӗслӗхӗре сутмарăр хальччен,
чыс та çухатмарăр, упрарăр хальччен.
Çирӗм çул ытла мăшăра кӗтсе
чунăр макăрать туртăнса, кӳтсе.
Сирӗн юрату вăл ялан пирвайхи...
Çаврăнăр-ха, курăр, телейлӗ-и кин?
Пур телейӗ? Пултăр. Чунран савăнар.
Пурнăç аркатмашкăн — эпӗр Гитлер мар.

*1963*

* * *

Çурхи васан мĕскер юрлать ыр чунлăн?
Хĕвеллĕ çил лăпкать йывăççене,
тумла тумлать, вĕçет, ӳксе сӳнет.
Туяп çак çуркунне мĕн ĕмĕр пулнăн.

Çиçет пуçне усмасăр сар чечек,
çеçки çинче йăлтăртатать çут шуçăм.
Кuратăп ушкăн çăлтăр каççенче —
çути чуна ӳкет, хавас эп шутсăр.

Шуса иртет шур пĕлĕт кăнтăрла
пит шăппăн та калама çук тирпейлĕн.
Чăнах-и ку е куçăм улталать:
хĕвел те çав сар чечек пек çеçкеллĕ.

Ӳсеççĕ чечексем шкул умĕнче
çăп-çăмăллăн та ирĕклĕн, ним шиксĕр, —
васкать ача-пăча-ши тетĕн чиксĕр
таçта кайма — сăнатăн темĕнччен.

Кунçулăн яшлăхри чечекĕсем,
ăçта çавтер васкарăр — кăшт тăхтасчĕ!
Ман сирĕнпе ялан пĕрле пуласчĕ.
Анчах... анчах илтместĕр-çке чĕнсен...

*1963*

## ВĔÇЕВ

Мĕлкесем ӳкейнĕ.
Самолет. Тӳпе.
Сӳс кĕнчели тейĕн
Пĕлĕт татӑкне.

Ыткӑн пуля пек эс,
вĕç хĕвел çине,
кĕмĕл йĕке пек эс
шур сӳсрен çип турт,

реактивлӑ тусӑм!
Уй-хирсем çине
ывӑнмасӑр усӑк
çиппӳне силле.

Хамӑн та асрах-ха
çӳллĕ тӳпесем.
Сахалрах — сӑмахӑм,
вӑхӑчĕ — кĕске.

Чун ялан — пӑлхавçӑ —
тӳпене туртать.
Хам хухап, хухаççĕ
тĕлĕк-ĕмĕтсем...

*1963*

## ХУМХАНУ

Ыр куҫпала пăхни,
саламлăн панă алă
савăнтарать чуна,
ҫул пулинех асаплă.

Ӳсеҫҫĕ курăксем,
юрлаҫҫĕ кайăксем.
Кĕҫ кулă янтăрарĕ.
Кĕҫ ҫутă йăлтăрарĕ.

Ҫил варкăшĕ пек ҫăмăл
хумханчĕ манăн кăмăл.
Ку — пурăнăҫ кăварĕ.
Эп чĕрĕ, сӳрĕк мар эп.

Чунра хĕмленчĕк ҫутă
чĕтренчĕ вăранса.
Пурте таса та чунлă.
Эп хам та чăн, таса.

Сире савасшăн эпĕ
чунран та чĕререн.
Савасшăн, пулăшасшăн —
ырмасăр, ĕмĕрех.

*1963*

## ÇУЛÇĂСЕМ ТĂКĂНАÇÇĔ

Тăкăнаççĕ хуллен,
çулçăсем тăкăнаççĕ,
çавăн евĕр хуллен, лăпкăн çĕр çаврăнать.
Акăш пек хуллен çеç
тӳпере шурă уйăх
çунатпа варкăшать — ырă, савăк чуна.

Туслашасшăн эпир,
юратасшăн пит вăйлă,
пурăнасшăн санпа сахалтан та çĕр çул.
Пурăнасшăн эпир
тĕллĕ, шухăшлă, ăслă.
Урăхла пурăнма çĕр çинче — кăмăл çук.

Сасă, кăшăртату.
Сывлăш сĕмĕ пытанчăк.
Кĕрхи чун ырату вăрманта курăнмасăр çӳрет.
Çаралать вĕрене,
çăлтăрсем сайралаççĕ,
çил-и, каç-и калать, тĕнчере пурте вăхăтлăх тет.

Пурăнатпăр миçе,
çавăн чул пуль вилетпĕр —
сăлтав çук кулянма, васкар мар-ха вилме.
Тăкăнаç çулçăсем,
тăкăнаç те витеççĕ хураççĕ
çулсене, сукмака чăштăрти кавирпе.

*1963*

# ШАНАТĂП. ЁМĔТЕ УСРАТĂП...

*Поэма*

*Человек — есть будущее*
Ал. Блок

**1.**

Мĕн-ма, Татулăх, эсĕ килсĕр-çуртсăр
çулçӳренпе пĕрех? Иртсе ан кай, кĕрсем.
...Килмерĕ те, кĕмерĕ те. Эп унсăр.
Хам хĕрача-туспа. Кичем. Кичем.

Ман пулаймарĕ çапса хуçнă кăмăл
яланхилле хавασлă та хитре.
Мана тӳсме çук йывăр, тусăма, ав, çăмăл.
Чун-чĕремре асса çӳрет сив тăвăл.
Эп палăртмастăп, кулă — сăн-питре.

Анчах миçе пĕлтерĕшлĕ çав кулă!
Ӳпкев. Ирони. Шеллени. Тем çухатни.
«Мĕскер тăвас?» — тени салхуллăн.
Юлашки хут ёмĕтленни.

Черченкĕ хĕр, малтан ума епле
хĕрӳллĕн килтĕн:
мĕн чухлĕ вăрттăнлăхчĕ куçусен,
мĕн чул юмахлăх шурă питĕн,
çивĕтсенчи хĕлхемлĕ хăюсен!

Сăну майлах чуну та уçă, капăр, —
пурăна пĕлнин тусанĕ витеймен.
Çавăнтанпа утатпăр та утатпăр,
нихăшĕ те ниçта та çитеймен.

Паян, акă, çитрĕм пулĕ, çитрĕм:
вăрттăнлăхĕ кайнă куçусен,
чĕнтĕм те ятран, сив сасă илтрĕм,
çивĕтре курмарăм хăюсем.

Çĕр çинчи чи хаклă, çывăх çыннăм,
мĕншĕн ĕмĕте калле куçан?
Мĕншĕн йăл кулмастăн ырă суннăн?
Çĕнĕрен паллашăпăр хăçан?

Малашра хăçан-тăр паллашсассăн,
эсĕ пулăн ĕнтĕ урăххи.
Час-ши килĕн, çук-ши, пĕр кайсассăн,
чи хакли, çĕнрен, чи çывăххи?

Çунĕ ман чĕре, пăтранĕ вăл, тасалĕ,
йыхăрса, кĕтсе, манса кунне-çĕрне.
Пусмĕ пурнăçа пĕлнин тусанĕ
вутлă чунăма мĕн ĕмĕрне.

Çав-çавах эп хушăп, çывăх çын тупсассăн,
юратма хире те вăрмана;
çил килсе тухсассăн кассăн-кассăн,
куç-пуçа хуплан юр-тăмана;

сывлăма, чечексене, сап-сарă
тулă пуссине, лĕпĕшсене,
тĕрлĕ чĕрчуна, ăшша, мăнтарăн
çут хĕвеллĕ аслă тĕнчене!

Этеме савма унран эп ыйтăп уйрăм, —
хăйшĕн мар, çынсемшĕн пурăнма.

Кам ҫакна чунпа ăнланĕ, туйĕ,
ҫав чи савнă ҫыннăм пулĕ ман.

**2.**

Юратма пĕлетпĕр эп те, эс те.
Юрату ялан хĕрӳ пуласшăн.
Пĕрне ҫеҫ пĕлсех пĕтерейместĕп:
хăйпе хăй вăл мĕншĕн ҫапăҫасшăн?

Янăрарĕ шухăш пуҫăмра:
«Айăпли — пĕр хăйшĕн ҫеҫ ҫунакан чун,
сивĕ ĕмĕтлĕ хăрушă ҫын.
Тикĕт чун. Вăл вилĕм пек хура...»

Хальчченех-ха, тен, ҫавна пулах,
пысăк вырăн ҫынлăхран анчах килмест,
ҫынлăх чапшăн панă ятсенчен килмест.
Ҫынлăхсăр ҫын эгоист, паллах.

Эгоизма пулах ҫут тĕнчере
тупсăмĕ нумайăшĕн пĕрре:
ҫутҫанталăкран этем тĕсне кĕрсе,
ҫынсенех тăраҫҫĕ ҫĕмĕрсе.

Мĕн чул пĕтрĕҫ поэтсем кăна, —
ҫын чĕрин чи ҫывăх тусĕсем!
Ак ума кăлартăм Пушкина.
Лермонтов тухать. Курап Есенина.
Маяковский авă, ыттисем...

Пусмăр пăрĕ витĕр
шăтнă харсăр Ҫеҫпĕл,

хĕвелӳччĕ — Ленин,
çĕр-аннӳччĕ — Халăх.
Эс веçех вĕсенччĕ.
Эс ĕнентересшĕн
ӳсрĕн вутлăн, çепĕççĕн
Вилĕм чĕтремелĕх,
Пурнăç мухтанмалăх.

Вĕчĕрхенчĕ куншăн,
йӳçрĕ Чунилли,
хĕвелтен хупларĕ,
çĕртен тăпăлтарчĕ.
Сăххăн ярса тытрĕ
Пĕчченлĕх алли.

Кăмăл хуçăк, хуçăк.
Хурлăх хупăрлать.
Çеçпĕлĕмĕр, Çеçпĕл,
шĕл кăварлă чун,
çунтăн эсĕ, çунтăн,
çунтăн, çунса кайрăн.
Хуйхă — пысăк, пысăк.
Пусать... Вупăрлать...

**3.**

Хура чунсем, эсир, кам Çеçпĕле таптанă,
халь те эсир çук мар-ха, çивĕч-ха.
Эппин, ак, итлĕр, кам çĕн юншăн выçăхать,
эп — çеçпĕлçĕ, эп — ун, ан манăр!
Епле чееленсе ан тăвăр ĕçĕре,
туятăп пурпĕр витĕр эп сире.

Ан тив, пĕр ыр сехет, минут эп курам мар,
чун-чĕрене йăлтах касса-çурса пĕтерĕр,
çапах юлашкинчен ман ен çĕнтерĕ
ĕмĕрсенче яланлăх пурăнма!

**4.**

Кун чухлĕ чăваш халиччен эп курман.
Эп хам кунтан мар, килтĕм эп аякран.
Çапах, Атăл ен, йӳç ӳпкевĕм пур ман:
миçе кăвар чун тӳсрĕ хур сан патра.

Пăхсан, ытларах — поэтсем.
Тахçан йыхăрсан та, мĕн-ма, Шупашкарăм,
пирвай килсенех эс мана та лăскарăн,
хытах улталарĕ мĕн-ма, илĕртсе?

Ун чух эп, айван, Çеçпĕлпе пĕр çултаччĕ.
Ун пек пĕтĕмпех вутчĕ эпĕ, чăн вут.
Хĕнрен çăлăнсан, сăн-сăпат урăхланчĕ:
«Çапам хăйсене пĕрех хут,
упрам ĕмĕте, чыс упранăн,
чеелĕх туптам, сивĕ, ăслă чеелĕх.
Çĕнсен, кăмăл тулĕ, çĕкленĕ,
вара çăмăл пулĕ тăпрамăм».

Паян, халлĕхе, кăмăл сӳрĕк, начар.
Тултан йăлкăшни шалти савăнăç мар.
Мĕн-ма хăш чухне чăвашах чăвашран
çавтер ютшăнать, амăш чунлĕ çынран.
Чăн мар-и-мĕн çак? Эппин, алтăр эс ларт,
ытти халăхран вĕренсе хуть чысла.

Сăхса пурăнни Çынлăха ыр кӳмен.
Халь хăй ӳксе юлнă та, учĕ ӳкмен,
çаплах-ха, çаплах такăнать-ывтăнать.
Çапла хисеплетпĕр-и Ыр Çынна?

**5.**

Çук татулăх — мĕн этемĕн пурăнни.
Час-ши пĕтĕ çын хăйне çеç юратни,
хăй уссишĕн çеç виçесĕр тăрăшни,
хăйшĕн тарăхни та çапăçни? Пуйни?

Мĕскертен тăрать вăл эгоизм, мĕнрен?
Чăн тĕпрен илсессĕн, çын вĕлерӳрен.
Юптарса калас-тăк, суту-илӳрен,
ултав-суяран та ылтăн-кĕмĕлрен.

Ылтăн-кĕмĕл — вĕçсĕр хапсăну.
Ылтăн-кĕмĕл, сан хăруш сăну.
Эгоизмăн хĕçпăшалĕ, ĕлĕк, халь, —
эс — вутра, юнра çăрăлакан металл.

Турă та тӳре. Тăватăн пур — çукне.
Пуррине тăватăн çук. Эс çĕр çинче
эгоизмăн аллинче чухне
айăн-çийĕн çаврăнать тĕнче,
йăтăнса тухаççĕ вăрçăсем,
вăрçăсем — ылханлă гитлерсем.

Вăрçă — пынă чух çăтать çынна, кайран —
çын çăтать каллех, усрать аран-аран.
Çавă сăлтавпах, çав вăрçăран
тухаймасть анне больницăран.

**6.**

...Хĕл иртнĕ. Çур пуçланать. Хĕвел.
Аннем, мĕнле-ши эс больницăра?
Хĕвел. Хĕл иртнĕ. Çур çĕнтерет.
Эп пĕчченех, пĕчченех тĕнчере.

Мĕн кирлĕ, ылтăнăм, мĕнле эмел?
Ытла та япăхлантăн-çке ара.
Эс пĕчĕкçеççĕ курăнан, имшер,
кулянчăк куçлă та чипер.

Малта сăртри пĕр çуртăн
мăрйинчен çакланнă —
чӳхенет çут явлăк-тĕтĕм
пурçăн пулнăран.

Çамрăклах, аннемçĕм, ӳкрĕн,
ӳкрĕн те тек тăраймарăн
вăрçă çулĕсем тискеррĕн
авнă-хуçнăран.

Ĕлĕкрех мана сиплеттĕн,
ман пата курма çӳреттĕн,
вăрттăн татăлса йĕреттĕн
эпĕ йăшнăран.

Самайлантăм, парăнмасăр.
Халь вĕренмерен çитсеччĕ.
Хуйхă-суйхă тикĕсленнĕччĕ.
Ĕнтĕ акă, акă ĕнтĕ
вилĕм çĕнĕрен хăлаçланчĕ,
вилĕм, камне уямасăр...

## 7.

Аннеçĕм, терĕм те ĕнер, эс куçна уçрăн.
Эй, пӳлĕхĕм, ку анне мар,
ку — тунсăх, тунсăх.
Ку — тунсăх, кӳтекен, йăлăнакан,
этем ăнланайми хăватлă тунсăх,
тĕрĕс-тĕкел, илемлĕ, килĕшӳллĕ,
ĕнерӳллĕ çут тĕнчешĕн тĕмсĕлни.

Аннем, хĕвелĕмçĕм, эп, сан юну, калатăп:
эс пурнăçран каймалла мар, каймастăн эсĕ.
Нумай-нумай сан пек аннемĕрсен
каймалла мар. Мĕн-ма тесен
ун чух çухалĕччĕ илемлĕ, килĕшӳллĕ,
ĕнерӳллĕ çут тĕнчешĕн тĕмсĕлни.

Çын йăхне пĕтме паман аннелĕх
çав килес гармонипе пĕр тан.
Этемсем çĕнелĕç те çĕнелĕç
çĕр çинче, аннелĕх, эс пуртан.

Халиччен тĕнче пуççийĕн
эгоизмăн хĕççи,
çакса хунăскер пĕр улăм пĕрчинчен,
ахăратчĕ: эп хăравсăр, эп хăравсăр!
Паян-кун тĕнче пуç çийĕн
эгоизмăн хĕççи,
çакса хунăскер хурçă кантăраран,
йынăшать: эп халсăр, халсăр...

Çак мелпе чылай çул тăрĕ, тен,
тутăхĕ майпен кантăри те, хĕççи те.

Çитĕ вăхăт, аслă вăхăт çитĕ,
çĕтĕ хĕççи те, кантăри те.
Çулран-çул çĕнелĕç те çĕнелĕç
этемсем çак ăслă çĕр çинче,
Çынлăх хăватне илсе çитерĕç
çăлтăрсем таран, инçе-инçе.

**8.**

...Ан кай, ан кай, Татулăх, килсĕр-çуртсăр
çулçӳрекен, килсем, ал пар, ал пар эс ху.
Килмерĕ-çке, кĕмерĕ-çке. Эп — унсăр.
Килмешкĕн пулчĕ... Уйрăлтăм... Салху...

Ах, пулаймарĕ çапса хуçнă кăмăл
кăрмаххун пек хаваслă та хитре.
Мана тӳсме çук йывăр, тусăма, ав, çăмăл.
Чун-чĕремре асса çӳрет сив тăвăл.
Эп палăртмастăп, кулă — сăн-питре.

*1963*

# 1964

* * *

Çирĕммĕш ĕмĕр...

Каçару пулмасть —
çирĕммĕш ĕмĕр
кристалпа алмаз
тасалăхне,
çирĕплĕхне
чысра,
юратура,
ĕçре, кĕрешӳре
чун пек шырать, ăру.
Пулмасть-çке каçару.
Кам маннă çак кĕвве,
кĕрсе ӳкет вăл пысăк ӳпкеве.

*1964*

# ÇЕРЕМ ÇĔРСЕН ÇУТИ

## ОТРЯД УСТАВĔ

Устав шĕкĕлчеме,
мĕн тăвăн, вĕренмен.
Кĕрсе юлать тăна
юраманни кăна.
Мĕн юрани — юлмарĕ.
Капла та — пит юрарĕ.

*1964*

## СТРОЙКА КĔВВИ

Сави шăхăрать,
пăчки юрлать.
Атьсем шавлаççĕ.
Хĕрсем тăнлаççĕ.

Мастерокĕ шăлать,
мăлатукĕ шаккать.
Хĕрсем шавлаççĕ.
Атьсем тăнлаççĕ.

Кунĕ, ак, вĕçленет,
уйăхĕ çĕкленет.
Атьсем юрлаççĕ.
Хĕрсем юрлаççĕ.

Ак уйăх та анчĕ.
Тĕнче шăпланчĕ.
Хĕрсем шавламаççĕ.
Атьсем шавламаççĕ.
Ырнă. Çывраççĕ...

*1964*

## ВĂРĂМТУНАСЕМ

Мĕскер эс раствор çĕклени...
Çыртмари-ха вăрăмтуни?
Мĕскер шалкăм çумăр, çилсем,
ним те хăруш мар-ха вĕсем.

Кунта хăрушран хăрушши —
виссем. Пĕлме çук мĕн йышши:
пӳ́пе — лашаран та иртейĕ,
çыртсан — крокодил çыртрĕ тейĕн.

*1964*

## СТРОЙКА ПОЭМИ

«Стройка поэми çыратпăр», —
терĕ филолог пит паттăр,
виç кунтан хăй çухалчĕ,
каялла сăтăрттарчĕ.

«Стройка поэми çыратпăр», —
терĕ философ çунатлăн,
виç кунтан мар, тăваттăран
тарчĕ — пуш параппан.

«Стройка поэми çыратпăр», —
терĕç физикпа лирик хăватлăн,
кăнтăрла та çитменччĕ,
ывăнчĕç, чух çӳреççĕ.

Стройкăра чунĕпе пурнакан
усăсăр калаçмасть нихăçан —
мухтанмарĕ ытти, чĕнмерĕ,
чăн поэма çĕклерĕ.

Поэми ун сăмахсăр, —
ритмсăр, рифмăсăр, харсăр.
Ĕçлĕн, пĕлсе тăрăшать.
Кăмăлĕ çапла хушать.

Хăй хыçĕнчен пур студент
ырă ят юлтăр тет.

*1964*

## ВĂРĂМТУНАПА КАШКĂР

Кашкăр шухăшлать кашкăрла,
вăрăмтуна — вăрăмтуналла.
Леш те, ку та ĕçет юна,
юншăн çеç ялан хыпса çунать.
Уйрăмлăх: кашкăр çурать
шăлĕпе,
вăрăмтуна сăхать
сăннипе...

*1964*

## ТРАДИЦИ

Пур кунта тахçанхи пĕр традици.
Вăл — пĕлни çынран çын именме.
Студента пĕрре мар-ха вăл хистĕ
çичĕ тар кăларса ĕçлеме.

Пытармастăп, укçа питĕ кирлĕ.
Çиччĕн эпĕр аннен шăп кăна.
Шапашра çӳресессĕн, пит вирлĕ
ӳкермешкĕн пулать-тĕр ăна.

Ӳкермешкĕн пулмасăр — тарсассăн,
пăрăнсассăн вĕлт! çеç туссенчен.
Мĕнлерех курнăн эс таврăнсассăн?
Мĕнлерех пăхăн-ши куçсенчен?

Тахçанхи çавă ырă традици —
çын мĕн калĕ тени — ĕмĕрне
студента малашне те шав хистĕ
тӳр чунтан тăрăшса ĕçлеме.

*1964*

## ЮРЛАТПĂР...

Гимнсăр отряд ăçта хускалтăр?
Çук пуль унсăр нимĕнле бригада?
Ирхине юрлатпăр, каçхине, пĕрмай.
Çĕн çĕрсем капла иккен, ай-вай!

Тĕлĕкре киле аса илетпĕр.
Ир енне хăнкăлана тĕплетпĕр.
Тăм йăтатпăр кăнтăрла чылай.
Çĕн çĕрсем капла иккен, ай-вай!

Çунтарать хĕвел, тăкать сив çумăр.
Тытăнки пĕтет хăш чух яш чунăн.
Пурпĕрех юрлатпăр вĕт! Алай!
Çĕн çĕрсем капла иккен, ай-вай!

Килтĕмĕр кунта туйран саланнăн,
пуçпала сула-сула саламлăн.
Хирĕсем вĕç-хĕрри çук нумай.
Çĕн çĕрсем капла иккен, ай-вай!

*1964*

## СТУДЕНТ ФОЛЬКЛОРĔНЧЕН

Тухрĕ те анне мана
ăсатмашкăн,
тытăнчĕ мĕнпур вăйран
ăс памашкăн:
«Ах, итле-ха, ывăлăм,
пул эс чирлĕ,
мĕн тума сана вăл çав
стройка кирлĕ.
Истфакра айван-ухмах
çук-шим урăх?
Сансăрах комсомолсем
кирпĕч хурĕç.
Тĕрлĕ хуйхă-мыскара
хăшкăлтарĕ.
Хура тинĕс хĕррине
каяр мар-и?
Пиçсе выртăн хĕвелпе,
шыва кĕрĕн...»
Чăтаймарăм, аннене
ак мĕн терĕм:
«Эх, анне, кашни сан пек
шутласассăн,
выртĕччĕ хальччен çерем
уçăлмасăр».

*1964*

## КВАРТИРЬЕРСЕМ

Флибустьер-и эпĕр?
Квартирьер-иç.
Пурпĕрех, илтетри,
флибустьер теç.

Ахаль мар-тăр — ятлă.
Хапăллатăр:
эпĕр кăпкалатнă,
эсĕр, ав, акатăр.

Пуçлăхсен пĕверĕ
çирĕп питĕ —
«килĕшрĕр» темерĕ
халиччен пĕри те.

Хаклашма пĕлсессĕн
квартирьерĕ,
пулатех боецăн
ăнăçу-карьера.

Пирĕнсĕр шăваймĕ
бригантина шуххăн,
ĕçĕрсем тухаймĕ
туххăм...

*1964*

## ШЕФСЕМ

Эпĕр клуб тăвакан çеç-и?
Лекци те вулатпăр.
Тепĕр чух концерт лартма та
питĕ пултартпăр.
Çыннине кура килет-тĕр
тăрăшас та тăрăшас.
Уйрăмах ансамбль пирĕн чапа тухрĕ —
«Çӳçсĕр джаз».

Эпĕр шкул тăвакан çеç-и?
Эпĕр — воспитатель.
Пионер та октябренок
пĕр çĕре пĕрлешрĕ таччăн.
Парнелерĕмĕр килсессĕн
виçĕ пин çĕн кĕнеке.
Физ-хим-биокабинечĕ
шкулĕнче çукрах иккен.

Меллештертĕмĕр. Спортзал та
майĕпен майлашрĕ.
Çăлтăр шутлама вĕренчĕç,
гипнозпа айкашрĕç.
Пирĕнтен пĕрне ытла та
килĕштерчĕç те, юлташ:
«Вĕсемпе юлатăп, — терĕ, —
туссенчен ма ютшăнас».

Командир пуçне шăтарчĕç —
лекнĕ-мĕн граната.

Анчăк хӳрине татмарĕç —
шутсăр савăнатпăр.
Пурпĕрех, апла пулин те,
атьсемпе кăна аван.
Вĕсемпе кăна супатпăр
вăхăт пур чухне ялан.

Эпĕр медпункт çеç тумастпăр,
сиплеме те хатĕр.
Операци тăвакан та
наччасах тупатпăр.
Отрядри Мария тухтăр
çураттарчĕ халь анчах
пĕр дояркăна ик ывăл —
сывă йĕкĕреш ача.

Хаçатсем те кăларатпăр.
Ухă пек çӳретпĕр.
Репортаж та, фельетон та
çапăнать черетлĕн.
Совхозри кашни хыпаршăн,
ĕç ан пултăр кăлăха,
сăвă шăратса сатуррăн
тав тăватпăр халăха.

*1964*

## МĔН ХИТРЕ?

Хупрăм та куçа — урам çухалчĕ,
уçрăм та: каллех — куç умĕнче.
Мĕн хитре çак уйăх çутинче?
Çырмара кăвакалсем юхаççĕ.
Сарă хĕр юрлать çыран çинче.
Тухăçра хĕвел ури куратăп —
халь ярса пусасшăн пек тăрать.
Çут тĕнче кулать тăнăçлăхра.
Эп тĕнче ытамĕнче кулатăп,
калăн, çут тĕнче — ытамăмра.

*1964*

## КОРОЛЕВА

Тăмçăравçă-хĕр
машшин патшийĕ,
шутласассăн, — патшаран патша:
унсăрăн,
хуть вăкăр тытса çийĕр,
ӳсмĕ стенара шур кирпĕч сийĕ —
унсăрăн, атьсем, —
саççим нуша...

*1964*

## КИРПĔЧПЕ ТĂМ

Кирпĕч илсе килчĕç, тăм кӳмеççĕ,
харкашса та пĕтĕпĕр темеççĕ.
Тăм тесе пăхса тăмастпăр эпĕр,
тăмшăнах çавтер хивре хиретпĕр.
Пулинех Хайям каланă: «Тăм пулатпăр».
Эпĕр халь ăна çăрмашкăн кăмăллатпăр,
урăхла курмастпăр çав тăма.
Шутласан, çак шухăш çăмăл мар...

Акă çитрĕ çĕн машина: тăм! Пĕлетĕп.
Хам вара çаплах хампа пуплетĕп.

*1964*

## ПОВАР

Пирĕн — коммуна, поварĕ — хамăрăн.
Эсĕ каçар, замполит, пуç ан ус,
тăрăшса ĕçлесси, ир-ирех ма пăхмарăн,
хырăмпа çыхăннă, савнă тус.
Вак сăмах. Çтан итлен тараватлăн.
Мĕн тăвас-ха, юлташ, вак сăмах пултăрах.
Повартан ытларах çĕрулми кам шуратнă?
Поварне кам юратнă манран ытларах?

*1964*

## СОНЯ ТАНТӐШ

Пĕтрĕ те парса экзамен,
тухрӑмӑр çула васкавлӑн,
кайрӑмӑр эпир хастар
тар тӑкмашкӑн, канма мар.

Сар хĕвел, чечек эс, акӑш,
пирĕн хаклӑ Соня тантӑш.
Курӑнайрĕ аякран
пурнӑç шкулĕ — Казахстан.

Кунĕсем кунта пит йывӑр.
Каçĕсем çап-çут. Ан çывӑр.
Шуçӑмччен юрла-юрла,
астусам, ир тӑмалла.

Çул-йĕрсем халь — пирĕн тивĕç.
Сумлӑ çын пулма та тивĕ.
Пултараймӑпӑр манма
эп сана та эс мана.

*1964*

## ТАРАНТУЛПА СКОРПИОН

Тарантул-скорпион[4] камышитра[5],
йӗпеннинче, ҫӗр шапи пек йӳтерӗ.
Хӗрсем, астӑвӑр, пӑрӑнӑр часрах,
анчах хӗрсем: «Ҫакскерсенчен-и?» — терӗҫ.

Пӗррехинче ҫав камышитпалах
шӑши темле майпа килсе ҫакланчӗ.
Хӗрсем, ӑҫта эсир? Ан шырӑр кӑлӑхах —
курсассӑнах таҫта тарса ҫухалчӗҫ...

*1964*

---

[4] Сӑхсан вӗлерет.
[5] Хӑмӑш.

## ÇЕÇЕНХИРТЕ

Ав кӳлĕ те вăрман
Мĕн çук-ши вĕсенче!
Çеçенхире тухсан,
куçа çиет чечек.

Йăм-хĕрлĕ те кăвак...
Мĕнле кăна тĕс çук!
Эй, хирĕм, хир, тавах,
епле кунта çап-çут!

Кăшт тунсăх кăмăлра
янрать пĕчченнипе.
Эп çакă «тăманра»
пыратăп çĕтнĕ пек.

Ирĕклĕхре çӳреп,
хире парса чуна.
Эп çук пекех иртеп,
инçетлĕхе чăмап...

*1964*

## ЯЛАВ

Куç пирĕн алла
эс, хĕрлĕ ялав...

Шăпах çитмĕл кун
тăкăнчĕ тар,
шăпах çитмĕл кун,
аллă мар, утмăл мар.
Шăп çитмĕл хуран
яшки, пăтти,
компочĕ пĕтрĕ,
тата ытти.

Йăм-хĕрлĕ ялав
пирте халь ялан.

*1964*

## КĔРЕШЎРЕ...

Эпир минутсерен кĕрешўре.
Кану та, ĕç те — йăлт вăл кĕрешў.
Ытла та намăс пулĕччĕ пире
канлĕхпеле тумашкăн килĕшў.

Яш ĕмĕрĕм, илемлĕн йăлкăшса,
иртсе ан кайтăр пилсĕр пике пек.
Чăна кĕреççĕ, хытă тăрăшсан,
çерем çĕрсем те, БАМ та — пĕтĕмпех.

Ахальтен мар кашни минутшăнах
пурнăçпала халь вилĕм тытăçать.
Пĕлетпĕр кам вăл ĕмĕр хапсăнать —
татаймĕ пурпĕр ирĕк пурнăça!

*1964*

## ПĔР ЙĔКĔТЕ

Ытла вĕри эс ан пулсам, —
начар, хăвах куран.
Тарăхса мар, хавасланса
ĕçленĕ чух аван.

Кирлех пуль тăрăшулăх та,
ĕçе пĕлни текех.
Юхса çеç пытăр ĕç тесен,
хăюлăх та кирлех.

Çапла ытла вĕри пулма
пулмасть ĕмĕрĕпе.
Вилсе ан вырт, çул иртнĕ май,
чĕре çурăлнипе!

*1964*

## ХАМĂР ИРĔКПЕ

Пире эсир вăтам ăру тесеттĕр.
Çулта эпир те хамăр ирĕкпе.
Малтанхисем те мар, юлашкисем те.
Ĕçре пыратпăр чаплă йĕрĕрпе.

Çерем çĕртен ыр çын тăрса юлман-тăр.
Унта ялан сăваплăх йăлтăрать.
Кĕрешӳре эпир ята ямастпăр,
таса упратпăр чыслă ятăра.

Çак сирĕн йĕрĕре эпир сунатпăр
килес кунри маттур ăрусене.
Малтанхи мар вĕсем, малтанхи мар та,
хăй ирĕклĕ хăватлă яшсемех!

*1964*

## ПИРĔН ĂНĂÇУ

«Нумая вăл пымасть Çĕн Çĕр», — терĕçĕ, —
кам ухмахĕ каять ĕненсе».
Пурпĕрех вакунсен çут сӳнмерĕ-çке,
кĕр-кĕрлерĕç çĕрле тракторсем.

Çеçенхир варринчех пӳрт-çурт çавăрчĕç.
Гектар хыççăн гектар парăнать.
Пирĕн кăлтăк çичютшăн вăл савăнăç,
ăнăçу — пысăк хурлăх ăна.

*1964*

## ÇĂKĂР

Пурте иртет, иккĕленме пулаймĕ,
иртет йăлтах, паян иртмин, ыран.
Иртмест-çке çăкăр! Ирт тесе калаймăн.
Вăл чи асли. Пурте килет унран.

Çук çăкăрсăр савма, юн унсăр сивĕ,
ăс-кăмăл типĕ, куç сапмасть кăвар.
Çук ĕлĕкхи, хальхи, çук килесси те.
Тĕнче те пăчă-тĕттĕм, çутă мар.

Çук çăкăр — эпĕр çук, пулас пулсан та
ху ирĕклĕ тесе эс ан шутла.
Саманисем вăл халь те пит усал-тăр,
çăтма пăхаççĕ халь те кашкăрла.

Ырлар-ха çăкăра ырма пĕлмесĕр,
хăвачĕ тан тĕнче хăвачĕпе.
Тăван çĕршывăм! Çăкăрлă пул эсĕ.
Яту сан чаплă çăкăр ячĕпе!

*1964*

## «ÇЕРЕМ ÇĔР» ПЛАНЕТА

Пĕçертет хĕвел, лӳшкет сив çăмăр,
пысăк уйăх çĕкленет вара,
шăкăрах тухса тулать çут çăлтăр
«Çерем çĕр» текен планетăра.

Каç — çерçи сăмси, кунсем — тем тăршшĕ.
Хăш чухне ыратăн вилес пек.
Çĕн çуртсем ик енĕпе çул тăрăх
кармашса ӳсеççĕ йĕркипе.

Пăрăнса юлма, паллах, пулать-тĕр:
«Чир ямасть, эсрел», — текелесе.
Анăçа пăхса улать, ав, йытă, —
ырра мар ку, инкеке сиссе.

Тăвăл-и, пăр çапĕ-и-ха кĕçĕр.
Лăп çыврасчĕ, анчăк, ан çĕклен.
Пурпĕрех капла та кам ӳпкелĕ,
кам сана юратмĕ, çакă ен?

Пĕçертет хĕвел, тăкать сив çăмăр,
парăнмасть планета, пурăнать.
«Çерем çĕр» — çын çутнă çутă çăлтăр.
Пĕтĕм тĕнчене вăл курăнать.

*1964*

## АНЧĂК ЮРРИ

Кашкăр мар, тилĕ мар, эпĕ — анчăк.
Çапкаланчăкчĕ çав, мĕн тăван.
Мĕн чул тӳсрĕм — тапатчĕç, çапатчĕç.
Халь никам тек килсе ан çыхлан.

Килĕм пур, ĕçĕм пур. Савăнатăп.
Килчĕç тин пурăнăç майĕсем.
Студентсен кил-çуртне эп сыхлатăп.
Тырă склачĕ тăваççĕ вĕсем.

Атьсемпе эп каясшăнччĕ питĕ.
Аслă кӳлĕллĕ хир — çавă ен.
Хăш чухне ашкăнаççĕ пулин те,
вĕсенчен нихăш те тир сӳмен.

Сăмсаран шаклатса пачĕç аш та,
çăкăр та, сахăр та, — çи, сăйлан.
Унчченхи ман хуçа, йыт туртасшĕ,
сив шывне те шеллетчĕ, шуйттан.

Çитереççĕ. Анчах уншăн çеç-и
хисеплеп? Тĕрĕс халăх. Йăваш.
Куçĕсем ăшшăн, çуттăн çиçеççĕ.
Пур тутар çав йышра, пур чăваш.

Чăвашши кăшт кăна сăвăлать-мĕн.
Эп ăна саламлап хӳрепе.
Сăввипе мĕскере хапăллать вăл?
Этемсен туслăхне пулĕ теп.

*1964*

## МУНЧА ТĂВАКАНСЕН ЮРРИ

Мунчара ĕçлетпĕр. Аванланчĕ.
Кив мунчи ишĕлес пек ларатчĕ.
Вĕр-çĕнни ӳссе çĕкленчĕ халь.
Бригадир — мухтавлă Амирхан.

Кунĕпех, ав, каштасем хуратпăр,
хулăм укçа мар умра куратпăр.
Кăмăлсăр ан тăр, ан пул куштан,
пĕр черкке ĕçер-и, Амирхан?

Эс те ывăннă, эпир те супнă.
Шутласассăн, пурсăмăр пĕр шутлă.
Ирĕк пар, ĕç пĕттĕр, мĕн пăхан?
«Ĕçĕр чей!» — пат татрĕ Амирхан...

*1964*

## СТРОЙОТРЯД ГИМНĔ

Кам романтик? Студент. Пытармастпăр.
Туссене пăрахмастпăр хĕнре.
Ăрăскал çук тесе макăрмастпăр.
Ăрăскал — кĕрешӳллĕ ĕçре.

Кам пире ылтăнпа кĕтсе илчĕ?
Мĕн кунта илсе килчĕ? Кала.
Çитрĕмĕр — вĕçĕ çук çеçенхирччĕ.
Халь пăхсан — ӳснĕ-ларнă хула.

Утăмсем çулсерен маттурланĕç,
çирĕп пулĕç мĕнпур вăхăтра.
Пирĕн йăх — уйрăм йăх. Кам ырламĕ
çĕр çинчи «Çерем çĕр» çăлтăра?

«Сыв пул» мар, «тепреччен» теп анчах эп.
Килес çул таврăнатпăр кунтах.
Çерем çĕр, иксĕлми ĕç вучахĕ,
эс чунра та — яланлăх вучах.

*1964*

## КОМИССАР

*Кирилл Иосифович Раевский*
*вилтăприйĕ çине*

Комиссар, комиссар, стройотряд комиссарĕ,
чăваш йĕкĕчĕ Кармаков,
çакă лăпкă урам площаде тухать мар-и?
Комиссар, эс унта комиссар курма тух.

Комиссар ячĕпе çак урам, çакă площадь.
Хăй тăрать сăртарах, бронза палăк пулса.
Чĕрĕлле алтса чикнĕ... Хăрушă... Хăрушă...
Питĕ хурлă калав, йăлт парам каласа.

Казахстан çеçенхирĕ. Пресновка. Йӳç Лини.
Шевле мар — хĕç вылять, вăрман мар —
çар шавлать.
Лбищенскри евĕрлех, казаксем çĕрĕн-пинĕн
вăрттăн кĕчĕç тыла шаларан та шала.

Чапайран кая мар паттăр, ăслă, хĕрӳллĕ.
Чапай пек — Чăвашран. Чăвашах, вырăс мар,
çырă йĕкĕт Раевский — кĕрнек, йăрăс пӳллĕ.
Вăрçăччен вăл — учитель, ак халь — комиссар.

Вĕлерме çын та ячĕç, йышпа та йĕрлерĕç.
Купăсне — пуля тиврĕ, хуçи — сып-сывах.
Учĕ хăшкăлчĕ ун, лӳчĕркенчĕ йĕнерĕ.
Ялав пек, юрă пек комиссар çав-çавах.

Полкăн чысĕ, мухтавĕ, илемĕ, хăвачĕ,
ун мими те чĕри, хăтарасшăн полка,

командир çуккипе, КПна вăл хăпарчĕ,
юлашки патронччен хирĕç тăчĕ кал-кал.

Аманса пĕтнĕскер, ут тытса утланса вăл,
çут пакунлă полковник çулне вăшт! пӳлсе,
ун çине пур вăйран хĕçĕпе сулăнсассăн,
тепĕр хут сулнаймарĕ... ӳкерчĕç персе.

Çĕр çине ӳкнĕскер, чĕлпĕрне вăл ямарĕ.
Кайрĕ ут сĕтĕрсе — хăтăлма инçе мар.
«Комиссар ку вĕсен! — сĕмлĕхре янăрарĕ. —
Вĕçернет, вĕçернет комиссар!»

Юлашки пулине хăй валли упрамарĕ.
Сăхрĕ пуля-сăпса шур казак чĕрине.
Хăпарсан ялкăшса шурăмпуç вут-кăварĕ,
чĕрĕллех лекрĕ çын тăшмансен аллине.

Тăна кĕтĕр тесе сив шывпа чашлаттарчĕç,
илсе тухрĕç вара площаде сĕтĕрсе.
Шăтăк чавтăр тесе кĕреçе те тыттарчĕç.
Хурала пуçран çапрĕ çап-çут кĕреçе.

Тытăçу. Ĕрлешӳ. Пăшалсем — шăтăр-шатăр!
Юлашки чĕмĕпе тапрĕ аслă чĕре.
Çут пакунлă полковник обойма пушатрĕ.
Комиссар амăшне ыталарĕ — çĕре.

Тăпрапа пĕрлешсе пулчĕ çĕр. Çухалмарĕ.
Бронза палăк пулса халь тăрать — курма тух,
комиссар, комиссар, стройотряд комиссарĕ,
чăваш йĕкĕчĕ Кармаков.

Бронза палăк тавра чечексем ешереççĕ.
Мĕншĕн, мĕншĕн вĕсем кĕренрен те кĕрен?
Комиссар, комиссар, эс ун чух миçереччĕ?
Кармаков, Кармаков, эсĕ халь миçере?

Санăн та, Кармаков, тăнлаву шап-шурах-çке.
Санăн та, савнă тус, ĕмĕтӳ çăмăл мар...
Тӳпере пĕлĕтсем шăппăн-шăппăн шăваççĕ.
Тутине тăп тытса хаш! сывлать комиссар.

*1964*

# ÇЕРЕМ ÇĔРСЕН ÇУТИ

*Хир çăлтăрĕ çунать пĕр чарăнмасăр*
Николай Рубцов

Çĕн çĕр çути çунать пĕр чарăнмасăр.
Вăл сӳнмĕ нихăçан чун сӳнменле.
Пĕрре çеç мар, паттăрсене ытараймасăр,
пире те ытараймĕç, кам пĕлет.
Кун-çулăм ăнчĕ, ĕмĕтĕм мăнаçлă, —
хăватлă вăй хăватлатать пуль çав.
Çерем çĕрсен çути чуна вырнаçрĕ,
ĕмĕрлĕхе çутатрĕ пурнăçа.

*1964*

## СĂВĂ ТАВРĂННИ

Çуралнă хушшăрта шăв-шав,
пĕрне-пĕри кӳрентерӳ,
илемсĕр те хĕлхемсĕр кулă.
Тăватăр тӳнн! тăватăр шанн!
шакканăн çĕтĕк параппан.
Ман пурччĕ сăвă.
Тухса вăл тарчĕ.
Ăçта-ши халь?
Сывах-ши? Сывă.

Çитрĕм çырма хĕррине.
Пытăм вăрман ĕшнине.
Тухрăм çаран-хирсене —
тупмарăм, тупмарăм.
Пуçра çаплах шăв-шав, шăв-шав.
Тăватăр тӳнн! тăватăр шанн!
Эй... Чимĕр... Шăпăрт... Кĕвĕленĕр.
Ав палăрчĕ — пырать утса —
пĕр çын! Мана курсан хĕвеллĕн
çуталчĕ! Ыткăнчĕ çунса!

Поэзи килчĕ çаврăнса...

*1964*

## ÇЕÇЕНХИР ВАРРИНЧЕ

Çеçенхир варринче çавра кӳлĕ.
Çавра кӳлĕ тавра çӳллĕ хăмăш.
Хăмăшĕсем тӳрĕ, шывĕ тăрă.
Ик куç тулли сăнăн — тулĕ кăмăл.
Кăмăлах та тулĕ, лăштах пулĕ
усал сăмах тивнĕ чун-чĕре.

Эп кӳл хĕррине тухса таратăп —
асам çĕрри тупнăн тăратăп:
пĕрре шăхăрсассăн çĕрĕ витĕр,
çĕтет манăн пĕтĕм кӳренӳ,
çĕрĕ витĕр тепре шăхăрсассăн,
йĕрĕ те çук чунри ӳркенӳн.

Çуй тăваççĕ чăпар чарлансем.
Мĕскер уйăратăр тертленсе?
Чарăнсамăр, çитет харкашма.
Чарлана чарлан-и ют, тăшман?
Тухмалла кӳл çине леш вĕçрен,
каç пулсан, уйăх — парăслă кимĕ.
Çав-çавах шавласан, тăвăл килĕ,
кулса пĕтĕ килес кимĕçрен.

Маншăн тек ун чухне савнăç пулмĕ
çеçенхир варринчи çавра кӳлĕ.

*1964*

## ÇУЛСЕМ

Çеçенхирти çулсем, выртатăр
ăçтан ăçта çити? Апап!
Эп — кузовра сиксе ташлатăп,
çул хĕрринче ташлать — юпа.

Сиктернипе чутах ӳкмесĕр,
кабинăна ыталаса,
ташлатăп эп. Çула виçесĕр
вăрçса пыратăп, ылханса:

«Епле асаплă йăлăхтармăш,
хăпма пĕлмен палкавçă пек...»
Шофер, машина, эп пĕр ташă
ташлатпăр, — пĕтĕм машшинпех.

Пăхма хăрушă сăнлă «шуххăр»
вĕçет ним çулсăр-мĕнсĕрех.
Пĕрре ăна çиет ман шухăш,
тепре — çул юсакансене.

Çапах та тарăху иртет-мĕн.
Эп çитрĕм, ман анас пулать.
Водитель, тек сăмах илтеймĕн,
сан малалла ташлас пулать.

Ташлас пулать сан хир-хир урлă,
çатăрласа тытса рульне,
сӳтес пулать сан пултаруллăн
хирти çулсен çăмхисене.

Тата мĕн чухлĕ çĕн çул хывĕç,
юлташăм, сан пек маттурсем.
Сире хăш чух чăтма çук йывăр.
Мĕн тăвăн, кирлĕ — çул-йĕрсем...

*1964*

## ПĔЛМЕÇÇĔ

Эпĕ камне, эп мĕнлине
пĕлме пулмарĕ туссене.
ăна пĕлмеççĕ тăшмансем,
пĕлмеççĕ пĕлĕш-тĕлĕшсем,
хурăнташсем те тăвансем.
Пĕлмест атте, пĕлмест çич шăллăм,
ик çамрăк йăмăк, ват анне
эп мĕнлине, эпĕ камне.
Пĕлместĕп... хам та эп темме.

*1964*

## ХĔВЕЛ АННĂ ВĂХĂТ

Каллех,
миçемĕш хут-ши,
хĕвел анать
юнпала пĕветсе пĕлĕте.
Кун пĕтет — çĕнĕрен пулать,
ман ĕмĕр — яланлăха пĕтет.

Вăл каять манран усаллăн, сĕмсĕррĕн,
ним парсан та чарăнмасть.
Вăл каять, шăвать вăл кунĕн-çĕрĕн,
çур минут, çеккунт та тăхтамасть.

Эй, ĕмĕр... Пĕлĕт мар-мĕн, чун юнпа пĕвеннĕ.
Тăн арпашнă. Çитнĕ эп вĕçне.
Ăссăр! Мĕн павранă эп, мĕн ĕмĕтленнĕ,
мĕн хапсăннă, ма кĕвĕçнĕ?!

Çăмăлттай! — малашсем тĕлленетĕп,
халлĕхре те пулин çук та çук.
Çуралаймасăрах эп сӳслентĕм.
Вилтĕм эп... Кĕр, аннем, çурта çут.

*1964*

## ÇУРТА

А...а...а...а!
Чун ыратать...
Шăп...
Пăчă-тĕттĕм...
Вилĕ...
Пурпĕрех чун ыратать,
ыратать... ратать... тать...
Ĕсĕклетĕп...
Нĕшкетĕп...
Шеллеччĕр-ха тетĕп...
Çут тĕнчере эп пĕр-пĕччен...
Ах, тĕнчеçĕм...

А-а-а-а!
Чун хуйханать...
Çурăлса тухать...
Пĕтет...
Чим...
Кĕтесре... тĕттĕмре... сĕмре...
Мĕн?
Кам?
Çурта...
Çурта умĕнче — анне...
Çурта мĕл-мĕл! тăвать...
Çунать халь-халь сӳнессĕн...
Аннеçĕм,
шап-шурă çӳçлĕскер,
хутланса кĕнĕ...
Кукленнĕ...

Пăшăлтататать...
Тур Амăшне йăлăнать...
Чуна лăпланăç ыйтать...
Çăлăнăç тархаслать...
Хĕрӳ кĕлле Тур Амăшĕ тăнлать...
Ăнлать...
Ăнланать...
Йышăнать...
Çапла шутлать анне...
Ах, мăнтарăн...

А...а...а...а!
Чун... çун... ырат... çурăлса тух...
Пĕт...
Эпĕ — сӳннĕ...
Çурта сӳнмен,
çунать...

*1964*

## АКРОСТИХ

Лăпланăç çук, пулман, пулмасть те.
Юрамасан та юрататăп эп сана.
Сана хальччен, хальччен эп манаймастăп.
Ялан умра куратăп куллуна.

Сая кайса пурнатăп, савнă çыннăм.
Аванччĕ санпалах, маттур юлташ.
Лекме сан тыткăннах ĕмĕрлĕхе тур çырнă.
Ан сивлесем, каçар, пике-янташ,
мансам чăрсăрланма, пулсам ачаш.

*1964*

## АЧАЛĂХĂМ, АЧАЛĂХ

Эй, ачалăхăм, ачалăх, ылтăнăм,
эс иртнишĕн кам йĕрет манран ытла:
тӳ́р килет те тытăçма йĕксĕксемпе —
йĕксĕк тĕрлĕрен, чее, хăш чух
вăлах хамах ятлать.
Çакă мăшкăла эп чăтнă-и ачалăхра?
Чăтнă, кĕт... пĕррех параттăм янахран!

*1964*

## ПĔЛĔШ

Сăмах кивçен илсе калаçакан
нумай вĕреннĕ пĕлĕш этемпе
унта-кунта пĕр тăххăр иртрĕм Атăл хĕррипе.
Сăмах кивçен илсе калаçакан
çав хушăра хушмарĕ çич сăмах.
Апла та пĕлтĕм: пĕлĕш — тăр ухмах.

*1964*

## САВРĂШПУÇ

Куçне чарса пăхать çут уйăх ял çине.
Çурт мĕлкисем итлеççĕ шăплăха.
Урам пушаннă. Вăйă сассисем
янрамаççĕ.

Сĕм ращара шăпчăк юрлать,
çĕр çывратмасть çап-çамрăк ачана.

Уйăх каçсерен — курса тăранайми.
Пӳрт тăррисем — сип-сивĕ кĕленче.
Ăçта каяс? Манса çут тĕнчене
ял çывăрать.

Сĕм ращара шăпчăк юрлать,
канăç памасть çап-çамрăк ачана.

Урам кĕтессинчи виç сӳннĕ чӳрече
вăраххăн тĕлĕрет умра.
Эпĕ мар кăна, гитара калаçать.
Гитара...

Сĕм ращара шăпчăк юрлать...

*1964*

* * *

Урамсенче — çурхи хавас шывсем,
хĕвел те çил, силленчĕк йывăçсем.
Епле майпа, хăçантанпа куç умĕнче
пăхса ытарайми чечек?

Ăна куратăп аякран:
пĕр ялтăрать вăл уççăн, пĕр çиçет.
Çут çулăмран, чат-шурă кăпăкран
çуралчĕ пуль чечек!

Чечек, чечек, ăçта эс таврăнан?
Чечек, чечек, чуна эс çунтаран.
Васкатăн эс, вĕçен те ярăнан,
инçетелле кайса пыран.

Çухалатăн шкул тĕлне çитсен...
Урамра каллех хĕвел, шывсем.
Чунăм кулянать, чунăм сисет:
эсĕ — çамрăк ĕмĕр, шур чечек.

*1964*

* * *

Тухрăм эпĕ урама
çурхи каçсенче,
çутă уйăх çутинче
тăсрăм юррăма.

Юррăм манăн янăрарĕ,
вĕçрĕ инçене,
анчах темшĕн вăратмарĕ
санăн чĕрӳне.

Çӳллĕ çыранта çӳрерĕм
санпа мар, пĕччен,
сăвăларăм-кĕвĕлерĕм
уйăх аниччен.

Уйăх пур чухне шыв урлă
кĕмĕл çул выртать.
Пĕр сана кăна эп вутлăн
ĕмĕр юратап.

*1964*

* * *

Ӗненмелле илемлӗ суйрăмăр
кăшт та савмасăр пӗр-пӗрне:
телейсӗр, имӗш, эпӗр уйрăммăн,
телейлӗ-мӗн пулсан пӗрле.

Туйăмсене пытарнă тарăн,
шалт! питӗрнӗ эпир чуна.
Эс чӗрӳнтен самант ямарăн
нихçан та курас çук çынна.

Чуптурăн та — сăнран ӳкмерӗм.
Пăр пек сан сивӗччӗ туту.
Виç çул кайра таçта хӳхлерӗ
телей — арканнă юрату.

*1964*

## ХАВАСЛĂ ХĔРАЧА

Эс хаваслă, эс хаваслă,
эс хаваслă хĕрача.
Эс, хаваслă хĕрача,
килнĕ «каччă шыраса».

Çавă сăмаха кăларнă —
эс тиркенĕ яш этем.
Çунтарать куçне кăваррăн...
Эс çаплах хавас çӳрен.

Ним туймастăн эс. Туймастăн
атьсем сиввĕн пăхнине,
хăвăнпа сăмахламасăр
айккине пăраннине.

Эс çӳретĕн, эс итлетĕн
манăн купăс кĕввине.
Те илтетĕн, те илтместĕн
вăл сана мĕн тенине.

*1964*

## ЭС КИЛМЕСЕССĔН ТЕ КИЛЕН

Тăтăшланса хĕвел çути
çăвать юр тинĕсне.
Юр тинĕсĕн кĕмĕл тĕтри
шуратрĕ ун тĕсне.

Вăл тĕтĕм евĕр çăра мар,
ман ĕмĕт пек çап-çут.
Эс тухмалла çак айлăма,
анчах та темшĕн çук.

Сăртран кунта эс анмалла,
хĕвеллĕ тĕтререн.
Пĕр пит сан уйăх пулмалла,
тепри вара — хĕвел.

Ытарайми кăвак чечек —
ик çырă çивĕтре.
Пӳ-сийĕ пиçĕ те чечен,
авăнкалать хитре.

Эп пĕлейместĕп-ха ятна:
те япăх, те паха...
Сан шухăшна, сан кăмăлна
эп пĕлейместĕп-ха.

Анчах пĕлетĕп: эс килен
хавассăн ярăнса.
Эс килмесессĕн те... килен
телейĕн курăнса.

*1964*

## САВНИН САВНИЙĔ

Тамаша! Савнийĕн савнине
тĕл пулни те маншăн халь — уяв.
Савнипе юмахласа çӳренĕнех
туяп.

Сăмахпа уçса пама хал çук
хаваслăх-хĕпĕртӳ хуплать вара.
Вăрçмашкăн, тыттармашкăн хăлхаран
манап ун чух.

Савнин савнийĕ... Ман пекех этем:
сăмси — хăяр, хăй — лутака, чапрас.
Эп тĕлĕнеп: пике иксĕмĕртен
мĕн-ма ăна савать, мана савмасть?

*1964*

## ÇУМĂРЛĂ КАÇ

1. Нӳрĕ çил вĕрет. Çанталăк тĕттĕмленнĕ.
Çумăр шăршипе пĕрле килет тивлечĕ.
Кăмăл çĕкленет. Эп шухăшлăн тĕреннĕ.
Ăшă çумăр пĕрчисем пите тивеççĕ.
Çумăр — чалăш карăнтарнă хĕлĕх,
фара çутисем перĕннипе вăраххăн
чанклатса янăракан пин хĕлĕх,
çутçанталăк кĕвĕленĕ арфа.

2. Пианиссимо... йăваш, лăпкă.
Кăштах улшăнатăп —
пиано... çаплах-ха тӳлек.
Шухăшсăр шухăшлать,
калаçать, савăнать, йăпанать
пианино.
Ĕнтĕ ак шăплăха,
каçхи çак шăплăха темĕн килчĕ,
туйăмсен ыйхине темĕн сирчĕ.
Хура-шурă музыка,
хура-шурă.
Çутă юхăмсенче —
тĕттĕм хăрăм.
Темĕнрен йăлăхса,
инçете темĕскер пăрахса хăваратăп,
хăратăп.
Тĕксĕм-тĕксĕм сассем,
тĕксĕм-тĕксĕм.
Алăсем-акăшсем —
шурă, шурă.

Чӳхенеç-чухенеç те чăмаççĕ,
кăйкăр пек ярăнаççĕ,
пăлан пек ыткăнаççĕ,
çĕкленсе çапăнаççĕ.
Тар! Эй, тарăр!
Тăвăл! Пăр çапрĕ!
Аслати кĕмсĕртетрĕ! —
фортиссимо...

3. Крещендо... Сĕрме купăс...
Ун пек йĕме, ĕсĕклеме пĕлесчĕ,
çын чунĕн чăн тĕпне
çитсе килесчĕ.
Кайса килсен,
пин çул кĕрлинччĕ «кайса килнĕ»,
«поэзире вăл — вутăш,
Паганини».

4. Шăхлич. Ăна кĕтӳç шухăшласа кăларнă,
ыр кăмăл, ăшă кулă ун çуралнă,
вăл ир-ирех, шурăмпуçпех çĕкленнĕ,
шывсем шăпăлтатса тĕлĕрнине итленĕ.
Пăртак тăрсассăн уçă çил вăраннă,
яштак, çӳл хăмăшсем пăшăлтатма пуçланă,
кĕтӳçĕн чунĕ музыкăпа тулнă,
ача хăмăш касса шăхличĕ тунă...
Ах, кам вĕри тути çумне çапла вăл сĕртĕнет —
флейта,
такам хăйне чун пек итленине
пĕлет-тĕр.
Тен, тĕттĕмре татах ăна кĕтеççĕ,
шыв çийĕн хăмăшсем савса итлеççĕ?

5. Виолончель юрлать,
тăвата хĕлĕхлĕ виолончель.
Тăвата çил унта пырса пытаннă,
тăвата çил.
Кĕçĕн çилĕ мĕскĕн,
виççĕш вăйлă.
Мĕскĕне питĕ шел:
У, у, у-ы, уууу...

6. Хура вăйсем мĕнпур енчен хупланă,
йăлт шанчăк пĕтнĕ. Йывăр, йывăр.
ниçта кайса кĕме пĕлмеççĕ сасăсем,
ниçта кайса кĕме пĕлмеççĕ.
Эс чи тĕпре ялан,
мăн сасăллă титан, пыратăн,
о, контрабас...

Ах, ан пĕтсемччĕ, ăсра сăнарланса куçа яруççăн курăннă, хăлхара хăватлăн янăранă тĕлĕнмелле концерт. Çук çав, пĕтрĕ, сасартăках таçта кайса кĕчĕ. Манран инçех те мар, тĕттĕмре, грузовик мĕкĕрет. Вăл чи пылчăклă çĕре, тăкăрлăк хĕррине путса ларнă. Машин хуçисем хăватлăн ятлаçаççĕ. Çумăр чарăнман, çил çеç лăпланнă.

*1964*

# ИНҪЕ ҪУЛСЕМ

*Поэма*

*...Несбывшееся зовет нас.*
А.С. Грин

## ГЕЛЬ-ГЬЮ АСАМӐҪӖ

Пусрӑнтӑм — ҫитменччӗ ҫирӗме те.
Ӗмӗт типрӗ — акнӑ пӗрчӗсем.
Тӗлӗнтӗм. Шырарӑм. Тупрӑм урӑх тӗнчесем:
чунӑм каниччен сирте ҫӳрерӗм эпӗ,
Гель-Гью асамӑҫӗн ҫут порчӗсем!

Зурбаган та Лисс... Кунта телейӗм
тӑкӑнать тулса тӳпийӗнчен,
хуйӑх-терт тавраш пулман та тейӗн,
пулнӑ савӑнӑҫ ҫеҫ ҫут тӗнчен.

Эпӗ таврӑнтӑм. Ниҫта та чӑнлӑхра
курӑнмасть, ҫукран, порт — Зурбаган.
Ҫӗнӗ ҫӗрсемпе мана кӑсӑктарса тӑрать
океан пек аслӑ Ҫӗпӗр, Казахстан.

Ӗмӗтрен малтан ҫите-ҫите ӳкетӗп.
Каяс тенӗ ҫӗр ялан чи аякри.
Телеее хальччен ӑспа пӗлетттӗм,
чӗрепе туйма вӗрентрӗ Грин.

Ҫынна ҫын ыр кӳресси
        куллен-кун хӗвеллентӗр,
чечекленччӗр шухӑш-ӗмӗт тӗнчисем.
Пусрӑнмӑп ҫитсессӗн ҫитмӗле те,
пурӑнӑҫ ман — яшлӑх порчӗсем.

## ХУРАХСЕМ

Кăнтăрта-и çакă, урăхрах çĕрте-и,
хĕрĕх пĕр хурах кĕрсессĕн кĕпĕрех,
татăлмасть пылак та хура грузи чейĕ
«Ту çăлкуçĕ» ятлă кабарен.

Çул-йĕрне епле-ши çĕрле тупĕç?
Уççăн, чаплăн илтерет квартет:
баянпа гитара тата сĕрмекупăс,
вĕсен шăллĕ — янкăс сас кларнет.

Алă çурĕ, кулчĕ те юрларĕ
çамрăк та сухаллă хĕрĕх пĕр хурах.
Пĕлнисем çук мар-и? Сăнаса юлар-и?
Ах, мĕн чухлĕ халăх! Пĕлнисем? Пурах.

Кĕтесре ларать, палларăм туменчен,
апатне, çут тĕнчине манса,
шухăшлă хурах — Мишель де Сент-Кармен, —
тем çырать. Çырать ăшталанса
«Çут поэма». Пĕлтĕм сăнĕнчен.

## ÇУТĂ ПОЭМА

*Малтанхи çаврăм*

Эй, сăввăмçăм, — сенкер-сенкер лутка —
кăмăлăма юлашки хут лăпка.
Эй, сăввăмçăм, инçе-инçе ишсем,
ĕмĕтĕме çитсе курас тесен.
Сыв пул, тăванăмçăм, сыв пул.
сыв пул та, урăх ĕнтĕ йăл ан кул.

*Иккĕмĕш çаврăм*

Уйăх, уйăх тулта.
Таврана çутă шăплăх хупларĕ.
Уйăх, уйăх! Тата —
темĕскер.
ăнланмашкăн пулмарĕ.

Тен, Çутпи, эсĕ те куç хупмастăн темччен,
сӳнтерместĕн йăваш куллуна?
Ăнланма май çукки вĕçсĕр темĕн тĕпчет,
çывратмасть пуль сана?

Аслăрах пикесем пуль каланă:
«Унпала ан туслаш», — тесе?
Кăмăл, имĕш, сивĕ пăр манăн,
пуçăмра — çăмăлкка çилсем.

*Виççĕмĕш çаврăм*

Тирнĕ пулĕ çӳçне
тĕксĕм-тĕксĕм тюльпан?
«Тĕксĕм тĕс — тунсăхлă», — тенĕ эс.
Кăмăллană ăна
хура çутă çукран.

Хура çутă çук çав, мĕн теес.
Хура çутă пулмин,
шурă лили пур-çке:
тарăн шывĕ хура, лилийĕ çутă-çке!

*Тăваттăмĕш çаврăм*

Чăнкăртатать çинçе, çинçе.
Чăнкăртатать мĕскер çути?
Çĕклентерсе, чĕнсе, çĕнсе
чăнкăртатать уйăх çути.
Унпа пĕрле юхать çинçе
питех çирĕпленсе çитмен
чĕтревлĕ, çепĕç хĕр сасси.
Ăçта шăраннă ку кĕмĕл?
Мĕн ку? Сопрано. Си бемоль.
Анчах инçе, инçе, инçе.

*Пиллĕкмĕш çаврăм*

Эй, сăввăмçăм, — сенкер-сенкер лутка —
кăмăлăма юлашки хут лăпка.
Эй, сăввăмçăм, инçе-инçе ишсем,
ĕмĕтĕме çитсе курас тесен.
Сыв пул, тăванăмçăм, сыв пул.
Сыв пул та, урăх ĕнтĕ йăл ан кул.

Çĕрле пулсассăн, тӳпере
уйăх-лутка çап-çут ишсе çӳрет.
Тăванăмçăм, эпир вĕт пĕтмелле:
тен, кайнăран çав ĕмĕт патнелле,
тен, каçхине куçа лăпка-лăпка,
путнăран çӳлте çап-çут лутка?

*Улттăмĕш çаврăм*

Кантăкра çутă тĕс — шурă, шурă.
Эп пӳртре шăппăн ларатăп.
Вăхăт шунăçем сенкер сăрă
чĕптĕм хушаççĕ.
Эп чĕнмесĕр сăнатăп.
Кăшт тата хушса кайрĕç.
Эп тăрса хăй çутатăп.
Тĕс урăхла хитреленчĕ.
Малалла та çаплах ларатăп.

Сенкере пĕр мăскал хушса кайрĕç.
Ик мăскал ярса кайрĕç.
Вырăнтан тапранмасăр ларатăп.
Виç мăскал, улт мăскал, тăххăр...
Пăртакçă, тен, лекрĕ хура та.
Пĕтĕмпех тĕс ăшне эп путатăп.
Каллех килсе ячĕç.
Тулта — пăчă-тĕттĕм.

Ăсăмпа сисĕме тустаратăп чарусăр
эс çук çĕртенех
умăмра эс курнас хăватпа.
Инçетре-инçетре, тĕттĕмсен тĕпĕнче
palăрчĕ пысăк мар икĕ çăлтăр:
сиккелеççĕ, куçаççĕ,
çывхараççĕ, ӳсеççĕ...
Пăчă-тĕттĕм вăл — сан çӳçӳ.
Виççĕлле явнă икĕ вĕçре
çав эп курнă шултра çăлтăрсем.
Ярр! турĕ те, ак, хăраххи,

çĕтрĕ таçта.
Ку — эсĕ пĕр çивĕтне
ăсатрăн çурăм хыçне.

Хăппăл-хаппăл тухатăп
кĕтсе илес тесе сана,
анчах эс çук.
Йĕри-тавра —
маншăн ним мар çутсем кăна.
Эс — аякра.
Эс — аякра.

*Çиччĕмĕш çаврăм*

Уйăх, уйăх тулта!
Таврана çутă шăплăх хупларĕ.
Уйăх, уйăх! Тата —
темĕскер.
Ăнланмашкăн пулмарĕ.

Памасть вăл мана çывăрмашкăн.
Тăрап кулянса, пуçа чиксе.
уйăх тесе тата кăштах çырмашкăн
май тумăр-ши, хисеплĕ критиксем?

Сирĕн шутпа «шур уйăх» — кивĕ мода,
эпитетсем те, япали те — пуш сăмах,
анчах та маншăн Ĕмĕт евĕр ма-тăр
вăл ялкăшать, вĕр-çĕнĕ çав-çавах.

Çут хуйăх вăл тата —
аслă хирсенĕн уйăхĕ...

Çул леш енче камсем?
Пĕр ушкăн улăп-и канать?
Çук, çук. Утă капанĕсем кăна.
Чĕрен таçта çухалчĕ сивĕ туйăм, хĕн,
«Уйăх сонатти» илтĕнет ăна.

Тăххăрмĕш класра вĕренекен чиперĕм,
эс илтĕнен тата сонаттăпа пĕрле.
Чĕнтĕм те ятран — хирĕç чĕнмерĕн.
Инçе çав эс, инçе.
Çывратăн пуль çĕрле.

Аслă хирсенĕн уйăхĕ,
çут хуйăхăм,
ан чар эс ырă кĕввӳне,
ыр тусăм.
Пĕлĕт татки пур?
Эс ирт унран вăрт! пăрăнса,
Ку мел шăв-шавсăр та ансат.
Пире те, ав, ăсатрĕç ăсатусăр
амăшĕсем ан пĕлчĕрччĕ тесе
тăван шкулти хĕрачасем.

Вĕсене эпир
Казахстана илмерĕмĕр:
пӳ-си шеп мар,
çулпа та — ачапча.
Эс, уйăх,
эп капла калаçмĕ терĕн-тĕр?
Эп ĕнтĕ — çын.
Калаçăп çав.

## ИДЕАЛ-CĂНАР

Кăнтăрта-и çакă, урăхрах çĕрте-и,
хĕрĕх пĕр хурах кĕрсессĕн кĕпĕрех,
татăлмасть пылак та хура грузи чейĕ
«Ту çăлкуçĕ» ятлă кабарен.

Ĕнтĕ, ак, чĕнет «Абракадабра» —
каннă хыççăн çĕнĕлле кĕрлет.
Малалла васкарĕ, вут пек тухса тапрĕ
савăнăçлă ушкăн çумăрта, çĕрле...

Целина! Эс чăвашла та Целина.
Космос, спутник, социализм тенĕ евĕр.
кашнинчех пирте сăпатланса тăран:
целина,
целинана,
целинаран.
Илтĕм те кĕтсе сана, аван ăнлантăм эпĕ
тупсăмна.

Хĕнпеле туяннă юрату эс.
Калама çук йывăр кăмăлна килме.
Туйнă халиччен, туяççĕ, туйĕç
çĕн çĕрти çынсем мĕн ĕмĕр çак мĕнне.
Пытăмăр эпир Целинана нумаййăн.
Пурччĕ ушкăнра ухмах, шабашник, ик поэт.
Пуринчен ытла-тăр тĕрлĕ майлă
пĕлӳре йĕм çĕтнĕ шух студент.

Прессăн патриотлă чĕлхинче
кашниех иккен романтик шутĕнче.

Йăх-яха эс вăрахах тытмарăн:
çĕн экзотика, шабаш этеммисем
ишĕлчĕç те анчĕç çав, мăнтарăн,
макăрчĕç те ячĕç — мĕскĕнсем...

Ман тавра пухăнаççĕ, çӳреççĕ
питĕ ĕçлĕ, анчах ывăнми йĕкĕтсем.
Вĕсене хăш чухне: отряд тĕшши теççĕ.
Эпĕ те шухăшлаттăм: хальхи ачасем.

Йăлтăркка йĕкĕтсем, мĕскерле кĕвĕçсен те,
пĕлеймерĕ чун çунат сарма.
Халĕрех паллашнисем те, киввисем те,
тантăшсем, ман çăлтăр эсĕр мар.

Вырăнлă хитре, виçеллĕ ырă
çипуç, пӳ-си те калаçни-кулни.
Апла пулсан мĕн-ма поэтăн лира
юрлать туссем çинчен пули-пулми?

Ĕçе те хисеплетĕр, çынсене те.
Коллективизм пур, ытти аван енсем.
Апла пулсан мĕн-ма сире канаш сĕнетĕп,
мĕн-ма пăхса юлатăп хĕрхенсе?

Эсир маттур пĕр тĕрлĕ робот евĕр,
çырни урлă каçманскерсем кăшт та.
Çук сирĕнте Поэзийĕн кĕрлевĕ:
хĕвеллĕ туйăм та, хăватлă шухăш та.
Эсĕр шанчăклă хăрушă вăхăтчен,
вăл килсессĕн — хăваратăр пĕччен.

Хальрех паллашнисем те, киввисем те,
тус-пĕлĕшсем, ман çăлтăр эсĕр мар.
Чĕресĕр, ăнланусăр хĕвĕшетĕр.
Ман урăх, çĕнĕ, идеал-сăнар.

Вăл —
кĕмĕл хушшинче пытаннă ылтăн татăк.
Ун пекки пĕрре теçеткере, çĕрте.
Тусăмсем, сире мĕн чул эп юрататăп,
çавăн чул писетĕп эп сиртен.

## КАЛЛЕХ — ИНÇЕТРЕ

...Калаçу ман пыл та çу,
ӳсĕртет хăвачĕ.
Кĕске пулчĕ вăрăм çул,
«лавçă» та аванччĕ,
анчах темĕскер «ăнланчĕ»:
укçа ыйтрĕ, укçа çук,
антарса хăварчĕ.

Вăрăмланчĕ кĕске çул.
Эс ăçта, Кладбинка?
Шеллемерĕ-çке пачах
çăтмах пек кабинка.
Пылчăк. Çумăр та тĕтре.
Тăтăм юлтăм тĕтĕмре —
тутлă мар машшинăн тĕтĕм
чун-чĕресĕр этемре.

Шултраланчĕ йăш-йăш çумăр.
Çутăлса выртать шоссе.
Ĕнтĕ шӳрĕ кайрĕ çурăм,
кайĕ хырăм та шӳсе.
Хăçан çитĕп сĕтрĕнсе?
Ĕнтĕ усăнчĕ ĕнсе.
Урасем утмаççĕ шухă.
Пуçăмра — илемсĕр шухăш.

Ух! Мĕн «ух»? Ан тĕлĕр, ут!
Сикрĕ тухрĕ юланут.
Чăлтăр шурă урхамахăн
куçĕнче — хăрушă вут.

Плащ, башлык та хӳхӗм атӑ,
чараймасӑр лашине,
ҫаврӑнчӗ ытлашшине
ман тавра хаяр та паттӑр.

Эпӗ малалла иртеп.
Мӗн-ши кирлӗ йӗкӗте?
Кирлӗ-тӗк пуплетӗр, антӑр.
Чимӗр, ҫаптӑрах аҫа,
сулӑмлӑн ҫӳлтен чӗнет
те арҫын, те хӗрача:
— Кил, хурах, йӗнер ҫине!

— Ҫук, спаҫҫипӑ, ырӑ каччӑ.
— «Ырӑ каччӑ» мар эп, Катя.
Кил, хурах, йӗнер ҫине!
Эх, епле-ха палламарӑн?
Эпӗ — Катя Шелест.
Каҫчӗ... Ӑсатма пымарӑн.
Пурпӗрех-ҫке шел-иҫ...
Ҫак саманта аса илетӗп
инҫе, Тутар ҫӗрӗсенче.
Чун тӑвӑрланнине сисетӗп —
каллех каятӑп эп инҫе.

Ялан Грин тӗнчинче ҫӳретӗп.
Каяссисем — чи аякри.
Телей мӗнне ӑспа пӗлеттӗм,
чӗрепе туйма вӗрентрӗ Грин.

Ачи аван эс, Катерина,
анчах та тивӗҫ ӑнланма:
капла тӑма пуҫлатӑн йӳнӗ.
Эп юратмастӑп йӳн ҫынна.

## ЮРАТУ САМСАХӖ

Манӑн сӑмах мар ку, такамсен сӑмахӗ:
Шупашкарӑн Атӑл ҫыранне,
пӗр тӗлне, калаҫҫӗ «Юрату сӑмсахӗ»
Тӗплӗн пӗлейместӗп мӗншӗнне.

Ҫӳллӗ, ҫӗкленӳллӗ, уҫӑ вырӑн.
Ҫут тӗтре хупларӗ йӑлӑма.
Чӑваш сӑнлӑ икӗ яшӑ вырӑс
тухрӗҫ ӳсӗр юрӑ юрлама.

Хыҫҫӑн хӗрпе каччӑ пырса тӑчӗҫ —
ма килес-ши килес килмесен —
те ӳпкев вӗсем, те ӑсатуччӗ,
те сӳнен телей хӗлхемӗсем...

Янӑрарӗ акӑ харсӑр ушкӑн,
хӗвел йӑлӑм хыҫне пытансан.
Тен, хавас пулаттӑм эпӗ куншӑн,
ушкӑн ҫын пекрех ахӑлтатсан.

Туйӑм тивлетне хӗнерӗҫӗ пӗр харӑс —
сассӑр ӗсӗклетӗп темӗнччен.
Атӑл ҫийӗн шурӗ шурӑ парӑс.
Кӳренӳ каймасть чун тӗпӗнчен.

Темшӗн эпӗ Ҫеҫпӗле куратӑп.
Мӗлкине туятӑп, хӑйне мар.
Эй, эсир! Мӗскер ҫӑвар каратӑр?!
Ҫеҫпӗл тухнӑ сӑвӑ хайлама.

Пул эс, парӑс, Ҫеҫпӗлӗн сӑмахӗ.
Атӑл манас ҫук хӑй Мишшине.
Ҫак тӗле калаҫҫӗ «Юрату сӑмсахӗ» —
эпӗ ҫеҫ пӗлетӗп мӗншӗнне.

## ÇĔНĔРЕН — ЮРАТУ CĂМСАХĔ

Çил вĕрет, çил вĕрет, çил вĕрет,
ир-ирех çил вĕрет, уçă çил.
Шупашкар хыçалта ача пек тĕлĕрет.
Эпĕ мĕншĕн пит канçсăр-ши?

Çул тытатăп каллех
Юрату сăмсахне
ĕмĕтпе йăпатма
çĕнĕ кун тунсăхне.

Кулленех тем кĕтетĕп.
Хыçра — Чăваш çĕрĕ.
Эп хам та чăваш та, унта çуралман.
Çамрăк-ха халлĕхе,
халлĕхе сывă, чĕрĕ,
анчах тивĕ пĕрре пурнăçран уйрăлма.

Вара эсĕ мĕн-ма
мана йышăнмăн-ши,
Çеçпĕле поэт тунă
хисеплĕ çĕршыв?

Ĕненетĕп, кĕтетĕп...
Ман пур ĕмĕтре
чăнлăх евĕр поэзи-пике.
Тĕлĕкре те вăл пур,
пурнăçра та вăл пур,
анчах çул ун патне питĕ йывăр иккен.

...Тухрăм эпĕ каллех
Юрату сăмсахне
ĕмĕтпе йăпатма
Чăн Телей тунсăхне.

*1964 çулхи август,*
*Çурçĕр—Казахстан.*

## САВРĂШ ЕНĔ

*Поэма*

1. Кĕтĕм эп тултан кушак пек шăппăн,
хăй çутмарăм кил văранасран.
Çĕрĕпе ăш çумăр шăпăр-шăпăр
ачашларĕ çурăмран, пуçран.

Инçетрен эп килтĕм. Вĕтĕ çумăр —
ăнсăртран тĕл пулнă ыр пичче —
эп кĕрсен, вырнаçрĕ çуртпа çумăн,
пахчара пăшăлтатать пĕччен.

Пысăк мар эп, çиччĕ-саккăрта-ши? —
çук-ха, çук çĕрле çӳремелли.
Выçнă хырăма такăнтарасшăн
сĕтелте шыратăп çимелли.

Тĕттĕмре ӳкертĕм тимĕр кашăк.
«Пĕррĕс» — терĕ сасă ман енне. —
Тăрана пĕлмен шуйттан кушакĕ».
— Кушак мар ку, эпĕ ку, анне.
Сансăр эп, анне, пултараймастăп...
сансăр чут вилмерĕм аякра.

Ĕнтĕ эп сĕтел хыпашламастăп,
аннене мăйран ыталаса макрап.

Ывăл йĕнине илтес темесĕр,
хăтăрса калать аннемĕр хыт:
«Ай, тур-тур, лачкам йĕпе-çке эсĕ,
хыв часрах, йĕмне те, кĕпӳне те хыв».

Салтăнсан выртатăп çума-çумăн
шăллăмпа çӳле, сентре çине...
Пахчара чăштăртатать вĕт çумăр,
тен, çаплах мана шелле-шелле.

2. Ăçта пăхсассăн та — вăрман, вăрман.
Вăрман ачи эп — Саврăшпуç ачи,
анчах та пултăм уншăн чĕмсĕр çын,
нихçан та савнă ывăлĕ пулман.

Вăрманăн урăхла, хăйне саккун.
Унта çĕрле те, кăнтăрла та — шухă.
Вăрман чĕлхи кулянчăк та салху.
Вăрман юрри вăрах та сулхăн.

Эп, вĕл-вĕл çӳçлĕ ывăнми сентти,
çич-саккăртах утлантăм пит хавас
ахаль кĕвенте мар, юпах Пегас,
утлантăм эп... поэзи кĕвенти.

Виç ен — вăрман. Сĕм-тĕттĕм хырăсем.
Ялан уçлăхалла туртать-çке шухăш-кăмăл.
Яп-янкăр тӳпере шăвать çут пĕлĕт çăмăл.
Кăваккăн тĕтреленнĕ горизонт.

Хĕвел те унталлах васкарĕ çывăрма.
Анман хĕвел — пушар, ансассăн — вутпуççи.
Тăрса юлать тавра — вăрман, вăрман.
Чĕтретĕп хăраса — вăрман ачи.

...Иртсех пĕтмерĕ-ха айванлăх халĕ те.
Эп, шеремет, ялан вăл тĕлĕшрен пуян.

Чӗнет çаплах çут уçлӑх, горизонт, тӳпе,
Савкаç — сӑрт леш енчи пӗр пысӑк ял.

3. Хӑшпӗрисем ытлах юратмӗçин,
нумайӑшне кӳреттӗм чӑн-чӑн савнӑç.
Эп каярах фельетонистчӗ (сӑвӑç!),
ялти шӑлйӗренсемшӗн «паллӑ çын».

Иртме май çукчӗ аслӑ урампа,
ача-пӑча пӳрнепеле тӗллетчӗ:
«Пакунсӑр милици!» , «Сумел Иванӗ!» тетчӗ,
туслашнӑскер кашни фельетонпа.

Сӑхаттӑм эпӗ тӗрлӗ мӑнттая —
куштан пуçлӑхсене, кахалсене — сӑхаттӑм.
Хамӑр енчи мӗнпур хисеплӗ ватӑ,
мана курсассӑн, халь те пуç таять.

Ем-ешӗлскер, вӗриччӗ, вӗçкӗнрехчӗ,
савкаçсенче кӗрлеттереттӗм сӑвӑсем.
Сӑввӑмсенче ун чух савни, савни çӳретчӗ,
тата — çурхи çут уйӑхлӑ каçсем.

Те ӑнланса, те нимӗн ӑнланмасӑр,
«çыранӗнчен» тухатчӗ пысӑк зал.
Эп кӑшкӑраттӑм — пӳлӗнетчӗ сассӑм.
Эп кӑшкӑраттӑм, вӑрттӑн мухтанса.

Çыннисене тиркесе мар, аудитори пӗчӗкрен,
часах кунта сӑв калама пӑрахрӑм.
Ачалӑх иртрӗ. Шухӑш ӳкрӗ тарӑн.
Кӗрлесшӗн эпӗ пултӑм инçетре.

Анчах, пĕччен пирки, çултан аташрăм.
Суя çĕнтерӳсем пăтратрĕç пуçăма.
Суя юлташсемпе эп пурнăç йăнăш ашрăм.
Пуласлăхăм хупланчĕ пĕр самант.

Кĕртмерĕ, йышăнмарĕ Шупашкар:
çукрах-мĕн сас ăна çын итлемелĕх.
Савни, пĕрремĕш юрату, ман çут хĕвелĕм,
манра çын мар шырарĕ, — упăшка.

Ăна качча эп патăм пĕр сăмахсăр.
Тавах турра, ăнлантăм вăхăтра.
Манпа ялан пылак вăл пулчĕ, сахăр,
анчах хăй наркăмăш-мĕн чăнлăхра.

Пурăнăçра эп тӳсрĕм вĕçĕмсĕр нумай
тем тĕрлĕ «сахăр» та тем тĕрлĕ «тутлăх».
Пуласлăхсăр, хевтесĕр, чунсăр юлтăм
пустуй çунса пустуй кĕлленнĕ май.

Савкаç-ял урлă хамăн ялăма
эп çитрĕм çурма чĕрĕ. Шухăшлăн, асаплăн
çӳрерĕм юлташпа урамăн-садăн.
Пульницана вырттарчĕ вăл мана.

4. Тивлетлĕ ен! Тивлетлĕ халăх!
Каллех эп сывă та маттур.
Кирек кампа та тытăçмалăх
хăват та, ăс та, мел те пур.

Анчах тăхтать-ха тытăçу.
Эп «ссылкăна» хама ăсатрăм.

Пусăрăнса ларам пĕр тапхăр,
малашлăх — вĕренӳсĕр çук.

Каçар сăмахшăн, альма-матер,
мухтавлă университет:
трамплин тени вăл çак пулать-тĕр? —
тӳрех Шупашкара сикеп.

Каçарăр, сарă пикесем,
Хусан сăнне эсир кӳретĕр,
анчах та, çеçкемсем, куратăр:
эп тем шутлатăп пикенсех.

Ан йăраланăр, вăштăр-ваштăр
иртсе кайсан хитре эсир.
Каçар, каçар, чарусăр флирт,
санран эп писрĕм, таврăнмастăп.

Ман пурнăç пултăр мăнастир.
Чуна ним чухлĕ тăккаламăп.
Кăштах кайăкланам, ан тив,
ун вырăнне кайран çынланăп.

Пуласлăхăм карьера мар,
лаша пек ĕçленин итогĕ.
туяп: вуншар поэма тухĕ
вулкан пек аснă чунăмран.

...Типтерлĕн майласа çыхса,
çунатăма юсарăр хăвăрт.
Ентешĕмсем, туссемĕр, хăвăр
ан ӳкĕрсемччĕ аманса.

Тăван енсем, тăван Савкаç,
çуралнă ялăм Саврăшпуçĕ,
ман тăнăм çивĕч, кăмăл уçă
сире кашни асилнĕ каç!

5. Мĕскер Христос — кăшт вилнĕ те вăраннă,
тӳпенелле вĕçтернĕ, хуса çит...
Ун пек ĕçсем манпа та пулкаланă.
Христос — тур ывăлĕ. Эп — çын ачи.

Пĕрре çапла, савни качча тарсассăн,
шутларăм эпĕ сарăмсăр вилме.
Мĕн интерес: чун вилнĕ, тăхтамасăр
халь вĕлерес ухмах кĕлеткеме.

Вил чунлăскер, виç каç урамсемпе çӳрерĕм.
Юлашкинчен çĕççе пăрахрăм пĕвене.
Чун вилнĕ-тĕк, эп вилнĕ ĕнтĕ терĕм,
эппин тивес те мар ӳт-пĕвĕме.

Тепре эп вилтĕм критик «çумласан».
Кун пек тискерлĕхе хальччен курманччĕ.
Пăхап кăштран: суеçĕ-мĕн, ултавçă,
мана тăкăлтарать асап.

Эп чĕрĕлтĕм сасартăк, антăхса,
хăрушшăн тигр пек эп уткаларăм.
Юрать-ха, критик мĕскĕн янаварăн
чăрр пăхрĕ те... тата — этем уксах.

Виççĕмĕшне эп вилтĕм иртнĕрен
ытарайми чечек пек çамрăк ĕмĕр,

таталнăран хĕвел пек çутă ĕмĕт.
Çурта çутма эп ыйтрăм аннерен.

Анчах анне кĕрсе çурта çутмарĕ.
Çап-çамрăк ĕмĕр хыççăн — яшлăх, мур.
Мĕн тăвăп ĕмĕр йăлт пĕтсессĕн манăн?
Вăт кун пирки шухăшламалăх пур.

6. Ман ĕмĕр йăлт пĕтсессĕн, эп
çĕрмешкĕн выртăп нӳрлĕ çĕр айне.
Çухалĕ пур тăван, килйыш, атте-анне.
Кураймăп савнине, тупаймăп туссене.

Тĕнче хура чаршав хыçне пытанĕ.
Çутатмĕ уйăх, ялкăшмĕ хĕвел.
Ирпе епле хыт авăтсан та кӳршĕсен автанĕ,
эп вăранаймăп тарăхса куллен.

Çӳреймĕп ĕшнере, татаймăп чечексем.
Вилсессĕн эпĕ нимĕн те тăваймăп:
тăваймăп чаплă ĕç, тăваймăп айăп,
кулаймăп савăнса, тăраймăп çӳçенсе.

Ун чух мĕн — канăçлăх е канăççăрлăх, е тăшман?
Эп юратаймăп, çапăçаймăп, сăвăлаймăп,
Мĕншĕн тесен çут тĕнчерен çухалнă,
йăлтах çухалнă, йĕрĕм те юлман.

Хитре пулни аван хитрелĕх пур чухне.
Сăпайлăх пур чухне — пулни сăпайлă.
Пин шухăш тăрмалать чун-чĕрене:
эп пурнăçа хакла пĕлмен тăмсай-мĕн.

Çынпа харкашнă пустуях нумай,
çут уйăхран, ыр хĕвелтен пытаннă,
васкас мар чух çĕр çĕмĕрсе васканă,
васкас чухне вара тапранайман...

Шухăшсене таттисĕр çĕнетсен,
çĕн вăйпала тулать кулянчăк чун-чĕреçĕм.
Ума чупса тухаççĕ, чӳхенеççĕ,
кăваррăн тĕлкĕшеççĕ ĕмĕтсем.

7. Савкаç куллен ыйха путсассăн,
ун çийĕн, чĕмсĕр тӳпере,
вĕçет ман чун, сывлать вăл ассăн,
мĕн ирчченех вĕçсе çӳрет.

Анчах ларма та, курăнма та
пултараймасть юраманран.
Хăш чух вăл ярăнать хăлатăн,
хăш чух вĕçет аран-аран.

Анчах сывлать вĕри, хăватлă.
Мĕскер сăнать вăл тӳперен?
Ялта вăл мĕн манса хăварнă?
Мĕскершĕн вĕççĕр тилмĕрет?

Вăл курчĕ ĕнтĕ хĕллене те,
çил ачисем çуртсем çине
кĕртсем хывса алхаснине,
вăл курчĕ юр макăрнине те...

Сĕткен тăкаççĕ çăлтăрсем.
Часах садсем папка çураççĕ.

Салхуллă уйăх — сар хуралçă —
тухать çут хуйăх сĕтĕрсе.

Паркра çунат çапать яш-кĕрĕм:
ташлать, сикет. Çав хушăра
пĕр йăрăс пӳллĕ çамрăк хĕрĕ
айăккинче пĕччен тăрать.

Ун пусĕнче пин тĕрлĕ шухăш.
Кăçал вăл саккăр пĕтерет.
Кăкри çинче çиçет значокĕ,
хĕр комсомолка пĕлтĕрех.

Килне çитсен вăл, кĕмĕл пурçăн
çӳçне вăраххăн салатсан,
кулса илет ачашшăн, уççăн,
телейлĕн, сывлăм пек тасан.

Салхуллă уйăх — сар хуралçă —
сăпка юрри юрлать темччен.
Куçсем çаплах-ха хупăнмаççĕ,
шутлать хĕр пурăнăç çинчен.

Вăл пурнăçра пуласшăн факел,
çунса иртесшĕн кĕрлесе,
пурнасшăн мар имшеррĕн, ваккăн,
пурнасшăн анлăн çĕнтерсе.

Эп — пĕрлĕх хăватне пĕлесшĕн.
Ман чун çак çыншăн тилмĕрет.
Ун чунĕпе вăл пĕрлешесшĕн
яланлăх, ĕмĕр-ĕмĕре!

8. Каллех эп çул килетĕп. Саврăш енĕ
темĕн тухатать сĕм-тĕттĕмре.
Те шофер, те грузовик ĕшеннĕ,
те тăман пит вăйлă тĕтĕрет, —

Кивĕ Саврăш çав-çавах инçе-ха...
Çăмăл мар çул çӳресси хĕлле.
Аллă çухрăмпа эп килелле вĕçетĕп,
çитмĕлпе, çĕрпе вĕçес килет.

Шăхăратăп, кĕвĕлетĕп юрă.
Кузовра патша эп, хам хуçа.
Пичкесем те, эпĕ те шап-шурă.
Çăвара кĕрет тăман, куçа.

Фарăсем, часрах тупсамăр эсĕр
шыраса Кив Саврăш арманне.
Урана çĕре те тивертмесĕр
кайăп эп анса арман енне.

Саврăшпуç кунтан тата çич çухрăм.
Тарăн вар лекет, çырма-çатра.
Çĕнтермех, çитмех çула паян эп тухрăм.
Васкасам, машшин, чуп хăвăртрах.

Саврăш хыçĕнче — çыран, пĕлетĕп.
Кутăн-пуçăн сирпĕнетĕп аяла.
Ылханап юра та, тĕттĕме те,
ăшăмра çапах та йăл кулап.

Юпаран юпа тупса, сăрт урлă
Савкаçа çитеп аран-аран.
Парăнмасăр, хашкаса маттуррăн,
вырăсла хапха умне пырап.

Кăшт канам та... Люся, хаклă çыннăм,
эпĕ ку, туятăн-ши çакна?

Ах, мӗн чухлӗ юр, мӗн чухлӗ ҫунӑ...
Эс тухман каҫран. Йӗр ҫук. Ҫапла...

Ман йӗре те хуплӗ ир енне.
Эпӗ те пулман кунта. Хапха — каламӗ.
Шурӑмпуҫ шӑратӗ тӗттӗме.
Ҫакӑнпа вӗҫленӗ юрату халапӗ.

Ҫитрӗм ӗнтӗ. Халӗ инҫе мар.
Тарӑн вар. Масар. Вара — вӑрманлӑ ялӑм.
Мӗн тери тӳлек те шӑп тавралӑх,
мӗн тери лирикӑлла тӑман!

Ҫенӗкре шакканӑп, тупӑп шӑпӑр,
тахҫанхи йӑла халь те асра,
кӗрӗп эп пӳрте кушак пек шӑппӑн.
Хӑйӑ ҫутмӑп кил вӑранасран.

Салтӑнсассӑнах, тупса кив кӗрӗк,
кӗрсе выртӑп кӑмака хыҫне.
Ир-ирех анне вӑранӗ, курӗ,
ӑшӑ утиял пӑрахӗ ман ҫине.

Ӑшӑ утиял... Аннем, епле эс пурнӑн мансӑр?
Инкеке сиссе, хӑпать сехре.
Чунӑм ҫук ниме те пӑхӑнмасӑр
урӑх тек киле килеймесрен.

...Ыткӑнать машшин. Ҫул тӳрӗ, чалӑш.
Ҫитрӗмӗр! Эй, эй! Епле асӑрхаман!
Сывӑ-и ҫӗмрӗк кӗперлӗ Саврӑш,
сывӑ-и, усал-тӗселлӗ кив арман!

*1964*

# 1965

## ПУЛТАРУЛĂХ

Синкерлĕ вăрттăнлăх, саланччĕ!
Халь-халь эс саланассăнах
кĕрлет чĕремĕн вăй-хăвачĕ.
Салан чăл-пар! Часрах, часрах!

Сывлатăп йывăр. Тăвăнатăп.
Çамка — çунать, вутри çатма.
Пĕтеп. Пĕтетĕп. Парăнатăп.
Пултараймастăп тек чăтма.

Чакать чĕремĕн вăй-хăвачĕ.
Чакать кăвар, пуçри кăвар.
...Синкерлĕх ишĕлчĕк хăварчĕ,
эс, вăрттăнлăх, чунна хăвар.

*1965*

* * *

Эп сана вăрçмастăп, кӳренместĕп.
Ман пулман та, çук та тарăху.
Поэта нумай çунтартăн эсĕ;
вут тивмерĕ — эс çунмарăн ху.

Эсĕ çутнă çутă-çутă кулă
поэта вăй-хал, телей парса
миçе çул савăнтармарĕ пулĕ!
Халĕ те вăл сиплĕ те таса.

Яланах манпа эс ырă, ырă,
ху вара урăххине саван.
Тĕлĕкре çеç сан патна халь пырăп
вуламашкăн юлашки сăвва.

Эп сана юратнă — ӳкĕнетĕп.
Сивĕнтĕм — шеллетĕп, кулянап.
Хăвна мар манмастăп, ĕненетĕп,
куллуна, хĕвеллĕ куллуна!

*1965*

## ЙĔКĔТСЕНЕ

Çилленетĕр хытă мĕн пирки?
Мĕн пирки калатăр: пăрăн, сирĕл?
Мĕншĕн тусăр мар, çичют эп сирĕн?
Кулянатăр хытă мĕн пирки?
Авă мĕн... Сăлтавсăр тиркесе
сивĕннĕ иккен савнийĕрсем.
Чĕрĕрпе çавна пула йĕрсе,
халь мана вăрçатăр кӳренсе.
Авă мĕн... Ачамккăсем темерĕн.
Тен, каçармăр-и пĕррелĕхе?
Айăплă. Сире эп пĕлтермерĕм
хамăн кулăшла çитменлĕхе.
Эппин итлĕр, каласа парам.
Сăмахран, эп вилнĕ: пурнăç хуп-хура,
пăчă-тĕттĕм — тăнăç... Акă инçетре
çутала пуçларĕ çак хура тĕтре.
Ярăнчĕ хăпарчĕ çăлтăр тӳпене! —
ман çине вăраххăн пăхма пикенет.
Ачашлать куçа вăл, таçталла чĕнет.
Сассинче çут хуйăх, пурнăç илтĕнет.
Эп манап сасартăк хам вил иккенне,
хăвăрт çĕкленетĕп тяппасем çине.
Çак вăл ман çитменлĕх... Çăлтăр мар хитрен
тӳпере çунать-мĕн, — хăю, çивĕтре.
Çепĕç хĕрачийĕ куçать юмаха —
чаплă! Ытараймăн! Куç-пуç йăмăхать!
Чи телейлĕ вăхăт çакă вăхăт ман.
Савнийĕрсене эп çавна каламан.
Тĕлĕннĕ, пăлханнă, çырнă сăвăсем,
чуптума... именнĕ, çуннă — чуптуман.

*1965*

* * *

Мĕншĕн манăн савнисем нумайййăн?
Ма чакмасть, ӳсет вĕсен пуххи?
Эп юратнă-и е юратман-и,
е кăшт пулнă юратан пекки?

Хăвăнтан çапла ыйтма, юлташăм,
эс хăват та, ăс та çитерсен,
сан патна, сана сăнран пăхасшăн,
хатĕр эп килме мур тĕпĕнчен.

Сăнунта çунмашкăн тивĕç шухăш
вилĕм приговорĕ хыççăнхи тĕспе,
куçунта капланнă тĕпсĕр хурлăх
сивĕ пулмалла вута пăрлатас пек.

Тинкерсе шăтарасла пăхсассăн,
пултарам тата эп йĕрлеме
вилĕм умĕн шанчăк çухатмасăр
çăлăнăç епле шыранине.

Ун чухне сăмахăм саншăн янтă:
эс манпа, юлташăм, пĕртăван,
эс юратнă та, эс юратан та —
чăн-чăн çын анчах тĕл пулайман.

*1965*

* * *

Пĕртен-пĕр тус, чи шанчăклă юлташ...
Эпир епле маттурччĕ, мĕн тери маттурччĕ.
Халь урăхлантăмăр йăлтах-йăлтах.
Ачалăх иртрĕ те, пире тем пулчĕ.

Яр-уçă чунăма лач! суртăн эс паян.
Пĕрремĕш мар. Тен, туссенчен — чи юлашки.
Кала-ха тӳррипе: хăвна мĕнле туян —
виçесĕр чаплă-и е ăслă ытлашши?

Мĕнре сан чап? Мĕнре тата çав ăс тени?
Ăçта илем? Кăлкан çӳç-пуç? Маттурлăх?
Сана, мĕн, пурнăç пит хĕстернĕ-и?
Эс пусрăннă. Эс пĕтнĕ. Çилĕпе эс тулнă.

«Ун пулнă-ши, пулман-ши чун тупри?» —
хамран ыйтатăп эпĕ кун-каçах.
Ман тупсăм халĕ те ачалăхри.
Эп халь те çав-çавах ача.

Эпир ун чух, ача чухне, çавтер маттурччĕ!
Таса чĕре, шух пуç — хĕрӳ кирек епле вутран.
Ӳссе çитсен сана, пысăклансан, мĕн пулчĕ?
Çунатсăр юлтăн эс хăçан?

*1965*

* * *

Тус нумай. Чăнни пĕр иккĕ-виççĕ
тус текен çак пысăк йыш çинче.
Час вĕсем те вăрттăн ӳкĕнеççĕ
курнăшăн мана ĕмĕрĕнче.

Çук, манпа йăл кулмалла выляймăн —
эп пĕлеп кам мĕншĕн кулнине.
Ăслă пек те нумаях пулаймăн —
эп курап кам ăсĕ мĕнлине.

Ман пирки мĕскер шухăшласан та,
тĕрĕсне кала эс, ан пытар,
пытарсассăн туслăха пăсатăн,
йĕркипе кала, ан пăтраштар.

Хыçалтан ним сассăр йăпшăнсассăн,
ман пата, тăванăм, çĕçĕпе,
эс турра та, шуйттана та асăн
курасран сана эп ĕнсепе.

*1965*

## НĂЙĂЛТИСЕМ

Ман вăхăт çук. Вĕсем килеççĕ
ыйтмасăр, тахçанхи тусла.
Нушисемпе куçа кĕреççĕ.
Вĕсемшĕн эп çын мар, услам.

Ялан эп парăмлă вĕсемшĕн:
юратмалла, ăс памалла.
Ялан, ялан манран сĕвесшĕн,
вĕсен анчах пурăнмалла.

Вĕсем ачаш, йăваш та мĕскĕн,
вĕсем «телейсĕр», «пĕр-пĕччен».
Тăшманĕсем — хаяр та вĕçкĕн.
Эп — хӳтлĕх çав тăшмансенчен.

Макрашмалли тем те тупаççĕ.
Макрам-ха эп — кулаççĕ çех.
Пăхатăн — виç пуса тăмаççĕ
çав этемсен куççулĕсем.

Пĕлетĕп, сирĕн «кăмăл тӳрĕ».
Пĕлетĕп, сирĕн «чун таса».
Тархасшăн, сирĕлĕр, ан çӳрĕр
ал-урана çыхлантарса!

*1965*

## ОБЩЕЖИТИ

Лекеймерĕм эп малтан,
эп ытлашшиччĕ.
Лекрĕм те килсе кăштран,
витĕр витрĕ общежити.

Пурăнать пин çын унта,
тен, ытларах та.
Пур ырри çав пин çынтан,
пур пухта-парахтă!

Кĕмсĕр! Кĕмсĕр! — пуç çинче.
Мĕн çĕрле çӳлти хутра?
Стенара, ик айккинче,
мĕн кĕрлет пĕр вăхăтрах?

Кĕç экзамен парăпăр.
Кăшт илесчĕ тĕлĕрсе.
Алăк енĕ — коридор,
кĕçенеççĕ «ăйăрсем».

Е эс чирлĕ... Кӳршĕре
уççăн сывлăш кисретсе
кĕçенеççĕ ир-ирех,
кĕçенеççĕ... «кĕсресем».

Е эс вилнĕ. Пулинех!
Пурăн вилĕ халлĕнех.

Хăйĕнсĕр пухта-парахтă
пĕр кĕтес те хăварман.

Шухăшлă эп пурăнатăп,
эп пухта-парахтă мар.

Тус вулать — эп шавламастăп.
Тус çырать — эп шав тумастăп.
Çывăрать — эп ташламастăп,
хăй çутса юрра ямастăп.

Пиллĕкĕн пĕр пӳлĕмре.
Виççĕш — ылтăн ачасем.
Юлашкийĕ — чĕмере —
юлашки — усал-тĕсел.

Коридор (ах тур анчах)
тĕттĕме путсассăнах,
темĕн тĕрлĕ купарча
сăтăрать чул стенана.

Муза манăн шав-шавах
ылханать çаттай çурта.
Эпĕ... эпĕ тав тăвап
пурăнма кĕтес пуртан.

*1965*

## ТУЙĂМСЕМ

Авал эп: «Манăн туйăмсем
çурхи шыв пек кĕрлеççĕ», — терĕм.
Эп шкул ачиччĕ. Эп пĕлмерĕм —
мĕн-ма ун пек кĕрлеç вĕсем.

Эп çыртăм сăвă. Ĕç тухмарĕ.
Ăс-пуç çитейменнин тумхахĕ
хыт чăрмантарчĕ. Туйăмсем
кĕрлерĕç, сикрĕç вирхĕнсе!

Килсе капланчĕç, пĕвеленчĕç,
вĕри, çап-çутă, тап-таса,
вĕрерĕç, хирĕлчĕç... лăпланчĕç —
пулмарĕ пĕвене татса.

Халь, акă, сăв тавраш çырас
римислана аван чухлатăп,
мăка пуртăпа мар чутлатăп,
анчах... çук туйăм, мĕн тăвас?

*1965*

* * *

Туссем, туссем, хастарлă ачасем,
е эп сире тек ĕнтĕ тус та мар-и?
Ытла кая юлса кăлартăм ма тесен
сăввăмсене. Каçарăр, май пулмарĕ.

Инçе, инçе мăнтарăн качака.
Ăна вăрçса пуçланчĕ ман поэзи.
Ман çывăх юлташсем аван пĕлеççĕ:
усалччĕ качака, хушка çамка.

Вăл тахçанах çухалнă тĕнчерен.
Чĕппин чĕппи халь пахчари хăравçă.
Вунçичĕ çул иртсен, ашкăнчăка хальхаççăн
эп мар, чи кĕçĕн шăллăм хӳтерет.

Ман пек вăл саккăрта. Анчах вăрçма та,
ăс вĕрентме те ыррăн пĕлеймест.
Мăнтарăн качаки, тарать те çăтăр-çатăр,
эрнипеле пахча тĕлне килмест.

*1965*

* * *

Ĕнтĕ эс хĕвелĕн туйăнатăн.
Эп çӳретĕп хытă тĕлĕнсе.
Тĕл пулсан чĕнмесĕр пăрăнатăп.
Çилленсе-и? Хытă именсе.

Ыратать ачашшăн çамрăк чунăм.
Юратас килет хитре, çап-çут.
Йăл кулса мана хускатнă çыннăм,
эс çавна нихçан ĕненес çук.

Нимĕнпе те уйрăм марччĕ эсĕ
маншăн та, çынсемшĕн те хальччен.
Ĕнтĕ, ак, хама ниçта хума пĕлмесĕр,
шухăшлатăп эпĕ сан çинчен.

Мĕн тери айван: çаплах тасан
çутă юмаха эп «чăнлăх» тетĕп,
хăвăнта пулман тивлет парса,
пĕлĕте çити ятна çĕклетĕп.

Тен, сахал эп тӳснĕ тĕрлĕ мăшкăл
суяна курмасăр тӳррипе?
Тен, сахал йăпаннă ăслă ушкăн
ахăрса хĕрхевсĕр куллипе?

Сахал мар, анчах та çӳрĕп эпĕ
çав-çавах çунса та именсе,
çав хала ӳстерĕп, çирĕплетĕп.
Ушкăн мар, эп тухăп тĕрĕсе.

*1965*

* * *

Лăпкă тунсăхлă, лăпкă хаваслă,
эп кунта пĕр-пĕччен.
Эп кунтан час каймастăп,
пурăнап хĕллеччен.

Сайра юман вăрманĕ,
сарă çăка ращисем,
каллех эп иртсе пырам-и
хампа хам шӳтлесе.

Сире каласа парам-и
çĕнĕрен, çĕнĕрен —
мĕн-ма туссене эп пăрахрăм,
мĕн-ма пĕччен çӳреп.

Ялан, мĕне пула-тăр,
вĕсен чĕри пушхир.
Эсир хĕрӳ тăнлатăр,
мана юрататăр эсир.

Эп ӳксе юнлансан савăнмастăр,
хĕрхенетĕр йышпа.
Ĕçĕмсем ăнăçсан, пуçлатăр
ташлама, айкашма.

Çынна нумай итлерĕм...
Юраса çынсене,
çитмелли çĕрсене çитмерĕм,
тахçанах çитмелли çĕрсене.

*1965*

* * *

Паян эс, Люся, хăю çыхман,
хурлăхлă сан çӳçĕ —
çеçкесĕр чечек чечек мар,
савăнăççăр телей çук.

Çăмăлккаччĕ, çутăччĕ бантсем,
пите сĕртĕнетчĕç, темĕн калатчĕç.
Вĕçсе каймĕç-и теттĕм вĕрсен,
каймастчĕç, çаплах тăратчĕç.

Те санăн çавна пĕлсе
кулма чарăнмастчĕ куçу.
Сӳннĕ паян унта хĕмсем,
çавăнпа кулă çук.

Тĕксĕмленчĕ манăн муза та.
Вăл та салтнă вĕл-вĕл хăюне...
Эс юлташăм та, эс тусăм та,
тăванăм та ĕмĕрне,

анчах шухăша калаймарăм,
параймарăм чуна уçса.
Вĕççĕр ӳкĕнĕç, шутсăр айăп
эп çакăнпа турăм пуль çав.

*1965*

## ТĔНЧЕ ХĔРРИ

Шăрăх, мур çиесшĕ...
Эп инçе вĕçесшĕн.
Эп пĕр сехет малтан
Васкап аэропорта.

Перрон çине тухатăп,
вĕри хĕвел айне.
Çынран мĕнпе эп катăк —
вĕçеп Тĕнче хĕрне.

Хăш самолечĕ манăн?
Тен, çакă? Чи мăнни?
Тен, леш енчи, хăяккăн
пăхса тăраканни?

Тахçан алра билечĕ,
алра талонĕ те,
анчах хăш самолечĕ
тапранĕ инçете?

Ах, юлас марччĕ... Мăшкăл
тăрса юлсан вара!
Ăçта каять çав ушкăн?
Ăçта? Шупашкара?

Эп унта мар. Инçе эп.
Инçе. Тĕнче хĕрне.
Пĕрремĕш хут вĕçетĕп.
Камсем — манпа пĕрле.

Дежурнӑй, эй, дежурнӑй,
тӑхта-ха, йыт хӳри,
хальччен ӑҫта эс пулнӑ?
Эп ак... Тӗнче хӗрри...
«Тӗнче хӗрри? Хӑпайрӗ
ҫӗртен тин ҫеҫ, ав, вӑт...»

Ах! Кайрӗ — юлтӑм — кайрӗ!
Ах! Кайрӗ самолет!

*1965*

* * *

Черкке чанклаттарса черкке тĕплетпĕр.
Эп йăл кулап, кулать çĕн тус эшкерĕ те.
Пĕрне-пĕри куçран пăха-пăха илетпĕр.
Çут эрех мар, тăванлăх ӳсĕртет.

Тăшмансене çиетпĕр чĕрĕлле.
Чи çывăх тусăмсем, сире, сире çиетпĕр.
Чăнла çисен сире-и çимелле,
çĕленсемпе пуплемелле-и çепĕç?

Эсир, туссем, пĕлместĕр шухăша:
сире сутмасăр каçрăм эп кунта.
Тĕлĕнмелле хастар, хаяр нуша
мана кĕртсе тăратрĕ çак вута.

Туссем, ан сивлĕр вăрттăнлăхăма.
Ăна уçса пани халь маншăн вилĕм.
Ютсем, чĕтренĕр, эп хăруш хăна,
эп динамитчик, эп чее, эп тилĕ...

*1965*

## ХУРĂНЛĂХРА

Ылтăн хурăнлăхра ылтăн çумăр,
çулçă çумăрĕ кунĕпех.
Темшĕн савăнать манăн чунăм,
темшĕн савăнать куççульпе.

Тăкăнать йăвашланнă хĕвелĕн
çут-кăвак тӳперен, чарăнми,
пĕр кулянчăк кĕвве кĕвĕленнĕ
мĕльюншар иксĕлми пайăрки.

Çил вăйлă мар, тăрăшуллă,
уççăн пуплет вăрманпа.
Эп манăçа тăрса юлнă.
Кам мĕн калаçтăр манпа.

Эп хурланса нăйкăшатăп,
анчăкпа пĕр пулса,
чăштăр çулçă ашатăп
е чупап алхасса.

Ак ĕхлетсе кĕрешетпĕр.
Пĕрре эп, пĕрре Туçик çĕнет.
Йăлăхсассăн итлетпĕр
хурăнлăх сассине.

Анчăк куçĕсем шутсăр ăслă,
тек пăхаç ман çине.
Анчăкпа эпир туслă
тахçанах, унчченех.

Манăн чун янăравĕ
анчăкра та янрать.
Эп йĕрсессĕн йĕрет вăл,
савăнсан — савăнать.

*1965*

## МĔСКЕРШĔН?

Куллен хистет пулсассăн та ăс-тăн,
çĕн сăвă çырăнмасть, ӳкет, ванать.
Мĕскер, мĕскер калама çук ăстан
пĕр чарăнмасăр кансĕрлет мана?

Кун хыççăн кун иртет. Эп нимĕн те çырман.
Çырма та халăм çук. Пуç янăрать
хальхаççăн çурăлассăн çурмаран.
Темле усал синкерлĕх ман тавра.

Нивушлĕ, шеллесе хама, шеллемĕп сăввăма,
ăна пĕтерĕп эп, çӳлтен-çӳле çĕклемĕп?
Нивушлĕ пултараймĕ сыватма
ăна анне сăнарĕн вăйĕпе илемĕ?

Хура тĕсе хура теесшĕн эп,
шурра теесшĕн шурă пĕр тунмасăр.
Тумхахлă çул пирки тесен тумхахсăр,
вăл курманни пулать тумхахсене.

Эп йĕксĕке каласшăн: «Эсĕ йĕксĕк».
Суя та ăшăх çынсене: «Преступник».
Вĕсем çĕтмесĕрех çухалнă йĕрсĕр,
вилмесĕрех чĕр вилĕм тупнă.

Хăравçăлăх та икĕпитлĕх пур чухне
вĕсем çукки çинчен хĕпĕртесе юрлаймăп.
Ăçти, мĕнле аташнă шăпчăк-кайăк
çур вырăнне мухтанă хĕллене?

Çакна эпир пĕлетпĕр эп те, эс те.
Анчах пĕлместпĕр: мĕн тума карах
хăватлăн вирхĕнсе çĕкленейместпĕр?
Мĕскер çитмест? Мĕскер чăрмантарать?

*1965*

## САВКАҪРИ УРАМ

Каятăп эп, сыв пул, ҫурхи телейĕм —
васан сасси, уҫ сывлăш, уйăх, ҫул —
мĕн чуль кĕтсессĕн те мана кĕтсе илеймĕн.
Каятăп эп, килместĕп, сывă пул.

Эп кирлĕ мар кунта. Иш, уйăх, иш,
иш те ҫутат. Ан тив, иртни ҫап-ҫутă вырттăр.
Аксаччĕ савăнăҫ, кичемлĕх выртăм.
Мĕскер ку? Пурнăҫах-и е путтиш?

Эп кирлĕ мар. Телей, ҫурхи телейĕм!
Чĕре ҫунмась, юн шăннă, ĕмĕт ҫук.
Епле кĕтсессĕн те мана кĕтсе илеймĕн:
сад-йывăҫ ешермест юр ҫунă чух.

Мăнтарăн ҫамрăклăх... Шăвать, шăвать пуҫ ҫиййĕн,
иртсе каять. Кулаççĕ хĕмленсе
ҫурхи каҫа тухман шкул хĕрачиййĕн
ҫивĕтĕнчи черченкĕ хăюсем...

*1965*

## ЮТРА

Кăсăк мар кунта нимскер те
тĕлĕкпе пурнакана.
Кунта мар чунпа çӳретĕп.
Эп кунта хăна кăна.

Никампа та хутшăнмарăм,
ĕненмерĕм никама.
Ай, хăçан кунтан эп тарăп
пусрăнмасăр пурăнма?

Миçе çул утма памасăр
ура хутăм хама хам,
тĕмсĕлтĕм тăван сăмахсăр,
курăнмарăм халăха.

Çитсенех эп тăвăл çĕклĕп,
вăратса пур вăй-хала.
Эп кунта чăн мар, эп тĕлĕк.
Эп кунта хăна, хăна.

Тахçанах пырса çитесшĕн,
йывăр шухăш хăратать:
хуçăлсан, çĕнеймесессĕн,
пăр çапсан вăй-хăвата?

Ун чухне ăçта эп кайăп? —
шанчăк пĕтнĕ, çул чĕнмест, —
юрăсăр, çунатсăр кайăк,
ӳкĕп-çапăнăп çĕр çумне...

*1965*

## ПАЯНТАН

Паянтан мĕн юлашки кунччен
ĕненӳ ман аслă та çап-çут:
эсĕ шанчăклă пуринчен,
сан пекки тĕнчере урăх çук.

Эс мана яланах вăй кӳрен.
Эс кулянăвĕ, эс савнăçĕ чĕрен.
Эс пуртан ял-йыш та, ялăм та илемлĕрех.
Эс пуртан эп хам та хитререх.

Эс пуртан савни-пикесене
ним сăлтавсăр пăрахап, çавтер шеллеп.
Вăйсăррăн стена çумне эп тĕршĕнеп.
Куçăм хуралать, чун хĕсĕнет.

Йăлтрамаççĕ тĕссĕр куллисем.
Пăсăк сиккелеççĕ тутисем.
Пикесен ĕçхĕлĕнче юлсан,
мĕнлерех эп курнăттăм-ши хам?

Чиперех пуль. Кăмăл çирĕп ман.
Пĕрмаях эп хурлăхлă-çап-çут...
Эс мана нихăçан юратман,
çавăнпа сан сивĕнме май çук,
çавăнпа эс юлашки кунччен
пулăн шанчăклă пуринчен...

*1965*

## МĔНЛЕ КАПЛА?

Пике курсан,
ĕçкĕсенче ман ĕлĕк юн вĕретчĕ.
Халь темшĕн апла мар.
Те улшăнма пуçлап?
Халь пике мар,
шампански илĕртет, черкке ĕречĕ.
Нерсе бу,
карттайкански-мĕ, дуслар?

*1965*

## ХРЕСНАЙ АННЕ

Çиеттӗмӗр мăян, йӗкел, темле тăмсем.
Анне ялан, те ытларах вырасшăн,
те кил валли пӗрер кӗсъе ырашшăн,
каять ирех, килет тӗттӗмленсен.

Тытас пулсан, çӗртеççӗ тӗрмере...
Хреснай анне, пире эс вилӗмрен хăтартăн:
ху выçăскер, ыраш, пӗр сурăх патăн,
пыл кӳтӗн, йăмăк хытă чирлесен.

Турра пуççапакан черченкӗ, вăйсăр карчăк,
кама кăна эс пулăшман мӗн пуррипе.
Кайран, ху çын куçне юлсан, сана мӗн пачӗ
кам та пулин ыр турă ячӗпе?

Пӗри нимӗн те. Тулаççӗ арăсланнăн
мăнукупа кинӳ, переççӗ кăларса.
Тур ячӗпе мӗн чуль эс тархасларăн,
мӗн чухлӗ йӗртӗн хурланса!

Ма пирӗнпе пӗрлех юлмарăн пурăнма?
Пурăнкаланă пулăттăн хăв майăн.
Шутларăн пуль: «Хăйсем те пит нумайăн».
Юта тухса эс кайрăн тăранма.

Хреснай анне, эс ырă кураймарăн.
Эс тупрăн канлӗх тăвăр тупăкра.
Эп пӗчӗкчӗ, сана эп упраймарăм,
ӳсерехпе çӳрерӗм аякра.

Эп кӗлӗ тенине кулмасăр итлейместӗп,
анчах санăнне мар, хреснай анне.
Нимле турра нихçан эп ӗненместӗп,
сан турруна шанатăп ӗмӗрне!

*1965*

## СЕНИЭЛЬ ТĂВАÇÇĔ

Юриех пуль эпĕ астума,
Шупашкарăн асли пĕр урам.
Çакă урамра Егоровран
Сениэль тăваççĕ ятăма.
Сениэль тăваççĕ ятăма —
силлесе лăскаççĕ чунăма.
Кам иккенĕ-мĕнĕ кирлĕ мар...
Ĕнтĕ хăй çутма та вăхăт, кĕç çутаççĕ.
Ман умра те площадь, те бульвар:
ĕнтрĕкре улмуççисем шап-шур çунаççĕ.
Çеçкери япшар улмуççисем,
тĕттĕмре сире хăрушă мар-и?
Пур вĕт-ха, çук мар усал çынсем.
Чăн-и? Халиччен никам тивсе курман-и?
Кашниех эсир — пике, пăхса ытарайми.
Эп вара ал султăм пикесем çине:
тупăнать те урăх çын, манать савни,
нихăçан манмасть — анне.
Халĕ вăл ларать пуль шăплăхра, пĕччен.
Садĕнче ун — çичĕ улмуççи.
Асĕнче, паллах, ывăлĕсем темччен
пулайса çӳретпĕр чунуççи.
Ах, хăçан çитес Тутар енне
инçетри таçти Шупашкартан?
Сан пилӳн хăвачĕпе, анне,
халь мана паллаççĕ çакăнта.
Вулама-çырмашкăн кăшт вĕреннĕ,
арчунта упратăн эс сăввăмсене.

Эс куратăн вĕт: мĕн чуль вĕренĕ,
мĕн чухлĕ çуннă эп, анне!
Астăватăн: хытă чирлесеччĕ,
çиччĕмĕш класс хĕрачи пек
эс туйăнаттăн пĕчĕкçеççĕ.
Кулянчăк куçлă та чипер.
Аттепе эпир чут хуйхăрса вилмен, чут-чут.
Манăн ун пирки те сăвă пур, аннеçĕм.
Хăшĕсем çакна пачах шута илмеççĕ
сăввăма ярса тытса тиркешнĕ чух...

*1965*

## ВĂРТТĂНЛĂХ

Куратăп эп, ăнлантăм эп, тăванăм.
Эп çавăнпа ним пулман пек тӳлек.
Юратмасан вăйпа юраттараймăн.
Куççуль те, тархаслу та — ахалех.

Пĕрне кăна хальччен те ăнланмастăп:
мĕн сăлтавпа сивлен çапла терех?
Кӳрентерӳ? Çаттайлăх? Астумастăп.
Çын пек çӳресшĕнччĕ мĕн ĕмĕрех.

Мĕскершĕн каламастăн тӳррĕн, уççăн:
мĕнре-ши айăпăм тĕтреленсе тăрать?
Капла майпа ирĕксĕрех яш пуççăм
лăш усăнать, тӳлеклĕхĕм тарать.

Юратманни тем мар, çухалмăп, тупăп çĕнĕ,
хитре хĕрсем сахал-и тĕнчере,
вăрттăнлăху синкерлĕ. Çивчĕ сăнă.
чуна касать вăл, витĕр витерет.

Вăйсăрланса халтан каятăп эпĕ,
çунма та хĕмленме пуçлап унтан,
яланлăх хăпаймасăр тилмĕретĕп
çав санăн вăрттăнлăхунтан.

*1965*

## ĔМĔРТЕНХИ

Пире таптаççĕ, путараççĕ
ик алăпа пусса пуçран.
Пире кăклаççĕ-вăтăраççĕ
çĕкленесрен, вăй пухасран.

Пăвни те, хĕстерни те пулнă
е антăхтарнă пăчлăхра.
Эпир çапах та сывă юлнă.
Вĕсем те сывă... çав чысрах.

Ĕлĕкхиллех хастар та тĕрĕс
тупаççĕ пирĕн çук чире.
Анчах кунçул пире çеç чăн-чăн
теет çак кăткăс тĕнчере.

*1965*

## ТĔЛĔКСЕМ

*Макăртăм эп тĕлĕкре...*
Гейне

Ялан эп, лăпкă чĕрепе
канма выртсан, мĕн çĕрĕпех
хавхаланса та тĕлĕнсе
куратăп ырă тĕлĕксем.

Каçран мĕскер шутлани мар
чуна лăпкать те ачашлать.
Час-час куратăп ялăма —
тăвайккинче йăмра кашлать.

Кассăмăрта, урамсенче —
çăка та хурăн та чечек.
Карти — урамăн варрипе,
вĕр-çĕн çуртсем — ик енĕпе.

Манпа — учитель хĕрачи.
Ирпе-ирех таçти çĕре
Тамарăн килнĕ каясси.
Иксĕмĕр те — вунçиччĕре.

Урам тăршшех аллейăпа
утатпăр ăшшăн калаçса,
тăнлатпăр тĕрлĕ кайăка.
Кулать хĕвел каçса кайса.

Тамара çĕнĕ кĕпепе.
Хĕр сулхăнта кăшт çӳçенет.

Пĕр аллинче ун кĕнеке,
тепри — çӳçне тӳрлеткелет...

Ялан эп тĕлĕк тĕнчинче.
Пулаççĕ тĕрлĕ тĕлĕксем.
Вунçиччĕри ыр самантсем
курнасшăн мар çав кашнинче.

Пĕлетĕп эп: тăвайккинче
тăрать-ха хăрăк хурăнах,
никам та Саврăшпуçĕнче
лартман-ха йывăç урама.

Учитель хĕрĕ тахçанах
тусне пăрахнă инçетре.
Кăлт вăранса куç уçсанах,
эп ватă — çирĕм пиллĕкре.

Çунатлă шухăш çутипе
тек эпĕ мар ĕнтĕ çуталнă.
Ман çамрăклăх кайса çухалнă,
чи ырă тĕлĕк çĕтнĕ пек.

Пăшăрхануллă чĕрепе
канма выртсан, мĕн çĕрĕпех
ман ыйăх çук. Кăшт тĕлĕрсен,
лăскаç хăрушă тĕлĕксем.

Темле вăйсем мăйран пăваççĕ,
чышса яраççĕ çырантан.
Часрах синкерлĕ вырăнтан
каçса ӳкесчĕ те — çук каçă.

Чĕнесчĕ пулăшу — сас çук.
Ак кĕрмешетпĕр. Тăвăнатăп.
Ĕсĕклесе эп вăранатăп —
никам та çук... çук тытăçу.

...Усал е ырă илĕм-тилĕм,
пур тĕлĕк те мана аван.
Тĕлĕксенче мĕскер вăл вилĕм:
куçна уçан та хăтăлан.

*1965*

## ÇЫВРĂР, ÇЫВРĂР...

Çыврăр, çыврăр, йывăçсем.
Çыврăр, çыврăр, пӳрт-çӳртсем.
Çыврăр, бобик-барбоссем,
сас ан тăвăр ял çине.

Урамри шăнкăр шывсем,
çыврăр, кĕмĕл çăлтăрсем...
Эс те, уйăх, тĕлĕрсем,
кайса вăрмансем хыçне.

Çывăр тутлăн çĕркаçах,
Люся, ăслă хĕрача.
Эсĕ пĕчĕк ача мар,
пĕве кĕнĕ çын та мар.

Юрататăп эп сана
пĕр çул мар, вун çул та мар,
эсĕ çураличченех,
сана тĕл пуличченех.

Анчах юлтăм каярах —
яшлăх иртрĕ ыткăнса,
çавăнпа та кăлăхах
эп çӳретĕп кулянса.

Çивĕтӳсенчен салтса
хăюсене эсĕ хур.
Çывăр шухăша манса,
çутă тĕлĕк эсĕ кур.

Кур чӗрӳ кӗтен ҫынна,
хӑв пек ҫап-ҫамрӑккине,
маттурне, шанчӑклине,
уншӑн ӗмӗрне ҫунма...

Ҫыврӑр, ҫыврӑр, йывӑҫсем,
ҫыврӑр, кӗмӗл ҫӑлтӑрсем.
Ҫыврӑр, манӑн туйӑмсем,
ҫыврӑр, манӑн ӗмӗтсем,

эп кайма тапраннӑ чух
ан пӑлханӑр пустуя,
пӑлхансан та усси ҫук —
юлнӑ питӗ те кая.

Ҫыврӑр, бобик-барбоссем,
ҫыврӑр, ылтӑн вӑхӑтсем...

*1965*

## ШĂПЛĂХ

Кăмăллатăп ăна юрăра та,
сăвăра та туяп илемне.
Юрататăп, чунран юрататăп
шăплăха тĕттĕмре итлеме.

Çурхи каç. Кантăк уçă. Пилеш, вĕрене
çĕрĕпех темĕскер канашлаççĕ.
Тĕнчене çупăрлать канăç каçĕ,
савнăç каçĕ савать тĕнчене.

Юрататăп, атьсем, шăплăха.
Тĕттĕмре вăл асамлăхпа тулнă.
Çут асамлăх поэзипе кумлă.
Çапла мар-и, туссем, шутлăр-ха.

Эп каймарăм паян урама,
юриех уява эп каймарăм.
Малтанах, тен, кайма та шутларăм,
юлтăм эпĕ кайран ырана.

Кирлĕ мар нимĕнле юрă-ташă.
Сахал мар хамран хам тĕлĕнеп:
юрататăп, чунран юрататăп
шăплăха пĕр-пĕччен итлеме.

*1965*

## ХАМА ХАМ КАЛАНИ

Çуралсанах эс вилĕм умĕнче.
Эс çавăнпа та тивĕç ăнланма:
никам та тытайман-ха ик тĕнче,
хăй ĕмĕрне те ыррăн пурăнман.

Шăпу пуласлăх аллинче.
Сан çавăнпа та манас марччĕ чыс çинчен,
сăпайлăх, сумлăх, паттăрлăх çинчен.
Сан çăлăнăç — килес ăрусенче.

Çичют вăл çичютах, туссем — туссем.
Йăнăшмашкăн ниепле те юрамасть.
Ыр çынна сан хисеплес пулать,
хăвна ху чăн-чăн çынах тесен.

Эс юрат хăв аннӳне, ыттисенне,
ачуна, çынсен ачисене...
Аллуна ĕç тытрăн-тăк, ĕçле,
вăкăр пек ĕçле, анчах вĕçле.

Малашра çиçмешкĕн май пуртан
тăрăшасчĕ ăслă пурăнма.
Вилĕм умĕнче эпир пурте пĕртан,
тунă ĕç анчах расна, тан мар.

*1965*

## ЮР ÇĂВАТЬ

Вут çунать, шăт-шат! туса илет,
пĕр çĕкленсе, пĕр пусăрăнса.
Унтах лапах сӳнет.
Вара çунать явăнса.

Ташлать тĕрлĕрен мелпе
вучах çăварĕнче.
Сикет, сикет хура мĕлке
хыçра, стена çинче.

Ăна курмастăп эп, туяп.
туймастăп, çук, илтеп:
«Туя, — тет вăл, — туя, çĕмĕрт туя...
Тавай çĕмĕрттерер-и çак туя».

Мĕн туйĕ? Туй? Ухмах.
Мĕн туйĕ пултăр? Вилнĕ. Тахăш вилнĕ.
Ы-ых... сĕрсе вăраххăн, вирлĕн,
хĕлĕх сасси чуна çурса каять.

Ку — сĕрмекупăс. Купăсçи — мĕлке.
Сĕрет, сĕрет, сĕрет вăл ман тĕлте,
хыçра, пуç çийĕнче, ай! пуç çинче,
пуç çийĕнче...

Мĕлке? Мĕнле мĕлке?
Мĕн купăсĕ? Ку — юр çăвать.
Ку — юр çăвать, ку — юр, ку — юр.

Юр çунинче таттисĕр вут çунать,
вут çуннинче хĕрхевсĕр мусăк пур.

Юр витĕр юр ялтрать, Айхи каларăшле.
Çăвать шур юр хуралтăсем çине.
Çăвать шур юр иртнĕ кунсем çине,
туман ĕçсем çине, яш ĕмĕрĕм çине...

*1965*

## ЭРХИП, ЭРХИП...

Чылайччен пымарăм пăлханса...
Карти тĕл-тĕл саланнă.
Хĕрессем кама-тăр ылханса
аллисене кăнтарнă.

Шухăш çак çĕрсен кичем те тарăн.
Армути йĕрет, йĕрет мăян.
тата темле курăксенчен масар пуян,
анчах пĕр йывăç çук. Мăнтарăн...

Масар çине эп килтĕм вырăн пăхма мар,
çап-çамрăкла куç хупма мар пире анне çуратнă,
анчах çыврать юлташ, нумай ĕнтĕ çыврать вăл.
Эп килтĕм ун тăпри çине курма, халаплама.

Вăл вилчĕ. Эп тĕнче касса çӳретĕп.
Сисетĕп: манăн та вăрăмах мар черетĕм.
Сисеп... Лартам-ха çакă хурăна. Каçар,
Эрхип... Тен, çитĕп эп те час,
çитсен ниçта та мар, санпа эп вyртăп
юнашар.

Пĕрле вара, пăхса тӳпенелле,
тĕнче çинчен калаçăпăр мĕн ĕмĕр.
Тăван çĕршыв, искусство, сăвă-çемĕ...
Тавлашăпăр инçе илтĕнмелле.

Каçар, Эрхип. Эс ман чи çывăх тусчĕ.
Тăпру, тен, çăмăл пулĕ шӳтпеле.
Эрхип, Эрхип, ун чух санпа эп çукчĕ,
çапах эпир ялан, ялан пĕрле.

*1965*

* * *

Тĕттĕм çĕр. Уçă çил. Йĕпе тăман.
Пĕр сывлать тĕнче, пĕр куç мăчлаттарать.
Эс шеллен: «Çул тăрăх шыв. Епле эс астуман?
Тухнă атăсăр. Асту... сылтăмарах...»

Хушнă пек, сылтăмарах пусатăп.
Намăс та хама, хаваслă та.
Çил ачи, çил амăшĕ, çакна курса-тăр,
шăхăрать, юрлать те хашлатать.

Калăн çав: вутпуççипе чупаççĕ
такамсем лере, хирте те вăрманта —
хăйă çутисем. Мăнтарăн çурхи каçĕ
вĕççĕр шухăш, туйăм çуратать.

Шăннă эсĕ. Ман хӳтте тăратăн.
Çӳç те сан, питӳ те йĕп-йĕпе.
Кăкăрăм çине питне эс пытаратăн, —
ан пăшăрхан: ку — тăвăл айăпĕ.

Мана мар çак вăхăтра самант та манаймасть
сан чĕрӳ, кăмăлăма хуçать.
Эпĕ урăх килмĕп ĕнтĕ, эсĕ манăн мар.
Юратма пăрахмăп — нихăçан...

*1965*

## ПАРХАТАРЛӐ МЕЛАНХОЛИ

Мĕнре тĕллев? ăçта ман çăлнăç?
Ăçта эп ывăнми хĕрӳ?
Тен, тĕпренех ман пурнăç йăнăш?
Тен, пĕтĕмпех вăл ӳкĕнӳ?

Туртмасть мана уяр çанталăк,
лăплантармасть çипуç, савни.
Эрех вăл маншăн чĕрĕ тамăк.
Укçашăн çук ман савăнни.

Театрта та, пухура та
хĕпĕртеместĕп пыр тĕппе,
йышпа мухтанине хурлатăп —
чĕнместĕп, ал çупмастăп эп.

Чуна касать çухалнă вăхăт,
унти пустуй тĕлпулусем,
хăш чух вăрах, хăш чух пит хăвăрт
телейлĕ вывод тунисем.

Чуна касать чунри тӳлеклĕх,
ытла эп ĕçсĕр пурăнни,
пуçа тултарнă вак-тĕвеклĕх,
çĕнни те киввĕн курăнни.

Кĕрлет манра ниме шанманлăх.
Тинех вăранчĕ чĕмсĕр чун!
Çук килĕшӳлĕх, çук тăванлăх
хампа та, çынсемпе те — çук.

Васкатăп, чăрсăр ыткăнатăп
шав малалла, шав малалла.
Мĕскер эп? Кам эп? Ма пурнатăп? —
çитсе ответ ман тупмалла.

Тулмасть ман кăмăл нихăçан та,
пĕтмест нихçан пăшăрхану.
Эп чарăнмастăп мĕн пулсан та,
вăл маншăн — вилĕм, чарăну...

*1965*

* * *

Нумай пулать ятлаçманни
ют чĕлхепе те, чăвашла та.
Çитес мĕнле самант валли
хама упратăп, ачашлатăп?

Çунса курман хăçантанпа,
сӳни-сӳнми йăсăрланатăп.
майпен пăрахрăм тутанма
йӳç эрехе, сăрана та.

Сиксе ӳкместĕп, тăрăшмастăп.
Темле саланчăк эп куллен.
Çук манăн шĕлепке, çук галстук, —
хуть эс çиллен, хуть ан çиллен.

Сăнра-питре вут-çулăм мар,
ирхи инçе те лăпкă шуçăм.
Юлташ калать: «Çеçке эс, тусăм,
çеçке, анчах та çурăлман».

Курнать хама та: эпĕ — шăпăрт.
Çапла, тен, пĕр-пĕччен ача,
ватса чейник е тăм лаша,
ларать пуль шăппăн, шăкăрт-шăкăрт.

Çак халлĕнех ман пурнăç шутăр.
Мана тӳлек, мана аван.
Кĕтетĕп эп, кĕтетĕп шутсăр
хальччен пулман маттур самант.

*1965*

* * *

Ялйышăмăн поэзийĕ — çăкăр-тăвар.
Ялйышăн вăхăт çук, ĕçлес, çемье пăхас пулать.
Çемьешĕн, çуртшăн ӳкĕнет те çапăнать
ватти-вĕтти. Çӳрет вăл вăр та вар!

Ĕçлев — хавхалану. Вăл çакă хăй поэзи.
Туй тунă чух каллех сикме аван пĕлеççĕ.
Хăна-вĕрле, салтак ачи, ытти-хытти —
поэзи. Сăмакун, сăра е леш, çутти.

Атте-анне, шур çӳçлĕ асанне,
сăмахран, сăйлаççĕ çывăх тăванне:
«Саврăм сана, юратрăм сана,
чĕнтĕм хăнана».

Сăмаххисем, çемми чуна пырса тивет.
Тăхлачă е хăта хĕрӳллĕн ответлет:
«Саврăм сире, юратрăм сире,
килтĕм хăнана...»

Нарспи камне манмаççĕ ял çинче,
анчах поэмине вулать сахалăш.
Тĕп интерес — Нарспи çамрăккинче,
Тăхтаманра, ун кукшинче... Эй, халăх.

Ача-пăча, тырпул та выльăх-чĕрлĕх
ялйышăмшăн — хаваслăх, пурнăç, чĕрĕлĕх.
Ял савăнать çĕн кайăк тупăнсан,
ял макăрать ыр çын харам пулсан.

Çук çумăр тейĕпĕр. Уй-хир, тырпул ĕнет, —
чĕр хуйăх... Е ӳксе вилет ĕне,
е кӳршĕ кинемин чирленĕ качаки.
Çур ял çакна чĕри патне илет.

Ентешĕмсемшĕн сăвăç — мыскарaçă.
Мĕскер шавлать — пĕр турă çеç пĕлет.
Çавăнпа пуль пĕр шая картаççĕ
Миттана, мана та Çеçпĕле.

*1965*

## КĔРХИ УЯР КУНСЕМ

Йĕпе-сапаллă сив инçетĕн
салху çулĕсемпе килсе,
çурхи япшарлăхпа çиçеççĕ
кĕркуннехи уяр кунсем.

Епле хавас çӳретĕп эпĕ
вĕсем килнишĕн савăнса.
Ташлать сар çулçăсен балечĕ
вĕлтĕртетсе те ал çупса.

Вĕрет ăш çил. Эп çара пуçăн.
Тĕнче çап-çутă пĕрмаях.
Хаваслă эп... Анчах та вăрттăн
мĕн-тĕр каять, мĕн-тĕр каять.

Хăçантанпа ăна сăнатăп —
ним кулянмасăр уйрăлать,
ман патăма та, сан патна та
нихçан килмессĕн туйăнать.

*1965*

* * *

Чуна парса эп туртӑнман ӗçке,
çынна та юнаман пустуй, кӑра.
Хӑш хушӑра, пачах сисмерӗм-çке,
çӗтсе кайса эп юлтӑм начара?

Капла ытла та япӑх-çке ӗçсем:
мӗн чухлӗ тус çинче эп — пӗр-пӗччен.
пуçра пин тӗрлӗ шухӑш тӑнӑçем,
хура куççуль чӗремӗн тӗпӗнче.

Малтан писме пуçларӗç пӗлӗшсем.
Унтан — эп çывӑх тенӗ юлташсем.
Вара — туссем. Туссем. Чӑн-чӑннисем.
Кӑмӑлӑма сӑмахсӑр чӑтнисем.

Ман пурнӑçӑн илемӗ хӗрача,
ман пурнӑç тупсӑмӗ те пулнӑскер,
пӑшӑрханса каларӗ, хӑраса:
«Каяс çулу телейсӗр те тискер».

Пуçра пин тӗрлӗ шухӑш тӑнӑçем,
куççуль каять яш чунӑн тӗпӗнчен.
Çӗтмен-мӗн эп, эп тӗрӗс çул çинчех.
Вӑл мӗскӗн мар, вӑл йывӑр та инçе...

*1965*

* * *

Пĕччен чухне хама эп хам хуҫа.
Эп лăпкă. Канăҫлă. Пуҫра...
                                        Пуҫра мĕн чухлĕ шухăш!
Шутланăҫем тата ҫĕнни мĕн чухлĕ тухĕ.
Мĕн чул пулсассăн та ывăнтармасть пуҫа.

Чун-чĕрере татулăх, килĕшӳлĕх.
Эп пурнăҫ техĕмне йăлт, витĕр, ăнланса,
кăмăлăма ҫĕклетĕп ҫӳллĕ-ҫӳллĕ,
ĕмĕтĕмсем те ҫӳллĕ те таса.

Вил шăплăх чĕлхине илтме пултаракан хăват
ҫитсе кĕрет те кисретет мана,
ахаль ҫынран кăвар поэт тăвать:
куҫ хуралать, миме ҫунать, чун пăвăнать.

Эп — Ҫын ҫак пархатарлă самантра!
Эп — чăн-чăн Ҫын, эп — ҫут тĕнче патши.
Ун чух ман пек ухмах, ман пек анра,
ман пек телей ҫӳпҫи ăҫта пур-ши?

Кĕрлинччĕ ҫав телей мĕн виличчен,
килинччĕ ҫĕнĕрен те ҫĕнĕрен.
Ай уйăрăр мана пĕчченлĕхрен,
ан уйăрăр мана шухăшсенчен...

*1965*

## ВĂРĂМ ÇУЛ

Сан патна çул вăрăм — çитеймерĕм.
Çĕр чăрмав тĕл пулчĕ çул çинче.
Пĕрре мар, нумай эп иртеймерĕм
пăрăнса суя этемсенчен.

Сан пирки вĕсем мана ятлаççĕ.
Имĕш, эс тăрлавсăр хĕрача.
Туссемех пăшăрханса калаççĕ:
«Нимĕн чул пĕлмест вăл пурнăçа».

Вĕççĕр иккĕленнĕ самантра та,
ăс епле выляннă вăхăтра,
ыр ятна куç шăрçи пек упратăп,
чарăнмасăр ялкăшса вутра.

Сӳнес теттĕм эпĕ — сӳнеймерĕм.
Манас теттĕм — хурлану иртмен.
Сан патна çывхартăм. Çитеймерĕм.
Тен, çитеттĕм те-и, эс кĕтмен.

*1965*

## ĂС ВĔРЕНТНИ

Пикемĕрсем, каçарăр чăн сăмахшăн:
хăшпĕрисем сиртен, манса сăпайлăхне,
ик-виç качча пӳрне тавра çип пек явасшăн.
Яваççĕ... Çухатаççĕ чыслăхне.

Чыс çухалсан çĕтме пуçласшăн сывлăх.
Тен, апла мар? Каçарăр айвана.
Усал сăмах... мĕн ырри пултăр... çылăх.
Çапах ыйтап çилленмессе мана.

Сывмар сăнра çиçмест хĕвел шевли.
Тута — кăвак. Куçри хĕмсем те сӳннĕ.
Кĕлеткипе те, чунĕпе те йӳнĕ.
Хăш чух вара вуçех хĕр ял кулли.

Сисмесĕрех юлать кая, кая юлсан шăтать каю,
йĕрсен те, татăлсан та таврăнмаççĕ иртнисем.
Кĕç çивĕтсем туса çыхса ярать хăю,
вунçиччĕри хĕр пек курнас тесе.

Çамрăклатасшăн уттине те, куллине те,
анчах утти суя, анчах кулли чăн мар.
Куллен сăнатăп, хытă кӳренетĕп,
виçесĕр тарăхатăп, чун — кăвар!

Пикемĕрсем каçарăр чăн сăмахшăн:
хăшпĕрисем сиртен, туйса хăй хитрине,
ик-виç тусне пӳрне тавра çип пек явасшăн.
Явсассăн çухатаççĕ чыслăхне.

Хӗрсем, хӗрсем, черченкӗ чечексем,
çут яшлăхăн илемӗ, чысӗ, чапӗ,
çут яшлăхăн вут-çулăмӗ, асапӗ,
маттур ача-пăчан пулас амăшӗсем,

çапла ытла та ир çеçке тăкма юрать-и?
Типсе хăрма? Чунпа шăнса ларма?
Çурхи каç пек çамрăклăхран юрать-и
тарма? Вăйпах чупса тарма?

*1965*

## ИМПРОВИЗАЦИ

Эпĕ кайсан,
çула тухсассăн каçа хирĕç
инçене,
чуна чĕреççĕ, тăрмалаççĕ шухăшсем.
Юлатăн эсĕ тĕтрере çĕтсе.
Куллу — юлмасть, таттисĕр илтĕнет
çуттăн, тасан.
Санпа сывпуллашатăп
сахаллăха, нумайлăха.
Пĕлетĕп: нихçан каяймăп
яланлăха.
Çук... Кайăп эпĕ, çапах та кайăп,
таврăнмăп, хĕрелмĕп вăтанса,
пăлханмăп, çулăмланмăп, туймăп айăп,
анчах халь мар,
çут тĕнчерен кайсан...

*1965*

* * *

Пĕчченлĕхе мухтасшăн çунса мар
хам пĕчченни çинчен час-час юрлатăп.
Пĕччен юлсан эп хамран хам хăратăп —
татса пăрахасран пурнăçăма.

Чĕре сурать — юнланнă, ĕннĕ ластăк, —
çурсассăн çурăлать, чĕрсессĕн чĕрĕлет.
Эп юррăма çынсемшĕн юрламастăп,
юрлатăп вăй кĕртесшĕн чĕрене.

Нумай-ха унăн курмалли те тӳсмелли —
çапла ман шухăш, манăн ĕмĕт. Тĕрĕс-и вăл, çук-и,
калатăп эпĕ: çăмăл мар-ха çĕнмелли,
парăнмасассăн çеç малашлăх çутă.

Ман кăмăл çук нихçан та парăнма.
Пĕччен юлсан çеç хамран хам хăратăп,
хам пĕчченни çинчен пăшăрханса юрлатăп,
манатăп паттăр пурăнма...

*1965*

* * *

Ытла та ир эп ывăнтăм, ытла та.
Ĕшеннĕ чун сивлеккĕн çӳçенет.
ăспуç аптранипе кирек мĕскер шутла та,
ытла та ир эп килнĕ çĕр çине.

Мана хальхи туссем ăнланаймаççĕ.
Чее, чăн мар манпа хальхи туссем.
Вĕсем айкашуран мала каймаççĕ,
айкашура вĕсен телейĕсем.

Тĕллевлĕ е тĕллевсĕр айкашаççĕ,
вăл маншăн пурпĕр пушă япала.
Ăмăртлансах пĕр хăйшĕн аташаççĕ...
Ман урăх çул, инçе ман каймалла.

Пĕрне те туссенчен хампа илсе пулмарĕ.
Илни пустуй — юлаççĕ тăвăнса.
Пĕри те юратса саламлăн йăл кулмарĕ.
Те çавăнпа ир ӳкрĕм ывăнса.

*1965*

* * *

Манпа ĕçсене татсассăн,
сан урăх ĕçсем пуçланчĕç,
анчах та эсĕ тупмарăн
манран шанчăклă анчăк.

Сан ман пекки пулмарĕ.
Кашниех улталарĕ, кулчĕ.
Эпĕ çеç ĕненеттĕм, çунаттăм,
ма тесен пирвайхи юратуччĕ.

Санпала ĕçсене татсассăн,
ман урăх ĕçсем пуçланчĕç:
шанчăклă анчăк авланчĕ,
санпала ĕçсене татсассăн.

Вăл Поэзие качча илчĕ.
Поэзи çилпе пĕрех-мĕн:
ирĕклĕ те хăватлă,
«анчăк» чĕринче çӳрет вăл.

Санпала ĕçсене татсассăн,
савнисем нумайланчĕç кайрĕç.
Пĕри те лайăх, тепри те...
Кĕвĕçӳ, кӳлешӳ пуçларĕç.

Пурне те пĕр пек савмашкăн,
хисеп тумашкăн шутларăм,
анчах та эпĕ авланнă —
Поэзи манăн арăм...

*1965*

## ПОЭТ

Чунри кăмрăксенчен çут çулăмсем чĕртсе,
миçемĕш хут алла перо тытап,
миçемĕш хут, хама туртса çурас патне çитсе,
чăр-чар! çуратăп айăпсăр хута.

Эй, туйăмсăр, ĕçхĕлсĕр ăнланманлăх,
мĕн-ма çаплах эс хĕсĕрлен мана?
Хăçан эс пулмăн ман тавра, çухалăн,
хăçан эп тӳсмĕп мăшкăлна?

Алчăраса, ниçта кая пĕлмесĕр
çӳретĕп çĕрпе пĕлĕт хушшинче.
Шухăшăмсем — кăвар, туйăмăмсем —
хӳтлевсĕр.
Ялан эп — вилĕм умĕнче...

*1965*

## ВĔÇĔМСĔРЛĔХ БАЛЛАДИ

Тул пуссинче çап-çамрăк пĕр хĕрарăм
хуллен тыр вырнă çивĕч çурлапа.
Каçалăкне аран-аран вăл каçнă.
Пĕччен вăл пулнă, такампа калаçнă.

— Ой-ой! — çĕмел çумне пырса хĕрарăм
илемсĕр тĕршĕннĕ, сывланă тарăн,
тарланă, пичĕ çуннă çулăмпа.
— Эй, турăçăм, ма юлтăм, ма каймарăм?

Çав хушăра пин çухрăм анăçра
салтак хăрушшăн ӳкнĕ вăрçăра.
Анчах, ак, çитнĕ сасă инçетрен:
«Уа! Уа! Уа!»... Çавтер хитрен.

Салтак чакман. Илтсе çав макрăва,
хаяр çĕкленнĕ çĕн çапăçăва...
Сахал-и çичĕ ют пире вăйпа хăратнă?
Сахалăш-и эпир çапла çуралнă?

*1965*

* * *

Эс мана ютпа улăштарсассăн,
пĕтĕмпех хăвна юта парсан,
умăмран мăнаçлăн, хăрамасăр
унпала пĕрле иртсе кайсан,
юлтăм эпĕ ним тума пĕлмесĕр
пĕр-пĕччен çак çутă тĕнчере.
Юратусăр, савнăçсăр, телейсĕр
вĕçсĕр-хĕрсĕр ялкăшрĕ чĕре.
Йывăррăн капланчĕ курайманлăх.
Кайрăн эс. Çул хыççăн чупрĕ çул.
Пулчĕ тем те: çĕнтерӳллĕх, мăнлăх,
çĕнĕрен çĕн тус. Чăн юрату çеç çук.
Пирвайхи те эсĕ, юлашки те.
Анчах мантăм сана инçетре.
Çĕркаç темшĕн асăма эс килтĕн,
халĕ ху тăратăн пӳлĕмре!
Сӳрĕлчĕ, саланчĕ курайманлăх.
Эсĕ тап-таса пирвайхилле.
Чĕремре юлташлăх та тăванлăх.
Юрататăп эп сана каллех.
Сан çинчен куçа илме хăратăп.
Курăнать куçа илес пулсан:
эс мана ютпа улăштаратăн,
пĕтĕмпех хăвна юта парса.

*1965*

## ЯЛТА

Аякра мĕнле аван пулсассăн та,
хăпаймастпăр пуль ялтан.
Ялйыша, киле, вăрмансене, сада
вилес пек эп тунсăхлап ялан.

Лăпланмасть çав тунсăх, чарăнмасть.
Манăçмаççĕ, пăлхатаççĕ чунăма
алхасса, час-час тӳпелешсе
пĕрле ӳснĕ тантăшсем.

Ялăн-йышăн çийĕ питĕ, хырăм тутă. Хĕпĕртетпĕр.
Ĕнтĕ килренех-мĕн тимĕр витнĕ çурт.
Урамра асфальт пулсанччĕ тетпĕр.
Урăх ĕмĕтсем те пысăк та çап-çут.

Акă манăн кил. Çич ывăллă атте-анне,
те савăнса, те хурланса, пусать качакине.
Хăна тăвасшăн. «Килтине» тупаççĕ.
Илеççĕ «çуттине» укçа шелле-шелле.

Кĕрхи хĕвеллĕ ăшă çиллĕ сад!
Эп туслă унпала мĕн ачаран.
Ача чухне чухăнлăха илемлĕн пытарса
мухтатчĕç пурнăçа, вăл «тулăх» пулнăран...

Хăй çутсан клуба вăййа тухатăп —
татăк плащлă хĕрĕнкĕ студент.
Клубĕ çамрăк, кĕвви-юрри ватă,
вальс ташлатăп чунăм каниччен.

Тантăшсем пыман. Авланнă. Çурт тытаççĕ.
Уйăхлă-и, лăпкă тĕттĕм каç-и,
урама ямаççĕ çамрăк арăмсем,
вĕсене ямаççĕ пĕчĕк ачисем.

*1965*

* * *

Такăнтăм. Çакна нумаййăн курчĕç.
Такăнтăм, анчах та ӳкеймерĕм.
Кулчĕç, йĕкĕлтерĕç, ура хучĕç.
Эпĕ чут ӳкеттĕм, ӳкеймерĕм.

Ĕнтĕ юлтăм сывă — хуçаймарăм
ĕнсене, пуçа та çураймарăм.
Ачаллах ăнлантăм: нихăçан
пĕчченçи ан тух-мĕн çырăн-варăн...

Çăмăл мар, кĕске те мар кунçул ташши.
Эп ăна ташлап пуçтах, чисти алпастă.
Эп сире, туссем, усал сунмастăп,
ма эсир усал сунатăр-ши?

*1965*

## ÇĔMĔРТСЕМ ÇЕÇКЕРЕ

Эсĕ ху та туян куçкĕретĕн:
санран сивĕнтĕм эпĕ хĕллех.
Эс мана ахалех кӳренетĕн,
куçупа хĕм сапан ахалех.

Халь хĕл мар, çуркунне. Эп ыйтатăп:
мĕн тăвас-ха каллех сан патра?
Урăхне чĕререн юрататăп
çĕмĕртсем çеçкери самантра.

Чӳхенеççĕ шап-шур, ырлăх-сывлăх сунаççĕ,
тăршшĕпех — çĕмĕртсем, çĕмĕртсем.
Таврăнас-и, каллех роль выляс-и
кивве юлнă вăййа çĕнетсе?

Нихăçан та! Ахаль кӳренетĕн,
куçупа хĕм сапан ахалех,
ахалех хăвна ху ĕненместĕн.
Урăхне кăмăлларăм хĕллех.

Çавăрма... Çавăрмашкăн пулмарĕ.
Çĕркаç хуçрăм шур çĕмĕрт çеçки.
Парнене хĕрача йышăнмарĕ.
Тĕлпулу ман ăнмарĕ каçхи.

Кăнтăрла та ăнмарĕ. Ăнмарĕ.
Хĕрача кăмăллать урăхне.
Хăй çапах çилленсе пăрăнмарĕ, —
тавтапуç... тавтапуç... ĕрехмет.

*1965*

## ÇĔР ХĂЛĂПĔ

Хăрушшăн ахлатать Мускав.
Çухăрашать хаваслă Гитлер.
Ун акăш-макăш савнăç çитнĕ:
Мускав чакать, каппут Мускав!

«Мускав Германи аллинче», —
ак Берлинран хыпар саланчĕ.
Çĕршыв чĕри! Пĕртен-пĕр шанчăк!
Сан куçунтуан пăхать тĕнче.

Чăнах та пĕтрĕ-и халу?
Епле ытла та час хавшалтăн?
Мăкалчĕ-и хĕçпăшалу:
Аран-аран-çке юр ашатăн.

Мĕн-ма çуран. Мĕн-ма утпа?
Танка таптас пулать танкпа.
Кам-ши, мĕнле пуçпа тапранĕ
тигрпа вăрçма хăр патакпа?

Тапранчĕ çав. Вăл Мускаврах
çӳрет. Вăл пулчĕ çирĕп, паттăр:
«Урра, урра, туссем, вăй патăр.
Çĕнетпĕрех, вататпăрах!»

Çĕршыв ăна: «Аттемĕр», — терĕ.
Учитель. Çут хĕвел. Çулпуç.
Чăнах та, акă, çĕр чĕтрерĕ,
вут çапрĕ, аслати кĕрлерĕ!
Хаштах сывларĕ аслă Русь.

Таттисĕр çар килет, килет
хăватлă çар, вĕр-çĕнĕ çар.

Мускав кулать, Мускав итлет,
пăхать тивлетлĕ тухăçа.

Маттур, патвар сибиряксем
штыкпа тирме ăста пĕлеççĕ.
Инçе каппайчăк тăшмансем,
Мускавшăн антăхса ӳлеççĕ.

Учитель, çут хĕвел, çулпуç
постран каймарĕ, пуç усмарĕ.
Гимнсем юрларĕ аслă Русь,
аттемĕр Сталина мухтарĕ.

Сив енсенче, çĕпĕрсенче
концлагерьсем кунран-кун тулчĕç,
коммунистсем салхуллăн кулчĕç
пиншерĕн çав тĕрмесенче.

Сайралчĕç Ленин çыннисем.
Ют çĕршывра кĕрешрĕ Зорге.
Тăван тĕрмен чул стенисем
ăна кĕтсен-кĕтсен ал сулчĕç.
Ют тĕрмере ун шăммисем.

Çĕр хăлăпĕ... Ăна тупса,
пĕлтерчĕ Зорге Мускава.
Мускав, çав хăлăпран тытса,
салатрĕ тăшмана тапса.

Тăван тăпрашăн тилмĕрсе
инçе халь Зорге тĕлĕрет.
Японие хыт тишкерсе
секрет ямасть вăл тĕрлĕрен...

*1965*

## ÇĂЛТĂР

Миçе хутчен сана çухатрăм,
ал султăм шанчăк пĕтнĕрен,
мĕн чуль кĕллентĕм, ĕмĕт татрăм, —
эс тупăнатăн çĕнĕрен.

Эс тупăнатăн, йăлкăшатăн
унччченхинчен маттур, хитре,
яланлăха асра юлатăн
кашни тĕл пулнă сехетре.

Санăнни пек йĕркеллĕ кăмăл
çуках-тăр пĕтĕм тĕнчипе:
типтерлĕ, ырă, çутă, çăмăл,
хаваслă, çулăмлă... чипер.

Туртать мана вăл чарăнмасăр
асамлă вăй туртăмĕпе.
Эп кашнинчех, эс çухалсассăн,
туятăп пурнăç пĕтнĕ пек.

Вылятăн эс, вылятăн лайăх.
Пĕлместĕн хăв вылянине.
Нивушлĕ сӳнĕн те тупаймăп
сана эп урăх ĕмĕрне?!

*1965*

* * *

Ĕнтĕ иккĕ сывлăх сунтăн
именсе, пуҫна пĕксе.
Эпĕ шăппăн тинкеретĕп
ăнланмасăр, тĕлĕнсе.

Утнă майăн шаклатаҫҫĕ
пушмакун ҫӳл кĕлисем.
Ҫивĕтре чĕтреҫҫĕ ыррăн
шурă-шурă хăюсем.

Никампа та кĕҫĕр вăхăт
шутламанччĕ ирттерме.
Никама та каламанччĕ
хамăн вăрттăнлăхсене.

Эсĕ сиснĕ, эсĕ пĕлнĕ,
те сăнран, те туссенчен,
ҫивĕтре хăю курсассăн
эп вилсех кайни ҫинчен.

Пуплемесĕр ниепле те
ун чухне эп ҫынпала
уйрăлса каяйманне те
пĕлнĕ... Кăсăк япала!

Ĕлĕкрех ҫаплаччĕ эпĕ.
Халĕ — «ăслă та маттур»:
ыттисем ҫине пăхмастăп,
ма тесессĕн хамăн пур.

*1965*

## ЭПĔ ÇЫРАТĂП

Ăсталăр, шаккăр тимĕр,
чупкалăр кунĕпе.
Ан кансĕрлĕр, ан килĕр —
çыратăп кĕнеке.

Чертежсене пăхкалăр,
купалăр çурт чулран.
Пĕр хăвăрах сухалăр —
çынсем çинчен çырап.

Çын çитмесессĕн тăхтăр —
эп çитĕп хашкаса.
Инкек пулсан ан тăрăр
çăварăра карса.

Ĕçсем пĕтсессĕн эсĕр
пит шавлăн иртекен.
Асапăма хисеплĕр —
çыратăп кĕнеке.

Пĕлетĕр, пурнăç çĕнĕ,
хăй тĕллĕ кашниех.
Ĕçке мана ан чĕнĕр,
ĕçе чарать эрех.

Ĕç пĕттĕр, вара килĕр
пĕрийĕ юлмиччен.
шăв-шав лăпланмĕ пирĕн
ирччен...

*1965*

# ЮЛАШКИ ЮН ТУМЛАМĔСЕМ

*Поэма*

*Эп урăх пултараймастăп,*
*Революцие пĕтме ан парăр.*

Çеçпĕл

Ман мĕн ĕç пур, те эсĕр йăнăш,
те тĕрĕс тунă ун чухне:
тăшман тесе хупса усранă
кăвар пек Çеçпĕл Мишшине.

Ман мĕн ĕç пур, те çĕнĕ сирĕн,
те кивĕ пулнă самана:
юнанă, пуç ярасшăн çуннă
эсир çап-çамрăк ачана.

«Каçарнă» та хуса ăсатнă
ĕмĕрлĕхе Шупашкартан.
Вăл асапланнă, тӳснĕ мăшкăл,
вăл курайман сире чунтан.

Пăтранчăк тинĕс кĕрлевне
поэзие куçарнă майăн
хăй пĕтессе вăл туйнă лайăх,
яр-уççăн курнă мĕншĕнне.

...Хаяррăн тинĕс, Хура тинĕс,
кĕмсĕртетет çырансенче.
Вăл сан ачу халь ĕнтĕ, тинĕс,
Украйна ывăлĕ вăл халĕ,
çыврать Украйна чĕрçинче.

Хутне кĕмешкĕн май пулмарĕ.
Эп килтĕм хĕрĕх çул кайран.
Эп куртăм: поэта чыслаççĕ,
ятне çĕклеççĕ пур вăйран,
анчах ытла та кая юлнă,
ытла салху-çке шавлани —
чечек типсе хăрсан, каç-ирĕн
канма пĕлмесĕр шăварни.

Миçе ăру ӳссе ан çиттĕр,
поэт — çав тинĕс хĕрринчех,
унтан — Кейӳ, Остер енче.
Хыпар, хыпар кĕтет пĕр вĕçсĕр —
Тăван çĕртен, Шупашкартан.
Хыпар илмесĕр таврăнмашкăн
çук унăн ирĕк, çук сăлтав.
Вăл — Данте. Байрон вăл. Овидий.
Вăл — çав пăлхавлă ушкăнтан!

## ÇЕÇПĔЛ МОНОЛОГĔСЕМ

### Сиртен канаш ыйтасшăн эпĕ, Ленин

Эп — Çеçпĕл — пăр çапнă çеçпĕл.
Мĕн ачаран мана туберкулез кăшларĕ.
Шăмшак татти-сыпписĕр сурчĕ, пуç кашларĕ.
Эп ырă кун курман...

Ман çеç-тĕр,
пĕр манăн çеç ытла айван ăс-кăмăл:
кăварлă чунăма ниçта хума пĕлмесĕр
васкавлăн тăхăнтăм хăрушă хăмăт,
поэзи хăмăчĕ, ахаль пĕтес темесĕр.

Ылханлă, кивĕ, çĕрĕк самана!
Эс — çуклăх, выçлăх, мĕскĕнлĕх çăлкуçĕ.
Чир чустипе эс çăртăн юнăма.
Кама кам çăтĕ — тăтăм куçа-куçăн.

Шĕл кăварпа тултартăм юррăма,
харампыра аçа пек çаптăр терĕм.
Ĕççыннине, савса, чунран хистерĕм,
чакмашкăн, терĕм, шит те юрамасть.

Чăваш чĕрĕлнине курас килетчĕ.
Эп хамшăн пурăнман, вилме çеç хамшăн вилнĕ.
Эп — Çеçпĕл — çĕн чăвашăн çĕн поэчĕ,
тин шăтнă çеçпĕл, — мĕскĕнсен шăпиллĕ.

Пăр çапнă çеçпĕл эпĕ. Революцин
Чăваш çĕршывĕнчи хĕçне мана парсассăн,

пĕрле ĕçлекенсем ялт! сикрĕç: «Ют çын!» —
теме пуçларĕç ман пирки пĕр саслăн.

Аппаратра ларатчĕç. Коммунист.
Çап-çутă атă. Чаплă сăсар çĕлĕк:
«Кам иккенне сисмен пулсассăн сис —
пире дворян тесе каланă ĕлĕк».

Керменсене вырнаçрĕç «дворянсем».
Çуран утмаççĕ. Сăрлă çунапа
саркаланса пыраççĕ. Учĕсем
улма чăпар, — вĕçеççĕ юртăпа.

Рабочипе хресчен выçса çитсе аптранă,
пурăнăçне сыпăнтарасшăн чун хĕнет.
Арканнă, юхăннă хуçалăхне аран вăл
тăраткаларĕ-ха ура çине.

Миллионшар хĕрлĕармеец выçă, çĕтĕк,
Тăр-тăр-тăр-тăр! чĕтрет шартламара.
Ман юлташсен — ăш кĕрĕк, сăсар çĕлĕк.
Ăçтан капла, мĕнле майпа вара?

Ман кивĕ шинеле çĕр саплăк лартнă.
Ман урара çап-çутă атă мар.
Эп вăрламан, коллегăсем — вăрланă.
Путвал пек пӳлĕм, нар — хваттерĕм ман.

Çакна сире каламăттăм эп, Ленин,
эсир те тутă пурăнман ун чух,
сире те наркăмăшлă пуля иккĕ лекнĕ.
Эп хамшăн мар, ӳпкевĕм хамшăн çук.

Эп çирĕм пĕрререччĕ. Тен, хĕçне те
тытмашкăн пĕлеймерĕм пит ăста.
Ӳксен те хăрăлтатрăм эп: çĕнетпĕр!
Фанатик пултăм ачалла ăспа.

Эп хамшăн мар... Асра — çĕн тепĕр тапхăр.
«Варфоломей каçне» çакланнă паттăрсем,
сире, сире тăхлан та вут, юр та пăр
ăçтан хупларĕ-ха, ленинçăсем?

Тăшманăрсем мĕн-ма пуртех явап тытмарĕç?
Элекçĕсем мĕн-ма халь те пулин
пуçа усса тĕрменелле утмарĕç,
çӳреççĕ йăл кулса халь те пулин?

Сиртен канаш ыйтасшăн эпĕ, Ленин.
Çав улпутсем пĕркеннĕ сирĕн ят
хăçан яланлăха чăн ленинла çĕкленĕ?
Хăçан тĕп пулĕ тĕрĕс пек суя?

## Пурнăçпа вилĕм кĕвви

Мĕскер-тĕр, питĕ ырăскер, таçта кайса çухалчĕ?
Мĕскер-тĕр, хуйхăллăн, нимле сăмах чĕнмесĕр,
асилтерсе тăрать: «Вăл вилчĕ, ун хăват сахалччĕ».
Тен, çавăнпа эп пурăнас теместĕп.

Çук курайманлăх, çук хыпса çунни те.
Вăл вилчĕ, çĕтрĕ — кĕрешес хастарлăх.
Çав уйăх çурă тĕрмере ларни те
çителĕклĕ иккен мана хуçмалăх.

Эх, айванкка... ма кашкăр моральне пăсатăн?
Пĕччен пуçпа эс нимĕн те тăваймăн.
Хăй пек юрламасан, хирĕçлеме пăхсассăн,
мещен ытла та хытă тавăрать-мĕн.

Вĕсем вăрларĕç, эпĕ вăрламарăм.
Вĕсем пытарчĕç, эпĕ пытармарăм,
влаçа улталамарăм, взятка, тĕрлĕ парăм
пухса, арча тĕпне хурса пымарăм.

Патшанни пек мăн кăмăл — турă лартнă тейĕн
ĕмĕрлĕхе çав пысăк вырăна.
Лач! çеç сурса хăш еннелле иртейĕн —
пĕрле ĕçлен иккен те... парăнан.

Парăнмасан элек айне тăваççĕ,
парăнтараççĕ, сăлтавне тупаççĕ:
эп Хусанта чухне юстици уйрăмне
хыптарчĕçĕ вут-çулăм çăварне.

Ĕç хатĕр: хĕтĕртсе эп вут тĕрттернĕ;
суя хутсем, хура ĕçсем ман йышлă пулнă,
эп çавсене вут-çулăмра пĕтернĕ;
хĕтĕртнине Миронов илтнĕ, курнă.

Тăм писменсем допрос пекки пуçларĕç.
Эп тарăхса тăрăхлама пикентĕм:
техничкăна, ват карчăка, пике теп;
ăна, теп, тахçанах савса куçларăм.

Юстици çурчĕ çеç-и, Шупашкар, Чека
çунма пултарĕç тетĕп, çирĕп сыхлăр.

Юстици мĕн вăл... çунчĕ... пысăк-и ку çылăх...
Питрен сурас килет чиновника.

Тĕнче пуш-пушă... Приговор, тĕрме...
Дневник, дневник... ăна вĕсем вулаççĕ;
чуна пырса кĕрсе тислĕклеме,
вуланă май ихĕлтетсе кулаççĕ.

Идеалист эп. Идеализм — чĕр вилĕм
çак суккăр та хăрушă вăхăтра.
Айван! Тӳркăмăллăх, тăванлăх ыр кĕввиллĕ
гармонисем шырарăм эп çынра.

Хĕрарăма савса телей курма вăскарăм.
Эп ирĕлтĕм вăл кăшт япшар чĕнсен.
Урăххине чунран хисеплесе,
мана та вĕçертмерĕ çав хĕрарăм.

Ăна çут çăлтăрăм, хĕвелĕм теттĕм.
Вăл — манăн çуркуннеччĕ, пурнăç ман.
Хам пысăк вырăнти çинчен пĕлтертĕм —
тус савăнчĕ, хистерĕ курнăçма.

Куллен çыру килетчĕ. Халь пăчланчĕ.
Халь, эп çӳл вырăнтан персе ансан,
хут татăк те ямасть, пĕр татăк, лăнчăр-ланчăр...
Епле — çын уçăмлă, епле — ансат!

Çапла ансат эп пулаймарăм ĕнтĕ.
Çын пек эп пулаймарăм ниепле.

Пуçра — çăра тĕтре, чунра — пăрланчăк ĕнтрĕк.
Те пурăнап, те çук эп... тенепле.

Ни ватă мар, ни çамрăк, ни арçын... такам эп.
Пуçа та çĕклейместĕп — чир иртмест.
Çапах та çăпата сырса пӳртрен тухам-и,
ун чух та пусмăрлан-ши, вилĕм, эс?

Эп мăшкăла юлса çын куллинче вилетĕп.
Эп — пĕр-пĕччен, пушхирти пек пĕччен.
Киле çитсе вилес, ямаççĕ çав киле те.
Хура куççуль тумлать, тумлать чун тĕпĕнчен.

Искусство, кĕнеке, поэзи — манăçра.
Веç манăçра — эп хама хам та мантăм.
Эп вилмеллех, ĕмĕрлĕхех амантăм.
Эп ытлашши çак тăвăр пурнăçра.

Тӳрккес те намăссăр эп пулмаллаччĕ, пурнăç,
çын куççульне курмасăр çӳреме.
Эп пĕлеймен — мĕн ачаран эп курнă...
Таткаласа вута пăрахрăм чĕрене.

...Епле вăл йĕрĕнчĕк, йăлт, витĕрех туйса,
ху вилнине пăхса тăмашкăн,
хĕрарăма, çав инçетри туса,
сывпуллашса ӳпкев ямашкăн.

Сыв пул, «аппаçăм» Нуся, ална сул.
Сан айăп мар, эп — ăслă пулаймарăм.
Эп — яш — йĕпе сăмсаччĕ, эс — хĕрарăм.
Ĕмĕрлĕхе каятăп, сывă пул...

## Элекçе

Миронов, эс ухмах çын мар,
эс ăслă, сан çиллӳ çеç ăссăр,
анчах хăравçă эс чунпа.
Сан час вĕçет хуха та сăсăл.

Мана кайса сутсассăн лартăн
сахаринпа эс чей ĕçме.
Сисмерĕ ку тесе шутлатăн —
ай-ай маттур та чее-çке!

Ун чух та, халь те, çĕр çултан та
туятăп витĕр эп сире.
Мироновсем! сутма сутатăр,
сехрĕр хăпать сутмассерен.

Вуншар çултан киле-киле
куçăрсенчен эп чăр! пăхатăп.
Чĕрĕр пулса каfive пăр татăк,
чĕлхĕр «эй, турă» текелет.

Анчах та пулăшмасть çав турă.
Эсир ун чаплă ывăлне
тĕнче пуçлансанах тĕп тунă:
пурнать легенда, кивелмест.

Хура чунăрсене тыттарнă
эсир чи çăткăн шуйттана.
Миронов, эс мана хуптарнă,
унтан «хăтарнă». Эс сив тарлă.
Çапах та ху çын шутланан.

Чейпе кăна-ши эс тарларăн?
Чейпе тухать-ши сивĕ тар?
Сан ман умра виçесĕр парăм.
Çухал! Сан пек эп мĕскĕн мар.

## Çĕнĕ шанăç

*Çеçпĕлĕн «Çĕнĕ шанăç»*
*ятлă сăвви пурччĕ,*
*çухалчĕ те, тупма пулмарĕ.*
Ваçанкка

Чĕрем, ан кулян-ха, ан татăл,
пĕр эпĕр çеç мар тĕнчере.
Ирех хум хăвалать, ав, мăн Атăл,
ирех саламлать вăл пире.

Пăлхан та шавла, аслă Атăл,
ан парăн, ан парăн, чĕре.
Йăваш эс ан пул, эс пул паттăр,
чĕнме ан пăрах çĕн çĕре.

Чунра капланать çĕнĕ шанăç.
Çĕршыв вăранать, чĕрĕлет.
Ултавçă чунсен пăкки шанĕ.
Айванлăх тĕтри сирĕлет.

Вуншарăн, çĕршерĕн çĕкленĕр,
çĕршывăн хĕрӳ ачисем,
чее, тĕрлĕ тĕслĕ çĕленĕн
пуçне лапчăтма килнисем.

Хастарлă, хыт утăмлă пулăр...
Эп таврăнăп, килĕп часах.
Çĕнне мухтаса юрă юрлăр,
юр юрлăр чыса мухтаса.

Каллех тăвăлсем илĕртеççĕ.
Вилмешкĕн тухмастăп çула.
Сыв пул, Шупашкар, сыв пул, Теччĕ,
Çĕршыв, сывă пул, сыв пулах.

Мана эс, çĕршывăм, хурламăн.
Каçарăн эс те, ват анне:
Чăвашшăн чуна памалла ман,
Çĕршывшăн — вута кĕмелле.

## Выç псалом

*Çеçпĕлĕн «Выç псаломĕ»*
*пилĕк сăвăллă пулнă.*
*Вĕсене тупма пулмарĕ.*
Ваçанкка

Кивĕ кунăн шăмă алли
хĕрес çумне çĕршыва пăталарĕ.
Тип шăллă выçлăхăн çăварĕпе
çĕршывăма кышлать, кышлать, кышлать.

Халăхăм тĕнче тăрăх саланчĕ.
Çĕтĕк-çурăк çынсем — чăвашсем —
ах, пиншерĕн çул тăрăх сулланчĕç,
ӳкрĕç, хытрĕç, тăмарĕç ӳксен.

Шăммипе тирĕ çеç, тирĕ те юнлă-пӳрлĕ.
Шăна пек тăкăнаç шартлама сивĕре.
Станцăран вĕсене çунапа турттараççĕ
вутă пек пăрахса... Ал-ури сĕтĕрнет.

Чунĕсем тухайман мĕскĕнсем-тăвансем,
çарапуç, çараçан, çаруран,
çап-çара çунаран уртăнса, тиенсе,
илтĕнми ахлатаççĕ, сывлаççĕ аран.

Пасарсем çăкăрпа, салăпа тулса ларнă,
мĕльюншар тенкĕпе сут тăваççĕ унта.
Украина! Кейӳ! Кур — чăваш сусăрланнă.
Çăкăр пар! Ма курмасăр утан?!

* * *

Пĕрене пӳртсем — тар тертлĕ пӳрт-çуртсем —
ыйткалаканла халран кайса пăчланчĕç:
хăрса хытса выртаççĕ, чирлесе выртаççĕ,
вилсе выртаççĕ выçă анасем.

Выçлăхран тарма хал çук çынсем
шыçăнса кайса пӳртрех лăпланчĕç.
Ял çинче юлмарĕ выльăх мар, пĕр анчăк,
йăлт пĕтерчĕç, йăлт, пусса çисе.

Çăвара хыпма юраманни те
çăвара кĕрет, кавлеттерет.
Питĕ тутлă, питĕ тутлă, питĕ...
Авкалать-хуçать те çĕмĕрет.

Пĕчĕк ачасем ĕмеççĕ типнĕ кăкăр —
хулăран çинçе ал-урисем.
Кĕсенне хыçма та кăтăр-кăтăр
хал çуках иккен мăнтарăнсен.

Сарă инкесем типсе çунса кĕлленнĕ.
Мĕлке пек çӳрет хĕрипăраç.
Ял çинче унччен каç-каç кĕрленĕ
юрă-сăвă вилнĕ, янрамасть.

Уй-хирте, урамра — вилесем.
Пуçтармаççĕ, çын çук, пуçтармаççĕ.
Йывăр, йывăр... ах, чун... пуç пăчланчĕ.
Укăлча патĕнче — вил-шăмсем.

* * *

Айваннăн Атăл ахлатса выртать,
сар хумĕсем çӳп-çаплă, çĕтĕк-çатăк,
чун хавалпе вăраххăн йынăшать. Мĕскĕн Атăл
Çĕршывăмшăн пĕр сассăр макăрать.

Ах, Атăл, Атăл, лăплансам, ан макăр.
Тен, пулăшма мел тупăпăр, тăхта.
Çĕршыва тамăкран çăлмасăр
ачин канăç пултăр ăçтан?

Анчах эпĕ хам та инçе çав,
выçса тĕмсĕлетĕп куллен.
Киле ĕмĕтсем ман вĕçеççĕ,
хыпар илейместĕп килтен.

Çапах та эс, Атӑл, ан макӑр,
мана эсӗ, Атӑл, каçар:
сана шеллесе ку эп, акӑ,
йӗрме чараймастӑп куçа.

* * *

Шӑм выçлӑх аллинче çӗршывӑмӑн чӗри.
Пӑрпа пӑрланчӗ уяр чечеклӗ шанчӑк.
Чӗресенче талса çухалчӗ, ах, пытанчӗ
анчах пуçланнӑ чӗрӗлӗх юрри.

Çӗршыв чӗри тапма чарӑннине
илтессисем те çитӗç-ши, эй, пурнӑç?
Пӗр выçлӑх çеç-ши çӗршыва тӗп турӗ?
Камсем ӑмсанчӗç эс чӗрӗлнине?

Мана хама тата камсем йӗрлерӗç?
Каллех пуç пулӗ-ши çав çӗрнӗ самана?
Епле-ха тӳр чунсем ут йӗнерлемӗç,
епле-ха туймӗç вӑрттӑн тӑшмана?

Яланлӑхах пӑрлантӑн-шим, çут шанчӑк?
Пушхир пулса юлатӑн-шим, çӗршыв?
Камсем юрра хуса яма хушаççӗ?
Тасалмӗ-ши нихçан вӗсен шӑрши?

* * *

Малта хӗвелччӗ, çӗнӗлӗх хӗвелӗ!
Мухтарӑм Çӗн Куна, чуна парса.
Эп шантӑм, эп ӗнентӗм, эп хӗмлентӗм,
тӗп пултӑр терӗм хурлӑх та асап.

Кунçул уйне ака тума эп тухрăм.
Пĕр юрласа та, пĕр сăвăласа
вăя çĕршывшăн шеллемесĕр утрăм.
Çĕн Кун ыталĕ терĕм савăнса.

Тем пулчĕ: ура хучĕç те ӳкерчĕç —
те хамрăнах, те ирсĕр тăшмансем...
Кĕтеттĕм килессе вуншар чăваш поэчĕ.
Килмерĕç, сас памарĕç поэтсем.

Хĕвел пытанчĕ. Ĕмĕт сӳнчĕ. Чунăм,
сив çапнă чунăм, хыпăнса çунмасть.
Ăçтан, епле хыпайтăр савăк çулăм
çĕршыв пĕтнишĕн çурăлан чуна?

Хĕвел, хĕвел! Эсĕ пур чух ăна
çĕн юрăсем саватчĕç çивчĕ саслăн.
Чĕлхе çухалчĕ... Çĕршыв вилет пулсассăн,
кама эс кирлĕ, юррăм... Кала, кама?

## Юлашки чĕл умра...

*«Юлашки чĕл» тени те*
*пысăк сăввах-мĕн.*
Ваçанкка

Юлашки чĕл алра, юлашки чĕл.
Апат — юлашки хуран.
Выç куçлă ыранăн вил пичĕ
шур шăллăн пăхать, пăхать куçран.
Юлашки чĕл умра... Юлашки чĕл.

Хĕнесе чунне илнĕ лаша-выльăхла
эп чĕтретĕп, чĕтретĕп, чĕтретĕп.
Ах, мăнтарăн тĕнчи... пĕтрĕм, çитрĕ черетĕм...
çавă çеç пит начар — тусăма тунсăхлап.

Илтĕнет аякран тăван çĕр ахлатни.
Çуркалать, мамăклать, какайлать чĕрене
Шупашкар йынăшни, йăмăка выç анне
юлашки çыртăкне хыптарни.

Инçетре эп. Пĕччен. Пĕр-пĕччен.
Мана пыйтă кышлать, чир ĕмĕт.
Йытă пек çухалса, сĕтрĕнсе çӳреме
ĕнтĕ тиврĕ мĕн чун тухиччен.

Çутă кун килес çук. Çын çынна таптать çеç.
Шанчăкăм пăрланса шăнса хытрĕ.
Пăнтăхса тăвăрланчĕ каллех çут тĕнче,
кăмăла хурлăх хуçрĕ, чуна вилĕм витрĕ.

Тусăм, тус, эс ăçта? Эс илтсемччĕ, килсемччĕ.
Шанчăкăм, çĕтнĕ шанчăк, ăçта эс, ăçта?
Кăшт вăй пар Çеçпĕле. Çĕн чăваш çĕн поэчĕ
çĕнĕлле юрлаймасть, йӳç куççуль çеç çăтать.

Юлашки сăн умра, юлашки сăн
тата — выçă куçлă ыран.
Инçетрен те пулин, Нуся тусăм,
хавассăн пăхсам, пăхсам куçран.
Юлашки сăн умра... Юлашки сăн.

## Пӑч-тӗттӗм тӳпере — ҫут ҫӑлтӑр

Пӑч-тӗттӗм тӳпере — ҫут ҫӑлтӑр.
Ҫун, ылтӑнӑм, ҫун, кӗмӗлӗмҫӗм, ҫун
сӳнессине сисмесӗр, йӑлтӑр-йӑлтӑр, —
артаклӑ чунӑмри вӗри куҫҫуль.

Ялта йытӑ сасси нумай.
Сукмак ҫине хӑр ҫулҫӑ ҫунӑ.
Ман ҫамрӑк чун, салхуллӑ чунӑм,
эс йытӑ мар, хӑр ҫулҫӑ мар.

Аманнӑ акӑш вилес умӗн
пӑшӑрханса юрланӑ пек,
юлашкине юрлатӑп эп...
Эй, чунӑмҫӑм, эй, тӑлӑх чунӑм.

Анчах юрра итлесшӗн мар
ни савӑк Нуся, ни ҫӗршывӑм.
Хал ҫук пулсан та каҫарма,
сунап ҫаплах телей те сывлӑх.

Тен, калӗҫ, тавҫӑрса илсен:
«Аманнӑ акӑш вилес умӗн
хӑйне тӑнламанне пӗлсех
пире хӗвеллӗ пурнӑҫ суннӑ».

## Юлашки юн тумламӗсем

Юн хуплать куҫӑма, юн тулать, юн палкать.
Ӑшчике, чӗрене, мимене касса ҫурчӗҫ.

Эп — пĕрпĕтĕм суран. Урчĕç, урчĕç...
Пĕвĕм тăрăх чĕп-чĕр юн юхать.

Юрататпăр тесе сăнăпа
чĕререн витĕрех яшлаттарчĕç.
Эп ӳксен, йĕрĕнсе, лач! сурса таçта тарчĕç.
Никама кирлĕ мар, — çавăнпа.

Сĕтĕрнетĕп. Хыçра — юн йĕрсем.
Тутă, шукăль туссем ахăраççĕ.
Пур çĕленĕ — элекçĕ-çăхавçă —
куç хĕсет вĕсене, шăл йĕрсе.

Ав, хĕрарăм курпун мăшăрне, —
Нуся, эп чуна панă хĕрарăм, —
хăлхинчен тем калать, асăрхарăм.
Леш йĕрет кавăн тĕслĕ шăлне.

Мимене чир çиет, макăрса чарас çук.
Хупланасшăн манран çутçанталăк.
Чĕрĕлле эп çĕретĕп. Çур çул е çулталăк
юлнă санăн, Мишша, пурнăçу.

Тăпăлтарчĕç манран çĕршыва,
çавăтса пуç касма илсе кайрĕç.
Хурлă чунăн çăра юнлă тарĕ
уншăн çеç чашкăрать çав-çавах.

Юн тумлать... Ман пулмарĕ талант...
Юн тумлать, юлашки юн тумламĕ.
Пусарать арман чуль, пĕтрĕм, урăх пулаймăп.
Юн тумлать,
юн тумлать,
юн тумлать...

## ПОЭТĂН ÇУТĂ СĂНАРĔ

*(эпилог вырăнне)*

Кам тухрĕ тĕрĕсе: элекçĕ
е Çеçпĕл — шĕл-кăвар поэт?
Кам ячĕпе сăмах илеççĕ?
Кам ячĕпе курса çӳреççĕ?
Кам вутлă тăвăл пек кĕрлет?
Кам тухрĕ тĕрĕсе? Пĕлесчĕ.
Тен, эсĕр, Çеçпĕл тӳрисем,
ним айăпсăр пулсах поэчĕ
хыпса çăтасшăн çуннисем?
Кам халăх чĕрине вырнаçрĕ?
Кам ячĕ юлчĕ ĕмĕре?
Ма Çеçпĕлшĕн йĕре-йĕре
савнийĕсем çӳç шуратаççĕ?
Мĕскершĕн-ши тавçăраймастпăр
çынна туймашкăн вăхăтра?
Мĕн-ма час-час малта тăрать
тискерлĕх?
Мĕншĕн?
Калаймастпăр.
Пĕлетпĕр: пурăнăç тиркенĕ
ăна çак çутă тĕнчере.
Мĕнле капла? Тен, чăн-чăн гений
куç хупрĕ — çирĕм иккĕре!
Хупасшăн марччĕ. Хуçăк кăмăл,
хăрушă чир те юрату
пурнас кунне пĕтерчĕç хăвăрт.
Элек... Асап та ырату...

Çакна калам: епле урсан та
элекçĕпе суя тӳре,
Çеçпĕлсене тытса усратпăр
чун патĕнче те чĕрере.

*1963, 1965 çулсем.*
*Саврăшпуç — Хусан — Шупашкар.*

# 1966

## КАМ МĔНЛЕ ХУШАТЬ

Анне йăваш пулма хушать мана,
атте хаяр пулма хушать мана,
чĕре чăваш пулма хушать мана,
пĕр çын йăлтах манма хушать, манма.

Аннеçĕме пуçа чиксе итлетĕп,
аттеçĕме пуç каçăртса итлетĕп,
ах, иккĕшне те кăмăлтан итлетĕп,
леш этеме питрен сурса иртетĕп.

Пăхса ытарайми атте-анне,
савса тăранайми атте-анне,
ялйыш юратакан атте-анне,
куççуль тухать вĕт — савăннă енне.

Калас сăмахăм та пур, калаймастăп,
каламалла та... юрĕ, каламастăп.
Анне йăваш пулма хушать мана,
атте хаяр пулма хушать мана.

*1966*

## ЯЛТА ЧУХНЕ

Пĕрисен сăввисенче пурнаççĕ
тулă, куккурус, ыраш, кăшман.
Теприсем çĕрулмине ырлаççĕ.
Сениэлĕн мĕншĕн ырлас мар?

Е вăл мĕн... ыраш вырса çапман-и?
Тен, хĕрсех сар тулă пуçтарман?
Урăххи пуль куккурус çумланă,
кăпкалатнă çĕрулми, кăшман?

Çук... Вăлах. Ялта. Ялта чухне.
Халь çавсем тухаççĕ куç умне.
Август. Августра кӳреççĕ тулă, ыттине
аслă, тикĕс йĕтемсем çине.

Хĕратьсем унта шавлаççĕ çĕрĕпех.
Амăшсем канаççĕ килсенче.
Ачасем васкаççĕ элеватор çулĕпе.
Машшинсен çути ӳкет инçе.

Хĕратьсем ыраççĕ, çывăраççĕ ир енне.
Каччисем — ăсаннă инçене...
Яшлăха, яла аса илеп те,
сар хĕвел ӳкет чĕрем çине.

*1966*

## ГАМЗАТОВ

Кĕрлет поэт сасси. Мĕнпур тĕнче
ăна итлет ытарайми хавас.
Ырми-канми çак сăвăç чунĕнче
чи тăванни те юратни — Кавказ.
Кавказсăр çакă юрăç çук.
Тымарсăр — кипарис ӳссе кашлаймĕ.
Тăван çĕршывĕсĕр çут тĕнчене шăтаймĕ
нимле Гамзатов та... Çĕршывсăр — пурнăç çук.
Кашни ыр çыннăнах
хăй кĕтесси — Кавказĕ — пур.
Этем тени çав туйăм вăйĕпе
хăватлă та маттур...

*1966*

## ТӐВАН ÇӖРШЫВ

Çуралнӑ çӗрсене эп таврӑнтӑм паян.
Те чӑваш эп, те тутар, те вырӑс?
Ӑçта — çӗршывӑм ман, чи савнӑ вырӑн?
Ӑçта, хӑш самантра салантӑм виç пая?

Ӳссе çын пултӑм пулӗ Тутарта.
Тутар çӗршывӗ — ман тӑван çӗршыв,
анчах та куртӑм шур Шупашкарта:
Чӑваш çӗршывӗ те вӑл ман çӗршыв.

Унта — манпа пӗр юнлӑ халӑх пурӑнать.
Аннемӗн чӗлхипе пуплеççӗ Чӑвашра,
аннемӗн куллипе кулаççӗ Чӑвашра,
аннемӗн уттипе те утнӑн туйӑнать.

Юн тенӗрен... суяс теменччӗ эп...
Манра кӑшт вырӑс юнӗ те çӳрет.
Те çавӑнпа пӑлхавлӑ чун-чӗре
пин тӗрлӗ халӑха тӑванланма чӗнет.

Тата вӑл юрӑ итлеме ӑста,
ялан ыр кӗвӗрен, çут тунсӑхран пуян...
Чӑваш та эп, тутар та, вырӑс та!
Çуралнӑ çӗрсене эп таврӑнтӑм паян!

*1966, март*

## СЫВӐ ПУЛТӐР ВЬЕТНАМ!

Мĕн-ма, çĕрчӑмӑрĕ, ӑнланма çук планета,
тӑмастӑн вӑрçӑсӑр эс виçĕ кун,
урса каятӑн, чĕввĕн çĕкленетĕн?
Юн... чĕп-чĕр юн.. Хӑçан-ши юхмĕ юн?

Юн ӑшĕнче паян Вьетнам, бамбук та
рис çĕршывĕ,
хĕрӳ хĕвел çĕршывĕ, ыр çĕршыв.
Кала-ха, Çĕр, мĕнле кикен эс çинĕ,
кĕрет санран паян мĕскер шӑрши?

Мĕскер тума фашист та темĕн те пĕр
çуратса тултартӑн хӑв çине,
пиншер çул мĕскершĕн тĕпĕр-тепĕр
эс çӳрететĕн çынçиенсене?

Вьетнам, Вьетнам... Эс — Ирĕклĕх хĕвелĕн
ӑшшипеле сипне савса, хаяр, вĕри,
чи пархатарлӑ ĕмĕтпе хĕмленнĕ
хитре кĕтессенчен пĕри.

Юлташ та тус тӳр чуншӑн эс, тӑван.
Эп юратап сана, Вьетнам, вьетнам çынни,
эп юратап сана, мана санпа аван.
Пирте пĕр тӑвӑл — Ирĕкшĕн çунни.

...Шавлать çĕрчӑмӑрĕ, тĕлĕнмелле планета.
Паян ун çийĕн Ирĕклĕх кĕрлет,
çынçиенсен тем тĕрлĕ сӑнчӑрне те,

мул хуҫисем епле хӗстернине те,
туртса сирет вӑл, чӑрсӑр ҫӗмӗрет.

Салам, Вьетнам, ҫут Ирӗклӗх хӗвелӗн
ӑшшипеле сипне пӗлсе, хаяр, вӗри,
чи юлашки тытӑҫӑва ҫӗкленнӗ
хастар ҫӗршывсенчен пӗри!

*1966*

## ШĂЛЛĔСЕН СĂМАХĔ

Саврăшпуç урамĕ сарлака.
Саврăшпуç урамĕ такăр, вăрăм.
Пиччесем каяççĕ салтака,
юрласа пыраççĕ урам тăрăх.

Пирĕн те салтак пуласчĕ-ха,
урамра çапла юрласчĕ-ха.
Ăс парса ăсатчăр аттесем,
ал сулса юлайччăр аннесем.

Аттесем хăйсем выç фашиста
тĕп туса кĕлне çилпе вĕçтернĕ.
Пиччесем те вĕсем пек ăста,
вĕсем пек маттур пулатпăр тенĕ.

Аннесем те — сарă инкесем —
фашиста лектернĕ инкеке:
тырăпул ӳстернĕ, хĕç хăйранă,
чун кӳтсе çитсен вăрçа ăсаннă.

Тав сире, хастар атте-анне,
ырă çул, кĕреш пек пиччесем.
Эпĕр те ăна, выç тăшманне,
маххă памăпăр — килсе кĕрсен.

*1966*

## ИЮЛЬ КАҪĔ

Каҫран сывлăм ӳкрĕ.
Ҫумăр пулмасть.
Ҫатан ҫумĕнчи
ĕнтĕркенĕ вĕлтрен
курнать вăрттăн шухăшлă,
чĕмсĕр, чапрас.
Аран сĕтĕрнетĕп
ҫыврас килнĕрен.

Тусанлă ҫул урлă
сикет ҫĕр шапи.
Вăшт! ҫеҫ сăр кушак
чупса каҫрĕ.
Тӳлеккĕн канать июль каҫĕ.
Ăҫта ҫитсе тухрăм?
Кил-ҫурт ҫакă-ши?

*1966*

## ЫЛТĂН ХĂЙĂР

Шап-шурă хĕрнĕ тимĕр пек вăл пĕçерет.
Куç ыратать ун çутипе: ай, хăйăр!
Çыран хĕрне пымасăр хум çӳрет.
Çилхи хăйăр пекех шап-шурă хăйĕн.

Вăл чĕннипе эп ун патне кĕретĕп.
Çĕклет те ачашлать мана çав ăшă хум.
Кунта йăлт манăçать: хаваслăх, тарăху.
Кунта эс ыйхăлан, сар кун
çĕршывĕнче çӳретĕн.

Тухмасăр сарă кун çĕршывĕнчен
эс хăйăр ытамне тухса выртатăн —
халь хăйăр вĕри мар. Чун каниччен
ыр тĕлĕкре урхамахсем тытатăн...

Анчах —
тарса пĕтеççĕ шух урхамахсем.
Хумсем те тарнă. Хăйăр çулăмланнă.
Хĕвел, кулса, чăн тӳпене хăпарнă.
Йĕп пек тиреççĕ çут пайăркисем.

*1966*

## ШАЛАНКĂ

Вĕçет хура шаланкă
аслă улăх çийĕн.
Аслă улăхра йĕс курăк чӳхенет.

Вĕçет, вĕçет шаланкă.
Аслă улăх — çиллĕ.
Аслă улăхра хурланчăк сасă илтĕнет.

Кăвакарчĕ анăç, улăх кăвакарчĕ.
Хӳтлĕхе пытанчĕ ушкăн кăвакарчăн.
Йĕрет, хӳхлет шаланкă.

Ма хирĕçле вĕçет вăл?
Çил хăватне ĕçет вăл,
макăрма макрать хăй çумăра.

Хăвпа илсем, шаланкă.

*1966*

## ХĔЛХЕМ

Анан хĕвелĕн юлашки хĕлхемĕ
кăшт тĕлкĕшрĕ те шăппăн сӳнчĕ.
Çу кунĕ иртрĕ... Тăнăç... Тĕттĕм пулчĕ.
Ман чунăм ыйхăлать, хавасăм сулчă.

Хĕлхемĕм, юратса хĕрхентĕм
сана эп, ах, мăнтарăн, терĕм.
Пите ачашласа çемçе минтерĕм
шеллев сăмахсене темччен итлерĕ.

Черченкĕ чунăн çулăмлă чечекĕ! —
çырма çаранĕнче кăвайт ташла пуçларĕ.
Тен, леш хĕлхем çĕнрен çапла çиçет-и?
Каятăп, тăвансем, çывăрасси пулмарĕ.

Анан хĕвелĕн юлашки хĕлхемĕ,
эс катăлса унта ӳксе юлайнă.
Аван, юлташăм, тавтапуç... пит лайăх.
Эс ыйхăллă чуна, хавасăма хĕрхеннĕ.

*1966*

## ЮРАМАННИ

Тĕлĕнмелле! Çав пысăк панулми
пиçмен пулсан та, темшĕн илĕртет.
Татма юрамасан та эпĕ, шет,
чиксе каятăпах каçа валли.

Епле çĕнес хама, епле йӳнеçтерес?
Юраманни мĕн-ма текех асамлă?
Эс, панулми... ма ăрăмлатăн эс?
Мĕн-ма санран хăпма çавтер асаплă?

Пĕчĕкрех чух, манман-ха, тăм лаша
çапла тухатнăччĕ: ватса пăхас килни
тĕпрен пăлхатнăччĕ пӳлсе пур сывлăша.
Юраманнин ялан хитре кĕвви.

Çав кĕвĕпе ташларăм пĕрре мар.
Пĕрмай чĕнет, пĕрмай таçта чĕнет вăл.
Хăратăп эп — каллех, каллех çĕнет вăл.
Вăй пар, эй ирĕкĕм, ан чак, вăй пар...

*1966*

## ХУМСЕМ

Çилçунатăм-урхамахăм —
шур çилхеллĕ чăрсăр хум,
чĕввĕн тăр, ташла та ахăр,
ан юртсам çавтер салху.

Çитейместĕн — ан хăв эсĕ
умăнти хушка хума.
Савнăç пур-и сар хĕвелсĕр?
Шанчăк пур-и савăнма?

Савнăç пур-и вăйлă çилсĕр?
Савнăç шухлăхра кăна.
Çил юрлать. Хаваслă чиксĕр —
хумваскать чул çырана.

Çил — кĕрле, çанталăк — макăр.
Хум, хума ан чар, çул пар,
чĕввĕн тăр, ташла та ахăр,
çапăнса салан чăл-пар!

*1966*

## ХУНАРСЕМ

Каç та пулчĕ. Тĕттĕм урамсем
шăппăн çеç хитре юмах яраççĕ.
Юмах майĕн йăлтăр çуталаççĕ
юпасем çинчи ыр хунарсем.

Хунарсем, каятăп, сывă юлăр,
çĕрĕпех çапла ачашшăн кулăр.
Çамрăк чунăмри çут хĕвелсем —
хунарсем.

Темĕскер калаççĕ мĕлтлетсе.
Эпĕ те вара мĕлт! куç хĕсетĕп,
алăка уçса киле кĕретĕп,
çывăрма хушаççĕ пуль тесе.

*1966*

## ХАЛЬ ЭПӖР...

Эп — Том Сойерччӗ,
эс — Гекльберри Финн.
Пурнăç тем сӗврӗлчӗ.
Эпӗр халь — урăх çын.

Кантăкран шаккаса сӗм çӗрле,
эсӗ тек кушакла макăрмастăн.
Чун туртмасть инçетри çул çине,
кив арман тăррине хăпармастпăр.

Уйăх та çутатать пек халь пирӗншӗн мар.
Ах, хăрушчӗ мӗлки çав арманăн.
Чи çӳле çитиччен миçе хут-ши тарланă,
чи çӳлтен çӗрелле миçе хут-ши сурман?

Кирлӗ чух чике тăршшӗ лартма та
пӗлнӗ эпӗр ялан хуть кама та
пӗр куç хупмасăр, аван, —
намăс та, мӗн тăван.

Уйрăмах чаплă суйнăччӗ
çӗмӗрсен графин.
Эпӗ — Том Сойерччӗ,
эс — Гекльберри Финн.

*1966*

## ÇАРРАН АЧАЛĂХ

Ката хĕрри. Пĕр ушкăн йăрăс хурăн,
çарран ачалăха асилтерсе,
çавтер илемлĕ çĕнĕ юрă хунă.
Халь эртелпе юрлаççĕ килтерсе.

Çерем çине ура явса ларатăп.
Уç çил вĕрет пуç çийĕн. Вĕртĕрех.
Тек ĕнтĕ ача мар эп. Ача мар та,
пач çитĕннĕ теме те иртерех.

Инçе курнать кунтан. Лере — кăваклăх.
Кăваклăхра, чуна ыраттарса,
сисетĕп эп, сисеп, çӳрет ачалăх,
алне сулать, каять, таçта каять тарса.

Эп хам та кĕвĕлерĕм çĕнĕ юрă...
Пĕр çамрăк хурăнĕ ма хăпнă ушкăнран?
Эс мĕн çинчен шутлатăн, йăрăс хурăн,
мĕскершĕн кулянса çулçусемпе шавлан?

*1966*

## ÇАМРĂК КĔТӳÇ ЮРРИ

Эп çамрăк кĕтӳç,
кĕтетĕп сысна.
Çилпе манăн çӳç,
сар çӳç варкăшать, йысна.

Эп çамрăк кĕтӳç.
Ман пушшăм сӳсрен.
Йысна, куçна уç:
хыçра тем шăвать... çĕлен!

Çапла, эп кĕтӳç.
Сывах-и? Салам!
Философ сан пуç,
ман пуç сысна шутлать аван.

Хĕвел те хĕртет,
лашкать çумăр та.
Сысна эп кĕтеп,
сысна самăртап.

*1966*

## ЧЕЧЕК ÇЫХХИ

Кайрăм вăрмана,
кĕтĕм ĕшнене,
тухайăп-ши, çук-ши
Тĕпсĕр Çăл енне?

Шурă чечексем
куç чарса пăхаççĕ,
пĕчĕк ача пек
именсе тăраççĕ.

Сарă чечексем,
сарă аппа пек,
ялкăшса çиçеççĕ
ылтăн хĕмĕпе.

Хĕрлĕ тĕс кăвакшăн
пĕртăван пуль тетĕп,
çыхă тунă чух
пĕр çĕре тиретĕп.

Татмалла та марччĕ —
шел чечексене...
Тухайăп-ши, çук-ши
Тĕпсĕр Çăл енне?

*1966*

## ТĔПСĔР ÇĂЛ

Вăтăр юман ярса питĕрнĕ
Тĕпсĕр Çăл, эпĕ килтĕм!
Çавра кӳлĕ пулса, çырана тăп эс тулнă,
тăкăнса каясла хуран пек курăнатăн.

Варринче тĕксĕммĕн палкаса пĕтĕрнетĕн.
Çĕмĕртсем пуç усса сан тĕпне тинкереççĕ.
Ман чуна та хăшпĕр этемсем хыт тинкерчĕç,
тĕпĕнчен пăтратса тем шырарĕç.

Çĕмĕртсем, çĕмĕртсем! Тĕпсĕр Çăлăн çук тĕпĕ!
Кăсăкла этемсем, эп сире те калатăп:
сирĕншĕн чун уçса тек чăрманмăп —
вăтăр çăра ярса питĕртĕм.

*1966*

## ВĂРМАН ÇУЛĔ

Вăрман çулĕпе васкамасăр утма
эп мĕн пĕчĕкрен юрататăп.
Вăрманăн ялан шухăш тарăн.
Эп çав шухăша юрататăп.

Пуриншĕн пĕрре çавă шухăш, тĕпшухăш.
Сиенлĕ-и, çук-и, ытла та ир пĕлтĕм ăна.
Вăл — пурнăçпа вилĕм çинчен, пытармастăп,
хăш чух чĕрене сăнă пек тăрăнать.

Тата: эпĕ пĕлтĕм çав шухăш мĕнне.
Вăл — çыннăн пурнан пурнăçри сиплĕ вучĕ.
Вăл — унăн чунне ăшăтать, пĕçертет,
çунтарать.
Çав канăçсăр чун — ĕмĕр чĕрĕ, çунатлă та уçă.

*1966*

## УТАРТА

Тусăм, хаклă мучи, паçăрах
куç илмесĕр пăхап сан çине.
Çĕр çулхи шурсухал, патриарх,
сапăр ту-ха кĕтӳç ачине.

Ывăнтарчĕ хĕвел, ывăнтарчĕ çаран.
Ан çиллен, çитрĕм эп ĕшенсе.
Темĕскер ăрăмлатăн, вĕрен те суран
ылтăн пыл хурчĕсем хушшинче.

Кăмăлĕ сакăрвун сакăрвунă вĕллен.
Сухалта та, питре те, алра та — хуртсем.
Тĕнчери пĕр ăсчах, хурт чĕлхи эс пĕлен.
Юратаççĕ сана, сана чыс та хисеп.

Лапсăркка çăкасар утара хураллать.
Варринче вĕллесем шăкăрах.
Тусăм, Сантăр мучи, эс кирек мĕн кала,
пылхуртсем пăхасси кăсăкрах.

*1966*

* * *

Самолетсем вĕçеççĕ
çӳллĕ тӳпере:
«Эпĕр кайрăмăр, — теççĕ, —
Чистая, Пӳлере».

Хусана та иртеççĕ
кĕр-кĕр! кĕрлесе.
Тен, Мускавах та çитеççĕ,
тепĕр тесен.

Самолетсем, вĕçĕр, вĕçĕр, —
ырă вĕçев эп сунап.
Вĕçесси — сирĕн ĕçĕр.
Эпĕ — выльăхсем сăнап.

Эп халлĕхе çеç кĕтӳçĕ.
Ман ĕмĕт сирĕнпе вĕçет:
пуçра — ташлать шухăш учĕ,
чĕрере — кăвак инçет.

*1966*

## МУЗЫКА

Крещендо ӳкрĕ те... çухалмарĕ.
Аслати хыççăнхи çумăр пек,
юрлать те ташлать çырăн-варăн,
юрлать те ташлать хăлхара çĕрĕпе.

Крещендо... Пуçа çурасла
мана хуйхă çапнăччĕ те,
ахлатрăм ӳксе хăрушла —
ах! илтĕнчĕ сас инçете.

Вара шăппăн çеç йĕтĕм эп.
Крещендо... Вара сехет çурă,
аслати хыççăнхи çумăр пек,
шăппăн çурĕ куççуль, шăппăн çурĕ.

*1966*

## МĂКĂНЬ ÇЕÇКИ

Каç пуласпа пите çума тухап та —
кам хĕрлĕ çут йăл! çутнă пахчара?
Кам маншăн кулянать, кам маншăн хатĕр
чунне пама? Кам васкама чарать?

Çак хĕрлĕ вут вăл асăрхаттарни вĕт:
«Тăхта, ан кай. хăрушлăх, — тет, — малта».
Хĕп-хĕрлĕ çутă, чĕреме ан сивĕт,
ахаль те, унсăр та, вăл ыратать.

Мĕнле хурăшлăх? Çичют мар-çке тусăм:
унпа кăна çын пек туяп хама,
унпа кăна çăп-çăмăл манăн пуçăм,
чунран хавхаланап — унпа кăна.

Мĕнле хĕртсуртăн йĕлпĕр хĕрлĕ куçĕ
куçа курнать, савăнăçа чарать?
Шывне ăсам-ха. Уçăл, питĕм, уçăл.
Вутла çунать-мĕн... мăкăнь пахчара.

Эх, мăкăнь, мăкăнь, мĕншĕн шӳтлешетĕн,
ма светофор пек вĕçĕм мĕлтлетен?
Мана эс, тусăм, питĕ килĕшетĕн,
айта, чĕнеп, пĕрле пыратăн, тен?

*1966*

## АСАИЛӲ

Лявапа мĕскершĕн çапăçсан-ши,
амăшĕ киле пырса лăскарĕ
çӳçĕмрен. Кайран — те макăрманшăн —
тăн кĕртме тесе анне васкарĕ.
Итлеме вĕреннĕскер, вара
урăх тек тивмерĕм Лявана.
Выляма та выляман пĕрле, —
кăмăл юлнă пулĕ, кам пĕлет...

Çуллахи пĕр чипер кун çаксер
çырмара чăмать — сасси тискер.
Ĕнтĕ акă пăкăр-пăкăр! турĕ.
Пулăшас пулать, путать, ах, турă!
Шыраса тупап шыв тĕпĕнче,
сĕтĕрсе тухатăп çӳçĕнчен.
Сăнĕ — пĕтнĕ, хырăм — параппан.
Сывласа ярать аран-аран.
...Амăшĕ пымарĕ тав тума.
Аннене хăрарăм калама.

*1966*

## СЫСНАСЕМ

Ахалех тиркеççĕ йыснасем,
интереслĕ выльăх — сыснасем:
эпĕ юратап хуçкаланма,
сыснасем хавас хыçкаланма.

Эп çӳретĕп тем пăшăлтатса,
сыснасем çӳреççĕ нăрхлатса.
Шурă хут варлап кăранташпа,
сыснасем вулаççĕ сăмсапа.

Шăршласа пăхаççĕ сых ятне,
çаврăнса утаççĕ шыв патне:
«Мĕн çырниййĕ — пурте пĕрешкел,
урăхла çыр, тусăм», — тенешкел.

Çĕр чаваççĕ çавă сăмсапах,
чавнă май калаççĕ пек: «Супах,
сăвăла, чутла та савала,
шăрантар такам та савмалла».

Эп вара чăнах шăрантаратăп,
тĕлĕнетĕп, кăн! пăхса тăратăп.
Хытă йăнăшаççĕ йыснасем:
шутсăр ырă выльăх — сыснасем.

*1966*

## КАÇХИ ÇИЛСЕМ

Каçхи çилсен юрри, шăв-шавĕ...
Шăв-шав лăпланнă шăп самант,
сире итленĕ май пуçлам-и
шухăшлама, анаслама?

Поэзи хапхинчен кĕрес теп —
уççи ăçта, кам аллинче?
Эп чун тĕпнех анса килес теп —
ăçта, мĕнле çав тĕп, миçе?

Хапхинчен мар, алăкĕнчен те
кĕртесшĕн пулмасан, мĕнех,
пире юрать — кантăкĕнчен те:
хĕвел кĕрет тĕнĕренех.

Тĕнне, паллах, кăшт пăкăлаççĕ.
Пулин, тĕксе уçма пулать.
манран чылайăшĕ кулаççĕ,
кулаканран турри кулать.

Эп халь кĕтӳç, айван курнатăп,
эсир те — темех мар, кичем...
Эп — итлекен — йăваш кăна та,
юрлаканни — кăра çилсем.

*1966*

## ШУХĂШЛАТĂП ТА...

Эпĕ — шухăш чури, кĕтӳçĕ —
шухăшлап пушă сĕтĕрнĕ май:
ял тулли мыскара кăтартуçă,
пуçпала пурнакан та нумай.

Мыскараçă пулаймăп, ал йывăр.
пуçпала пурăнма — пуç çитмест.
Чĕрепе пурăнас-и? Ан çывăр,
сисĕм-туйăм. Чĕре, ан шăн эс.

Эп çӳретĕп хирпе çилçунатсăр,
чунăма хĕнесе, ĕрлешсе.
Эпĕ — шухăш чури, чун çунмасăр
хĕстермеççĕ пуçа шухăшсем.

Шухăшлап та, вăл кам — гладиатор?
Гладиатор, туссем, вăл чура.
Пĕр-пĕрне пĕтерет çавă паттăр,
кĕр-кĕрлет вăйă-çапăçура.

Пĕтерсе йăлăхсан, çаврăнать те
пурттипе кач! сăхать хуçине.
Эпĕ — шухăш чури. Çакă хаттĕн
кĕрес çук хуçа-шухăш çине.

*1966*

## ВАЛЬС

Итле... сĕркĕчсем кĕвĕлеççĕ хуллен
тунсăхлă-тунсăхлă, сулăмлă вальс.
Килĕ-ха килмелли. Иртнине ан шелле...
Вальс ӳсет, çĕкленет, чарăнмасть.

Тĕл пулман эп сана ăнсăртран,
эп шыранă сана ĕмĕрех.
Эс ал патăн иккен ĕмĕтӳ хуçăкран,
ĕненмесĕр, суйса витĕрех.

Çавăнпа эп çухатрăм чĕре ăшшине.
Вăхăт иртрĕ ахаль, мĕн тăвас.
Эс çапах, эс çапах иртнине ан шелле.
Ан шелле... Итлесем, мĕн тери лайăх вальс.

Вăл çунать, вăл кĕрлет. Çĕнтерӳллĕн те ыррăн.
Нихăçан та кун пек хама хам эпĕ çăмăл туйман.
Тĕрĕс çул шыраса ытла ир эпир ырнă,
ытла ир. Ик ача, ик айван.

Пултăрах. Ма йĕрес? Йăл кулас та чупас алла-аллăн.
Çаврăнас, ыткăнас, уйрăлу пултăр шавлă хавас,
куçсемпе вăй выляс, ӳлĕмрен çак каçа
куççульпе асăнмалăх...
Мĕн тери янăрать, мĕн тери чаплă вальс!

*1966*

## АПРЕЛЬТИ ÇИЛ-ТĂМАН

Çавăрттарччĕ чăнлах урăм-сурăм,
пĕр юрларĕ çинçен, шăхăрашрĕ
апрельте çил-тăман, пăхăр, курăр —
кăвакрах нӳрĕ юр шухăрах-мĕн.

«Вăраха-и çак ĕç? Чунсăр мар-тăк...» —
хĕвелтен эпĕ пултăм ыйтасшăн.
Кăнтăрла кулса ячĕ сасартăк
супнă çил-тăманран вăл хаваслăн.

Пĕтрĕ юр. Улăх нӳрлĕ, тĕтреллĕ.
Хир хура, ир-ха, ир, тĕксĕм, йывăр.
Вăрманта пӳрне тăснă, тӳрленнĕ,
хĕвеле ĕненсе, пĕтĕм йывăç.

Пулĕç ăш çумăрсем, кĕтĕр, чăтăр,
çамрăкланнă хĕвел çунĕ çуттăн,
акă час ассăн сывлĕ те шăплăх,
папкăрсем, вăранса, çат! çеç çурлĕç.

Эп те, авă, кĕтетĕп, чăтатăп,
пулĕ теп ăнăçу, пулĕ савнăç.
Ешĕл çулçă — вăрман пархатарĕ.
Манăн — сăвă, паллах, эпĕ — сăвăç.

*1966*

## ÇУЛЛА

Пĕлĕтпе витĕнсе сар хĕвел тĕлĕрет.
Тăвайкки çийĕпе — сийлĕ-сийлĕ тĕтре.
Кĕр çывхарать. Эпĕ çав сăлтавпа
чунăма аптратап ĕмĕрхи ыйтупа.
Çĕр çинче савăнса мăшăрлантăр хĕрарăм,
ачине чунĕнчен юратса вăл ӳстертĕр.
Ӳстĕр, ӳстĕр пепке, тĕрлĕ шар ан тӳстертĕр,
пултăр çут пайăрки, савнăç кӳтĕр мăнтарăн.
Çĕр çинче пур чĕрчун тăнăçра аталантăр.
Йывăç-курăк, ытти çутçанталăк ачийĕ,
утса тухнă çулсем (е вĕсем пусланман та),
Чăвашстан, çийĕрпе, ман тăван кĕтес çийĕн,
мăн Раççей çийĕпе, вăрмансем, хирсем урлă,
çĕр çийĕпе, хӳтлĕхсĕр çĕр çипе, ăрăскаллăн
шăплăх ĕмĕр янратăр, юхса сенкер юррăн.
Акă эп мĕн пирки шухăшлатăп, тускайăм.
Кĕр çывхарать. Кулянап. Ман ăçта
ачасем? Çук вĕсем, çуралман-ха. Таçта.
Йĕкелсемсĕр юман йывăç çеç, юман мар,
ачапчасăр этем этем мар-ха, ан ман...

*1966*

# ÇУЛЛАХИ ИР

Шиклĕ кăвакçут. Июнь уç чунлă,
тĕрĕллĕ кĕпеллĕ, чечекре,
уявла курнать. Иртес кун-çулĕ
вăрăм-ха. Вĕт кайăк çуй çĕклет.
Тухăç хĕрелет. Хальччен илтмен
хĕлĕх сасси пек, ирхи тӳлек —
çепĕç, çĕкленӳллĕ. Пур енчен
çывхарать вăл лăпкăн ман тĕле.

Çул хĕрри. Шур чечексем çиçеççĕ,
сывлăм сыпнă, сывлăмĕ шултра,
çут сапаççĕ, шăплăха итлеççĕ,
юратса вăл çыхнă тутăра.
Йывăçсем, тĕмсем çине вăльтах
ыткăнчĕ хĕвел шевли: йăл-ял
выляма пуçларĕ — çаранта,
шыв çинче мĕн чул хаваслăх халь!

*1966*

## АЧАЛĂХРИ АСЛАТИЛЛĔ ÇУМĂР

Кĕрлет те урать аслати таврара.
Кĕрет куçа çиçĕм — çĕрле пулнăран.
Ан тив, пĕлĕтсем çĕр çурса алхасаççĕ,
сенкер çулăмпа сехрене хăпартаççĕ.
Ан тив, çĕр чĕтрет кĕç пĕтессĕн тĕнче,
аçа кăтăрать, вут йăл-ял! пур енчен,
варсем чашкăраççĕ чарусăр шывпа,
аçа çапиччен эп çунмастăп çапах.

Аçа мана мар, шуйттана вăл шырать,
тупать те пĕррех шарт! çапать, тĕп тăвать!
Пăрахнă кив çурт, кив сарай, кив мунча
усалшăн-тĕселшĕн ыр вырăн пачах —
çапсам, çап, аçа, çатлаттар, аслати,
курмастăп, хупларăм куçа — ял ачи,
илтместĕп, хупларăм эп ик хăлхана та...
Мĕн-ма аса килчĕ? Хальччен пăлханатăп.

*1966*

## ВĔРЕНЕ ÇУЛÇИ

Кĕркунне халапĕпе
вĕренемĕр кулчĕ.
Ачапча ал лаппи пек —
ӳкнĕ сарă çулçă.

Хăвăрт пĕшкĕнсе илеп,
ал çине хуратăп.
Ӳснисем ашшĕпеле,
ку мĕнне куратăр.

Çитĕ пуль кăшт ăшăтсан,
кӳренин кӳренĕ,
ытларах ачашласан —
ачаша вĕренĕ.

Пĕлейместĕп çак чăнне,
атте мар пачах эп.
Селĕм ят — атте-анне.
Чун ăшши — ача, тен.

Ах, хыпса çунатăп эп
сак тулли ачашăн,
пурнăç йывăр уттипе
ман утасчĕ — ашшĕн.

Тăхтăр, çулçăсем, ирччен,
çерçисем, лăпланăр.
Эпĕ — ĕмĕт ăршинче.
Савăнмашкăн парăр.

*1966*

## ÇУРАЛНĂ ÇĔРШЫВ

Сире мĕн илĕртрĕ, ма кайрăр çичюта?
Тăван тĕнче (е тĕрĕсрех — тĕрек)
вăл вилĕмсĕрлĕх шанчăкĕ кӳрет,
пире, ахальсене, йĕркелĕхре тытать.

Тирекĕн, вĕренен е урăх йывăçсен
вĕлтĕртетсе вĕçеççĕ вăррисем
пĕр çӳлелле, пĕр çĕрелле, ӳксен —
вилме шухăшламаççĕ те вĕсем.

Таптаччăр, çăрччăр, пурпĕрех темме
ним те хăрушă мар, шывпа шӳсе
выртаççĕ нумай кун хуллеççĕн тĕлĕрсе.
Ку тĕрĕс çул — тӳр килмĕ ӳкĕнме.

Ĕçре чуна парса, çунат хуша-хуша,
çитетпĕрех чи лайăх вăхăта,
çынсен — пур пурнăçра, çав вăрăсен — çурта
телейлĕх ешĕл вучĕ ялкăшать.

Мĕн калăн эс, пророк, кайса тăван çĕртен,
чăн калăн-и? Сан калани ниме тăмасть.
Сиртен виç вăхăта пĕрле тума
пултарĕ кам? Эсир пуш пичĕке — пурте.

*1966*

## ТĔТРЕ ВИТĔР

Кĕркунне тĕттĕмре тĕтре витĕр пĕччен
килелле талпăнатăп. Мана пурпĕрех
хăш сукмакĕпе ялалла, хăш енчен,
çывхарсан та... Хытах аташтарчĕ тĕтре.

Шухăшсем — пĕринчен тепĕри айванрах —
пусмăрлаççĕ çак вил шăплăхра хăрушла.
Тĕксĕм эп, тĕксĕм те çилĕллĕ, айтурах,
«пессимист эс» теме те пултарĕç капла:

«Пурăнăç чаплах мар килсе тухрĕ çапах —
калăн, тăтăш тĕтре хупăрларĕ мана.
Пулчĕ-и, пулаймарĕ-и манăн шăпа
е пулать-и, пĕлместĕп çавна.

Хуть уçам, хуть хупам ĕнтĕ халĕ куçа,
умăмра ак часах шăхăрашĕ тăман.
Пурăннă. Пурăнман. Юлчĕ пурнăç хыçа.
Пурăнман та пекех, тус-тăван...»

Мĕн амак? Ах, тĕтре! Ну мĕнех, мĕн — тĕтре?
Çут тĕнченĕн çути элле сӳнчĕ-и? Чим!
Куртăм-и пурнăç? Куртăм. Куратăп. Хитре
караванăм пырать, ывăнман-ха саççим.

*1966*

## ПĔВЕ ХĔРРИНЧЕ

Пĕвен çӳхе пăрне ватса çӳретĕп.
Кĕр каçĕ йăлăхтармăш та хура.
Пăр катăкĕ çине ӳксе чĕтрерĕ
салхуллă çăлтăр хĕмĕ аякран.

Хăпмасть-çке тунсăх, савăнăç килмест-çке!
Кĕтместĕп те. Кулянчăк эп, кичем.
Чи лайăх вăхăтсем вĕçсе иртеççĕ,
епле хама шеллеп пурăннăçем!

Сасартăк такамсем шыва чăмаççĕ.
Шыв çийĕн кайрĕ ункă пур енне.
Куратăп эп: хаваслăн та мăнаçлăн
хурсем ишсе тухаççĕ куç умне.

Мĕскер тăвам-ши чĕрене? Калаччĕ.
Сăлтав питех нумай-и кулянма?
Хурсем, ав, мĕн тери ыр какалаççĕ,
вĕсемшĕн пăр та, кĕр те ним те мар.

Хур та пулин хавас. Эп ма, апла-тăк,
ма ӳпкелетĕп пурнăçа, ухмах?
Ун пур ытарайми саманчĕ — латлă.
Пурнăçа мар, хама вăрçас, хама...

*1966*

# ЕСЕНИНА АСӐНСА

*Кадрияна*

Иртет, иртет кӗрхи ҫак ҫумӑр та.
Час ҫӑмӑлрах та ирӗкрех сывлатпӑр.
Чӗремӗр те лӑпланӗ кӑкӑрта.
Хаваслӑ ыр пике, сана телей сунатӑп.

Сив ҫумӑр мар, шур юр виҫесӗр савӑк
тулти ача-пӑчашӑн ӗмӗрех.
Ҫуртсем ҫине, сквера та урама вӑл
ак шӑппӑн ҫума пуҫлӗ ир-ирех.

Ирпе ман тус — пӗр пӗчӗкҫӗ пуҫтах, —
кӑвак ҫутпах тула сиксе тухсассӑн,
тӗлӗнерех пӑхса, хӑш! сывлӗ ассӑн,
вара ҫӗн юр тутанӗ ҫавӑнтах.

Каҫпа шӑнтса пӑрахӗ те сасартӑк,
шуралӗ кантӑк, аса килӗ ял:
епле унта, кӑмакана савса-тӑр,
ҫунать вут-шанкӑ, ялкӑшса йӑл-ял!

Епле, уҫӑлтарать те, тутлӑ тӗтӗм
пуҫа ҫаврать кулач шӑршипе тан.
Епле уй-хир, ҫырма ҫӗклеҫҫӗ пӗтӗм
чуна-юна!.. Мунча тата! Автан!

Пытармӑп: хулана питех шанмастӑп, —
йӑлт чун уҫса, куҫҫуль кӑлармӑп халь.
Эпир ялтан, ачам, ик йывӑҫ, — шутламасӑр
сӗм вӑрмантан ҫакланнӑ путлӑха...

*1966*

## КĔТӲПЕ СЫВПУЛЛАШНИ

Сисмерĕмĕр — сар кĕркунне те çитрĕ.
Кĕтӳ, сыв пул, чим... ма кĕшĕлтетен?
Атте сывалчĕ: «Сывлăх халь, — тет, — çирĕп,
эс кай, вĕрен, эп çӳрĕп майĕпен».

Сыв пул, кĕтӳ. Йĕтем çитсе курам-ха,
вара çитем кăшман ани çине.
Тăван тавралăх! Савнăç урхамахĕ
чĕвен тăрать, хаваслăн кĕçенет.

Тăван уй-хир, çырма, кăтра юманлăх,
çатма пек такăрланнă аслă çул,
чуна яланлăха кĕрсе юлмалăх
янравăр сирĕн иксĕлми тем чул.

Ялтан кайма тивсессĕн, эп пĕлетĕп:
ачалăх, яшлăх çутисем, сире
хампа пĕрле талисман пек илетĕп —
упранăп çăлкуç пек кал-кал, таса, хитре.

*1966*

## ПӖР «ПОЭТА»

Хăшĕ хĕсĕр? Ватă Сима
е «поэт» Якур Якимов?
Якур-и? Çук, туршăн та...
Якур вĕççĕр çуратать,
пăранлать вăл хĕрттерсех
сăвă —
вилĕ путексем.

*1966*

## ХВЕТĔР ХУРĂНАЙ

1. Эп — Пушкин, тенĕ Хурăнай
пĕр çирĕм çулсенче
мелке çӳçне туранă май
çут тĕкĕр умĕнче.

Çавнах каларĕ вăл ĕнер
тем тăршшĕ сăввинче.
Савнар, кулар-ха, тĕлĕнер:
эй, Хветĕр, эй, тĕнче!

Çĕн Пушкиншăн нумай-нумай
хавас пулаттăм пуль чунтан.
Систерчĕç: супнă Хурăнай —
çын утмăлта каять ултта.

2. Салхуллă кĕркунне пуçланчĕ пурнăçра.
Салхуллă кĕркунне калать куçран:
— Эс ĕнтĕ, Хветĕр Хурăнай,
ют арăмсем патне текех ан кай.

3. Хурăнай вăл икĕ Хурăнай.
Эс пĕрин патне нихçан канаш ыйтма ан кай.
«Ой!» — тейĕ мĕскĕннĕн. — Ой! Ой!
Ерçӳ çукрах...»
Сăлтавĕ — геморрой.

4. Вăл пикенсех ĕнентерет, сăмах калать,
имене пĕлмесĕр, чарăна пĕлмесĕр:
«Çĕршывăм, халăхăм, эсир сӳнмесĕр
ман юрату сӳнмест...»
Кунçул кулать:
«Хăтар, тăванăм, юратăвăнтан —
ясар хĕр мар çĕршыв та, халăх та...»

*1966*

## ХУСАНКАЙ

Паллах, ĕçленĕ вăл хастар,
анчах та астăвар:
çын хыççăн —
çырнă пит ăста,
хăй тĕллĕн —
ăста мар...

*1966, июнь.*

# 1967

## СĂМАХĂМСЕМ...

Сăмахăмсем, шăпам, пыратăп эпĕ чирлĕн
салху сăнпа, манса телей мĕнне.
Питрен вĕрет усал çанталăк çилĕ.
Чунпа вĕçеймĕп тек çут пĕлĕтсем патне.

Сăмахăмсем, шăпам, сире савасшăн мар эп:
юмламăп, хуйхăрмăп кунçулăра кĕрсе,
йӳн хакпалах, Иуда пек, сутса та ярăп
пурнас тесе, телей тупас тесе.

Сăмахăм — ман шăпа. Эп, ахăр, уссăр
телей пирки хускатрăм калаçу.
Кун пек телей вăл пулĕччĕ хăрушă,
уш луччă пер мана, çунтар — ӳпкевĕм çук!

*1967*

# ЕВĔР ЮРĂ

*Темнеет дорога приморского парка.*
А. Ахматова

Хуран курăнать ача чух утнă çулăм,
юн тĕслĕ умри шурăмпуç.
Эп пит пăлхануллă, анчах та ал султăм —
çынна кун çинчен чун ан уç.

Эп тĕксĕм, эп сăнсăр. Пулар сăвăсем-и
çунмашкăн, хуллен тĕлкĕшме.
Çĕн сăвăсем килĕç, эпир сĕврĕлсессĕн, —
кăштах пурăнма та вилме.

Çутах курăнать ача чух утнă çулăм,
çут-ылтăн умри шурăмпуç.
Эп кăмăллă питĕ, анчах та ал султăм —
çапах кун çинчен чун ан уç.

Эп çутă, эп тикĕс. Пулар чечексем-и
ӳсме, ешерме те сӳнме.
Çĕн шуçăмсем килĕç, вут пек шуçăмсемĕр, —
кăштах пурăнма та вилме...

*1967*

## ÇИЛ ÇИНЧИ ÇУЛÇĂСЕМ

Йăл! тăвать те сĕме хăвалать çут,
сӳннĕ май вилĕме асилет.
Пилсĕр вăхăт çак вăхăт, алай çав, —
пĕтме пӳрнĕ хăр çулçă вĕçет.

Йывăçсен эшкерне хуптĕрленĕ
явăл çил, кĕнĕ çапăçăва.
Çил урни кăмăла çĕклентермĕ.
Каç сивлек. Çулçă, çулçă çăвать.

Ку хăй ват эсремет пуль хусканнă —
пĕр лăскать, пĕр тулать çĕрĕпе.
Çулçă тĕлсĕр вĕçет, чунĕ — канлĕ
май çукне çĕнтерме май çукпе.

Çĕклеме çăмăл мар çав çĕклемĕ,
çатăлтатрĕç ахаль — вĕçевре.
Çак шăв-шав тапхăрти юмăçсемĕр,
мĕн паллайрăр эсир тĕттĕмре?

Тен, тӳпе еннелле те пăххалăр —
пĕчĕк шанăç пулни те паха.
Пĕтме пӳрнĕскерсем, ма пăлхавăр
çĕклеместĕр, хăватлă пăлхав?

*1967*

* * *

Шăпа пире кастет та пуля
е çăлнăç кӳнĕ пĕтĕмпе.
Ыр тунине манма та пулĕ,
усаллине те мантăм эп.

Санран, коллега, хăрамастăп,
калап пĕр ӳстермесĕрех:
кулатăп эпĕ, макăрмастăп,
талант çуккишĕн ĕмĕрех.

Эп — çут çамка — çыр çӳçлĕ, эс те
ылтăнах мар ав, хĕрлемес,
çĕртех çӳретĕн, вĕçейместĕн.
Тур ачи мар, ман пекех эс.

Çĕр ыр шăршийĕ — çывăх, уçă.
Каç-каç лавр мар çамка тавра —
сад курăнать, çунать хăр çулçă,
тек вăрçă шăпапа пырать.

Хăçан тăн пĕтессе, ак, лайăх
пĕлме пулать, анчах хăçан
пурте тĕп пуласса калайĕ
кам ăстăна пустуй тет, çав...

*1967*

## МАНĂН АЙĂП

Яп-янкăр сывлăш. Ирĕк. Уçă.
Йăлт тултармашкăн кăмăла
сипечĕпе — ача пек, тусăм,
чунпа таса эп пулмалла.

Таса та. Вăрçтарма пăрах эс.
Хавассăн тухрăм урама.
Хĕрсе кайсан именмĕп, ахăр,
çакна çынна та калама.

Çын куçĕнчен куçа ма тартăп:
таса эп, вăрламан, ĕçмен,
суйман, хĕсĕрлемен хастаррăн.
Эп никама та вĕлермен.

Илемлĕх тупсăмне тупасшăн
хыт çунтăм çеç. Тен, çавăнпа
ман пысăк айăп? Чарăнманшăн
сывлаймиччен пăвма ыйтап.

...Тĕнче тени ялан илемлĕ,
анчах та кĕвĕсĕрлĕхе
май çук чарма. Поэт синкерлĕ,
синкерлĕ вăл ĕмĕрлĕхе.

*1967*

## ИРТНĔ КУНСЕМ

Макăр, савниçĕм, макăр.
Юхтăр, ан чар куççульне.
Халь çеç мар, ӳлĕмрен те эс макăр,
астуса пĕрлехи кунсене.

Çав кунсем ăрăскалсăр иртмерĕç.
Тĕл пулаттăмăр шкул садĕнче.
Урамсем тăсăлатчĕç вĕçрен-вĕç
çурхи уйăхăн шур çутинче.

Чунăма ăшăтатчĕ йăл кулă.
Санпала çӳресе темĕнччен,
шухăшлаттăм: пурнасчĕ татуллă
ватăлса мĕн çĕре кĕриччен.

Юратса пуçунтан ачашлаттăм.
Эс хавассăн пăхаттăн куçран.
Эп хама шаннă пек сана шантăм.
Ĕмĕрне те эс тухмăн асран.

Эп сана чи пĕрремĕш чуптунă.
Эсĕ тăтăн ун чух макăрса.
Эсĕ халĕ те маншăн чăн турă.
Эсĕ халь те таса, тап-таса.

Пĕлеймерĕмĕр — мĕн йăнăштарчĕ:
пирĕн туслăх арканчĕ тĕпрен.
Ĕнтĕ урăх, çĕн тус, йăрă каччă,
пикене алă пачĕ хитрен.

Ма йĕретĕн, савни, ма йĕретĕн,
çĕн тусу умĕнчех ма йĕрен?
Тен, çаплах çав садра эс çӳретĕн,
çав çурхи каçсене асилен?

Хам та эп, ниепле манаймасăр,
иртнипе чунăма çунтарап.
Çун эс, чун, хытă çун.
Савни, макăр
хытăрах...

*1967, ноябрь*

# 1968

* * *

Юр та юр... Юр ҫăвать... Пуш-пушă.
Мĕн тăвас? Вилесле юншăхлатăп.
Веҫ чун хытрĕ. Юн шăннă. Мĕн пулчĕ?
Халиччен курманни хупăрларĕ ытла та.

Салатса пурнăҫа, ҫук ҫын евĕр
юлтăм халĕ, пуҫ усăнчĕ анчĕ.
Уйрăлма ҫеҫ сунманччĕ туссемĕр,
тĕл пулса савăнма та сунсаччĕ.

Ухмахла, ухмахла ман ҫухалчĕ
пур саманчĕ ҫут уйăх айĕн.
Ах, епле ман саву, курайманлăх сахалччĕ!
Кулянап та, шеллеп те ак халĕ.

*1968*

## АННЕ, АННЕ…

Анне, анне, çил ачисем йĕреççĕ,
тулта — тăман, асар-писер тăман.
Эп, ывăнми такмакçă, çулçӳревçĕ,
килтех ларатăп, çул каяс туман.

Уй тăмани эп — пĕр-пĕччен пурнатăп.
Хуть, юлташа, кушак та пулин çук.
Инçе-инçе санран, аннем, çунатăм, —
сан ывăлу, çак пӳлĕм, çакă çурт.

Чун çӳçенет… Çилсем çаплах йĕреççĕ.
Йĕреççĕ пулĕ пĕтĕм тĕнчипе.
Яла çитсе мăрьесене кĕреççĕ.
Эс вĕсене итлетĕн çĕрĕпе.

Итленĕ май, сĕм тĕттĕмре хăрушшăн
мĕлке иртет, — куçна эс ялт! уçан,
ялтах сикен ачушăн, ывăлушăн.
Ирччен чунна çиет темле усал.

Тăкăрлăкра кĕтеççĕ пек… кĕтеççĕ
виç çĕçĕпе, виç вăрă, виç услап.
Тăрса юлать вăл йĕмсĕр те кĕпесĕр.
Е çул çинче ăна курма пуçлан.

Унта ăна, паллах, таптаççĕ. Е каять вăл
мăн Атăл урлă каçнă чух вакка.
Е мĕскĕне такмакшăн тем чул явăл
хăваласа ярасшăн аякка.

Чышкусене чăмăртаса, аннеçĕм,
юнан: «Ых, йĕксĕк, — тен, — ых, йытăсем!»
Çил ачисем çаплах сиксе йĕреççĕ,
пӳрте кĕртме ыйтаççĕ йӳтетсе.

Анне, анне, лăплан, пăхсам епле хыт тарчĕ
виç çĕçĕллĕ виç вăрă, виç услап.
Çук, таптаймарĕç те — яту хăтарчĕ.
Турра хурса ăна эп аслăлап.

Вакка та лекеймен-ха... Çитмĕл явăл
пусса çиме пырсан та Лашана,
эс аса килтĕн те, пусакансен пăявĕ
çич сыпăка вакланчĕ вăшт! кăна...

*1968*

## ЧĂНЛĂХ ВУЧĔ

Чи тĕрĕсси тăван анне...
Ачалăхра çапла вăл пулчĕ.
Тĕп чăнлăхăн чакмарĕ вучĕ —
çунтарчĕ, туртрĕ хăй еннех.

Ачалăхра ĕненнисем
яш кунсене çутатаймарĕç.
Яш кунсенче янранисем
çамрăклăхра янăраймарĕç.

Пăлханнипе чăл-чал пăхса,
нумайăшне эп ăнланмарăм.
Чăн çын пулма тупа туса,
хам сăмахах хăш чух тытмарăм.

Çапах та, ун чухнех, час-час
çын тупсăмне туйса çып-çывăх,
кураттăмччĕ, айван ача:
тĕнчен тем чул тискерлĕх, çылăх.

Хаярлăхра çитĕннисем
суя мĕн иккенне те пĕлнĕ.
Мĕн чул этем, элек тӳссе,
мĕн чул герой шар курнă, пĕтнĕ.

Тиран ялан тронра пĕччен,
анчах хӳри — хура та вăрăм,
анчах хӳри — ясар та вăрă,
çăхавçă, сӳтĕк, юнĕçен.

Хăватлă Ленин, сан ятпа
лап витĕнсе, вĕсем сут турĕç.
Сан гвардине те çав майпах
хупларĕ çил, тăхлан та хурăç.

Тĕнче тăмасть, паллах, пĕр пек.
Çитсе кĕрлерĕ çĕнĕ тапхăр.
Çав йăх-яха йăлт, тĕппипе
хушшăмăртан сирсе пăрахтăр.

Суя тус тăшманран та ирсĕр:
варлать, çыртать куçран пăхса,
çапах та Ленин, ленинизм
тĕп чăнлăх вучĕ пек таса.

Çĕр тĕнĕлĕ вăл пирĕн Ленин,
унра çеç пирĕн чăн тĕрек,
ăна çеç эп хальччен итленĕ,
итлетĕп, итлĕп ĕмĕрех!

*1968*

## ЧĔР ЧЕЧЕКСЕМ

Çурхи хула... Хунар çути... Каçхи тĕнче...
Эп урамра çӳретĕп, палăк умĕнче.
Хулипеле те чи юратнă вырăн
тӳлек кăваклăхра татах та ырă.

Алра — çич çăлтăр-астра, çич турат.
Пуçра — эпоха шавĕ, ун кĕрлевĕ:
унта, чи çӳллĕ пусăмра, Ильич тăрать,
чи аялта — тăшманĕсен ĕрлевĕ.

Эй, эсĕр, халăх тусĕсем тесе çынна та, хăвăра та
ĕнентересшĕн тапăçнă вĕри пуçсем,
эп, Ленина курса, историре сире те асăрхатăп.
Сире истори касса тăкрĕ, путсĕрсем.

Сире аркатрĕ Ленин, ленинизм.
Çулпуçĕ вилчĕ — ĕçĕ — пурăнать.
Тĕнчипелех ун ӳсĕм хыççăн ӳсĕм,
тĕнчипелех Бастили парăнать.

Ăна, ун партине, темле хăртакансем те пулчĕç,
тем тĕрлĕ йĕксĕк те пăтратрĕ этеме:
фашизм, маоизм, сионизм мĕн чухлĕ урчĕ —
халь те урать, хăрушă итлеме.

Тĕнче пирки пăшăрханса илсессĕн,
темме атте-анне ума тухать.
Епле пурнаççĕ-ши? Майпен, пире манма пĕлмесĕр.
Ах, самани... ялан асма пăхать.

Тавах, атте-анне, ăс панăшăн, çунатăм,
тавах, çĕршыв, — ӳстертĕр упраса.
Сире пула эпир хыпса çунатпăр,
сире пула Ильич çулне куратпăр,
Пурнăçалла васкатпăр ăнтăлса.

Паян — çулпуç çуралнă кун. Хурас-ха
Ильич умне чĕр чечексем чунран.
Алри çич çăлтăр, çич турат шур астра,
хавасланса пăхаççĕ куçăмран...

*1968*

## ХАЯР ТИРКЕВÇĔ

Сивлек те ăслă аристарх,
мана эс çывăх ăраснах.
Мухтас килет, анчах — юрать-ши?
Хурлас! Хурлатăп хаваспах.

Тин пиçнĕ сăвă — аллунта.
Çиме пуçлан та васкамасăр,
пăхса ларатăп сывламасăр
çăварунтан та куçунтан.

Çамку тирне пĕрре пĕрен,
тепре саран, унтан çĕнрен
хуткупăс пĕрми пек тăватăн.
Çиме çапах йăлтах çиен.

Кăштран калатăн тăранса:
«Пиçмен. Тĕл-тĕл — чусти тăварлă.
Тĕл-тĕл — çăрмасăрах хăварнă.
Пĕçер. Тăвар нумай ан сап».

Пăшăрханса тухса каяп,
ларап кĕççе сарса ая,
мăсăльман пек пăшăлтататăп:
пророк пекех хама туяп.

Килсем, ăсталăхăм, килсем!
Ăнсамăр, сăвă-кукăльсем!
Поэзи çăнăхĕ, тасал-ха!
Пуçран çухалăр-ха, çилсем!

Чĕресĕр критик — аристарх,
манпа кăра эс ăраснах.
Кăралăхна савса мухтатăп, —
пулатăп пуль-ха чăн ăстах...

*1968*

* * *

Хĕр турă пекчĕ эс, сăнанăçемĕн.
Сана эп урăхла курасшăн мар.
Хăçан, камсене пĕлнĕçемĕн
эсĕ ĕлкĕрнĕ улăшăнма?

Асрах пахчăр хыçĕ, шăп вырăн,
кăтра пĕлĕтсем асра.
Çав ыр вырăна çак каçра
пĕччен эпĕ килтĕм, кив юррăм.

Эс те кунталлах çул тытатăн —
çаклатнă элле такама.
Темле мĕлкепе ман ума
суя пирĕшти пек тухатăн.

Тухсам, атя, ирт, эсĕ ĕнтĕ халь маншăн
çукрах, пĕлтĕрхи çеç асра.
Сана киввине эп курасшăн
çак ыр вырăнта, çак каçра.

Ыйтатăп: «Сан пулнă-и туйăм?»
Калатăн: «Нихçан, нихăçан».
Апла — юратмасăр чуптунă.
Апла — эс хĕр турă пулман.

Хама та, сана та шеллетĕп.
Хама — çук турра шаннăран.
Сана, савнă тус, хĕрхенетĕп
çав шанăç хальччен те çукран.

*1968*

* * *

Сан пек чух алхасса эпир те
куç вылятнă нумай, сахал мар.
Эп сана юратасшăнччĕ питĕ,
темĕн пулчĕ чунри туйăма.

Çав тери юратасшăнччĕ. Сӳнтĕм.
Куç савать пуль те, кăмăл туртмасть.
Ял çыврать. Тулли уйăх çап-çутă.
Кĕмĕл пек йăлтăрать сив турпас.

Тĕксĕм çӳç йăлтăрать, йăлтăрать йăваш кулă.
Ах, Анюкăм, Анюк, чун ăшши.
Эп пулсан айлăмри тĕттĕм улăх,
эс унти шур ромашка мар-ши?

Ан кулян, ӳс те савăн, чечекĕм.
Сансăр улăх вăл улăх та мар.
Шевлӳпе çуталса эп те, акă, çиçетĕп,
шухăшлатăп лăпланăç тупма.

Пăлханнин усси çук. Çитĕ — çунтăм, пăлхантăм.
Улшăнмарĕ, çавах — çут тĕнче.
Ах, Анюкăм, Анюк, пирвай курнăн пăхатăп
сан çине çакă каç çуттинче.

Çав тери юратасшăнччĕ, питĕ.
Пулаймарĕ. Анчах та чĕре
систерет: «Вĕççĕр вăхăт чуппи, — тет, —
çĕнĕрен ун патне çитерет».

Хирĕçлемĕп. Маттур эсĕ, йăмăк, —
çинçе пилĕк, яштак пӳ-си.
Эс çаплах йăлтăра, çиç, ан йăмăх,
сывă пул, сӳнми çăлтăр пек çиç.

*1968*

## ÇЫН ĂШШИНЕ ТУЙСА...

Ума хĕвел çутса эп тухрăм
тумхахлă çулăн варрине.
Эп утрăм çухрăм хыççăн çухрăм
тупасшăн пурнăç тĕллевне.

Ялтрарĕ пурăнăç тĕллевĕ
çап-çутă хĕвелпе пĕртан.
Тĕллев лартакансем телейлĕ
малашлăхра тĕрев пуртан.

Тĕллев, савни те эпĕ... виççĕн
эпир çак аслă çĕр çинче.
Хĕрхен телейĕме, савниçĕм,
тăрса юлсам пиртен инçе:

телейпеле тĕллев пĕрех вăл,
вĕсемпеле пĕрре — эп хам,
эс — эп пулмарăн; эп пăрахрăм
сана шанма... юлсам, юлсам.

Ан тив, сăмахăмсем тăварлă.
Этем пĕр хăйшĕн пурăнмасть.
Пĕр хăвшăн пурăнни — хаярлăх.
Хаярлăх — сивĕ, юрланмасть.

Ăна нихçан савса юрлаймăп.
Хаярлăх манăн тĕллев мар.
Çын ăшшине туйса пит лайăх,
çынна пил турăм ырлама.

*1968*

## МУХТАÇÇĔ

Тивĕçсĕр хурланăшăн хурланмăп.
Тивĕçсĕр... мухтаççĕ. Ак инкек!
Намăс-çке, пит намăс, чăн-чăн тамăк, —
вăтанатăп çарамас хĕр пек.

Вăтанма нумайăшĕ пĕлет-тĕр.
Пуç тавра шухăшлама — темле.
Виçĕмкун мĕн куртăмăр, Хĕветĕр?! —
мăшкăл, чĕрĕ мăшкăл темелле.

Ашака мухтарĕç. Çавă выльăх
те çилпе, те çумăрпа ӳсет? —
ăслă лашана элеклесе,
ун вырăнĕнче курать халь ырлăх.

Ик хут иккĕ миçине хĕрӳн
виçĕмкун çут тĕнчене каларĕ.
Унччченрех каланисем те йӳн —
сивĕ кĕл, йăлтăртатмасть кăварĕ.

Кам çĕклет-ха сĕмсĕр ашака?
Кам çаплахваскать-ха мухтамашкăн?
Кам? Паллах, карма çăвар шапа,
тилĕ, юс, ашак, тил чунлĕ кашкăр.

Эс тăхта, Хĕветĕр. Эсĕ — çын.
Ашака тархасшăн ан мухта-ха.
Мухтассу килсен те шăлна çырт,
ухмаха пуçна ан тай ухмаххăн.

Эпĕ те ухмах — пуçна ан тай:
иртнĕ пухура пĕрне мухтарăм.
Мухтаса та мухтанса пĕрмай,
чыслăх тĕпелне сурса варларăм.

Сурчăк — мĕн... варларĕç чĕр юнпа.
Çын çисе çын юнĕпе варларĕç,
виличчен чĕтре-чĕтре тарларĕç,
çунчĕç пурпĕр кĕвĕç çулăмпа.

Тивĕçсĕр хурланăшăн хурланмăп.
Тивĕçсĕр... мухтаççĕ. Ак инкек!
Шӳтлесе мухтанинчен хăрамăп:
шӳт вăл шӳт — сипетлĕ çумăр пек.

*1968*

* * *

Нумай ҫӗре ҫитсе нумай юлташ эп куртăм,
нумайăшне ӗнентӗм чӗререн.
Кашнин патне-тӗр уҫ чунпа эп утрăм,
кашнин патне... тус — пурнăҫ тенӗрен.

Анчах пӗр тус та пурнăҫ пулаймарӗ, —
лӗп ҫил пуласчӗ хуть питрен вӗрме:
пиҫсе чун типнӗ чух ҫил килӗ — уҫăлтарӗ,
сип кӳрӗ аптăранă этеме.

Лӗп ҫил те мар пӗр тус та... Эй, васкавлă шыв,
сив ҫăлтăртан ӳкен ӳркевлӗ ҫутă,
мӗнпе паян эсир тӳр чунлă-ши?
Сиртен ырри ҫак тӗнчере ним ҫук-тăр.

Ҫул хӗрринчи вăрман пек армути, мăян,
эсир те маншăн усăллă паян:
ялан яр-уҫҫăн кашласаларатăр,
сипетлӗ йӳҫҫӗре чунтан паратăр.

Ултавлă тусăмсем! Чӗлхесӗр ҫутҫанталăк
сире пит айăплать. Ан тив, улталăр
пӗрне пӗри, анчах мана — ҫитет.
Мана текех ан тивӗр, ан муталăр.

Тус пурнăҫ пек паха тесе каланҫă,
ăҫта, ăҫта эс, тусăм, курăнсамччӗ,
тухса тăрсам, ытарайми айван, —
утса пырам та хыттăн ыталам!

*1968*

* * *

Эс, муза, тӗрӗс шухӑшлатӑн:
поэтсенчен хӑрас пулать.
Курнаҫҫӗ шанчӑксӑр ытла та —
поэтсенчен тарас пулать.

Асӑрхамасӑр пӑрӑнатӑн.
Пӑхса юлатӑп хурланса.
Хавхаланусӑр пурӑнатӑп,
кивҫен илеймӗн хаваса.

Эс кӳрекен кичем салхулӑх
юр пек шуратрӗ сӑнӑма.
Эс кулакан ялтравлӑ кулӑ
ҫунатлантарчӗ мана мар.

Поэт поэзирен писет-и?
Мӗскершӗн, мӗншӗн писмелле?
Е эпӗ поэт мар, е эсӗ
ахаль хӗр ҫеҫ... тахши темле.

Эс уҫӑ кӑмӑллӑ пулмарӑн,
кӗртсе ӳкертӗн ҫулӑма.
Мӗн чул сӑнарӑм, шухӑшларӑм!
Мӗн чул ҫунтартӑм чунӑма!

*1968*

## ЭПИР МАР

Ку эпир мар. Эпир çынна итленĕ,
инкек пулсан — шелленĕ, савăнман.
Пире ыр çын, ыр çын сассин илемĕ
хĕпĕртеттернĕ, пăшăрхантарман.

Чĕресемпе хĕмленнĕ пулăшмашкăн
çав сас, çав çын çухаласса сиссен.
Пулăшманни — айванлăх, чĕрĕ мăшкăл,
тесе янранă чун хĕлĕхĕсем.

Çук, эпир мар ку, ĕненме те йывăр:
кулса çӳретпĕр, намăса манса,
юлташ инкекĕнчен — хаваслăн, сыввăн.
Мĕскер вăл пирĕншĕн асап.

Асап та, савнăç та вăл пирĕншĕн — йӳç кулăш.
Пире витерме çук нимпе тирсе:
чĕре çинчи çусем пĕр метр хулăнăш,
ик метр хулăнăш — тирсем.

Хаваслă, сывă... Чăн-ши çак, суя-ши?
çапла ыйтать вăрман, çапла ыйтать уй-хир.
Эп хам та сирĕнтен татсах ыйтасшăн:
ăçтан, камран, мĕнрен вăл пирĕн чир?

*1968*

* * *

Эс сӳнтӗн чӗрере. Тен, асăмран та тухăн.
Эп тем каласшăн, ал сӗлтеп аран.
Калас сăмах çителӗксӗр те чухăн,
тен, эс çукран? Тен, тусăм, эс çукран?

Сисмерӗмӗр, тăванлăх çавраçилӗ
лăпланчӗ-шим: çухалчӗ-шим чăнах?
Пирте пӗрреччӗ çемçе кăмăл, кăра çилӗ,
пирте пӗрреччӗ чăнлăх та юмах.

Черченкӗ кăмăлна ытараймасăр,
эп сивлеместӗм вут пек çиллӳне.
Туймастăм чăнлăха хитре юмахсăр,
маттурланса пыраттăм çулленех.

Килӗштерсе, пӗрне-пӗри упранă,
пӗрне-пӗри çӗкленӗ пӗлӗте,
пуçа ухса çӗн кӗвӗсем юрланă,
кал-кал çӳренӗ туслăх пилӗпе.

Сисмерӗмӗр, хавхалану çухалчӗ.
Сисмерӗмӗр, çул вăрăм, вӗçӗ çук.
Ача чухне умра çап-çут маяк çунатчӗ,
чунра кăвар тăратчӗ ача чух.

Ăçта-ши йăнăш пулчӗ пирӗн утăм?
Инçе çула ма тухрăм çаруран?
Ма сӳнтӗм чӗрепе, салхулăха эп путрăм?
Юлташ çукран, юлташăм, эс çукран.

*1968*

## ШАНĂÇ

Çук, çухалман эс. Çухалма та
пултарайман. Пĕчченлĕхре
каллех çĕклерĕн те чун патăн,
каллех кăлартăн сĕмлĕхрен.

Каллех йĕри-тавра çап-çутă!
Текех нихçан та пулас çук вăл
дуэль — хампа та тĕнчепе,
Печорин вăхăтĕнчи пек.

Çунатăн, пурăнăç сунатăн,
ыр пирĕшти пек секундант,
яланлăхри ваш-ваш! çунатăм,
малашлăхри маттур самант.

Ан тив, сана эп тарăхтарнă,
хампа илмен çухатасран;
ан тив, кунçулăмăр тăварлă,
тус маррисем нумай тусран;

пурĕпĕрех чунра — пĕр эсĕ.
Çапла мĕн ĕмĕр пурăнар.
Санпа кăна кунçул хĕресĕ
тĕк пек çăп-çăмăл, йывăр мар.

*1968*

## ТУРĂ

Çынсем турра ĕненнĕ ĕлĕк.
Пур, ĕненеççĕ халĕ те.
Хăшпĕрисемшĕн турă — ĕмĕт,
пурăнăçра çукки, ыр тĕлĕк.
Вăл турă евĕр илĕртет.

Çапла... Вĕсем пуласлăха,
çут ĕмĕте кăна шанаççĕ,
тӳпенелле пăха-пăха
хĕрес хывса пăшăлтатмаççĕ.

Анчах, сисмесĕрех, хĕрӳллĕн,
ыр ĕмĕте турра хурса
ăна часрах курасшăн ӳлĕм
ĕçлеççĕ çанă тавăрса.

Çапла. Кашнин пур турă. Турă...
Турăсăрсем те пит нумай:
ниме шанмасăрах, сатуррăн
турра мухтакансем чылай.

«Турăпала чиркӳ — пĕр чун,
епле çавна, — теç, — пĕлейместĕр».
Вĕсем каланине итлес-тĕк,
чиркӳ вăл турă, çын — чĕрчун.

Анчах чиркӳ-ши турă? Турă
чиркӳ вăл пулнă-ши хальччен?
Кам чăнласах турра кĕлтунă,
чăн турă курнă умĕнче.

Кусем — хӑйсене ҫеҫ кураҫҫӗ.
Вӗсен турри — хӑйсем, хӑйсем.
Хӑйсемшӗн тамӑкра ҫунаҫҫӗ,
ҫӑтмахалла та кармашаҫҫӗ,
«пирте — чӑн турӑ»! теейсе.

Ҫук ҫав, ҫын тӑнсӑр чӗрчун мар.
Епле ҫавна та пӗлейместӗр?
Эсир каланине итлес-тӗк,
ҫулпуҫ те — турӑ, ҫулпуҫ мар.

*1968*

## ИНКЕК

Епле инкек — йӑлтах туйса
ҫынна йӑлт, витӗр, ӑнланни.
Епле асап — чӗре ҫурса,
хӑвна хӑвах улталани.

Тус пек курнать ҫын ҫиелтен,
шалта — наркӑмӑшсем вӗреҫҫӗ.
Чӑнне татса калас тӗлте
чул пек хытса тӑрать чӗлхеҫӗм.

Куҫран пӑхать ҫын тӗсесе,
саламлӑн ал тӑсать вӗт, явӑл, —
те нимӗн те сисмест тесе,
те урӑх сӑлтавпа, кулать вӑл.

Ним сисмене персе, кулап
унпа танах, мӑч куҫ хупмасӑр.
Ҫав вӑхӑтра чӗре — услап,
хам пӗтӗмпе эп — пархатарсӑр.

Кайран ҫеҫ — намӑс, пит — кӑвар.
Тек суймасса сӑмах паратӑп.
Тӗл пултӑмӑр — каллех хам мар,
каллех кулатӑп, саламлатӑп.

Ҫак инкеке ҫапса ватать
чи пӗчӗк хирӗҫӳ. Полундра!
Тар пичӗки ӳкет вута.
Кӗрс! кӗрслетет пичке, ах турӑ!

Тинех ак тӑн килсе кӗрет.
Текех, тӑшман, тус пек ҫӳреймӗн.
Эп хам та — иккӗ мар, пӗрре.
Тӗнче ҫине пӑхап телейлӗн.

*1968*

* * *

Ман юрату — шуйханнӑ шӑпчӑк пек:
кӑшт хӑратсассӑнах вӗҫсе каять те
ҫав вырӑна калла пымасть текех.
Хӑйне ытла та пысӑка хурать-тӗр.

Ҫуралсанах ҫапла. Тен, ҫавӑнпа
паян кунччен те чӑн-чӑн юрлаймарӗ.
Чеченскере чечен йышӑнаймарӗҫ,
нумай чухне итлерӗҫ ҫурӑмпа.

Анюк, тӑванӑм, эсӗ хӑмсаратӑн
тиркев сӑмахӗн ҫивчӗ ҫавипе.
Ах, ҫӳрӗп ӗнтӗ, ҫӳрӗп сансӑрах та.
Айван пулма юрать-и ҫавӑн пек.

Юри кӑна юмах юптартӑм, тусӑм,
ҫуркуннене аса илсе кӑна:
пуҫа усса ҫӳренипе мӗн усӑ,
ахаль мӗнле ирттерӗн-ха куна.

Татах хӑмсар, тепре анчах хӑмсар-ха,
ытла та эс ача — хӑмсарнӑ чух.
Хуть армути тыт, хуть ҫава, хуть сахӑр,
вӑл хӑрас ҫук, вӑл кайнӑ, шӑпчӑк... ҫук.

*1968*

* * *

Эпĕр пурте ăçта-тăр васкатпăр.
Пит васкатпăр. Çук вăхăт пачах.
Хамăра та, çынна та лăскатпăр, —
тек васкатпăр, васкатпăр анчах.

Ачаллах вĕçсĕр-хĕрсĕр васкатпăр.
Тăхăнатпăр кăштах именсе
пысăк çĕлĕк, тем пысăкăш атă,
пысăкрах курăнасчĕ тесе.

Сухал шăтнă-шăтман — алра бритва.
Шкултан тухнă-тухман — сигарет.
Ӳссе çитнĕ-çитмен Зита, Рита
куçа тĕтĕм евĕр кĕрет.

Васкаса пĕрлешетпĕр. Васкавлăн
уйрăлатпăр, аптраннă енне.
Васкаса Шупашкарăн-Мускавăн
тем шыратпăр, пĕлместпĕр мĕнне.

Эпĕ хам та ялан пит васкарăм.
Эпĕ мантăм тăван килĕме.
Çынсене те нумай, пĕр хама та лăскарăм,
кĕскетсе пурнăçа, çывхартса вилĕме.

*1968*

## ТĔНЧЕ ПАЛАЧĔСЕНЕ

Тĕнче палачĕсем! Астăвăр:
вĕçĕ-хĕррисĕр ултавпа,
çап-çутă сарă ылтăнпа
асăхтарса хăвăра хăвăр
тупатăр гитлерла шăпа.

Палачсене тытса чараççĕ.
Палачсене тытса çакаççĕ.
Фашист-и, ультра-и, шуйттан-и, —
палач пĕрех палач шутланĕ.

Çакаççĕ хăвăр çакнă пек.
Çăлаймĕ мул. Çулса тăкаççĕ
авал çынна мур хырнă пек.
Ăçта тарсассăн та тытаççĕ.

Çĕрте çĕреймĕр ыр курса,
пулаймĕ йывăр тăпрăр çăмăл.
Веçех яраççĕ çунтарса, —
çил çапĕ кĕлĕре, сив çăмăр.

Тек мулшăн эсĕр. Мул вăл влаç.
Влаçа кĕрсен, пуйма — çул уçă.
Анчах халь хăшпĕри, кутруçăн,
пĕр влаçшăн çеç те пит хавас.

Палач вăл мулсăр та — палач.
Çав влаç ун ылтăнĕ, ун мулĕ.
Халăхăн мар пулсассăн влаç,
вăл — ун асапĕ, ун куççулĕ.

Перес, чикес, лăплантарас —
чĕр вилĕм çеç тиран саккунĕ.
Чĕтре, палач! Шутласа хунă
эпир те: пуçхĕрлĕ çакас!

*1968*

## МĂНАÇЛĂ ПИКЕСЕМ

Чун-чĕрене ярах уçса, хăюсăррăн, асаплăн
тăраттăм эпĕ сирĕн умăрта.
Ыйткалакан пек, аллăма тăсаттăм
уяр чухне, çил-тăманра, сив çумăрта.

Эсир мана кирек епле çанталăкра та
пĕр пек тиркеттĕрччĕ, мăнаçлă пикесем.
Тиркенĕскер, хурланнипе макраттăм.
Чулран та хытăрахчĕ чĕрĕрсем.

Пусăрăнса, йăвашланса каяттăм.
Утма та, калаçма та кăмăл çук.
Пурнас килмест, вилес килни çеç янтă
чун çавăн пек мăшкăл тӳссе тертленнĕ чух.

Эсир чăн юрату тупса унпа киленнĕ тапхăр
пулмарĕ маншăн ырă та хитре.
Ялан ыйтаттăм, такамран ыйтаттăм:
«Мĕн-ма тиркеççĕ, кăлтăкăм мĕнре?»

Ак пурнăç тăвăлĕ сире те пăлтăр-палтăр
çĕклерĕ çапрĕ, силлесе ласкать.
Пăхатăр та (тĕлĕнмелле!) — пĕр мана çеç куратăр.
Эх, ылтăн пулă... çурăк валашка...

Халь ĕнтĕ çурăк валашка ла лайăх:
ĕçесчĕ çеç шерпет çĕнрен те çĕнĕрен.
Мĕн чухлĕн эсĕр? Ма çапла нумайăн?
Эп пĕр-пĕччен, эп çав-çавах пĕччен.

Ăçта, кампа чухне кӳпченĕ юратас талантăр?
Ма савнă май куçран пăха-пăха
пушар чухнехи пек ăшталанатăр?
Мĕнрен халь лайăх эпĕ, мĕн енчен паха?

Ним енĕпе те лайăх мар, пĕлетĕп.
Асăрхаман нимле пахалăх та.
«Айван. Сисмест», — тесе çула пӳлетĕр.
Тăхтав тăвасшăн, ырлăхлă тăхтав.

Малтанхинчен те йăвашрах тăратăп.
пурнăçăра итлетĕп уçă кăмăлпа.
Эсир анчах, кирек епле çанталăкра та,
пĕр пек шутлатăр: «Мĕскĕн. Тăм кăмпа».

Вара каллех ĕмĕтленме пуçлатăр
чăн юрату тупса ачашлăха путма.
Чи чаплине, шанчăклине куçлатăр.
Эп, ыр сунса, тухатăп ăсатма.

*1968*

## ЭСРЕЛ

Ыр çын, епле кӳтсен те, виçерен тухмасть.
Усал, кăшт тарăхсан та, тăр ухмах,
анчах темме ыр çынна мар, ăна
чылай чухне пур ырлăх парăнать.

Ыр çын çӳрет тивĕçлине те ыйтаймасăр.
Ку пур — картах туртса илет вĕт, пархатарсăр,
сикет-тапаçланать мĕн ĕмĕр тăршшĕпе
епле пулсассăн та лекме тĕпе.

Тĕпе кĕрсен, сăпайлă юлташне
персе чикме пăхать шапа пăтти ăшне.
Чи йывăр самантра çеç ыр çын паттăр:
карах тăрать те — çĕнчĕ те! Вăй патăр!

Пуçтах пĕр вăхăта никам та мар.
Йăвашланать. Ыр тус пулма та хатĕр.
Хăй хĕснĕ этемех пуçлать вăл мухтама.
«Çакна курса, — тет пуль, — хама тĕнче мухтатăр».

Анчах ухмах вăл ухмахах çав темшĕн,
ытла та тăнсăр, сăнсăр, кулăшла —
ухмах пулсан та, ăслă пек çӳресшĕн.
Калатăн — итлемест. Çук кăмăл пулăшма.

Эсрел — тем сăлтавпа ташша ярать пĕччен чухне,
манса каять хăй кам иккеннине,
этем йĕрĕнмелле тапăртатать, тирпейсĕр,
çухăрашса илет, нимскер тăва пĕлмесĕр...

*1968*

* * *

Çĕр шуйттан çынра пĕр харăс...
Ав юлташ, вĕшле,
хатĕр тулама, пăх-ха эс,
хăйĕн амăшне.

Вăл чее, вăл пит астармăш,
тĕп тăвать, сутать,
йĕксĕк, пĕлмест мар мăнтарăн —
мĕн кĕтет малта.

Вилмĕп тет пуль, хăрамасăр
хăтланать. Анчах
вăхăт-вăхăт чăтаймасăр
йĕрмĕшет ачан.

Аннӳ мар эп, лăпкаймастăп,
ан çыхлан, хăпсам,
хам та ангел мар, суймастăп,
сур питрен — суйсан.

Мĕн усалĕ йĕкĕлтет-ши,
илĕртет мĕскер:
канăç çук нихçан та темшĕн,
чун тусать çавтер?!

*1968*

## ШИКЛĔХ

Яланлăха çеç эс яланлăх
асту та мансам ыттине:
кĕтӳç (сурăх мар). Савăнмалăх
кĕтсем эс этем кĕтӳне.

Хăюллă та çивĕч пуç манăн
хама шухăшпа хĕнеме.
Кĕтӳç, эс ача пек, тăванăм,
суя шанчăка ĕненен.

Куратăп, вăранмĕ теместĕп,
пăрахмĕ чăваш çĕклемне,
унччен вăл «вак халăхчĕ», мĕскĕн.
Халь — чарăннăскер çĕкленме.

Куçпуç арпашман ун, сăнать вăл
мĕскер суйнине кĕнеке, —
çилли хыпса илĕ самантлăх,
çухалĕ пулман та пекех.

Çӳлте ма тесен хура пĕлĕт,
хаяр аслати алхасать, —
пурнать ĕмĕртен шиклĕх, тĕлĕк,
пурнать чăваша хупласа.

*1968*

# 1969

* * *

Эс йăнăшатăн, Ипполит.
Хавассăр санăн дипломати.
Сана вăл суяна кăларчĕ.
Текех шанмастпăр, асра тыт.

Икĕ турра пĕр кăмăлпа,
пĕр хăватпа, пĕр пек тĕп-тĕрĕс
пуççапма çук. Пĕри е йĕрĕх,
е киремет, е... чул юпа.

Кала, тăратăн хăш енче?
Ма шикленетĕн, пытаратăн?
Кил юнашар, ак — ал паратăп.
Килсем, пăхар инçе, инçе...

*1969*

* * *

Сăмахпала мĕн калани
ялан ĕçе куçса пыринччĕ.
«сана эп юратап» тени
мĕн ĕмĕр чăн сăмах пулинччĕ.

Вăл чăн-и халь? Чăн мар, чăн мар.
Суя укçа пекех суя вăл.
Куратпăр: тӳрĕлĕх — чăрмав.
Суйсан çеç ирĕклĕх туятпăр.

Тахçан, тен, чăн-чăн юратсах
сана эп «юрататăп» терĕм,
хыçран çӳрерĕм чăнласах,
кӳлешрĕм, çунтăм, вĕчĕрхентĕм.

Тен, эс те чăн-чăн куççульпе,
телей куççулĕпе, вăраххăн,
ăш çумăр кантăк çунă пек,
час-час питне çуса тăраттăн?

Ăçтан пĕлес... Тен, ахалех
эпир пĕрне-пĕри шанмастпăр?
Тен, пурăнса авалхилле,
шанманлăх пысăк пуль чамасăр?

Çук, пурăнатпăр чиперех.
Аваллăх мар, эпир кивелнĕ.
Аваллăх — çĕнĕпе пĕрех.
Эпир — суя çулпа çӳренĕ.

Унпах çӳретпĕр халĕ те,
тӳр çул çине сайра тухатпăр.
Такам шуйттанĕ хĕтĕртет:
кăкăр çапсах пуçа ухатпăр.

Чеелĕх хĕмĕ — куçсенче.
Чеелĕх — мĕскĕнле чеелĕх.
Палкатпăр паттăрлăх çинчен, —
хал çук çунмалăх, çĕкленмелĕх.

Анчах та ĕмĕрхи пĕр туртăм
çиет çапах чĕре çуне —
шанас килет тус-йышсене,
калас килет: тус-йыш сыв пултăр!

*1969*

* * *

Санпа сывпуллашни шăп вунă çул.
Мĕн сăлтавпа сывпуллашма васкарăм?
Хушшăмăрта тухманччĕ ятлаçу,
тухманччĕ те... часах тухма пултарнă.

Хушшăмăра кĕменччĕ курайманлăх
шуса çĕлен сасартăк кĕнĕ пек.
Нихçан, нимле çĕлен шумасть тени — айванлăх, —
çĕр чарăнмасть ан çаврăн тенипех.

Çĕр — çаврăнать. Кунсем — ертеççĕ хăвăрт.
Эпир те улшăнатпăр палăрми.
Сисмесĕрех, ак, çитĕнтĕм, мĕн тăвăн.
Ав эс те — пиçсе çитнĕ панулми.

Татса илме тăхтарăм эп, тăхтарăм,
татса илеп тесе тăрсассăн та.
Чун савнинчен пуласшăнччĕ эс арăм,
кăшт тархаслу янратчĕ сассунта.

Çав самантра эп витĕр туйса илтĕм
чун пĕрлĕхĕ икке уйрăлнине.
Сана эп питĕ юрататтăм, — питĕ,
хăймастăм калама — юратнине.

Анчах... ўт ўтшĕн çунни çеç-ши чăн-чăн,
çут ĕмĕт пек ялтравлă юрату?
Эп çирĕп кăмăлшăн та саврăм, — ырă чуншăн.
Çав юрату манра вăль халь те пур.

Чун савнинчен пуласшăнччĕ эс арăм
сив чăнлăхпа пăвма çут ĕмĕте.
Тен, çавăнпа сывпуллашма васкарăм?
Тен, çавăнпа кĕмерĕм ўкĕте?

*1969*

* * *

Эпир каламасан чăн сăмаха кам калĕ!
Поэт, эс çур сăмах суйни çĕр поэта варлать.
Ан суй! Поэт пророк тесе ахаль-и
хахать çӳрет мĕн ĕлĕкрен вара.

Иртнипеле хальхи пуласлăхран пулаççĕ, —
ума тинкермелле хăюллă куçпала.
Пуласлăха паянхинчен кураççĕ, —
хальхи хăват мала вăл куçмалла.

Поэт каламасан тата кам калĕ —
мĕнре чи пысăк савнăç, çитĕнӳ.
Поэт кăтартмасан кам кăтарткалĕ —
мĕнре чи пысăк йăнăш, кӳренӳ.

Пулман-и савнăç? Пулнă. Ун тăманĕ
чечеклесе çутатнă пурнăçа.
Ӳпкелешсе кӳренмелли пулман-и?
Ылханмалли пулман-и? Пулнă çав.

Этемлĕх коммунистсене шанать. Телейлĕ.
Коммунистсем пур чух тĕнче тăрать.
Çапла... Анчах вĕсем те пĕр пек мар теер-и:
мĕн хăтланаççĕ авă таврара.

Эй, космос ĕмĕрĕ, эс калама çук кăткăс.
Çын чунĕ космос мар, вăл кăткăсрах.
Пиншер çул этеме çĕр темшĕн тăкăс —
тӳпе тĕпченĕ май çавна тытар асрах.

*1969*

* * *

Ай! Çулçăсем...
Çулçăсем саралаççĕ.
Çулçăсем саралаççĕ умра.
Кунĕн-çĕрĕн,
çĕрĕн-кунĕн
çулçăсем саралаççĕ.
Ай! Çил...
Çил лăскать.
Çил лăскать хурăна.
Çил лăскать хурăна тулашса.
Çил...
Хурăнсем çаралаççĕ.
Хурăнсем çаралаççĕ салхуллăн.
Кашласа хурăнсем çаралаççĕ.
Шăн çĕртен хыт тытса
çаралаççĕ.
Сив çилтен хăраса
çаралаççĕ.
Антăхса çаралаççĕ,
ухмаха тухаççĕ,
вăйă картине тăрса
ташлаççĕ —
уласа макăрса
çаврăнаççĕ,
çĕрĕпех, çĕрĕпех
чарăнмаççĕ.
Çумăр пек çăвать
сарă куççуль — çулçă.
Уйăх чул катать —
чулçă...

*1969*

* * *

Эс чун тӳпине çиççе хăпартăн
шухăш кивĕ, кăмăл сивĕ вăхăтра.
Сая кайрĕ, иксĕлчĕ шалти хăватăм
уйраймасăр хурапа шурра.

Сая кайрĕ, иксĕлчĕ... туссем пĕри те
пулаймарĕç маншăн чăн тĕрек.
Ир кăларчĕç çĕмрĕк алăк витĕр.
Иртерех аркантăм, иртерех.

Чунăн тӳпине çиççе хăпартăн...
Унта çукчĕ урăх çăлтăрсем.
Йăлкăшатăн. Йăлкăш. Ирĕк патăм,
тĕлĕнес мартан кăшт тĕлĕнсе.

Куçунтан пăхап та — вăтанатăн.
Çут хĕлхемĕ — чĕрĕлĕх юрри.
Аллуна эп сĕртĕнеп юри —
пĕçерет! Çулăмланса çунатăн.

Чунăн тӳпине çиççе хăпартăн,
яштака, çап-çамрăк хĕрача.
Пур çĕрте те сана çеç куратăп,
сана çеç, сана, сана анчах.

Уйраймастăп хурапа шурра эп
халĕ те... Чун саншăн кӳтнĕ чух
«юрататăп» темешкĕн — хăратăп,
«юратмастăп» теме — халăм çук;

*1969*

## МĔН ПУЛЧĔ?

Эп ăнтăлса малашлăхра çӳренĕ чух килмелле
марччĕ.
Эп хурланса иртнисене асилнĕ чух
шăп тăмаллаччĕ.
Эп паяна таврăннине асăрхаса кăна
эс ăшшăн памаллаччĕ аллуна.

Малашлăхрискере тупаймăн халлĕхре.
Тупсассăн та хăй мар, пуш кĕлетке анчах вăл.
Ăс-кăмăл вăйĕ, чун хавалĕ, йăлт малта,
чечеклĕхре.
Малашлăх-и? Ытла хитре вăл, ырă, чаплă!

Унта эпир курмастпăр начара,
курсассăн та курман пекки тăватпăр,
малашлăх хапхинче тапăртатса тăратпăр.
Чечек пахчи çиçет, куç алчăрать.

Ан айăпла, эс килнĕ эп çук чух,
чечеклĕхе кĕмешкĕн çул тупман эс.
Тепрехинче те эпĕ пулнă çук.
Пуш пĕвĕме кӳреннĕ эс, айван ăс.

Пĕр ахалех пăлханнă, шăп тăман,
ӳпкев витмен чухне хыт ӳпкеленĕ.
Кайра — мĕн чухлĕ тунсăхлă самант!
Мĕн чул иккĕленӳ, шанманлăх, чун кĕрлевĕ!

Аса илетĕп çамрăк пурнăçа.
Асилнĕ май шалран-шала кĕретĕп,

кашни çынна, сăна, ума эп ӳкеретĕп,
ӳкернĕçем паянлăха куçап.

Ĕнер анчах ыранччĕ-ха паянăм,
çунатчĕ çуталса, мала чĕнсе.
Ир пулчĕ те, паянăн çутисем
ăсанчĕç ырана пуяннăн.

Куллен çапла... Тăванăм, мĕн тăвар?
Ална парсам, ална парса йăл кулччĕ.
Чунри пылак çухалчĕ. Чун — тăвар.
Мĕн пулчĕ пурнăçа? Кала, мĕн пулчĕ?

1969

* * *

Çула тухрăм çуран, тур лашам çук.
Умра выртать вĕççĕр-хĕрсĕр шăн çул.
Ирпе-ирех çапла мĕне пула
тапрантăм-ха таçти инçе çула?

Ма салхуллă эп? Кам кӳрентерчĕ?
Мĕнле нуша, мĕскер шеремечĕ
пурнăç çилне хирĕç тăвалла
тăван килтен юта хăвалать?

Шанчăк пĕтмен. Шанчăк халăхăмра.
Атте-анне пилĕ — хăлхамра.
Утас тетĕп вăйран тайăличчен,
шухăшăмăн çути сӳниччен.

Шухăшăмăн çути сӳнсе ларсан,
шухăшĕ хăй йăлтах салансан,
тур лашам çук туран хăпармашкăн.
ăна тытса çинĕ сăрă кашкăр.

Каятăп-ха, каяп пит аякка,
пыратăп туяпа çула такка-такка.
ăçта кайсассăн та пĕр уйăх-хĕвел,
çуралнă çĕр пĕр мар, çавна шел.

*1969*

# ЯЛА ÇИТСЕН

*Турхан Крахвинине — асаннене*

Чĕррисемпе кирек хăш вăхăтра та куçкĕретĕн
юмахласа ларма пулать, кулса та шӳтлесе.
Яла çитсессĕнех, малтан, çăва çине кĕретĕп
пиртен яланлăха кайнисемпе пуплес тесе.

Ман аттене кун панă çын халь çакăнта.
Çывхарнăçемĕн: «Çитрĕн-им-ха? — тессĕн, —
ирт, лар, çиес килмест-и?» — тессĕн кăмăлтан
туйăннăран, килет йĕрессĕм.

Халь çеç çӳренĕскер ума тухассăнах
кĕтетĕп сывламасăр. Çук вăл... Çук та, пур та...
Чĕнсем, чĕн, асанне, парсам эс сассуна.
Куçа курнать... Каллех сана эп куртăм.

Каллех кăштăртатса пата пыран,
ватлăхунтан вăтаннипе йăвашшăн ал паран.
Ах, асанне, çӳçӳ сан шурă-шурă,
куçу кăвак... Эх, шелсĕр йĕксĕк турă...

Сана вăл хĕрхенмерĕ, асанне,
пӳне ватăлтарса чунна хăварчĕ çамрăк.
Хăнăхаймастăп эсĕ çуккине.
Пĕртте сан валли мар эп шăтăк чаврăм.

Ку вилтăпри сан вилтăприйӳ мар.
Эс ман çумра шăкăлтатса ларатăн.
Айта киле, айта, часрах каяр,
эп халь те пĕчĕк, сансăр эп хăратăп...

*1969*

* * *

Пулар-и туслă, хура куçăм,
пулар-и туслă? Тĕрĕс-çке:
пуличченех ăçтан яр-уççăн
курма пултарăн ун вĕçне.

Кӳр аллуна: пулар-ха туслă —
туссемсĕр сивĕ те кичем.
Кӳр аллуна: хитре те тулăх
куллу паян нихçанхинчен.

Сана пĕрре кăна курман эп.
Элле те канăç çĕтнĕрен,
куллен сăнатăп та, тăванăм,
курмассерен эс çĕнĕрех.

Мана та чĕртрĕн те çĕнетрĕн.
çуталчĕ пурăнăç, шăпа.
Унччен — аманнă пек çӳреттĕм,
чĕре суратчĕ. Халь — шăпах.

Пулар-ха туслă, хура куçăм,
ан кĕт-ха, тусăм, хĕн-асап.
«Çук» тейĕн — çуната эс хуçăн,
ал парăн — ярăп юрласа.

*1969*

## МАН ПĔТĔМ ПУРĂНĂÇ

Шăп çирĕм çул эп çурални.
Ман пĕтĕм пурăнăç — çынсем патне çул шырани.
Эй, çут тĕнче, эп çав çула тупмарăм,
тупсассăн та тупман тесе шутларăм.

Ача чухне кăна, ача чухне,
ман пурччĕ ăрăскал: атте-анне.
Ман пурччĕ юлташсем, туссем те пурччĕ.
Ăçта вĕсем, ăçта? Ăçта ачалăх юлчĕ?

Хăйматлăх аппасем, хăйматлăх пиччесем!
Халь те умрах, умрах сăн-питĕрсем,
анчах та хăвăр çук. Ăçта кайса çухалтăр?
Ăçта, кам тĕлĕнче ваш! варкăшать çунатăр?

Ма упраймарăм-ши ача чунне?
Ма юраймарăм çывăх çынсене?
Мĕн ĕмĕр тăршшĕпе çынсем патне утатăп,
Мĕн ĕмĕр тăршшĕпе çын шыраса супатăп...

Шăп вăтăр çул эп çурални.
Ман пĕтĕм пурăнăç — çынсем патне çул шырани.
Эй, çут тĕнче, эп çав çула тупмарăм,
тупсассăн та тупман тесе шутларăм.

Яш вăхăтра, чăнах, яш вăхăтра
пӳ яштакаччĕ, çырăччĕ кăтра,
хĕрачасем хĕрӳленсе çыру çыратчĕç,
пĕр-ик хутчен сăмса тутри те пачĕç.

Эп хам та пулнӑ Байрон пек вӗри.
Мана саватчӗ кӳршӗ Варвари.
Эпир ун чух Ромеопа Джульетта пекчӗ.
Чуна ҫӗклетчӗ юрату сипечӗ.

Ҫилсем вӗрсен, ҫанталӑк улшӑнать.
Ик тус кала пуҫларӗҫ: «Пуҫана».
Ҫакна илтсе нумай-нумай кулянтӑм,
тус-юссене те, савние те мантӑм.

Тек чӑрманмастӑп амурла ӗҫпе.
Тус пултӑр ҫын идея тӗлӗшпе.
Мӗн ӗмӗр тӑршшӗпе ҫынсем патне утатӑп,
мӗн ӗмӗр тӑршшӗпе ҫын шыраса супатӑп.

Сахал-и тӗнчере пӗр шухӑшлӑ ҫынсем?
Чылай — ҫут тӗнчере пӗр пек шутлакансем!
Эпир те, савнӑ тус, пӗр пек хӗрӳ политик,
пӗр пек хӗрӳ поэт, философ-аналитик.

Санпа ялан сӑмахӑм килӗшет.
Хӑш чух кӑна хурлатӑп, тиркешеп —
хӑш чух кӑна сана ҫӗнрен унасшӑн,
хам пек макрашакан, нӑйлатакан тӑвасшӑн.

Эс ан итле. Сӑввӑма ҫеҫ итле.
Ман пӗтӗм пурӑнӑҫ — ҫул шырани ҫынсем патне.
Идеалист эп, ҫав ҫула тупмарӑм,
тупсассӑн та тупман тесе шутларӑм.

*1969*

## САВРĂШПУÇ ЧЕЧЕКĔ

Хăш вăхăтра эс, Саврăшпуç,
çак чечеке пăхса ӳстернĕ?
Тăван ял-йышăм, тавтапуç,
эс чаплă роза çитĕнтернĕ.

Хăш вăхăтра пĕве кĕрсе
çиçме пуçланă кӳршĕ хĕрĕ?
Пуç тайрĕ вăрттăн... эй, хĕрсем,
хĕр чух чăнах-ши вăл тус — хĕрĕх?

Епле саламлă та чипер! —
çунаççĕ каччисем, типеççĕ...
Мĕнле сив кăмăл: чечеке
татса илсе çумне тиресшĕн.

Ыр илемпе киленнĕ май,
иртни тухать хутлам-хутламăн —
хĕр куртăм пулĕ теп нумай,
Анюк, сан пеккине курмарăм.

Эс пултăн-тăтăн куç çути.
Нивушлĕ халь те куç улталĕ?
Утту та — савнă çын утти,
куллу та... Эп — вĕр-çĕнĕ халĕ!

Сан хĕрĕх тус — ӳпкевĕм çук.
Начар юрра юрламĕç хĕрĕх.
Начар юрра ман вăрттăн хĕлĕх
ĕнермĕ шанăç çĕтнĕ чух!

Эс — куç çути, эс — çутă шанчăк!
Тинех шанатăп кунăма.
Иккĕленӳ, чарусăр анчăк,
ан тăрмала-ха чунăма.

Асапсене ан асилтер-ха,
ан нăйкăш: «Пĕрлĕх çук, — тесе. —
Ик чун пĕрре пулма инçе-ха,
пулсан та — хурлăх çеç», — тесе.

Тен, туслăх вăраха та пымĕ,
кĕтсе илеймĕп юрату.
Юратмасассăн та, ыр çыннăм,
сывпуллашма пулин те тух.

Инçе-инçе каллех эп кайăп —
ялан астăвăп, виличчен,
тăван çĕрте çеç чăн-чăн лайăх
пĕртен-пĕр тус пурри çинчен.

*1969*

## КИЛМЕРĔ

Юратуран та, яшлăхран та
хаклăраххи вăл теттĕм эп —
хăвна упрас сив элемент.
Вăл пур пулсассăн — сывлăх янтă.

Туссемĕр, сывлăх — чи кирли.
Вара, хама пит аркатмасăр,
хуллен сывлакалаттăм ассăн.
Хыпса çунатчĕ — чун варли!

Хама эп: «Ăслă, — теттĕм вăрттăн, —
савни сахал-и, вуннă... вăтăр...
эп пĕр-пĕччен... çунах пĕччен —
ăçтан çунса вĕçне çитен».

Пĕр пусрăнса, пĕр çĕкленсе
шавлаççĕ яшлăх çилĕсем.
Çил юхăмне кĕме васкаççĕ
шалти хатарлă туйăмсем.

Анчах — тем пулчĕ: кĕрлеймерĕ
кĕсле сассиллĕ вăй-хăват.
Çук марччĕ пек кăштах талант,
вĕçесшĕнччĕ — çĕкленеймерĕм.

Кунçул иртет ытла айваннăн:
чун каниччен таш ташлаймарăм,
ӳсĕрличчен эрех ĕçмен,
ялан тем кĕтнĕ, ерĕçмен.

Мĕн кĕтнисем килес темерĕç.
Мĕн пур пекки вăл халь те пур.
Килмерĕ чăн-чăн юрату,
чăн яшлăх яшлăхра килмерĕ.

Тен, çавăнпа кунçул алли
мана чăн лира тыттармарĕ.
Тен, çавăнпа асап палли
хавассăр сăнăмра палларăм.

Упранчĕ сывлăх начар мар.
Каллех калатăп: чи кирли вăл.
Анчах чĕнмест ӳпкевлĕ лира,
умра выртать ту пек чăрмав.

*1969*

* * *

Епле сăпайлă çын! Хаваслă та типтерлĕ.
Кашни хусканăвĕ — ытарайми тивлет.
Юратаймастăп-ши е юратса ирттернĕ?
Куç кăмăллать те, чун туртмасть, сивлет.

Черченкĕ сăнĕнче — çурхи шевле.
Куçĕсенче — ирхи кăваклăх.
Пăхап та хĕр çине, çавтер шеллеп
хама... хĕр — ешерет, эп — ватă.

Çакна пике асăрхамасть, туятăп.
Ачашшăн ал парать мана. Уяв та,
асап та чунăмра пĕр пек.
Йăл! йăлкăшса тăратăп эп.

Япшар та уçă калаçу,
калаçнă май — янтравлă кулă.
Пиртен те лайăх мăшăр — çук!
Кураççĕ пурте: туслăх — тулăх.

Анчах курмаççĕ: юрату
яланлăха мана пăрахнă.
Ытти хĕрсен те çук, те пур —
çумри пикен пурах, пурах вăл.

Сăнне çурхи çап-çутă ир
ытахальтен çапла ÿкет-и, —
пăрахăç мар-мĕн эп, кумир!
Епле инкек, тĕнче инкекĕ...

Чуна кисретеймесĕрех
пăчланчĕ-и чи ырă туйăм
е аякра, таçта çӳрет?
Хăçан чун пушă пулмĕ, пуйĕ?

Асрах — пирвай юратнисем.
Ун чух та ăнăçмастчĕ ман ĕç:
чĕремĕрсен хĕлĕхĕсем
пĕр пек туллин янăраймарĕç.

*1969*

* * *

Сăмах эс кĕтрĕн, кĕтрĕн, кĕтрĕн.
Ан кĕт, кĕтни те ахалех.
Мĕскер калам, комеди пĕтрĕ.
Çĕррӳ-и? Акă, ил халех.

Ĕсĕклесе куçна эс ан шăл.
Эс халь те ырă, çывăх маншăн,
çурма ултавлă пирĕшти.
Ан тăрăш, кăлăх тăрăшни.

Куçа кĕмешкĕн намăс мар-и?
Эпĕ кайсассăн, кам ăс парĕ?
Шăнсан, эс ларăн, кам çумне?
Савса çутатăн кам çулне?

Ялан, чăнах та, пулĕ çутă
сана ĕненнĕ çын ĕмри.
Аннӳ те манăçмĕ, аçу та,
тус — манăçмĕ, вăл — чун варли.

Эппин çав çын тĕлне тусанччĕ
кунçул сана — хĕрачана.
Нишлерĕ, сивĕтрĕ мана
таçта, тахçан, темле асамçă.

Ним çухатман пек шăхăратăп,
утатăп малалла, утап
юратуран та, яшлăхран та
çӳлереххи пур пек унта...

*1969*

* * *

Пĕлес çук çын ăспе пурăнмашкăн
ан тăкаклăр-ха ăсăра,
хăвăра кирлĕ пулĕ вăл... Маншăн
ан çунтарăр-ха чунăра.

Чун та кирлĕ, ытах ан сапалăр.
Пурăнкалăп-ха майĕпен.
Эп ăнлантăм — ман çуккă сăпайлăх,
перекетлĕх те çук иккен.

Эсĕр те хăвăра перекетлĕр,
эпĕ те хама хам упрам.
Ăс парар пĕр-пĕрне — черетлĕн,
çук... ăс мар, канашсем парар.

Çын ăспе, тен, эсир те пурнаймăр.
Ют ăс мар чи хакли, — çын ăшши.
Эп пур чух эсир пултăр ман майлă,
эп кайсассăн мĕнле пулăр-ши?

Ах, маттур тусăмсем... çамрăк пурнăç...
Эп пĕлмерĕм ăна пурăнма.
Ĕнтĕ урăх хастар чăн-чăн юрăç
пĕлĕ-ха. Манăн — шанчăк юлман...

*1969*

* * *

Пуç сĕлтетĕп сире йăл кулса,
нихăçан пуç усмасть теттĕр пуль.
Тӳсĕм карчĕ пĕтрĕ якалса,
пите çăвать курăнми куççуль.

Хăлаçланса хурлăх хупăрлать.
Кулянатăп — мĕскер усси пур.
Куç уçайми шухăш вупăрлать —
çутă, çăмăл шухăш теттĕр пуль.

Хурланмăттăм эпĕ ытахаль
пурнан пурнăç иккех килсессĕн.
Çавăрмăттăм пуçа, ухмаха:
«Ĕнтĕ ĕçне турăн», — тесессĕн.

Пĕрре иккен ĕмĕр, иккĕ мар.
Утне кура теес йĕнерĕ.
Пулаймарĕ ĕçпе юрама,
халăм пурччĕ — мехел çитмерĕ.

Пуç сĕлтетĕп сире ыр сунса.
Итлĕр юрра, юлăр астуса.
Апла иккен пурнăç кĕперĕ —
кашти тăрать вăр-вăр! авăнса.

*1969*

## ТУСЛĂХ

Ялан çухатрăм эп, çухатрăм та тупмарăм.
Шанмасăр пăрăнтăм, тен, ырă çынтанах.
Пулин сăмахăм йӳçĕ те тăварлă,
шанмасăр ал пани вăл сутнипе танах.

Пĕрне те çыннăмсем, сире сутас килмерĕ.
тен, эсĕр — лайăх çын, анчах — начар юлташ.
Хыçра кулать ӳпкевлисен эшкерĕ:
«Ав — пирĕн тус, ун чунĕ, — тет, — ачаш».

Чăнах та пуль, чăнах та... Йывăр, йывăр
пĕрне-пĕри пĕлме те юрама.
Ачаш пулмасăр: чун — чул мар, е — йывăç,
ытах кулма хăш чух, тен, юрамасть.

Пĕртен-пĕр тус! Хаяр сăн-пит, ыр кăмăл
килĕшӳне эп савнă вăхăтра
утса пырса ал патăн эсĕ çăмăл,
ал патăн та — силленчĕ çыр кăтра.

Çавăнтанпа утатпăр çума-çумăн.
Çавăнтанпа чун савăк, тăлăх мар.
Хушша кĕрет час-час юр-пăр, вут-çулăм, —
тавра нумай-ха йĕксĕк те ухмах.

Пĕртен-пĕр тус! Епле эс ăнланатăн
йăнăшакан тусна çур сăмахран.
Епле упран — чуна та, сассăма та,
тăвану пек, куç шăрçи пек упран.

Хам айăппа та, çын айăпĕпе те
сана мĕн чул кăтартрăм пулĕ шар.
Сивле, юлташ, сивлемесен — пĕтетĕп.
Ман тивĕç çук утмашкăн юнашар.

Анчах ун чух та, туслăх аркансан та,
ванчăкĕсем шеллевсĕр таптансан,
пĕртен-пĕр тусăм, асăма тухса тăр,
тухса тăр çирĕп, çутă та таса!

Çилленнисем иртеççĕ... иртĕ çилĕ.
Санпа паллашнă кун, чăн туслăх çăлĕ пек,
тахçан кĕрленĕ вут пек аса килĕ, —
телейлĕ пулăп унăн шевлипех.

*1969*

* * *

Çук, ан кала мана ун пек, —
яш тенипех пулаймăн яшă,
ешермĕ чун — яш тенипех.
Кĕр çитрĕ... кĕркунне... юлташăм...

Çурхи каçра юратнисем
çурхи каçах кĕрсе çухалчĕç.
Шалт тĕлĕнеп аса илсен,
эпех-шим тетĕп çавă каччă.

Шавлаттăм. Унсăр юраман,
«авторитет» пĕтме пултарнă.
Мĕн чухлĕ юрă юрламан,
мĕн чухлĕ ташă ташламан! —
култарнă, йĕртнĕ, савăнтарнă.

Куç пек упранă ĕмĕте,
нихçан та ватăлмăпăр тенĕ.
Халь акă... çук халь нимĕн те.
Ахаль, ахаль-мĕн ĕмĕтленнĕ.

Тухасшăн пулнă эп чапа,
çурхи садра çӳренĕ шăппăн.
Пупленĕ săвăç-ачапа
тем тĕрлĕ çулçă шăпăл-шăпăл.

Веç иртрĕ — ĕненес килмест,
веç иртрĕ, çамрăклăх тек çук ман,
анчах темме çаплах сӳнмест
умра ялан темле пĕр çутă.

Ял... уйăх... чăштăр çулçăсем...
лĕп çил... мăнтарăн кĕрхи каçĕ.
Çунса кĕлленнĕ ĕмĕтсем
чĕре алăкĕнчен шаккаççĕ.

*1969*

* * *

Таçта та пĕр çутă, пĕр чун.
Пурнайĕ-ши уй та ыраш пĕр-пĕринсĕр,
чечек те пыл хурчĕ? Пурте шайпа — турă.
Çынсем, чĕресем тупнă çул.
Пăхсассăн — утаç пек пĕриййĕ тепринсĕр,
анчах пăхма çеç ку, утаймĕç, ху курăн.

Апостол, каçхи Сениэль,
эс пӳлĕмсемпе сулланан, эс виçетĕн
вĕсен анлăшне, тăршшĕне. Мĕскĕн тăлăх —
шыран пур çĕрте тупсăм, мел,
ху тек çĕтерен, çĕтерен, çĕтеретĕн.
Асаплă йăваш çут шăвать сăну тăрăх.

*1969*

* * *

О, яр-уççăн çуталнă самант!
О, эп сисрĕм-ха лайăх, тăванăм, —
акă эс ыр шутра, эс талант,
тарават та, пуян та, аван та.

Куçран ӳкĕн — тĕнче те, ами,
пур тĕнче, сана хирĕç вĕт, паккăç,
тăрĕ çак пурнăçра, пессимист, —
такăнтарĕç, пĕртте утма памĕç.

Шăппăн шурĕ мĕлке... Утма çук,
утма çук нимĕнле... Пултăр, юрĕ,
вĕлермен, вăрламан, хĕвре чул
эп тытман. Ну, мĕнех, юлтăм юрлă.

Çухалать çут шалтан. Шар курап.
Кунăмсем пĕтнĕ пек хуйхăратăп.
Кур: мĕлке... Армути. Хытхура.
Куртăм: шурĕ мĕлке. Хыт хăратăп.

Шăппăн шурĕ мĕлке Тухăçа.
Пуç усса эпир те, ак, шăватпăр.
Çĕртен тухнă, пуçламăшĕ çак,
йышăн, çĕр! Тĕттĕм амăш, пул сапăр.

*1969*

## ИКĔ СĂВĂ

### 1. Çерçи

Çерçи сар çу çине
тип çу ярса çиме
вăрларĕ хĕвелçаврăнăш:
савăнăç!
Çерçи,
вăрласа ан çи.

### 2. Шăпчăк

Эй, тусăм Элекçи,
эпĕ — шăпчăк, эс — çерçи.

*1969*

## ПИЗО ПИЯ!

Пикуç пина пиан питарт,
питăр пина.
Пиуç писа пикă питарт
пиçăл питăр пина.

Пипĕ пилеп:
пиху пира-пиху пира.
Пиит пиле,
пиан пихă пира.

*1969*

# 1970

## САН ЙӐЛ КУЛЛУ

Эс курнӑ-и, пӗччен хӑр йывӑç
тӑрать пӑсса пур таврана.
Çапла тӑма ӑна пит йывӑр,
хӗрхен ӑна.

Шелле-шелле пӑшӑлтатсамччӗ
турра çеç тивӗç сӑмахсем.
Эс ман — пӗртен-пӗр, эс — асамçӑ.
Çав йывӑç эпӗ вӑл, пӗлсем.

Тымарӗсем чӗрех. Кӗтетӗп
эс ыр сунса йӑл куласса.
Кулсамччӗ, кулмасан — типетӗп
тӗпрен хӑрса.

Хӗрхен мана... Эп чӑшӑл кайӑп.
Ыр сӑн эп кӳртӗп таврана.
Иленӗ шӑпчӑк та саркайӑк
мана.

*1970*

* * *

Яр ирӗке чунна, ан хӑрасам,
юрат мана, хыпса-ҫунса юрат,
ӑсран тайӑлнӑ пек алчӑраса
йӗре-йӗре нар пек сӑнна шурат.

Ик ҫул умра. Каятпӑр ик енне...
Ниҫта чикме ҫук йывӑр хуйхуна,
эп вилӗ иккенне, эп сӳннӗ иккенне,
пӗлсен те пӗл ху ҫеҫ, пӗр ху кӑна.

Йӳҫ куҫҫульне чӗрем варне тумлат.
Кашни тумлам чӑшӑлтатса шӑтартӑр
чӗр чечеке хупланӑ сив чула,
ешертӗр чул тюльпан пулса сасартӑк.

Пӗр ҫулпала утар, чӗртсем мана.
Инҫе ҫула пӗччен тухма хушмаҫҫӗ:
кунҫул пӗрре, ун — сакӑр самана,
пӗччен — пӗтетӗн, пӗтерсе хураҫҫӗ...

*1970*

## ÇУК ÇЫН

Шухăшăмра пĕр эсĕ, эс кăна.
Сан витĕр пĕтĕм пурнăç курăнать,
чăлханнă çип пек пурăнăç тĕркемĕ.
Эп юратусăр кӳтнĕ, ĕнтĕркенĕ,
пăрланчăк сивĕ витнĕ варăма.

Такам айăпĕпе юратăва çухатрăм.
Такам айăпĕпе япшар хĕрарăм
хаяррăн чуллантарчĕ чĕрене —
яш пуççăнах ват сăнлă çӳреме.

Çĕнрен шырамаллаччĕ, шырамарăм.
Хупахчĕ эп, ӳсеттĕм çырăн-варăн,
хупах çулçи, çемçе хупах çулçи,
паян кунччен сана тупман çук çын.

Тупманнипе татах та сивĕ, хыт шăнатăп.
Тен, тупрăм халь, хушшăмăрсем — инçе.
Çывхартăм эп. Ан вăрç. Эп ăшăнатăп
сан яшлăхун кăварĕ умĕнче.

*1970*

* * *

Юрламăттăм эпĕ юррăма,
юрламасăр епле пурăнан?
Юрламăттăм тунсăх та салху,
хуйхăртатăн, тусăм, эсĕ ху.

Юрататăп, çунса юратап.
Чĕрене йывăр та, ырă та.
Юрататăп яштака пӳне,
юрататăп куçусен хĕмне.

Юрататăп ăшă куллуна,
куллунтан та ытла — кăмăлна.
Тĕл пулманччĕ унччен эп сана,
çиçĕм çапрĕ пĕрре курсанах.

Юратмăттăм. Хал çук, юрамасть:
юратмасăр юрă юрланмасть,
юрламасăр епле пурăнан? —
чĕрĕллех виле пек туйăнан...

*1970*

* * *

Сăнран пăхса çынна пĕлес
хăватăм çук, хăватăм:
тăрать этем элес-мелес,
хăратăп эп, хăратăп.

Шутлатăп путсĕр ку тесе.
Епле хăруш куç-пуçĕ.
Çав çын тусне хӳтĕлесе
кайран мĕн чул шар курчĕ.

Тусне кăна-и, ют çыннах
хăтарчĕ вăл маттуррăн.
Сăнран хĕвел хура юнах
ăна куллен юна-юна
элек айне-çке турĕ.

Ак тепĕрскер: çиллес-çиллес,
ялан — тутийĕ усăк.
Сăнран пăхса ăçтан пĕлес —
çĕткеленет чарусăр.

Юлташăм ак: хĕр пек чечен
сăнпе те, чунĕпе те.
Чечен? Пуçне нуша ӳксен,
юман вăл! Çирĕп питĕ!

Çăп-çăмăллăн таптаттармасть.
Вăл шырамасть чунра алмаз,
хĕлхем пекки тупать те
чĕртет ăна çав хаттĕн.

Пушар тухсассăн хĕлхемрен,
çунса каяссинчен сыхлать вăл...
Çынсем пулаççĕ тĕрлĕрен:
пĕр пек сăнах расна кулать-мĕн.

Савниçĕм, пĕчĕк пăрчăкан,
сан çийĕнте чи çĕнĕ мода,
сăнран эс хытă пăхакан:
ӳпкевĕм çук, эп — квазимодо...

*1970*

* * *

Ан пăхсам куçран, ментерен,
эс унччен питех пăхакан марччĕ.
Куç вăл вут та, хĕм те этемре.
Çуннăçем ӳсет ун вăй-хăвачĕ.

Сăнунта сӳнмест пăшăрхану.
Савнă тус, мĕн-ма пăшăрханатăн?
Куçусем кулаççĕ: «Çук чуну».
Чун-и? Пур! Чун пур — ман ик çунатăм.

Ан шиклен, тăванăм, тусунтан.
Эп пăхма кăна кичем курнатăп.
Шăппăн йăлкăшатăп умăнта,
хатĕрскер кулма та, макăрма та.

Макăрас килмест, ан хурлантар.
Кунĕ савăк чух кăшт савăнар-ха.
хурлă шухăшран эс, тусăм, тар.
Эпĕ те тарам пĕр çаврăнмасăр.

Куç тулли тăран, ытарайми.
Хытă ан пăх, çунтарса яратăн.
Хăрамастăп, вутăм иксĕлми,
кӳренмесĕр аллăма паратăп.

Мухтама пĕлмесĕтп, ан тирке.
санпала чуна ытла та çăмăл.
Çыншăн кам-тăр, маншăн эс — пике,
çывăх çын. Çапла ман шухăш-кăмăл.

*1970*

* * *

Пĕчченлĕх туйăмĕ... Мăнтарăн,
унтан ăçта тарма пултарăн:
чĕнмесĕрех килет-çке вирлĕн.
Хăвна хăв пек туйма вăл кирлĕ.

Куран, хăвна хăв пек туйсассăн,
чуну кӳтсе тăртаннă санăн.
Ялан эс пурнăçна юсасшăн,
пурăнăçу çаплах юласшăн.

Ларатăн тăнăç. Кăмăл — сулчă.
Тулта чăштăртатать тип çулçă.
Сив çил çатăлтатать. Пур уйăх.
Çавсем кăна. Никам çук урăх.

Çил, уйăх, çулçăсем калаççĕ:
«Çӳренĕ эсĕ çапкаланчăк.
Нумай чухне çынран та кулнă.
Пурăнăçу сан йăнăш пулнă.

Пĕр хĕрача сана саватчĕ.
Маттурччĕ çамрăксер, аванччĕ.
Ма юратап тесе шантартăн,
шантартăн та вутра çунтартăн.

Вутрах вăл, халĕ те вутрах-ха.
Çапах сана телей сунать хăй.
Эс ылтăн пек çынна вĕçертрĕн,
юратăвна çилпе вĕçтертĕн.

Пĕчченлĕх вăл çапла кăна-и:
хĕссе лартсан чунна кăларĕ, —
пĕчченлĕх туйăмĕ! Мăнтарăн,
унтан ăçта тарма пултарăн?!»

*1970*

## САВНИСЕМ

Савнисем... Лайăхчĕ-и савнисем?
Питĕ лайăхчĕ:
эп аппăшпе, эс йăмăкпе
кайнăччĕ.
Юнашар пынă чух
хулĕнчен тытма мар,
сĕртĕнме именеттĕмĕр.
Вĕсенчен хавасли, чеченни, çамрăкки
çук пуль теттĕмĕр.
Вăтанса та пулин кинона йыхăрса
ĕмĕтлентĕмĕр:
майрисем пит аван;
турă сывлăх парсан,
аннесем чармасан,
иккĕшне те качча
илес терĕмĕр.
Илесси вăл илес,
ăнмасан мĕн тăвас? —
иккĕлентемĕр:
арăм вăл сурăх мар,
ĕне мар, пăру мар,
пасартан туянса
пасарта сутас çук.
Арăм — çын. Тус. Юлташ.
Ача амăш... Ай-ай!
Хыт çӳçентĕмĕр.
Майрисем сарă-ха,
пĕвĕсем йăрăс-ха,
ытлашши çăмăлттай! —

тăхтас терĕмĕр...
Савнисем... лайăхчĕ-и савнисем?
Питĕ лайăхчĕ.
Хĕвелпе савăнма
тин куç уçнă ик роза
сывлăмпа пит çуса
шăпчăка хапăлланăччĕ.
Ирхи юрăç чысне
чĕререн ĕненсе,
савăнчĕ кашниех,
хытă савăнчĕ.
Шăпчăк пулчĕ курак,
эс — курак,
эп — курак,
сутăç пек тиркешсе
ĕмĕт татăлчĕ.
Лайăхчĕ-и савнисем?
Питĕ лайăхчĕ.

*1970*

## АХ, ЭСĔ, ПУÇĂМ...

Пĕр çул пĕр кун пек иртсе кайрĕ.
Иртет пуль ĕмĕр те çапла.
Епле эс çамрăкчĕ. Ак халĕ,
тăванăм, халĕ — шап-шакла.

Çеçенхирти сап-сар кăлканĕ
сайралчĕ пуль ваш-ваш! çилпе.
Сан лăс çӳçӳн кăтрам-кăтрамĕ
мĕнпе çаралчĕ-ши, мĕнпе?

Ма сухалу та чăпарланчĕ,
тăнлавусем те кăн-кăвак?
Мĕн-ма пиртен хĕрсем тараççĕ?
Ват карчăксем те тарĕç ак!

Шутлап та, пурте тĕрĕсех вĕт.
Çын ырласса текех эс ан кĕт.
Çапах, чалланнă ик хусах,
хĕрсем тиркетпĕр-ха, çапах.

Çапах курнасшăн-ха çап-çамрăк,
турнепс килĕшмест, пар çарăк.
Çакна мĕнле ăнланмалла?
Авланмалла. Авлан-мал-ла!

Эс авлансассăн, юлташу та,
ну эп, сана ăс паракан,
кăшт ăслăланăп... пур-ха шутăм...
Хăш чух вăл сан та пулакан.

Эппин ĕçер-ха юратушăн,
халь çеç телейшĕн ĕçнĕ пек.
Эппин ĕçер-ха савнă тусшăн,
чăнк-чанк! тăвар черккесемпе.

Тулли курка пек пултăр пурнăç,
ялтратăр савнăç куç тулли.
Ах, эсĕ, пуçăм, шухă пуçăм!
Ах, эсĕ, ал, поэт алли!

*1970*

## ТУЙ ПАРНИ

*Ах, Толя, Толя...*
Сергей Есенин

Ах, Веня, Веня эс телейлĕ,
эс тупрăн пурнăç юлташне.
Эпир ăçтан тупар, хăшне?
Ăçта, мĕнле Тамара, Лейла,
пире ӳкерĕ вут ăшне?

Тамара тĕл килсен, эп Демон,
Лейла тĕл килсен, Меджнун
пулма сăмах паратăп, Веня.
Хавронья чух камне — тĕпчемĕн:
Хавронья —пуçкастармăш у.

Шуйттан асламăшсем ан лекчĕр.
Ах, каçăр пуçлисем — тем пекчĕ.
Çук, кăравул, тур сиртĕрех:
мăнаçлăх — вилĕмпе пĕрех.

Кармен лексен — вилес пулать ман.
Нарспи лексен — вилес пулать.
Вилсен, тăванăм, йăл кулаймăн, —
пурнасчĕ-ха, пурнас пулать...

Ах, Веня, Веня, эс телейлĕ,
эс пултаратăн юратма.
Эп пултаратăп — палкама.
Эс — çепĕç чун. Эп — чул чĕреллĕ.
Кил, ал парсам, тыт аллăма.

Кил, тусăм, хулипе пĕр тусăм,
маттур поэт, сăпай юлташ:
авлан, тăванăм, мăшăрлаш,
ан пул эс Демон Тамарушăн —
пулсам асамлă кăранташ.

*1970*

## ОКЕАН

Кĕрле, пăлхавлă океан!
Чĕвен тăрсам, шавла хăватлăн.
Сан юррупа эпир çунатлă.
Эс вăй паратăн, хал паран.

Эс пирĕншĕн — пĕртен пĕрре.
Эс пуррипе эпир мăнаçлă.
Çĕнес тени çĕклет пире.
Çĕнес тени кăна чăн аслă.

Эй, Çеçпĕл, чăрсăр океан!
Ăс-кăмăл-туйăм океанĕ!
Пур йĕксĕке çунтараканĕ,
пур йăх-яха путаракан.

Кассам хĕçпе те сăмахпа,
Вĕри çиллӳ тăшманшăн — тамăк,
анчах та вутлă тамăка
такам валли те уçă алăк.

Кураççĕ: Çеçпĕл хăрамасть.
Вăл пăрăнмарĕ, парăнмарĕ,
чунне те шуйттана сутмарĕ,
ĕçе ямарĕ харама.

Вăл ӳкрĕ... ӳкрĕ те çĕнтерчĕ.
Манран пехил, çынсем, сире:
поэтăн юнлă, тарлă терчĕ
тăвар пек кастăр чĕрĕре.

Çĕр çăттăр кĕвĕç чунсене,
суя этемсене мур хыртăр, —
ылхан сунап, инкек сĕнеп,
мăшкăлласа кулатăп хыттăн.

Çĕнне мухтатăп ян! та ян!
Малашлăха куçран пăхатăп.
Çĕршыв пулсассăн эп пулатăп.
Эп — Çеçпĕл. Халăх — океан!

*1970*

## ÇЕÇПĔЛ ТАВРĂННИ

*Баллада*

*Иосиф Дмитриева*

Алăка шаккаççĕ.
«Кам шаккать?»
— «Михаил Кузьмин. Вăлах — чека».
«Мĕн ĕçпеччĕ?»
— «Калăпăр» уççан.
Хăвăра ӳпкелĕр уçмасан».

Пăшăл! пăшăлтатрĕç шалтисем,
чăшăл! чăшăлтатрĕç сас илтсен:
«Михаил Кузьмин?
Пулма пултараймасть,
пĕр вилсен этем таврăнаймасть.
Вăл вилни çур ĕмĕр час çитет.
Вилнисем калла килмеççĕ тет».

Ахлатать хăравçă ват пăшал,
хăй уçмасть, шур майрине хушать.
Алăк уçăлса каять яри.
Карчăк çухăрса ярать шари!

Алăкра — револьверлă Кузьмин!
Чăн-и ку? Е тĕлĕк чăнлăха куçни?
...Алăкра — артист кулса тăрать,
нимĕн калама та аптăрать.

*1970*

## ХЫРСЕМ ШАВЛАÇÇĔ...

Ман ыйхă çук. Итлетĕп çĕрĕпе:
хырсем шавлаççĕ васкамасăр, тикĕс.
Çапла шавлать пуль хăш чухне мăн тинĕс
зюйд-вест текен каçхи йăваш çилпе.

Хавас пырать пуль кимĕ çиле май...
Тĕнче канать: çук кăшкăру, çук ахрăм.
Хырсем шавлаççĕ. Ыйăха çухатрăм.
Тем пулчĕ чĕрене. Мĕн пулчĕ, ай...

Чуна сехĕрленӳ хĕсе пуçларĕ.
Ăçта, мĕскер çунать? Мĕскер пушарĕ?
Камсем путаççĕ? Кам çăлать кама?
Леш кимĕ çаврăнать таттисĕр ма?

Каять ахлатнă сасă инçене.
Тĕнче ахлатнă пек вăл илтĕнет.
Пуçа çурать чарусăр туйăм-сисĕм.
Хырсен сасси кĕрлет вĕçĕ-хĕррисĕр.

*1970*

## КУНҪУЛ ҪЫРМИ

*Виктор Ефремович Рсай*
*вилтӑпри ҫине*

Кунҫул ҫырмин пур вӑрттӑн юхӑм.
Пур. Тарӑнра. Пур. Тӗттӗм, шухӑ.
Хӑшсем калаҫҫӗ: «Ҫук вӑл», — теҫҫӗ,
курсан та курмӑша переҫҫӗ.

Ытарайми куҫпа, поэт,
ӑна эс куртӑн та манмарӑн,
яш вӑхӑтна сая ямарӑн:
ҫамрӑклӑху — таса тивлет.

Тавра асатчӗ хӗн-асап.
Хӳхлетрӗ сан артаклӑ гений,
хӳхлев пирки элеклекенӗн
алли чӗтрерӗ хӑраса.

Пултарнӑ эсӗ каҫарма,
анчах та: вилтӗн — каҫармарӑн,
юрру нумайччӗ — юрламарӑн.
Куну-ҫулу халь — тип ҫырма.

Ҫухалчӗ, ҫук халь вӑрттӑн юхӑм.
Кулмастӑн йӗрӗнсе хӑюллӑн, —
кулсан та ӗмӗр тӑршшӗпе
мӑнаҫлӑ кӑмӑл ячӗпе.

Ан тив, эс лира алтса чикнӗ
чӗрӳ варне ҫӗлен сӑхсан;

ан тив, çавтер сурать суран,
Парнас тăрне çавах эс çитнĕ.

Сăмахсăр, сассăр юрăсем
янратнă эсĕ лăпланмасăр.
Эс чĕнменни вăл хăй чĕр сасă,
хăй чăн поэзи, ĕненсем!

Йĕреп, эй, пурнăç, тӳсĕм пар,
чăн поэтла сăваплă тӳсĕм.
сывпуллашатăп тусăмпа,
яланлăха куç хупнă тусăм.

Мана пĕлмен вăл, палламан.
Тăпри çине чечек хуратăп.
Пиччеçĕм! Ĕмĕрех юратăп.
Кăварлă пулĕ юррăм ман,
тăварлă пулĕ юррăм ман, —
кунçул çырмин тĕпне куратăп...

*1970, февраль*

## ОФЕЛИЯ, АÇУ САНА...

*Виктор Рсай хӗрне*

Çап-çамрӑклах ват çын пек пулнӑ ӑслӑ.
Çап-çамрӑклах ваттисенчен ӑста.
Ун патнелле саламлӑн алӑ тӑснӑ
вуншар сальери хӗрӗнкӗ пуçпа.

Çав туссемех, çупӑрлама манмасӑр,
элек тултарнӑ туслӑх куркине.
Элек, чуна, юна ӗмсе, мала ямасӑр,
хурт пек çисе аркатнӑ чӗрене.

Сальерисем таçта та çитнӗ. Ӗмӗр,
эс сарӑплӑ иккен ытлашшипех,
иртен иккен çаплах эс тӗпӗр-тӗпӗр, —
чӑнран суйи нумай çул тӑршшӗпех.

Чӑнни майпен çапах çӗнет пулсан та,
вӑхӑтлӑха мухтатпӑр суяна,
ӑнах чӑн вырӑнне хурса тусатпӑр,
кайран ӗнсе хыçатпӑр аванах.

Саманана савса, йӗксӗксене савмасӑр,
хӑш чух, тен, сивӗлетпӗр ырринех...
Поэт пытарӑннӑ çырнисене памасӑр
çын аллине. Шанман вӑл çынсене.

Шанманнипе — хӑйне пӗтернӗ. Шанчӑк кирлӗ!
Мӑнаçлӑ вут ан сӳнтӗр кӑшт çилпех.
Сана çапаççӗ — эсӗ те çап вирлӗ,
çӗклен ӗмӗртенхи капмар чул пек.

Офелия! Аçу сана юратнӑ.
Ахальтен мар ытарлӑ ят хурса,
мӗн виличчен вӑл санпала йӑпаннӑ.
Санпа чухне çеç туйӑнман асап.

Эс — унӑн чунӗ — шӑппӑн макӑратӑн
ун лирине, ун музине чысланӑ кун;
çӗнрен те çӗнӗрен илтетӗн те куратӑн:
ун ячӗ — вилӗмсӗр, сасси — вӗр-çӗнӗ ун.

*1970*

* * *

Пĕр эрнере ик паллă поэта пытартăмăр,
пытарусем пулайрĕç пит расна:
пĕрин патне каяс килмерĕ, тартăмăр,
ан тив, ăсаттăр терĕмĕр хысна.

Теприн патне пырас текен çеç пынă.
Ун титул çук, çырни те нумай мар,
анчах кашни йĕрки чĕре патне çул хывнă,
çур ĕмĕр иртнĕ — сăвăç манăçман.

Чылайăш сăввине юрлаççĕ, юрă тунă, —
мăнаçлă композитор мар, элле такам.
Çур ĕмĕр çын чĕнмен, çапах та ячĕ унăн
çĕн килнĕ çамрăксемшĕн чĕр вулкан.

*1970*

## ПОЭЗИЙĔМ...

Куллен-кунхи перпетум мо́биле...
Ялан шыратăп, тупаймастăп.
Ĕмĕрлĕхе вăл. Кам тума пĕлĕ?
ман ăс çитмест, эп тăваймастăп.
Поэзийĕм мĕн-ма — алхими?
Ăçта-ши «философи чулĕ?»
шуса тухать те ылтăн кимĕ,
тӳпе татах та тăрă, çӳллĕ.
Тухаççĕ çăлтăрсем нумаййăн,
чĕнмесĕр куç хĕсеççĕ хыттăн.
Тар юхтарса ширанă майăн
пулсанччĕ уйăх пек вăл ылтăн,
пулсанччĕ çăлтăр пек вăл кĕмĕл —
ман кулленхи асап, Поэзи,
телейĕм, савнăçăм, суеçĕм.
Яр! уçăлĕччĕ тăвăр кăмăл.

*1970*

## ЮЛТАШ КАЛАВӖ

Пурнас кунсем нумай-ши-ха?

Ачалăхра телей курмарăм, —
выçса, кăшларăм кашăка,
анне-е! тесе çăвар кармарăм.
Çăвар каратчӗ — ват çăхан.

Куллен икшер-виçшер çӗн тупăк
шăватчӗ шăппăн масара.
Çут тӗнчере кӗрлетчӗ тупă.
Анне çӳретчӗ пасара.

Килте пӗр нимӗн те юлмарӗ.
Венчет çӗрри сутса килсен,
вăл такама хăруш юнарӗ.
Тăр-тăр! чӗтрерӗç аллисем.

Кайран, чӗмрен кайса ӳксессӗн
плуг кӳлӗнсе сӗтӗрнӗ чух,
атте фронтран пӗтсе килсессӗн
тăшман пуçне тӗп тунă çул,
анне куçне те уçаймарӗ...
Çав сăлтавпа телейӗм çук.
Хам виличчен çап-çут сăнарӗ
çунтарӗ макăртса тем чул.

Ан кăранклат, хура çăхан...

Ачалăхра телей курмарăм.
Пулмарӗ. Куртăн — куçăхан.

Курман тесе ҫăвар кармарăм.
Курассисем хăҫан, хăҫан?

Ача чухне эп чирлĕ пултăм, —
пӳрне ĕмсе пӳ кĕмĕ ҫав.
Пĕве кĕрсе ҫын пулас туртăм
мана кăларчĕ сăвăҫа.

Ăҫта ҫӳрет курас телейĕм?
Савас савни ăҫта ҫӳрет?
Ҫире — ҫĕн тум, таса кĕпе-йĕм;
кăвар пек юн — пӳре-сире.

Пурнас ҫулсем миҫе-ши-ха?

Йăл илчĕ манăн юррăм-кĕввĕм.
Хавасласа пура-ҫука
такăнкалать те тĕллĕн-тĕллĕн,
хăш чух вăл аванах юхать.

Хуп ҫăварна, хура ҫăхан...

*1970*

## КОСМОНАВТСЕНЕ

Паттăрсем, эп сире саламлатăп
уçă чунăн ялтра юррипе.
Чĕререн мухтанса савăнатăп
тĕнчере сирĕн йыш пуррипе.

Кам сире юратмасăр тăрайĕ
космосран, тĕнче уçлăхĕнчен,
кăтартсан телевизор экранĕ,
йăл кулсассăн эсир кашнинчех?!

Уçлăхран йăл кулни — урăх кулă.
Ăшăтать, çĕнетет вăл çĕре.
Тупата! Миçе çын пăхать пулĕ
çавăн чух хумханса пĕр çĕре!

Çынна çын хисеплес ырă туйăм
ун чухне вуншар хут вăйлăрах.
Тухрăр та ушкăнпа, эп чуптурăм
ют çыннах, çынĕ — ватă майра.

Пĕринче космонавт килсе çитрĕ
хуланах, — çамрăкскер, тытрĕ ал,
хамăр çын, лăпкă çын, тăн-тăн, çирĕп,
Николаев, хитре генерал.

Эп çав кас çĕрĕпе çывраймарăм.
Илтĕнет куçăма хупсанах:
космос тамăк вăл, космос рай мар вăл,
тӳсме çук йывăр çул яланах.

Тĕттĕм тĕпсĕрлĕхе чăмнă хыççăн
вăл пин хут тĕттĕм, тĕпсĕр: хаяр.
Кĕç çăтса ярасла хыттăн, выççăн
сăвăрать, хĕм сапать йăл! та ял!

Космос паттăрĕсем, тăвансемĕр,
черетпе космоса тухнисем,
кашнинчех, кашнинчех сыв килсемĕр, —
тĕнчери чи илемлĕ çынсем!

*1970*

## ПĔРТЕН-ПĔР ПУРНĂÇĂМ…

Эс çамрăк, ватăлса курман.
Тен, çавăнпа текех юрлатăн:
«Юратнă яшлăхăм пур ман,
пĕр ăна çеç ялан юратăп.

Куллен тăрсанччĕ çуркунне,
сипетлĕ çумăрсем çусанччĕ,
сирень çурсанччĕ çеçкине,
ваш! варкăшсанччĕ чун çуначĕ,

кӳренмĕттĕм пурнăçăма
унта çитменлĕхсем пурришĕн,
тав тăвăттăмччĕ эп ăна.
Вăл… пурăнăç… пĕрре пуриншĕн.»

Çапла. Такамшăн та пĕрре,
анчах, хуплать те ăпăр-тапăр,
хăтăлаймасăр, чиперех
хăш чух эпир çавна манатпăр.

Манса, калатпăр: «кулленех
çурхи лĕп çумăрсем çусанччĕ,
сирень çурсанччĕ çеçкине,
ваш! варкăшсанччĕ чун çуначĕ…»

Анчах лĕп çумăрсем — сайра,
садсем куллен çеçке çурмаççĕ.
Çанталăк пăсăк хушăра
ваш! варкăшмасть-мĕн чун çуначĕ.

Сана эп вăрçтарса курман,
хавхаланса пĕрле юрлатăп:
«Пĕртен-пĕр пурнăçăм пур ман,
кирек хăçан ăна юратăп».

*1970*

## АН ЎПКЕЛЕ МАНА...

Тĕнче пĕтмест. Тĕнче пиртен те юлĕ.
Эпир каятпăр, савнă тус-тăван.
Шăнăрсенче юхмарĕ турă юнĕ,
çырса пулмарĕ библи те коран.

Пĕрре кайсан калла килместпĕр, тусăм,
ыран та, тепĕр кун та... ĕмĕрне.
Тен, çавăнпа час-час ман пуçăм усăк.
Тен, çавăнпа йĕретĕп хăш чухне.

Ан ўпкеле мана. Кирлех-ши ўркенмесĕр,
кура тăркачă, шăппăн йăпатма:
яр-уççăн эп туяп, туятăн эсĕ,
эпир пĕри те вилĕмрен ют мар.

Çуралнă та — вилес пулать, мĕн тăвăн.
Çав шухăш — çĕрĕн-кунĕн пуç çинче.
Те çавăнпа, час-час пăр пек ман сăвă.
Те çавăнпа, чĕр хурлăх куççенче.

Чунри пур пек ăшша, илсем, йăлтах паратăп,
йăлтах илсем, тăванăм, тус-тăван.
Вилмен-ха эп, сиксе ташша яратăп,
çырман-ха эп, пĕрре чăнах çыратăп
чун савăнмалăх сăвăлла роман!

*1970*

## КАМСЕМ ТЕЛЕЙЛĔ?

Телей мĕнле пулать? Темле. Ăçтан пĕлейĕн?
Камсем, епле, хăçан, мĕн-ма телейлĕ?
Эп, калăпăр, пуян, хитре, талантлă,
эп çамрăк, сывлăхлă, ыр ятлă.
Анчах телейлĕ-и? Телейлĕ мар.
Эп — юратасшăн, юрату —юлман,
пĕр чĕптĕм тупăнинччĕ, чун пуш-пушă,
пуш пичке пек янрать... хăрушă.
Ан тив, эп юрататăп тейĕпĕр, вутла çунатăп.
Телей иккен вăл юрату чăнах та!
Телей? Эп савнă хĕрача урăххине савать,
куçпуçĕ урăххишĕн хĕм сапать.
Леш, кулатник, питех пăхасшăн мар,
пăхсан та — шанчăксăр, май çук шанма.
Пĕрре юратрăмăр — савни те, эпĕ те,
анчах телейсĕрччĕ пĕр мĕскĕн упăте.
Ун асапне куллен курса, мĕн тейĕр,
таçта çухалчĕ вăхăтлăх телейĕм.
Телейлисем камсем? Мул хуçисем?
Мао Дзедун? Е унăн чурисем?
Суя коммунистсем е чăннисем телейлĕ?
Чăннисене телейсĕрсем тееймĕп.
Телей кĕтекен мар, телей шыракан мар,
пĕр хăйшĕн çеç телей туптакан мар,
çĕр хăлăпне камсем ĕç халăхне пилленĕ —
çавсем телейлĕ... Маркс, Энгельс, Ленин.

*1970*

## Н-НАРИ ТЕ КН-НАРИ

1. Эпĕ юрăç йăваш Петĕр,
эсир мана кăшт пĕлетĕр.
Ан кулăр-ха, çĕтĕк юлтăм
такмаксем çыра-çыра.

Н-нари те, кн-нари те,
н-ари те, кн-нари те,
ан кулăр-ха, çĕтĕк юлтăм,
такмаксем çыра-çыра.

2. Каçăр Васли пирĕн пуçлăх.
Сăмси çинче пысăк куçлăх!
Пур çĕре те ĕлкĕрет те,
пур çĕре те ал тăсать.

Н-нари те, кн-нари те,
н-ари те, кн-нари те,
пур çĕре те ĕлкĕрет те,
пур çĕре те ал тăсать.

3. Çапкаланчăк — ӳсĕр Усăп.
Арăмĕн аллийĕ хуçăк.
Ачи-пăчи çухăрать те,
ӳсĕр Усăп çапăçать.

Н-нари те, кн-нари те,
н-ари те, кн-нари те,
ачи-пăчи çухăрать те,
ӳсĕр Усăп çапăçать.

4. Эх, мăнтарăн Михетерĕ:
«Ял улпучĕ эпĕ», — терĕ.
Килчĕ халăх контролерĕ,
«лартса кайрĕ» хулана.

Н-нари те, кн-нари те,
н-ари те, кн-нари те,
килчĕ халăх контролерĕ,
«лартса кайрĕ» хулана.

5. Йăкăл-якăл Варвари те,
халь те качча кайман-и те,
халь те качча кайман-и те,
халь те ача туман-и?

Н-нари те, кн-нари те,
н-ари те, кн-нари те,
халь те качча кайман-и те,
халь те ача туман-и?

6. Манăн тусăм Кăмпа Çитăр
пит пуласшăн композитор,
пăру çинчен юрă çырнă —
ял кулли вĕт тупата!

Н-нари те, кн-нари те,
н-ари те, кн-нари те,
пăру çинчен юрă çырнă —
ял кулли вĕт тупата!

*1970*

## ВЬЕТНАМ! ВЬЕТНАМ!

Ирĕклĕхе ялав туса
вăрçа çĕкленнĕ паттăр халăх
чи çутă ĕмĕтлĕ, таса,
ялан хастарлă, тăтăрхаллă.

Вьетнам! Вьетнам! Ывăлусем
миçемĕш çул алран ямаççĕ
хăмач ялав! Пĕри ӳксен,
тепри тытать. Сӳнме памаççĕ.

Вутпа хуплаймăн Ирĕке.
Чун тӳпине ăна çĕклеççĕ.
Сарпикесем ялав çĕлеççĕ,
Атьсем вулаççĕ кĕнеке.

Ватти-вĕтти йăлт пăшалпа.
Сăпка юрри юрлать ыр амăш, —
салтак... Пăшал — чун тарăхтармăш,
анчах мĕн тăвăн пуш алпа?

Çичют çаплах сĕмсĕрленет-ха.
Выç куçлă янки кĕсйинче —
сутăнчăксем, марионетка
текенскерсем, — шалу çинче.

Кусем янкисенчен те çăткăн.
Текех çисен те тапкă-çупкă,
чĕтре-чĕтре пырса çумне
кутне çулаççĕ хуçинне.

Хурах эшкерĕ... Çухăраççĕ
çĕршыв хӳтĕлевçи тесе.
Камран мĕне сыхлать хăравçă?
Кама упрать хӳтĕлесе?

Вăл мар, ăна хăйне хӳтлеççĕ,
хăйне упраççĕ... аш тума,
Вьетнам хуçи, Вьетнам тивлечĕ —
рабочи те хресчен, вăл мар.

Ĕççыннине — çĕр тĕнĕлне —
хуçас тесессĕн те хуçаймăн.
Хăй тытмалла вăл тĕнчене.
Çут тĕнчери чăн-чăн хуçа вăл!

*1970*

## ЯЛТА КУРНĂ ТĔЛĔК

1\. Ту тайлăмĕнче, шур кĕпеллĕ, тăратăн çап-çутă —
сив уйăхăн ыр çутинче куçăма курăнатăн,
тĕтреллĕ мĕлкен туйăнса, кĕç тăвассăн пек утăм,
теме астуса, хуллен айккинелле. Сисрĕ чунăм,
шак хытрăм: ирхи тĕтре пек çухалан пуль тесе
пăшăрхантăм.

О, куç хупнăскер, миçе çул курăнмарăн кĕретĕн,
мĕн чул унтанпа вăхăт иртрĕ, тинех, ак, тĕллентĕм.
Тĕллентĕм кăна-и? Курнан çĕрле куçăн, çӳретĕн
чĕп-чĕррĕн — вăл, çак курăну, тĕлĕк мар пек
пĕрре те.
Эс кам — астумастăп. Епле тăрăшсан та, пĕлме
пулмĕ ĕнтĕ.

2\. Эс, уйăх, тем пысăккăш пуш стенана лартнă кантăк,
савса, çăмăл сар карăпа карнăскер, — çӳллĕ вырăн.
Çĕрле, терĕм эп, эпĕр çеç, урăх çук пĕр никам та,
анчах кам-тăр пур чӳрече кутĕнче — хĕр те каччă.
Ик вăрттăн мĕлке тем калать пĕр-пĕрне шăппăн,
ыррăн.

Сывлавĕ таса, уçă. Кăшт çĕкленет çăмăл карă...
Кунта, çĕр çинче, йĕп-йĕпе çулçăсем, ав,
вăранчĕç. Тата-и,
сив çил, хускалса, сывлать йывăррăн, тарăн.
Чунра пăтрашуллă та тăлăх. Ача пек, çĕнрен,
ак, мăнтарăн,
вил ĕмĕт çăви умĕнче, кукленсе, ĕсĕклетĕп ялта эп.

*1970*

## ШАККАТЬ СЕХЕТ

Юр витӗр юр ялтрать хаваслă çут тĕспе.
Пӳртре кулать хуллеççӗн фортепьяно,
шаккать сехет, шаккать, еккине янă
чӗресӗр механизм, шеллевсӗрскер.
Шута илет вăл ывăна пӗлмесӗр
кашни çеккунт таран — кунçулăма:
сехечӗ çеç-и, вăхăчӗ шеллевсӗр —
самант тăмасть, иртет те çухалать.

Çавна курса-ши, ват атте-аннен
çич ывăлӗ çич тӗрлӗ хыпăнаççӗ
ыр ӗç хыçран пит йышлă хăварасшăн
çав шелсӗр иртнӗ вăхăт вырăнне.
Çавна пӗлсех, тен, тăрăшать ял-йыш
хуçалăхне миллионер тăвасшăн.
Тен, çавăнпа ялан çӳлте ят-чыс
хăйне этем текен кашни чăвашăн.

Тăванăмсем, ыр халăх, тусăмсем,
салам сире çак лăпкă çӗн çул касӗ,
мухтав сире. Хаваслăн çутăлаççӗ
ырра кӗтсе каçхи чӳречӗрсем.
Эп шухăшпа вӗçетӗп инçене.
Тӗнче тавра çӳрет ман шухăш хыттăн.
Ыр каç сунар хула çыннисене.
Рабочи тус, салам! Аллу сан ылттăн.

Пин хут салам вӗренекен йыша.
Вӗреннипе çӗршыв çапла хăпарчӗ.

Çĕршыв мими, гуманистсен çуначĕ —
пĕлӳ те шухăш — вутлăн ялкăшать!
Венера, Уйăх, Марс, ытти асам
хăрушлăх мар вĕри те ăслă чуншăн.
Сив космогони, йышăн, ăнлансам:
тӳпе хăрушă мар, фашист хăрушă.

Вĕсем хăрушă çак çĕр питĕнче,
вутпуççипе чупаççĕ, иртĕхеççĕ.
Упшур, выçкуç та сутăнчăк-суеçĕ
влаçа тытасшăн хăйĕн аллинче.
Шăлне йĕрет мухтавсăр капитал.
Вăл катаклизм сунать, анчах — хăравçă.
Çĕр рульсĕр мар-и, кам халь — капитан?
Руль умĕнче гуманистсем тăраççĕ.

Вĕсемсĕр пурнăç çук, тĕнче пĕтет.
Эп вĕсене хĕвел тесе мухтасшăн.
Эп хам та вĕсемпе пĕр ĕретре утасшăн,
чаплăланасшăн çутă чапĕпе.
Тата эп урăх мĕн теме пултарăп
виçесĕр юратса çĕршывăма?
Эп кĕçĕр туссемпе пĕрер черкке тултарăп,
вуниккĕре шалт! ĕçĕп, шалт! кăна!

*1970*

# 1971

## ТУСКАЙ

Тускай калать: «Пĕлетĕн-и эс, мĕскĕн,
кунçул — айкашу çеç, ним майсăр айкашу.
Мĕн чупкалан, ма ăнланас теместĕн:
май пур-и пурăнма, ним май та çук!

Курмастăн-им, пурте пустуй, ним уссăр,
тĕлĕкри пек пурнатпăр анраса.
Пире никам та аса илмĕ, тусăм,
кăнса выртсассăн та пĕр харăсах...»

Эп хирĕçлеп: «Аплах-ши? Чун та пур-çке,
пĕр айкашу çеç мар. Çав чун çунать,
асапланать... Чунра теç пĕтĕм пурнăç.
Ан суй, ан лăпăртат, ан тарăхтар чуна!»

*1971*

## ПУСКИЛ

«Хырăм тăрантма та йăх тăсма-и,
мĕн тума, этем, пурнап тен-ха? Ыйтам-ха.
Ах, çуралнă та — пурнан? Епле ху майăн
пурăнмăн, пурнан пулсан? Тускайăм,
мĕн вăл пурнăç?»
— «Пурăнăç-и? Тамăк».

«Ак, енчен те, вилĕм çывăхарнă —
мĕн тăвас, ăçта кайса эс кĕрĕн?»
— «Турăран иртеймĕн, мĕн чул панă,
çавăн чул эс пурнăн та лăпланăн —
талану çапла, епле ан сик, ан ĕрĕх...»

*1971*

## ЮРАТУПА ИРĔКЛĔХ

*Сонет кăшăлĕ*

1. Эй, Юрату! Эй, Ирĕклĕх! Эсир пурнатăр
пиншер çулсем этем ĕмĕтĕнче,
алла кĕрес пекех умра курнатăр,
тытма тăрсан — çитме май çук инçе.

Эп çамрăкчĕ. Пурăнăçа пĕлмесĕр,
ăна ирттертĕм пит çăмăлттайла —
чечек суйланăн хĕр суйла-суйла,
ытах çунмасăр, лăпкăн, кĕлленмесĕр.

Анчах... хăш чух... пулаттăм шĕл-кăвар.
Капла ирĕклĕскер, чунпа эп читлĕхреччĕ;
чуна çиетчĕ вут — хăруш, хаяр;

сасартăк хыпнăскер, сасартăках сӳнетчĕ.
Хулран каллех яватчĕ ял майри
çак тĕнчере никам уйăрайми.

2. Çак тĕнчере никам уйăрайми
ăна хăйне савма пултараймарăм.
Текех качча тухасшăн юрлани
мана шухăшлаттарчĕ тарăн.

Килĕшем çех, паян тесен паян,
саватăп-и, савмастăп-и, тухать вăл.
«Мĕн — Ирĕклĕх? Мĕн — Юрату? Мĕн хаклă? —
ыйтаттăм эпĕ. — Ма ăсран каян?

Ма тыткăна вăскатăн уямасăр?
Епле сана юратăп юратмасăр?
Ирĕклĕхне, тăванăм, тĕп ан ту.

Чăн Ирĕклĕх — ик енлĕ Юрату.
Чăн Ирĕклĕх çынна телей кăтарттăр,
чунри хĕрӳлĕхе, унти çутта упратăр».

3. Чунри хĕрӳлĕхе, унти çутта упратăр
çынсем валли, ачамăрсем валли.
Ирĕклĕскер, темле мулпа тупра та
тупать пуласлăха юратнă ĕç алли.

Ăста пулма хистет çĕкленнĕ кăмăл.
Хавасланса çӳретĕн эс унпа.
Куçа, пите иленнĕ кулăпа
тус-юлташа савăнтармашкăн çăмăл.

Хитре пулма хитре иккен тата:
ăш сăмахпа чĕнен те, тупата,
хитрелĕх çук çыннах хитре тесе хураççĕ;

хитрелĕхе чун ăшшинче кураççĕ,
чуна çĕклеççĕ хирĕçли, майли,
куллен хăват кӳрсе ытарайми.

4. Куллен хăват кӳрсе ытарайми,
пуçра çĕн шухăшсем амаланаççĕ.
Чи пысăк шанчăк Çĕршĕн — пуç мими,
пуç мимиех чĕр мăшкăл аппарачĕ.

Мĕнле чĕреллĕ çыннăн пуçĕнчи
мĕнле миме çут тĕнчепе тăванлă?

Юратакан чĕре! Ирĕклĕхпе туптаннă
чĕре! Чăн çын кăкăрĕнчи!

Гуманистсем Çĕре çăлса хăварĕç,
ялан-ялан çӳлтен çӳле хăпарĕç —
ăс-кăмăл тӳпине те космоса.

Ахальтен мар чунтан хавхаланса:
«Эй, Юрату! Эй, Ирĕклĕх!» — теетпĕр,
вĕсем çĕкленипе çӳлтен çӳле вĕçетпĕр.

5. Вĕсем çĕкленипе çӳлтен çӳле вĕçетпĕр.
Фарисейсем, эсир пуррипе мар
ыр гений пур! Эсир юна ĕçетĕр
йăл-йăл кулса, шӳт шӳтлесе пĕрмай.

Хăравçăсем! Ялан çыртатăр вăрттăн,
фараонсен çуланчăк йыттисем!
Панкăрута тухсан фараонсем,
çĕннисене шăршлатăр хăвăрттăн.

Ултавлăн парăнатăр вĕсене.
Шалу пырать... ят-сумлăх ӳсĕнет...
Мĕн виличчен çапла иудăлла пурнатăр.

Хăш чух патша пекки, хăш чух оратор,
хăш чух пиит... Шавлатăр мухтанса:
«Тĕллев — тивлетлĕ, шухăшсем — таса».

6. «Тĕллев — тивлетлĕ, шухăшсем — таса», —
теме, çаплах пулсассăн та, тăванăм,

хал çитмĕ пирĕн, хытă вăтанса,
эп те калаймăп, эсĕ те калаймăн.

Çав туйăма усрасчĕ чĕрере
куçăхтармасăр те сӳнме памасăр;
пĕтме пӳрсессĕн — хӳтĕлесчĕ харсăр,
çĕнесчĕ те усрасчĕ çĕнĕрен.

Тус-йышшăн тăрăшни — пĕртен-пĕр тупсăм.
Ялйыша кӳресчĕ усă, тусăм,
ялйыш хăвармĕ хăй те пăрахса.

Тен, урăх шутлă эс, тĕллев те урăх сан?
Тен, çĕнĕ çул, тĕрĕсрехне, эс тупрăн,
пурăнăçа савса та юратса?

7. Пурăнăçа савса та юратса,
савнисене пурăнăç пек саватпăр.
Çулу, çĕнни пулсан та, йăнăш сан,
вăл тĕрĕс мар, тивлетсĕр те сăвапсăр.

Савни, анне пекех, чи çывăх çын.
Аннесĕр чунĕ те, илемĕ те çук килĕн.
Пĕр хăвшăн пурăнни — пушхир, пĕчченлĕх, вилĕм.
Атте-анне, савни, тус-йыш, — ак чун уççи!

Пĕр хăйшĕн хыпăнса, çынна тивмен субъект та —
киревсĕрскер; чăнне калас-тăк — йытă:
«Эп пурăнам, — тет вăл, — ытти çăва патне».

Ун пек епле пăхан çынсем çине? —
Юратнăран шанатпăр, хисеплетпĕр,
Ирĕклĕхе çăл шывĕ пек ĕçетпĕр.

8. Ирĕклĕхе çăл швĕ пек ĕçетпĕр,
кислота пек çиместпĕр пĕр-пĕрне,
канатпăр, вĕренетпĕр, ĕç ĕçлетпĕр,
умран ямастпăр пурнăç хĕвелне.

Çутат, çутат, эй, пурăнăç хĕвелĕ!
Ялтра та çиç, эй, ирĕклĕ тĕнче.
Тăван çĕршывăмăр çак аслă çĕр çинче
епле янравлă та епле илемлĕ!

Ах, юрататăп эп çĕршывăма,
пĕлместĕп урăх нимĕн калама,
ним каламасăр ĕмĕр юрататăп,

чыслатăп сăвăпа та, юрăпа та.
Каç-каç утатăп пĕр пике патне.
Савни, тăванăм, ан пытар питне.

9. Савни, тăванăм, ан пытар питне.
Каç-каç эп сан патна вут кăларса васкатăп.
Манса çут тĕнчене, ĕçе, каç апатне,
ӳке-ӳке чупатăп — савăк кадр!

Чечек эс. Эпĕ, ху пĕлен, — тĕкĕлтура.
Хĕвел эс. Эпĕ спутник. Ман орбита
хăй евĕрлĕ, анчах та шиклĕ питĕ:
ялан — хĕвел тавра, хĕвел тавра.

Çапла çав — кадр, савăк, ырă кадр.
Хăш та пĕри ăна татасшăн. Юрĕ. Таттăр.
Татайĕ-ши хĕвел пĕтмесĕрех? Тепле...

Ан тив, эп курăнатăп камитле,
пулин, суймасăр, шăппăн юрататăп.
Чăнах калатăп, шухăшлăн итле.

10. Чăнах калатăп, шухăшлăн итле,
чеен ан кул-ха, юратап вилеслĕн.
Чечек, чечек! Çиçет-çунать епле!
Сĕрлетĕп те шавлатăп. Ăслă: кӳренмест вăл.

Выляннă майăн улшăнать тĕпрен.
Вăл чечек мар — хĕвел. Темле шута вăл путнă:
«Пачах эп хĕвел мар, — тет, — эпĕ спутник.
Пире хуплаймĕ тăвăл та тĕтре;

çапах та пăрăнар-ха, анне курĕ;
сăпайлах мар та çакă аллегори:
пĕрле-çке ĕмĕр — спутник те хĕвел...

Çавна та ăнланмаççĕ... питĕ шел...
Чипер пырсам-ха, хулăмран ан усăн.
Мĕскер ку: Юрату-и, Ирĕклĕх-и, тусăм?»

11. «Ку Юрату та, Ирĕклĕх те, тусăм!» —
тесе калатăп çирĕппĕн сана.
тăхта, ан ӳпкелеш-ха ашкăнушăн,
тăнла кăштах, тăванăм, усала.

Ӳпкелешсе чулран сар çу тăваймăн, —
ак çĕн каларăш, пит кирлех пулсан.
Этеммине ху пеккине тупсан,
тарас тесессĕн те унран ниçта тараймăн.

Тарни вăл пулĕ вилĕмпе пĕр тан.
Эс ху вĕт вăл. Ăçта эс хăвăнтан
тарса кайса ирĕклĕхпе киленĕн?!

Юратура кăна тĕнче илемĕ.
Юратман çын сая каять ахаль.
Чăн Юрату, пул ĕмĕр, ан çухал.

12. Чăн Юрату, пул ĕмĕр, ан çухал...
Çĕре çитесчĕ-ха, çĕре çитме сунаççĕ.
Инçе кăранклатать-ха вилĕм — ват çăхан,
эсрелĕ-чунилли, хăтăлма çук сăнавçă.

Анчах кунçулăмăр иртет иккен, иртет.
Инçи — çывăхарать. Пур вăхăт та — черетлĕ.
Çĕртет те тĕпретет, ватать те çĕмĕрет вăл,
тăм чăмăркки туса хурать пиртен.

Миме хытать, юн сивĕнет... Шутлатăн:
самант пулсассăн та, çапах эс кăшт юратрăн.
Кашни чăхах-ши çавăн пек, манса хуйха-суйха,

кунçул тислĕкĕнчен тул пĕрчисем сăхать?
Хăш чух мĕн-ма çав пĕрчĕ пек ытла та,
чăн Ирĕклĕх, эс пĕчĕк, эс сахал?!

13. Чăн Ирĕклĕх, эс пĕчĕк, эс сахал,
эс çук пусмăртисен пачах та.
Пусмăртисем! Çĕр çĕмĕрсе хăçан
асапсăр çырана каçатăр?

Кама юратмалла? Юратăр Ирĕке!
Мĕне юратмалла? Ирĕклĕхе юратăр!

Ма çуратман ăна хальччен? Çуратăр
сиртен малтан çуратнисен тĕл-йĕрĕпе.

Эх, пурнăç, пусмăрçă-эксплуататор...
Мĕн-ма чылайăшĕ пуçа усса утатпăр,
шикпе пусса пыратпăр çĕр çине?

Картах çĕклесчĕ хурлă пуçсене.
Калас килет чарса: «Юлташăм, тусăм,
эс мĕскĕн, вилĕ эсĕ — Юратусăр».

14. Эс мĕскĕн, вилĕ эсĕ Юратусăр,
поэт! Мăнаçлисен патши, Ирĕклисен патши!
Мăнаçлă эс çĕршер çулсем хушши.
Мăнаççăрлăх — чи йывăр, тĕпсĕр пусмăр.

Чăн поэта тытаймăн пусмăрта.
Вăл сăнчăрта та иксĕлми мăнаçлă.
Мăнаçлăх генийĕ, çут тĕнче пек эс аслă,
çут тĕнче пек эс ирĕк, тупата!

Эй, Юрату! Эй, Ирĕклĕх! Туссемĕр,
пĕрле чухне кăна, уйрăм чух мар, илтсемĕр,
эсир хăват илетĕр пĕтĕмпех;

пĕрле чухне кăна чĕп-чĕрĕ, ма апла-тăр,
пĕрле чухне кăна пĕр организм пек,
эй, Юрату, эй, Ирĕклĕх, эсир пурнатăр.

15. Эй, Юрату, эй, Ирĕклĕх, эсир пурнатăр
çак тĕнчере никам уйăрайми,

чунри хĕрӳлĕхе, унти çутта упратăр
куллен хăват кӳрсе ытарайми.

Эсир çĕкленнипе çӳлтен çӳле вĕçетпĕр;
тĕллев — тивлетлĕ, ĕмĕтсем — таса;
пурăнăçа савса та юратса,
Ирĕклĕхе çăл шывĕ пек ĕçетпĕр.

Савни, тăванăм, ан пытар питне,
чăнах калатăп, шухăшлăн итле:
эс — манăн Юрату, эс — Ирĕклĕх ман, тусăм.

Чăн Юрату, çун ĕмĕр, ан çухал.
Чăн Ирĕклĕх, эс пĕчĕк, эс сахал,
эс мĕскĕн, вилĕ эсĕ — Юратусăр.

*1971*

# 1972

* * *

Сана кĕскен, ытарлăн мĕн каларĕç?
Ăнлантарса пама нихçан ан ыйт:
сăмах — ваклас пулсан — вăйне чакарĕ,
çакна вара эппин асра эс тыт.

Асра эс тыт: кĕске юрра манмаççĕ,
вăрăммине юрлаççĕ кĕскетсе.
Ытарлă юрă тарăн та мăнаçлă,
ăна юрлаçĕ чăн-чăн йĕкĕтсем...

*1972*

* * *

Инçетре, пит инçетре
пурăнап тăван ялта.
«Ĕнтĕ эсĕ миçере?» —
ыйтрĕç отпуска пырсан.

Паллаймарăм — ку хĕрсем
эп кайсан çуралнă пуль,
хуравларăм хĕрелсе:
«Тулчĕ тин вунçичĕ çул».

Йăл-йăл кулчĕç: «Чунупа
эс ялан вунçиччĕре,
ырă, савăк кăмăлпа
пурăнан çут тĕнчере.

Эпĕр ĕнтĕ, ак, темле —
хуть çĕре выртса ӳле».

*1972*

* * *

Хула-и Шупашкар? Хула-тăр.
Çавна сисмесĕр эп пурнатăп:
макрас килсессĕн те кулатăп,
шăла çыртса хавас курнатăп.

Ĕç вырăнĕ — Кĕнеке Килĕ.
йĕри-тавра куштан, суеçĕ,
элекçĕ, йăпăлти вăй илнĕ.
Ĕçре куллен тире сĕвеççĕ.

Ак çĕр процент плана тултартăм —
ятлаççĕ, пурпĕр ырламаççĕ.
Çĕр аллă... икçĕр ярăнтартăм —
пулмарĕ çакă ырра маншăн.

Анне: «Ĕçпе юраймăн, — тетчĕ, —
эп хам та ĕмĕр юраймарăм».
Сая каять чун тарĕ, терчĕ —
йĕрлет мана пĕр ват хĕрарăм.

Ясар вăл, çавăрасшăн пулчĕ,
куçа эп тартрăм, çаврăнмарăм.
Чуна кĕрсе каfive ун куçĕ.
Чун, ан шуйхан эс, чарăн, чарăн...

*1972*

* * *

Кала-ха, мĕншĕн пурăнатпăр,
ыран мĕскер кĕтет — пĕлместпĕр,
кăҫал ҫулла та юр кăтартрĕ, —
синкер! Ҫавна шута илместпĕр.

Ĕҫе каятпăр та килетпĕр,
кунсем епле иртеҫ — сисместпĕр;
кĕре кĕр хуть эс, хуть хĕле кĕр,
шухăшламашкăн пуҫ ҫитмест-тĕк.

Ирпе хĕвел тухать, пĕлетпĕр,
каҫпа — анать. Манса каятпăр.
Савни, савни: мĕскер кĕтетпĕр,
ма халь те уйрăм пурăнатпăр?

Пĕрне-пĕри епле саватпăр,
тĕлĕксенче ҫĕрле ҫӳретпĕр,
ахаль чухне куҫран суратпăр,
вилсе выртсан — пĕрле ҫĕретпĕр.

Шăпамăр хурлă пирĕн, паллă,
пурĕпĕрех урса кулатпăр.
Хĕвел, ав, ылтăн ярапаллă,
эпир мăк пăнтăхĕ пулатпăр.

Ҫавна ҫапах та пытаратпăр.
Савни, савни, мĕскер кĕтетпĕр?
Тух ҫиеле кăшт — путаратпăр,
епле пурнар капла — пĕтетпĕр!

Кала-ха, мĕншĕн пурăнатпăр,
ыран мĕскер кĕтет — пĕлместпĕр,
пĕлсен те пĕлмĕш курăнатпăр,
пĕтессине пĕлес теместпĕр.

*1972*

* * *

Савнисем ялан илемлĕ,
хурине те сар хĕр тетпĕр.
Чуптума пĕрне илентĕм,
сăмах илтрĕм темĕн те пĕр.

Алла лекрĕ чăмăр çарăк —
çупрĕ ячĕ йăлтăр-ялтăр!
Çупкă çитерни-и чарĕ —
ирĕкех хама эп ятăм.

Çупăрларăм-тĕрĕслерĕм, —
пуçтах каччă эпĕ, каскăн.
«Хуть те мĕн ту», — тет эсрелĕ,
хам çума хĕссе лартсассăн.

*1972*

* * *

Пит пĕлесшĕн-и, эппин пĕлсемĕр,
чунăма çавтер уçас килет,
хăш чухне савни тени, атьсемĕр,
витĕр юратсах чунна илет.

Кастарать пуçна, çĕртет ятна вăл,
ылханать вара кайран хăвнах.
Ыталать тесе — ытла ан савăн.
Чуптăвать тесе — ан пул ухмах.

Айван чух шутлаттăм: юратусăр
чун вилет, пике-хĕр — юрату.
Сарпикеçĕм — çывăх йăрă тусăм —
пит маттурччĕ, хуть те юрă ту.

Психологи те физиологи...
Тĕрлĕ комплекс... Пуç мими-вулкан...
Юрă мар, ким турăм та, тăрук-и
е кăштран калать: «Эп хĕр пулман.

Хам — санпа, анчах та тăрататăп
куç умне лешне, унчченхине,
«кимĕпе» ăна ярăнтаратăп,
вăрттăн ăсататăп ирхине».

...Чун мĕнне те ӳт мĕнне пĕлмесĕр,
пуç мĕнне пĕлмесĕр пĕлме çук —
ма пĕрне-пĕри чунран савсах телейсĕр
эсĕ те, савнийӳ те хăш чух.

*1973*

* * *

Çĕрĕпе, çĕрĕпе, çĕрĕпе,
кĕркунне те, çулла та, хĕлле те,
эп тăратăп Савкаç хĕрĕпе.
Юрататăп ăна, эс пĕлетĕн.

Кирлĕ мар, кирлĕ мар, кирлĕ мар,
кирлĕ мар систерме нимĕн халĕ —
юрататăп пулсан, калама,
хамсăрах калама кашни хатĕр.

Нихăçан, нихăçан, нихăçан,
нихăçан калас çук, хăй калатăр,
каласан, аптраса пуç хыçан,
тĕлĕнсе кукшуна хыпалатăн.

Ма тесен савниййӳ çавăнтах
улшăнать те каять — паллаймастăн.
Пуçтах марччĕ, халь ĕнтĕ пуçтах.
Кутăн марччĕ, ак халь çавраймастăн.

Çĕрĕпе, çĕрĕпе, çĕрĕпе,
тĕттĕм каç та, çурхи çутă каç та,
эп тăратăп Савкаç хĕрĕпе,
юрататăп ăна — каламастăп.

*1972*

* * *

Е савнăçлă эп, е кулянчăк.
Епле пулсассăн та, вĕçе-вĕç,
ĕнер, паян, ыран... вылянчăк...
утап-чупап... çулсем вĕçеççĕ.

Каçхи Савкаçăм, кӳршĕ ялăм,
эс вĕççĕр савăнăç, вăй-халăм.
Е хам суя, е — хĕрупраçĕ.
Санран эп писнĕччĕ, Савкаçăм.

Чее арçынччĕ-и вара эп,
сăпайлă каччăччĕ. Суйсассăн,
епле-ха лăпкă çыврайăп,
суймастăп эп, юта кайсассăн.

Ултавра марччĕ пуль сăлтавĕ,
яш пулнă, çил пуçра вылянă,
çĕнрен-çĕн тус тути, ытамĕ
айван пуçа çаврса янă.

Хальччен, Савкаçăм, кӳршĕ ялăм,
эс вĕççĕр савăнăç, вăй-халăм.
Хальччен санран хăват илетĕп,
кунтах, кунтах чунпа килетĕп.

*1972*

* * *

Çут тĕнче! Тĕлĕннипе
эп ыйтатăп кĕрлĕ-çурлă:
юратса чуптунипе
хĕр шăпи пулать-ши хурлă?

Юратмасăр чуптусан,
пулатех — çапла калаççĕ.
Ма тесен каян тарса,
е ăна тăватăн тарçă.

Е хăвна тăвать чура,
юратмасăр чуптусассăн.
Тĕнчене савма чарать
арăм — урнăн, тĕп тăвассăн.

Чуптусан юратнипе,
савнăçпа чунсемĕр тулчĕç.
Савăнма юранипе
ырă, савăк, ирĕк — пурнăç!

*1972*

* * *

Пĕр кĕпе пур, шăлавар пур,
тух мана качча.
Туй тăватпăр, çуй тăватпăр,
эп мĕнрен начар?

Мулăм çук ман, ятăм çук ман.
Акă ил, чăнах,
кĕр пилешĕ çупкăм-çупкăм
çулăмла çунать.

Пилешрен те пурнăç йӳçĕ
килĕ сан манпа.
Халĕ йĕпкĕн хура çӳç-и,
час шуралĕ пач.

Яштака пĕвӳ — тултармăш,
пиçĕ пулнипе.
Пулăн пĕкрĕлчĕк тухатмăш,
юлăн патак пек.

Куçу сӳнĕ, куллу сӳнĕ,
юлмĕç шăлусем,
çухăртăп куллен тир сӳнĕн,
тăмăп шеллесе.

Пурпĕрех мана юратăн,
сарăн пĕст...не
Тух мана качча, юрать-и,
ма чĕнместĕн, э.

*1972*

## ÇУРТАСЕМ

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă...
Çуртасем çунаççĕ.
Эс-и ватă, эп-и ватă
çак декабрь каçĕ?

Пĕрре, иккĕ... пиллĕк, улттă...
Çитĕпĕр çĕре те.
Ма, савни, салхуллăн култăн?
Ма, савни, йĕретĕн?

Пĕрре, иккĕ... улттă, çиччĕ...
Çиччĕре шăпах эп
ывăнми кĕтӳ ачиччĕ,
улăхра чупаттăм.

Пĕрре, иккĕ... çиччĕ, саккăр...
Çирĕмре те мар халь.
Ĕнтĕ... вăтăра пусатпăр.
Çук, памастпăр маххă.

Пĕрре, иккĕ... саккăр, тăххăр...
Çуртасем нумаййăн.
Ак татах çутатăп, пăхăр,
эсĕр кĕнĕ майăн.

Эрехне те кĕртсе хунă,
сăрине те уçнă.
Пĕрре, иккĕ... тăххăр, вуннă...
Каснă... Пиçнĕ-хуçнă...

Пуç чĕтрет тесе ан шутлăр,
ал та чĕтремест-ха.
Çуртамсем, ан сӳнĕр, çунăр.
Савни те йĕмест халь.

Пĕрре, иккĕ... вăтăр иккĕ...
Ак миçе тултартăм!
Эй, вĕре, вăй-хал, ан иксĕл,
тыт черкке, юлташăм!

*1972*

# ÇУМĂРСЕМ

*Романс*

Çăваççĕ çумăрсем
Чĕтрет кĕрхи сар çулçă.
Сырса илет мана
каç тĕттĕмĕ хуран.
Шанмарĕ пĕр никам.
Чун ыратать. Эп сулчă.
Хурланчăк ман сăмах.
Эп йăл кулап аран.

Çăваççĕ çумăрсем
шултран е вĕтĕреххĕн.
Сирень çурăласса
кĕтместĕп кĕркунне.
Анчах мĕн-ма çапах
упраймасса пĕлсех эп
упрасшăн пур вăйран
яш пурнăç ĕмĕтне?

*1972*

## ЁМĔТ

Ах, каç, ыр каç сипечĕ...
Садра, килсен яла,
эп пĕр хĕре кĕтсеччĕ
нумай çул каялла.

Ун пулчĕ çулĕ вăрăм,
тупмарĕ ман тĕле.
Пăшăрханса эп пăхрăм
турат хушшипеле.

Каç сулхăнне эп çăтрăм,
сăнарăм уйăха.
Вутла çунсан та чăтрăм,
пусартăм хуйăха.

Çав май, çут фосфор çунăн,
яла йăлт çутатса,
шур уйăх шурĕ, шурĕ,
çухалчĕ кăшт тăрсан.

Ун хыççăн — çăлтăр анчĕ.
Шутларăм: «Мĕскĕн пуç,
сан ёмĕтӳн çук шанчăк,
ан кĕт, çапла шăпу...»

Ах, сад, ыр сад сипечĕ...
Кунта каçпа, ялла
пĕр хĕр кĕç килмеллеччĕ
нумай çул каялла.

Каллех, чуна çутса, эп
кĕретĕп садăма,
анчах вутла çунмастăп,
кĕтместĕп никама...

*1972*

## ШЫВ ТИПНĔ ÇУЛ

Шыв типнĕ çул типеççĕ çырмасем,
шыв типнĕ çул çунаççĕ вăрмансем.
тулта та, пӳлĕмре те чăтма çук
шыв типнĕ çул.

Хĕвел тивлетлĕ мар пĕртте çӳлте.
Хĕвел, кулса, хаяррăн пĕçертет.
Иезуит кулли, синкер эмел —
хĕвел.

Мĕн хĕлĕпе юр-çăмăр сирĕлмен,
мĕн хĕллерен çĕре тумлам ӳкмен.
Чуна хăртать çак, вăрттăн вĕлерет
мĕн хĕллерен.

Уяр. Пĕр курăка та çук ырри.
Ӳсмерĕ çур тырри те кĕр тырри.
Йăлт ĕнчĕ кайрĕ, çунчĕ. Шанчăк çук
шыв типнĕ çул.

Хула урамĕ. Тĕтĕм. Сĕнкнĕ çын.
Тăр кăнтрăла хунар çутать машшин.
Çак тĕтĕмрен, унтан ытла — влаçран,
сывлап аран.

Шыв типнĕ çул типет иккен чĕре.
Шыв типнĕ çул кăнма кĕтен черет.
Тулта та, пӳлĕмре те пурнăç çук
чун типнĕ çул.

*1972*

# ПУРНĂÇ КĔВВИСЕМ

*Поэма*

1. Мехел, мехел теетпĕр мехлетсе;
тăри, чечек теетпĕр, пĕлĕтсем...
Мехел çитмесĕр пурпĕр вилейместпĕр,
мехел çитсен вилетпĕр — пĕлĕрсем.

Нивушлĕ вилĕмрен пуçлар юрра,
ăна пăхса пурăнăça курар?
Мĕскер курса мĕскер çинчен юрла хăть —
пĕр çуралсан вилетĕнех вара.

Çуралсанах вилмешкĕн кирлĕ мар,
ӳссем, выля, унтан пулсамччĕ ар,
авлан, ачусене ӳстер, çын ту та —
пырап тесе лере хыпар эс яр.

Ырлăхĕ те пулĕ, хурлăх те
сывлăху пур чух, пур чух хевте.
Кил! тесе хыпар илсен те, килмĕ
каяссу сан, килмĕ çав хатер.

Çухататпăр, акă, канлĕхе,
ӳпкелетпĕр ĕнтĕ пӳлĕхе.
Каймалла пулассине пĕлсех те,
каясах килмест çав халлĕхе.

2. Хăшне савса хăшне ыталам,
элле пуринчен те эп тарам?
Вилĕмрен тарма çук пек, тараймăн
пурнăçра хĕртен-хĕрарăмран.

Яш чухне эп куртăм тамаша,
каçхине хĕр чĕнчĕ канаша,
амăш çукчĕ те, вăл пилĕк салтрĕ,
ачаран ар турĕ — апăрша.

Ячĕç мана пĕрре мунчана,
пуçăм тӳрех лекрĕ маччана.
Ай-вай! мунча тулли хĕрарăм —
улталарĕç çамрăк ачана.

Тепрехинче мунча варрине
кĕчĕ тăчĕ кӳршĕ Марине.
Çакна никама эп каламарăм,
пĕлсе каламалла маррине.

Ятламастăп çав хĕрарăма,
каяс мар вăл тенĕ харама.
Пурăнăçра ун пек пулать вăл,
вăрçă хыççăн пулать уйрăмах.

3. Эпĕ пирвай сана чуптуман,
пирвайхи кам пулнă — ĕç çук ман.
Эсĕ ху та вĕсене чуптунă,
ир-ха, çамрăк-ха тесе тăман.

Эпĕ хам та пулнă хурчăка,
пулман сăннăм кукăр турчăка,
анчах никама та макăртман эп —
кала: манран мăшкăл курчĕ кам?

Лăплантарнă эп, чунне илмен,
вăрттăн тарнă эп, лексен çĕлен,

çĕлене те ыр тума васканă —
чĕрĕ чун вĕт, тĕп тăвас темен.

Эсĕ ырăччĕ, усал пулман,
никама та чуптума чарман,
эпĕ çеç чыс-хисепне упрарăм —
ыттисем ăна пит упраман.

Эп вилсен шыв сап тăпрам çине,
ан йĕр шăратса чĕрӳ çуне,
йĕнипе эп чĕрĕлсе тăраймăп,
çĕн йĕке тиртер йĕрĕлчӳне.

4. Тав курки ĕçетĕп тайăлса,
пуринчен те чăн кая юлса,
юраяп-ши, çук-ши, эп пĕлместĕп,
сире хурлăх юрри юрласа.

Йăтса юман юпине
хура çĕрпе витĕнен
асатте-асаннесемĕр,
ма ятлатăр атьсене?

Ача чух пурте ачаш,
ачаран пулатпăр яш,
çамрăкран ватта куçатпăр,
ватăлсан вара — каяш.

Çамрăк чух çаттай пулсан,
асилен çавна кулса.
Мăнлансан çатăлтатмашкăн
вăхăт çук — нуша пусать.

Ватăсемпеле илемлĕ — кил.
Ватăсемпеле пур пирĕн пил.
Ватăсем ăс панине итлер-ха —
тăвăрсамăрччĕ пире пехил.

5. Тухман хĕвелччĕ эсĕ, тухрăн та
хупларĕ çумăр пĕлĕт çавăнтах,
вара сана эп урăх кураймарăм,
ĕмĕрлĕхе çухатрăм çакăнтан.

Эс — çăлтăр терĕм, ак, аптранипе,
мĕлтлетрĕн темскертен хăранă пек,
мĕл-мĕл! тусах йăрлатрăн антăн, ӳкрĕн, —
хальччен çӳреп чĕре суранĕпе.

Тытса пăхма юрать-ши, ку мĕскер?
Яштак хăва пуль, хăмăш, ку — пӳске.
Тăртаннă чиепе тин пиçнĕ сар улми те
çĕнĕлĕхпе туртаççĕ, ыр тĕспе.

Чĕре, сиксе, çĕклерĕ чунăма,
анчах нумай тăмарĕ шанчăк ман:
епле апла никам çак ырă, хаклă
ахах-ĕнче хальччен те шăтарман?

Йĕке кĕмен-ши арличченех
вĕр-çĕнĕ çавракa йĕрĕлчине,
тесе шăналăк сиртĕм эпĕ шăппăн.
Çапла — такам арланă унччenех...

6. Йĕмтĕп çĕре перĕниччен
пурăнар-ха çĕр çинче.

Перĕнсессĕн перĕнтĕр —
çăпата кутăн сыриччен.

Кутăн сырнă çăпата —
ял кулли вĕт тупата.
Йӳтиччен пурăнас марччĕ,
çĕртес марччĕ хам ята.

Тухас марччĕ кĕлмĕçе,
тухас луччă чĕлĕмçе,
паш! та паш! çăра, йӳç тĕтĕм
кăларас пирус ĕмсе.

Явайса урасене
ĕç тума ачамсене
вĕрентсе ларас-ха ăслăн,
пăхас мар тек айккине.

Мĕн чул ан пăх, ан юсан
каçăр качака курсан,
сунара тухаймăн эсĕ
пăшалу пеми пулсан...

7. Кала, куккукăмçăм, чăнне кала,
тата мĕн чухлĕ ман пурăнмалла?
Тата миçе çултан калла эпĕ килмĕп
епле килес тесен те каялла?

Якку пулса вĕçеймĕ çав куккук,
çĕлен пулса шуса та тухас çук,
пĕрре кайса сып-сывă таврăнмашкăн
тĕлĕнмелле утпа сăмах эс туп.

Кам пĕлнĕ-ха кун пек иккенне,
тĕкне çăлам тытса куккукăнне.
Куккук! куккук! тесе чуна ан шуйхаттăр,
текех ан шутлатăр пурнас çын кунне.

Тарăн шыва ан чăм ăшăх тесе,
инçе çула ан тух çывăх тесе,
пурăнăçна татса ан хур астумасăр,
пурăнмашкăн пурнăç çăмăл тесе.

Элле эпĕ вилессе сиссе,
ахăлтатрĕ куккук, кайрĕ вĕçсе,
хура çăхан сасси чуна çурчĕ,
каш-каш! каш-каш! кашларĕç йывăçсем.

8. Юраса та сутса çул уçать Пурхиле.
Турă пур, вăл курать: ăслă мар Пурхиле.
Хăй çинчен таврана пĕлнинчен те сахал вăл
пĕлнĕрен чухлаймасть çын чунне — Пурхиле.

Юра ер пĕрех хут юраса пурниччен,
йытă пек пăхиччен патшасен куçĕнчен.
Пăхмăп эп йытăлла, йытăлла кăшлăп шăмă —
влаçрисен кутсене тап-таса çуличчен.

Чăтас çук сăпай çын суя чап мăшкăлне.
ăнланмасть мĕскĕн çеç, лăпланмасть, сĕкĕнет.
Иçмасса, ӳсĕр ят чыссăртан ырăрах-тăр —
чăн-чăн çын тенинчен икĕпитлĕскерне.

Тӳрĕпе пурăнасчĕ, малта кун сахал.
Эсĕ пур вак-тĕвек ырлăхпа асăхан.

Чăн-чăнни тĕнчере — иксĕлми шухăш-туйăм.
Ытти йăлт çухалать, чăн-чăн мар, асăрхан.

Кун пĕтсессĕн ăçтан кун кайса илмелле?
Икçĕр çул, Пурхиле, пурăнасшăн элле?
Пире çеç кăна мар, аçупа аннӳне те
сутса ятăн пулас чаппала кĕмĕлле.

9. Ĕлĕк чухне эпĕ ĕлĕкчĕ,
кашни манăн сăмах тĕллĕччĕ;
куç илместчĕç маттур пикесем —
пурнăç марччĕ, ырă тĕлĕкчĕ.

Ватта кайсан супма пуçларăм,
вĕлтĕртетет куçра ют арăм.
Ăс кĕрес вырăнне пуçа мĕн кĕрет,
ĕнтĕ кама тата куçларăм?

Çӳрерĕм Хусанăн-Вăрмарăн,
Çӳрерĕм Мускавăн-Вăрнарăн.
Пурăнăç тупсăмне шыраса
пĕр самант та канăç курмарăм.

Вăл-и ку — телейĕм? Вăл мар-и?
Вăлах тес-тĕк, пачах ăнмарĕ,
хупăрларĕ инкек те нуша,
ырă кун курса та пулмарĕ.

Мишша кăна Мишша теетĕр,
ма Мишша хурлине пĕлместĕр.
Иртет иккен кунçул, пĕтет кунçул —
хуйхи кăна нихçан пĕтмест-тĕр.

10. Эп пурӑнтӑм. Ытти пурнакана
эп тӑтӑм — юратса — ырла кӑна,
анчах хама пит ырламарӗҫ темшӗн —
тьфу! Сывлӑш ҫавӑрап кана-кана.

Эп пурӑнтӑм. Пӗр татӑк ҫӑкӑра
икке пайлаттӑм, тусӑмсен ҫукран.
Туссем ҫакна ытла та хӑвӑрт манчӗҫ.
Хӑш та пӗрийӗ тытрӗ ҫухаран.

Эп пурӑнтӑм. Пурнатӑп пулӗ-ха,
савса ҫут хӗвеле, ҫут уйӑха,
тата пӗр ҫакӑн чул; тек каймасан та,
ватта хывса, вӑййа та улаха.

Каҫмарӑм хам ҫапах та ват енне
чунран савап пулсан та ватсене.
Епле каҫан! Этем вӑл ҫамрӑк пултӑр
мӗн виличчен, ан каҫтӑр ӗмӗрне.

Эп пурӑнтӑм ҫунса, каҫма манса,
пӗр ҫӗкленсе, пӗр хытӑ ывӑнса.
Епле тӳсет-ши пурӑнӑҫ кӗперӗ?
Кашти тӑрать ун вӑр-вӑр! авӑнса...

*1972*

# 1973

## ЧИЛИ ПОЭЧӖСЕНЕ

Чили сăвăҫӗсем, компаньерос,
Ирӗке мухтакан поэтсем!
Фашистсен шучӗпе, путсӗр ересь —
Ирӗке мухтани. Сассăра хуплас терӗҫ
ҫăвара ҫӗтӗк-ҫурăк чиксе.
Пуҫăра ҫапса ҫурчӗҫ васкавлăн,
аллăра пăрса ҫыхрӗҫ хыҫа.
Ҫӗр ҫинчи пур поэт пӗртăван вăл:
сирӗн алă ялан — пирӗн алă,
сирӗн пуҫ — пирӗн пуҫ хуть хăҫан.
Патшари чунсăрсем пăвăртарӗҫ
поэта ҫӗр ҫинче пӗрре мар.
Малалла, юлташсем! Ҫӗкленер пурте харăс.
Пурнăҫ паттăрӗсем, компаньерос,
ҫӗкленер те, чӗтретӗр тăшман.
Юлашки самантчен кӗрешер-ха.
Печчӗр, ҫакчăр, чакмастпăр нихҫан.
Ялава ҫӗклесе ҫӳлереххӗн
халăхпа тачăрах пӗрлешер-ха,
кар тăрар та — тӗп пултăр тăшман!

*1973, сентябрь*

## ФЕСТИВАЛЬ

Çĕр чăмăрĕ — ромашка,
çеçки шăп пиллĕк ун.
Империалист, ан ашкăн,
чĕтре çак паллă кун.

Çĕр чăмăрĕ — илемлĕ
шăп пилĕк континент.
Хăрушă бомбăсемлĕ
империалист чĕтрет.

Фестивале каяççĕ
çĕршыв çамрăкĕсем.
Кашнин мухтавлă ячĕ.
Кашни маттур, ĕçчен.

Фестивальте çӳреççĕ
чăваш каччи, пики.
Ун илемне кӳреççĕ...
Нумай вĕсем пекки.

Яланлăх кар тăмашкăн
çиç, фестиваль, эс, çун!
Çĕр чăмăрĕ — ромашка,
çеçки шăп пиллĕк ун.

Çеçкесене илентĕр
телей — пыл хурчĕ пек...
Сыв пултăр Çĕр — илемлĕ
шăп пилĕк континент!

*1973*

## ЧИЛИРИ ТРАГЕДИ

Кĕрешӳ хĕрнĕҫем вăхăт ҫитрĕ,
ҫĕнни ҫĕнчĕ кивве суйлавпах.
Чилире чаплă ĕҫ пулса иртрĕ —
революци! Мирлĕ майпа!

Патриот Сальвадор Альенде,
халăх ывăлĕ, ларчĕ влаҫа.
Ҫĕнĕ влаҫ! Ырлăх-пурлăх та ĕнтĕ
халăха куҫма тивĕҫ. Куҫать!

Ҫĕр ҫукки илчĕ ҫĕр. Ĕҫ ҫукчĕ —
пачĕҫ ĕҫ. Фабрикра-заводра
ĕҫченсен куҫĕсем йăл-йăл ҫунчĕҫ.
Халăх савăнчĕ чунран.

Ирĕклĕх! Лайăх сăмах вăл.
Вĕренме, ĕҫлеме, канма,
юрăсем янратма хăватлăн
ырă — ирĕклĕхре кăна.

Пăхăр рудникĕ Чукикамата
ҫуллă кукăльччĕ ҫичюта.
Пур йăх-ях, упшурла команда,
иртĕхетчĕ хальччен унта.

Пуйнăччĕ банк, корпораци,
тулнăччĕ сар ылтăнпа.
Ҫав мула мăшкăла хăварас-и?
Мĕншĕн? Мĕнле ăстăнпа?

Хыпăнчĕҫ: Чилире ҫар йĕркиллĕ
влаҫ тăвас, хунттăпа ĕҫ пиҫет...

Йĕксĕкех йĕксĕксен умне килчĕ —
хура юнлă фашист-Пиночет.

Вăл — Нью-Йорк çитĕнтернĕ горилла;
капитал аллинчи сăх çĕлен;
генерал сăнлă муми — ят илнĕ
мăнтăрпа аптăранă виле.

Тупăнчĕ йĕксĕк Мендоса,
йĕксĕк Мерино. Хальччен:
«Халăхпа, — терĕç, — пулăпăр туслă
пурăнас кунăмăр пĕтиччен».

Терĕç те йăпшăнса вăрттăн чикрĕç
халăха çĕçĕпе çурăмран.
Халăх вилмест! Пурăнать, пурнĕ Чили!
Тӳрленет, кар тăрсассăн, суран.

Виçĕ çул вĕрчĕ ирĕклĕх çилĕ,
виçĕ çул анлă утăмпала
çутталла утрĕ чĕрĕлнĕ Чили,
утрĕ вăл социализмалла.

Хура тĕтĕм паян Çĕршыв çийĕн;
Чили путрĕ паян юн ăшне.
Чили, ирĕклĕ Чили,
илчĕç туртса ирĕкне.

Ирĕке юлашки хӳтлĕх пулчĕ
авалхи «Ла Монеда» кермен —
президент çапăçса пуçне хучĕ.
Ӳчĕ вилчĕ, ят-чысĕ вилмен.

«Тĕттĕм каç Çĕршыва хупăрларĕ,
юнлă килчĕ кăçал çуркунне», —
çаплалла юрлайрасшăнччĕ Хара,
юрлаймарĕ çав, татрĕç кунне.

Халăх чысĕ Пабло Неруда,
тĕнчипе чапа тухнă поэт,
эс те çук, çăмăл пултăр тăпру сан,
хуйхăрсах эсĕ вилтĕн, пĕлеп.

Кунĕн-çĕрĕн те ирĕн-каçăн
вĕçсĕр-хĕрсĕр хиреççĕ çынна.
Шывсенче вилесем юхаççĕ,
сăрăнаççĕ океана.

Пысăк çăва — Сантьяго,
Вальпараисо та Консепсьон.
Çук, Пиночет, суятăн:
Чилин сывă-ха чун.

Кĕрешет Альтамирано.
Парăнмасть Корвалан. Тĕнче
пуçăра лапчăтма тапраннă.
Ылхану янăрать пур енчен.

Чĕр виле! Ĕмĕтӳ картланчĕ.
Паттăрсем хатĕрлеççĕ чукмар.
Пĕчĕк мар Чилире компарти,
тĕнчипе вăл пушшех пĕчĕк мар.

Кĕнеке çунтаратăн, мăнтарăн,
Ирĕке çунтармашкăн çукран.
Гитлер те кĕнеке çунтарнă,
хăй тĕп пулнă кăштран
вутра!

*1973, сентябрь*

## ХАЛĂХ ÇИЛЛИ

1. Чилие çĕленсем вăрттăн сăхрĕç,
тытса пăталарĕç,
хĕнерĕç-ватрĕç,
чарăнми юн ĕçсе-сăвăрса
сусăрлатрĕç.
Гиенăсем —
пĕлĕт пек хупăрларĕç.
Горилласем —
этем ашĕ чăмларĕç.
Иуда — вĕсен апостолĕ — лĕх-лĕх! кулчĕ:
«Ылханнин мĕн усси, — терĕ вăл, —
вĕлерчĕç.
Чуптусах Иисуса сутса ятăм —
вĕлерчĕç.
Çавăнпа эп — Иуда,
тикĕт тĕслĕ хура йĕксĕк чунлă Иуда.
Сальвадор, Иисус пек, хытă шанчĕ пире,
шанчĕ те таппа лекрĕ —
вĕлерчĕç.
Тăхтăр-ха, ма питех айăплатăр?
Вĕлерчĕç?
Библилле каласан, кам кама
вĕлерчĕ?
Эп тивмен, сутрăм çеç, ку вăл Каин
пĕртăван Авеле çурăмран чикрĕ те
вĕлерчĕ.
Салтак тумĕ тумланнă
пулăç ачи,
салтак тумĕ тумланнă

шахтер ачи,
салтак тумӗ тумланнӑ
хресчен ачи —
куҫӗ пур, суккӑрскер,
хӑлхи пур, илтменскер,
чӗри пур, чунсӑрскер,
пуҫӗ пур, тӑнсӑрскер —
хӑй пиччӗшне вӗлерчӗ,
хӑй шӑллӗне вӗлерчӗ,
аппӑшне-йӑмӑкне вӗлерчӗ,
ашшӗне-амӑшне вӗлерчӗ.
Ылханлӑ хӑрушӑ мӗскӗн тӑмсай,
тӗттӗм те ухмахскер,
халӑха вӗлерчӗ,
революцие вӗлерчӗ.
Ҫав майпа хӑйне хӑй малашра
вӗлерчӗ.
Хе-хе-хе! Эп — Иуда. Эп мар,
Каин вӗлерчӗ...»

2. Суятӑн, Иуда!
Суккӑрскер — халӑх мар.
Ан савӑн, Иуда!
Чунсӑрскер — халӑх мар.
Сисетӗн, Иуда:
тӑнсӑрскер — халӑх мар.
Пӗлетӗн, Иуда:
ҫынҫиен — халӑх мар.
Ҫав эшкер
эсир суяпа анӑратнӑ кӗтӳ вӑл;
ҫав эшкер

эсир тĕттĕмпе анăратнă кĕтӳ вăл,
сăххине чараймасăр анранă кĕтӳ вăл,
хырăмне чараймасăр хупланнă кĕтӳ вăл.
Вĕлерчĕç те... вĕлереймерĕç,
Чили пурнать.
Касрĕç, чикрĕç, вакларĕç,
халăх пурнать.
Çунтарчĕç, аркатрĕç,
революци пурнать.
Юн шаркать, вут асать,
Ирĕк ĕмĕт вилмен, пурнать.
Тĕттĕм каç, хура каç, тискер каç витĕр çуттăн,
чĕр юнпа йӳçĕ тĕтĕм пăтрашăвĕ витĕр,
çĕнтерӳ курăнать!
«Венсеремос — эпир çĕнтеретпĕр!, —
шăппăн юрлать пулăç;
Венсеромос! —
юрлать шахтер.
Венсеромос! — юрлать хресчен.
Венсеромос! —
юрлать Чили.
Вăй пухма йыхăраççĕ
Анд тăвĕсем.
Халăх пĕрлĕхĕ халь —
Кордильер тăвĕсем:
«Венсеремос!» —
хăватлăн кĕрлет унта.
Тарăху кĕввисем капланаççĕ унта.
Тавăру кĕввисем чĕр вулканлă унта.
Вулкансем ахăрса-пĕрхĕнсе-уласа
вутлă лава айне тăвасса ĕненмесĕр

вăрттăн çыртрĕç пырса
йăпăлти йытăсем,
вăрттăн сăхрĕç пырса
хуп-хура çĕленсем.
Гиенăсем —
пĕлĕт пек хупăрларĕç.
Горилласем —
этем ашĕ чăмларĕç.
Халăх çилли —
çĕршер чăрсăр Везувий.
Халăх çилли —
бомба, çĕршер тротил.
Халăх çилли,
лазер, юлаймăр сывă:
халь-и, кăштран-и,
çук —
эсир!

*1973, сентябрь*

## ТРАКТОРОСТРОЙ ÇУТИ

Чăваш ачи! Завод лартатăн
çунса ыттисемпе танах.
Юрта-пăрта та, çумăрта та,
шартламара та эс утатăн
чун туртмăш стройплощадкăнах.

Вакунсенче те пурăнатăн,
«общагăра» та — туллиех.
Пуянах мар ху курăнатăн —
укçа купи лекмест тӳрех.

Хăш чух ырса кăшт пуç уссан та,
хуйха ӳксе иккĕленмен.
Çут тĕнчене хăртса усаллăн,
Чăваш çĕрне ӳпкелемен.

Ĕçчен те сывă Чăваш çĕрĕ,
унти сипетлĕ вăшăл çил
чунра пулсан, эс ĕмĕр чĕрĕ.
Ан ман çавна, чăваш ачи.

Ăна эс пăрахса ан кай.
Вара сана пăрахмĕ хăй те.
Ăна сан хӳттӳнте пит хӳтĕ,
хăвна та хӳтĕ пуль самай.

Çĕршыв пĕр пайĕ çак завод.
Тăван завод! Епле пăрахăн.
Пăрахрăн-тăк, юлан хăраххăн.
Ять чунна ним уссăр вут.

Ачам, ан ман ху халăхна.
Сана çуратнă вăл, çын тунă.
Ялан килмен те пурнăç тутлă,
аван упранă сывлăхна.

Ан пулччĕ шелсĕр те куштан,
анчах пулсамччĕ ăслă шухă.
Тăван чĕлхемĕре ан ман.
Мансан, аннў те шутран тухĕ.

Сăлтавсăр ан кăшкăр урра,
сăлтав пур чух ан лар пĕр сассăр.
Ачусене вĕрент ырра,
мăшăрланса çемье тусассăн.

«Чăваш чĕлхи пĕтет» тени
мур чирĕ пек килсе ерсессĕн,
тĕпрен-кăкран пĕтетĕн эсĕ.
Вара харам эс пурăнни.

Вара кăркка пекрех тăн-пуçлă
этем мĕлки пулса майпен
ху тухнă халăхна та, тен,
пуç каçăртса пăхмашкăн пуçлăн.

Туртать çак туртăм хăш енне?
Сахал-и пĕр-пĕрне çиетпĕр?
Пĕтермелле-и пĕр-пĕрне?
Тăван та тус пуласчĕ тетпĕр.

Фашизм пур тĕнчере, тăнла,
турачĕсем çăра та вичкĕн.

Таса та ҫивчӗ тытмалла
хӗҫпӑшала. Тӑшман пит выҫкӑн.

Идеологи вӑрҫинче,
рабочи класс, эс — ҫаръертӳҫӗ.
Эп сӑвӑҫӑ — сӑмах кӗтӳҫӗ.
Аннем хуйхи — чӗлхем ҫинче.

Анне хуйхи — тӗнче хуйхи.
Хуйха мансан, кураймӑн савнӑҫ,
каллех, каллех чуралӑх сарӗҫ,
тӗнчен йӑлт пӗтӗ тӑтӑрхи.

Чӑваш ачи! Ӑс-кӑмӑл вӑйӗ
пӗчӗкленмесӗр таптӑр сан.
Кил-терӗш те, машшин та вӑйӑ
ӑшне ан пут пуҫ ҫухатса.

Пуҫу шухӑшлама сан кирлӗ
аннӳ ҫинчен, Ҫӗршыв ҫинчен.
Пуҫу шухӑшласассӑн вирлӗн,
тӑп-тӑнӑҫ тӑрӗччӗ тӗнче.

Тракторострой ҫути! Каҫ-каҫӑн
шевли таҫта ҫити ӳкет.
Вӗҫ-хӗрсӗр ӗҫ вӗрет. Васкаҫҫӗ.
Чунра — ҫав ҫутӑ, ҫав инҫет.

*1973*

# МАНĂН ÇЫЛĂХ

Пит вăрттăн, питĕ пытанса,
эс, çуталса пыракан çăлтăр,
килен те, çарамасланса,
ларатăн. Кирлĕ. Хуть çĕр çăттăр.

Шалт анратан, çук хăнăхма,
вут çунтарсан та, чун туртмасть ман.
Сăмаххуна хăлха шанмасть-мĕн,
тута та, хам та — мĕнех мар.

Çӳрен укçашăн-и элле,
çĕнне пĕлес килни хĕртет те
касать сана. Хăюллăн, темплăн
эс çул илен, эп те илеп.

«Пĕлес килни» сан шуйттан пек,
этем тенин кăштах вăл пĕчĕк,
мана ĕмĕрлĕхе вăл кĕчĕ
хурах пуснийĕн сĕмĕпе.

Эп кирлĕ... Çук, эп пулăшап,
шансах тăр, çавă кĕнекӳ сан
тухать, паллах. Çукрах та ӳсĕм,
начар та... Çук, эп тăрăшап.

Пĕлес килни-и? Пуш сăмах.
Урăхларах пуль-ха юмахĕ:
сана лауреат пулмашкăн
эп чĕр трамплин пуль-ха — ухмах...

*1973*

## ВĂРМАНТА

Чĕнмест вăрман — тӳлек-и çак?
Çапах та — ахрăм, юлашки тĕс мĕн вăл?
Кунта-и? Çук! Ăçта? Хускав-куçав...
Сывланă паллă... Ах, епле йăлт — мĕлкĕ.

Чăштăртату... ун илтĕнмийĕ... Çук, юри —
тĕлсĕртерех. Сахалтарах сăлтавлă.
Ним сисĕнӳсĕр. Тахăш тĕнчери
пăч-тĕттĕм пушлăхра... Ултавлă.

Анчах вĕçе курса тăни
вил шăплăх пек пусса тăмасть-и вăл?
Вăрман çурса сас янратни
вилĕлĕхе те тĕп тумасть-и вăл?

Чĕнмест вăрман — тӳлек-мĕн çак.
Анчах шăв-шав хаваслăрах-тăр.
Ан чĕн çур кун — анне вăрçать:
калаç, чĕмсĕрленме пăрах тет...

*1973*

## ХУРĂНСЕМ КАШЛАÇÇĔ

Кашлатпăр е канăçсăр чăштăртататпăр,
эпир — хурăнсем — пăшăл-пăшăл тăватпăр.
Кам вилнĕ-ши? Пӳлĕх? Ăçтан? Ан калаçăр.
Тен, чунăмăр чунĕ? Епле? Тур каçартăр.

Тен, чунĕ хăех? Кам пĕлет? Хăратать кĕркунне.
Эпир аркану варкăшне те туятпăр,
пĕчченнĕн юлса, пушшăн, эрлĕн куратпăр:
час пĕтĕпĕр, çӳпĕ пулса, саланса пур енне.

Анчах кăмăла хуçаймасть вăл çак. Чăштăртатса,
эпир мĕн пурри йăлт пĕтет те теместпĕр.
Тĕнче — чăштăрти. Ахăртнех те пĕлместĕр,
чунсем чăштăртатнăччĕ пирĕн те çав.

Халь мĕн, вилнĕ-им? Эп ыйтап тăнланмасăр.
Тĕнчен — сып-сывах пуль? Паллах. Пĕр сăмахсăр.
Кĕр шавĕ? Çапла. Иртессе кам-ха шанĕ?
Анчах, тăнăçса, канăçать кĕр шăв-шавĕ...

*1973*

# 1974

## ÇЫНСЕМ, ÇЫНСЕМ...

Çынсем, çынсем, телейлĕ этемсем,
шут тытăр-ха, шут тытăр та, телейлĕ
тăвас тесе пире, çутарăр ырлăхсем
пуçсем çине... Вара эп ĕрĕхсе
ятлаймăп пурнăçа: чĕр тамăк ку! тееймĕп.

Пĕтетпĕр-çке çĕршерĕн те пиншерĕн!
Ман лира — хурлăхлă, хавас янрасшăн мар.
Хăçан кăшт çăмăлланĕ-ши шăпа?
Чăн кĕвĕлĕх телей пекех инçе-мĕн —
çапах васкар ĕмĕтленме, шанма.

Усал куна савмастăп эп пĕрне те,
асапсăр саманта çеç пурнăç теп.
Хавас юрра кăна çĕклес теп пĕлĕте.
Çынсем, çынсем, шанатăп, ĕненетĕп —
телей тени пурах вăл, килетех!

*1974*

## СУХАРА

«Дэтэ çитмĕл пиллĕк» —
хурçă утăн ячĕ.
Кăшт çемçелчĕ пилĕк,
çĕн ана пуçланчĕ.

Тĕттĕм каç саламĕ —
йăлтăр-йăлтăр çăлтăр.
Пĕлĕтсем, саланăр,
çăлтăр йышлă çунтăр.

Çĕртмере çӳретĕп,
çĕрĕпе ĕçлетĕп,
шухăшлăн та тарăн
çĕр питне чĕретĕп.

Ах, суха кассийĕ
сар пĕрче савать-çке.
Пĕр хĕре каччийĕ,
ах, сума сăвать-çке.

Вăл çунать сар хĕршĕн:
хĕрĕ — йăлăнтармăш.
Çавă каччă мĕншĕн,
мĕншĕн эпĕ, тантăш?

*1974*

## СТРОЙОТРЯД

Кам пулман вăйлă, çамрăк?
Çĕн çĕр халь те туртать.
Халь ăçта яшлăх? Таврăн,
çамрăклăх, стройотряд.

Кам-ши халь хĕрĕх пĕрмĕш
отряда претендент?
Юрă... Ĕç... Ан пул пĕлмĕш
çавсене эс, студент.

Çеçенхир... Шăрăх... Ассăр
вĕçрĕ пĕрхĕт çӳлте.
Çĕр чаватпăр канмасăр.
Пĕтĕм чун çак çĕрте.

Чул вататпăр хăватлăн, —
никĕс кирлĕ пире.
Лăнчăр-ланчăр ан лартăр,
кайтăр çурт ĕмĕре.

Казахстан кунĕ, каçĕ:
«Эсĕр, — терĕ, — ĕçчен».
Миçе çул манаймаççĕ,
тав тăваççĕ хальччен.

Иртнĕ куншăн йĕместпĕр,
гитарпа çĕрĕшсе.
Отрядра халь те эпĕр
сывă, çирĕп çӳретпĕр,
юрăпа пĕрлешсе.

Ĕç ан пултăр пăрахăç.
Пул пиртен хăвăртрах,
пул пиртен вăйлăрах эс,
паянхи стройотряд!

*1974*

## РАК

Ыратиччен ăна пĕлме те кансĕр.
Хĕне кайсан, пĕлни те усăсăр.
Анчах, çапах, текех çыратпăр «канцер»,
ыйту лартса. Май çук ыйтусăр.

Ыйту — иккĕленӳ. Ăна ялан лартаççĕ.
Пĕлсех лартаççĕ. Кам лартать? Ултавçă?
Ултавçă мар. Çын чунлĕ гуманист.
Онколог-тухтăр, шăппăн йăпатавçă.

Таса ултав... Унпа ма пĕттĕр чыс?
Турра ĕненнĕн тухтăра шанатпăр,
фанатикла хĕрӳн ăшталанса шыратпăр
çук çăлнăçа: кашни — идеалист.

Ма шанас мар, ыйту палли тăрать-çке.
Шанатпăр пурте: тусăмăр умрах-çке,
сывах. Инкек асра та çук. Шӳтлет час-час.
Пĕлмест çав, хăйĕн — канцер, метастаз.

Вăл — каснă йывăç. Каснă. Тĕпренех.
Ӳкме, хăрса типме ĕлкĕреймен. Ем-ешĕл.
Çапли çапла та, кăмăл кӳренет:
чĕртесшĕн-çке, чĕртесшĕн... ах, чĕртесшĕн...

Сып-сывă ӳт-пӳрех ма клетка йĕксĕкленчĕ,
ĕмме пуçларĕ ырă клеткăнах?
Апат анать, анать вăл аванах,
çапах хухать этем, юлать тирпе скелечĕ.

Çисех выçса вилет. Хăрушă калама.
Кура тăркачă нимĕн тăваймастăн.
Куç умĕнче путать, май çук çăлма,
путан теме те — шиклĕ... хăяймастăн.

Вăраххăн вилекенĕн чунĕ пек,
ракпа тĕмсĕлекенĕн чунĕ пек,
талансăр, ăрăскалсăр чун ăçта?
Ун пеккине тупаймăр тĕнчипе.

Тупаймăр çăлакан та. Çăлакан,
хăватлă çăлăнăç, — пуласлăхра.
Анчах пур хурçă шанчăк халăхра:
тупăнманни ялан тупăнакан.

Этемлĕх генийĕ — этемлĕхре.
Этемлĕхе пĕтмешкĕн парас марччĕ —
фашизма кăкласчĕ те тĕпрен,
рака, рака тĕп тумалли тупасчĕ!

*1974*

## ХĔРĔНКĔ ЭТЕМ

Сăмсипе шăши хĕстернĕ
хĕрĕнкĕ этем:
«Парăр-ха пĕр тенкĕ, — терĕ, —
кăшт кайса ĕçем».

Хăйĕнне ĕçсе пĕтернĕ,
юра ернĕ тем,
сăмсипе шăши хĕстернĕ
хĕрĕнкĕ этем.

«Кивçене нумай кĕттермĕп,
çаплалла ĕçсем,
парăр-ха пĕр тенкĕ, — терĕ, —
кăшт кайса ĕçем».

Намăсне пачах çĕтернĕ,
чармасан — пĕтет
сăмсипе шăши хĕстернĕ
хĕрĕнкĕ этем!

Супĕлтетрĕ темĕн-тепĕр,
пырь ярăннăçем:
«Парăр-ха пĕр тенкĕ, — терĕ, —
кăшт кайса ĕçем...»

*1974*

## УРЛОВ

Урлов —
урлă лав.
Лавĕ — пуш-пушă.
Сирпĕтрĕç
пулмалла
вырăнтан — кут-пуçшăн.

*1974*

# 1975

## ПИРӖН УМРА

Пирӗн умра — лаштра хурама.
Лартӑм эпӗ тухса урама.
Савнӑ тусӑм килнӗ вӑхӑтра
тӑтӑм ура ҫине юрлама.

Тусӑм, кил, савам-ха чуптуса,
шур уйӑха хирӗҫ тӑратса.
Виҫ кун кӑна мар, виҫ уйӑх мар,
ҫичӗ ҫул ҫӳрерӗм юратса.

Сакӑрвунӑ сакӑр кӗввӗме
саккӑм ҫине сарас терӗм эп.
Кӗвӗ сакӑ ҫине сарӑнмасть.
Савни ҫын сӑмахпе сивӗнмест.

*1975*

## ЮРЛАНĂÇЕМ

Юрламăттăм çакă юррăма,
юррăмçăм йăпатать тусăма.
Аллăма юратса сулламастăп,
çĕррĕме юратса суллатăп.
Юррăма юратса юрламастăп,
тусăма юратса юрлатăп.
Паян ирех килсе çитмен пулсан,
кам куçĕнчен пăхса юрлăттăм?
Алла хĕрӳн кама пырса парса,
кам хулпуççи çине хурăттăм?
шухăшласа юрă юрлакан
хăй те ыр çын ачи пулакан.
Шухăшла-шухăшла эпĕ юрлатăп,
ялан сана, тусăм, ырлатăп.
Шăлса тыт курнитсу урайне
панулми кустарса выляма.
Вĕренсе юл юррăм кĕввине
эпĕ асна килсен юрлама.
Эпĕ санăн асна килес çук,
эсĕ манăн асран тухас çук.
Юрламăттăм çакă юррăма,
юрланăçем ырă — чунăма.

*1975*

## ХАМĂР САВНИ

Хамăр савни, пулсам хамăра.
Çамрăк пуçăм, ан кай харама.

Çын савнине савма юрамасть,
хамăр савни савмасть, мĕн тăвас?

Хамăр савни савсан хамăра,
çинçе пӳ-си шел-и-ха вара?

Шел-и ылтăн пекех çакă пуç?
Каласамччĕ, тусăм, савнă тус.

Ах, пĕлместĕп нимĕн калама.
Аванрах пуль — мансăр пурăнма...

*1975*

## ВАТӐСЕМ

Пирӗн пек айван ачасене
ват ҫынсемччӗ кирлӗ ӑс пама.
Пуҫ таяс пулать ватӑсене.
Пуҫ таймарӑмӑр-тӑк чыс пулмасть.
Таймапуҫӑм, сумлӑ ватӑсем —
ҫыхланать ҫу пек ҫемҫе чӗлхем.

Пирӗн пек айван ачасене
ват ҫынсемччӗ кирлӗ ӑс пама.
Ӑнланас пулать ватӑсене.
Ӑнланмарӑмӑр-тӑк ӗҫ пулмасть.
Ват ҫынна чунран хисеплени
хамӑрах вӑл пысӑк чыс кӳни.

*1975*

## ÇĔНĔ КИН

Вăта пӳрне çĕрри ылтăнран,
кун каçиччен çиччĕ çаврăнать.
Чун савни çинчен шухăшласан,
çĕр каçиччен çиччĕ вăранап.

Ылтăн çĕрĕ, тимĕр сăнчăр пек,
çыхса лартрĕ пĕтĕм пурнăçа.
Яшлăхра çӳретĕп çĕрĕпех,
тĕлĕкре çеç — туспа курнăçап.

Тусăм, тус, ĕмĕртенхи савни,
эс ларатăн кантăкран пăхса.
Çилленсе те мар пуль, вăтанса
эс чĕнместĕн, тусăм... Сывă-и?

Уçса ярччĕ кантăкна яри.
Эп тĕрленĕ сĕлкĕ вĕл! вĕçтĕр.
Тен, сана ман вăрçтарас юри? —
кăмăл ĕнтĕ санран сивĕнтĕр.

Вăранап та, шухăш улшăнать.
Çĕррĕме хуратăп хĕвĕме.
Тусăм, ан мансамччĕ эс мана,
ан выляччĕ урăх хĕрпеле.

*1975*

## АВӐТАТЬ-ШИ КУККУК?

Авӑтать-ши куккук, авӑтмасть-ши
чӗпписемсӗр ларнӑ вӑхӑтра?
Аннем, хӑй ҫеҫ юлнӑ самантра,
асӑнать-ши пире, асӑнмасть-ши?
Асӑнать пуль вӑрӑм ҫӗрсенче,
кулянать пуль шурӑмпуҫӗччен.

Авӑтать-ши куккук, авӑтмасть-ши, —
пурпӗр пухӑнмаҫҫӗ чӗпписем.
Пухӑнаҫҫӗ манӑн тӑвансем.
Савӑнать-ши анне, савӑнмасть-ши?
Савӑнать-ҫке пӗтӗм чунӗнчен,
макӑрать-ҫке халӑх умӗнчех...

*1975*

## ХУРА ЧĔКЕÇ

Хура чĕкеç
кĕр каять, çур килет,
пӳрт çамкине йăва çавăрать.
Кĕр килеймĕп, тусăм,
çур килеймĕп,
пĕр кайсассăн —
текех килеймĕп.

Хура чĕкеç
кĕр каять, çур килет,
хурлантарса умра явăнать.
Кĕр кайминччĕ чĕкеç,
çур килминччĕ,
пĕр кайсассăн —
пачах килминччĕ...

*1975*

## ХУРАКĂШ

1. Çур енне, çанталăк ăшăтсассăн,
пĕлĕтре хуракăш сасси пур.
Ĕмĕртен килет пек çавă сасă.
Аялта выртать шап-шурă юр.

Çырмасен хĕрри кăштах хуралнă,
çул çине те тĕл-тĕл тухнă шыв.
Çичюта-и, пĕрре мар туранă
ман Сăварăм, — Пăлхарти çĕршыв.

Тĕп-йĕрпе касмашкăн ĕмĕтленнĕ
Сăвара илсессĕн Супетей.
Сар хĕрсем акăш пулса çĕкленнĕ
чи çӳлти вĕç-хĕрсĕр пĕлĕте.

Халь çавсем унта вĕçеççĕ çивчĕн,
вĕçнĕ, вĕçĕç кунĕ-çĕрĕпе,
çиччĕн, çиччĕн-и, шăп çитмĕл çиччĕн, —
авалхи çĕршывĕ çийĕпе...

2. «Атăл çинче аллă хур,
чи хурлăхли хуракăш», —
тесе юрлан юрă пур.
Юрри — чуна хумхатмăш.

Акăш ларнă хум çине,
акăш çулне çухатнă.
Хăратса шур хурсене,
ки-ик! ки-ик! çуйхать вăл.

Çӳлтен-çӳлте пынă чух
ушкăн пуçĕ пулнăччĕ.
Ушкăн та, тӳпе те çук
халĕ ак. Эх, пурнăçĕ.

Мĕншĕн усăннă çунат?
Ăçта, хăçан аманнă?
Мĕншĕн, мĕншĕн ăш çунать?
Ăçта ушкăн ăсаннă?

3. Акăш çук халь Чăвашра.
Акăшписем — туп тулли.
Акăш кӳлли таврара
пур-и? Çук акăш кӳлли.

Пулсан пур пуль юрăра,
сăвăра кăштах пур пуль.
Ăçта, акăш, эс ара?
Ăçта эсĕ, акăшкӳл?

4. Хуракăшсем ăçта? Атăл çинче.
Атăл çинче мар çав, сив енче.

Сĕм-сĕм вăрман — тайга — варринче,
пысăк çавра кӳлĕ хĕрринче.

Каш-каш çӳллĕ хăмăш хушшинче,
йăл-йăл сарă хĕвел ăшшинче.

5. Хуракăша калла кӳрер-и,
туса парар ăна акăшкӳл.

Асăрханса, пĕрер-пĕрерĕн
тăхăнтарар çĕрĕ. Тĕрĕс пуль?

Тăраниччен пăхар ун çине,
чун каниччен итлер сассине.
Кĕмĕл çунат хуракăш, сана,
çамрăк чуна хумхатмăш, салам!

Куç илейми куллен кĕтер-и,
çурхи ирпе ир-ирех тăрар.
Тавралăха илем кӳртер-и,
юрра-сăвва чĕрĕлĕх парар...

6. Акăшĕсем ларнă тиреке,
ларнă пулĕ тетĕп çĕрĕпе.
Çакă туссем патне килтĕм те
кăмăлăма ятăм ирĕке.

Ма хăпартăм çӳллĕ ту çине —
пусрăм пулĕ çĕлен пуç çине.
Чĕлхе-çăвар хытă, çемçе мар,
хăвартăм пуль туссен кăмăлне.

Кăмăл кăна теççĕ, кăмăл çав.
Ăна пула инкек çак пуçа.
Уçмăтăмччĕ чуна, йывăр-çке
унсăр пурăнмашкăн пурнăçа.

Акăшĕсем ларнă тиреке,
тирекĕсем кайнă ирĕке.
Манăн та каяс пуль уялла
шухă çил ачийĕн йĕрĕпе...

*1975*

## ĂСАТУ

Чĕнтĕрлĕ кĕперĕн карлăкĕ —
улма йывăççисен турачĕ.
Саманамăр çаплах тикĕс тăрсан,
эпĕр — атте-анне палăкĕ,
эпĕр — атте-анне çуначĕ.

Кам-ши çут тĕнчере чи ăсли,
кам-ши çут тĕнчере чиперри?
Çакă çут тĕнчере çын нумай,
хамăр атте-анне чи хакли,
хамăр атте-анне чи ырри.

Кала, пыл çук-и те çу çук-и
аттепеле анне çуртĕнче?
Аттепеле анне çуратмасан,
эпĕр курас çукчĕ кун çути,
эпĕр курас çукчĕ çут тĕнче.

Аслати авăтать, çиçĕм çиçет,
кĕмсĕртетнĕ сасă илтĕнет.
Ан кулян-ха, атте, ан йĕр, анне,
пулинех те пирĕн çулĕ инçе,
ан ăсатăр, çийĕр йĕпенет.

*1975*

## АТТЕПЕЛЕ АННЕ ÇУРТĔНЧЕ

Улма йывăç тавра çаврăнса,
хĕрлĕ хĕвел тухать ярăнса,
каллех тӳпенелле çул тытать,
атте-анне çуртне çутатать.

Аттепеле анне çуртĕнчен
чун хурланать тухса кайнă чух.
Чун хурланать, нимле чарма çук.
Темшĕн ĕнтĕ çапла — кашнинчех.

Пĕлейместĕп халь те мĕншĕнне,
нумайччен пăхатăп кил çине.
Эп каллех каятăп аякка,
хĕвел мар та, пурпĕр килĕп-ха.

Хĕвел мар та, çитĕп çаврăнса,
хĕпĕртӳллĕн утăп ярăнса,
çупăрлăп-ачашлăп аннене,
ал парса пуç тайăп аттене.

Иккĕшĕ те, пĕчĕк ача пек,
савăнĕç эп килнĕ ячĕпе,
вăйсăррăн çуталĕç имексе,
Имексе те шăппăн тĕлĕнсе.

Аттепеле анне çуртĕнче
чун хурланать килсе кĕнĕ чух.
Чун хурланать, нимле чарма çук.
Темшĕн ĕнтĕ çапла... кашнинче.

*1975*

## ĂÇТА?

Яш чух пулать вăл çак самант:
эс — веç — пĕрпĕтĕм ырату;
сан пурнăç ишĕлсе анать.
Сăлтав — пĕрремĕш юрату.

Яш çыннăн чун хӳтлевĕ çук.
Савни пăрахнăшăн çав чун
пултарĕ перĕнсе вилме
е ун çине ал çĕклеме.

Ман пулнă хамăн та самант,
çав чĕп-чĕр юнлă ырату.
Эп хам та тапăннă хама.
Çапла вăл яшлăх, юрату.

Эп хам та чĕннĕ хуйхăпа
уçланкăра хыт сасăпа
сĕм вăрманти йывăççене,
унти тискер кайăксене.

Хура вăрман йывăççисем,
çĕре чĕтретĕр вăрманта.
Вăрман тискер кайăкĕсем,
çывхарăр, çитĕр ман пата!

Çуркалăр манăн пĕвĕме,
таса та шурă ӳтĕме,
туртса кăларăр чĕрене,
леçсе парсамăр савнине.

Курса ăна кĕтмен çĕртен,
мана асилтĕр хăраса.
Телейсĕр пулнă тейĕ, тен,
пăшăрханса та хуйхăрса.

Этем! Ан юлччĕ пуш чунпа.
Пур туйăм пĕтнĕ тарăхпа
пултарăн перĕнсе вилме
е çын çине ал çĕклеме.

Епле упрас-ха чунăма?
Ăçта çухалнă ырату?
Ăçта яш вăхăт, яш самант?
Ăçта пĕрремĕш юрату?

*1975*

## ПЕХИЛЛЕ-ХА...

Çул каятăп, вăрăм пулĕ çул.
Мул ыйтмастăп, хам эп —манăн мул.
Эп пуян... пĕр пуç та мăшăр ал —
çакă мар-и пурлăх, капитал?

Пехилле-ха, анне, пехилле,
пехилле-ха, атте, пехилле.

Икĕ вăрăм пĕçĕ — ик шерте.
Кирлĕ пулĕ теп инçе çĕрте.
Кирлĕ пулĕ теп — хăвалама,
е, хама хăвас пулсан, — тарма.

Пехилле-ха, анне, пехилле,
пехилле-ха, атте, пехилле.

Пĕвĕм пур алла сулкалама,
Аллăм пур чышка чăмăртама.
Пуç кастарас марччĕ — инкеке
хастарланнă пĕр-пĕр йĕксĕке.

Пехилле-ха, анне, пехилле,
пехилле-ха, атте, пехилле.

Ăман пек эп шумăп, чыс хушмасть.
Пуçăма эп усмăп, чун туртмасть.
Ним те çук чухне те чунăм пур.
Çак вара мул мар-и, эхтуртур?!

Пехилле-ха, анне, пехилле,
пехилле-ха, атте, пехилле.

*1975*

## САВНИ

Лашам — шыв леш енче,
хам — ку енче.
Каçăттăмччĕ — ура йĕпенет.
Каçăттăмччĕ — ура йĕпенет,
каçмасассăн — лаша кĕçенет.

Савни — вăрман урлă,
хам — ял урлă.
Кайăттăмчĕ — лашам ĕшенет.
Кайăттăмчĕ — лашам ĕшенет,
каймасассăн — савни сивĕнет.

Кăмăлăм — ирĕкре,
хам — читлĕхре.
Тухăттăмччĕ — арăм хирĕлет.
Тухăттăмччĕ — арăм хирĕлет,
тухмасассăн — чунçăм кӳренет.

*1975*

## УЛТШАР ЙӖРКЕН

1. Тусӑм, эс ҫурт лартрӑн леш енне.
Хывасах пулать пуль каҫмине.
Каҫмине хывсан, хыв ҫӳҫерен,
вӑр-вӑр! авӑнтӑр каҫмассерен.
Тус тӑван-тӑк ту лайӑххине,
чуну савӑнтӑр курмассерен.

2. Вӗҫ, вӗҫ, акӑш, вӗҫ эс инҫене,
ҫит таҫти ҫӗрсен хирӗсене.
Хирӗ варринче пур тет кӳлли,
кӳл тавра — хӗп-хӗрлӗ ҫӗр ҫырли.
Ҫӗр ҫырли калать тет ҫӗр тути,
пыл тути калать — савни тути.

3. Ялта мӗн пулнисем ялтах юлӗҫ,
килсе курӑрсамччӗ ҫитес ҫул.
Кулас теекенсем кунтах кулӗҫ,
йӗрсе ҫеҫ ан яччӗр кулас чух.
Сире пирӗн пекки татах пулӗ,
пире сирӗн пекки пулас ҫук.

4. Вут хутрӑм та, хӑйӑ хӗрсе ҫунать —
патне пыма ҫук пек туйӑнать.
Хӑрамастӑп алла пӗҫересрен,
хӑратӑп-ҫке хӑййи сӳнесрен.
Хӑййи сӳнесрен те пит хӑрамӑп,
тӑван сивӗнесрен хӑратӑп.

5. Ҫӳллӗ тусем ҫинче ҫӳллӗ кӗлет,
Кӗлет тавра чӗнтӗр аван килет.
Чӗнтӗрте вӗт кайӑк нумай ҫавтер,

алтуйипе çапса ан вĕçтер.
Ирхине те килеп, каç та килеп,
сивĕ сăмахпала ан пистер.

6. Ирпе ирех тăрса сада тух —
самай ирхи автан вăхăчĕ.
Пире атте-анне ӳстернĕ чух
инкек çине синкек тăкăнчĕ.
Атте-анне пилĕ аслă иккен,
хуплаймарĕ пире нимле инкек.

7. Çур çитсенех тулта куратăн:
хура курак йăва çавăрать.
Ухмах иккен хура куракĕ —
хăрăк йывăç çинче çухăрать.
Ухмах иккен иртнĕ самана —
усалскерех хăйпе мухтанать.

8. Çурхи шыв юхать сăрт айĕпе,
шăнкăртатса выртать майĕпен.
Нумаях та юхмĕ вăл ара —
ухса юлăр шурă тутрăра.
Нумаях та тăмăп, кайăп эп —
курса юлăр савнă тусăра.

9. Виççĕ иртрĕм сирĕн умăрпа,
каçхине эп иртрĕм купăспа.
Пĕринче шик! шăхăртăм хытах,
вăратасшăн пултăм ыйхунтан.
Вăранман пулсассăн вăранса юл,
шăнкăрав пек сасса илтсе юл.

*1975*

## ÇАМРĂК ĔМĔР

Пысăках мар пахча, чие пахчи.
Аван иккен ларма шăплăхра.
Çинçеех те пĕвĕм, хура куçăм
хитре иккен çамрăк вăхăтра.

Чун савăнса кăмăл çĕкленнĕрен
сĕрме купăс илтĕм аллăма,
пĕр хĕр илттĕр терĕм, савтăр терĕм,
тухрăм каламашкăн урама.

Анчах хĕре кĕввĕм килĕшмерĕ,
кĕмĕл çеç çав хĕлĕх, ылтăн мар.
Килĕшетчĕ те пуль, вăхăт иртрĕ,
çамрăк ĕмĕр иртрĕ, мĕн тăвар...

*1975*

## САЛТАК ЮРРИ

Саврăшпуç урамĕ кукăр-макăр,
сар çăка кашни кукрийĕнче.
сывă пул, аннеçĕм, эс, ан макăр,
ывăлу патшалăх аллинче.
Сар çăки ыр шăршипе астарĕ
ирсерен чипер саркайăкне.
Саркайăкĕ ларĕ, чĕп кăларĕ,
кам-ши итлĕ унăн юррине?
Эс мана ӳстертĕн, çупăрларăн,
илтсе юл халь ывăл сассине —
вăл каять çĕршывăн чиккине...

*1975*

* * *

Шурă кĕпе лайăх — ут çулма,
çинçе пӳ-си лайăх — сулăнма.
Шухăшлап та çакă пусăмпа,
тăван çĕртех аван пурăнма.

Урамĕсем вăрăм — утмашкăн.
Алăкĕсем сăрлă — уçмашкăн.
Кулли тусăн çутă, сăнĕ хитре,
вăтанап кусĕнчен пăхмашкăн.

Сивĕ, шăнап, куçса çума лар,
ĕмĕр уйрăлмасса ална пар.
Уйрăлмăпăр, тусăм, сивĕнмĕпĕр,
ĕмĕрлĕхе пĕрле пурнăпăр.

*1975*

## ЧУН САВНИ

Ах, вăрман, хура вăрман!
Пуш аврийĕм, пуш аври!
Калăр, кам улах ларман,
камăн çуккă чун варли?

Ах, вăрман, хура вăрман,
савнă тусăм асăмрах.
Куртăм тĕлĕк, мĕн тăван,
куртăм çывăрмасăрах.

Ах, вăрман, хура вăрман.
Тусăм кайрĕ хирĕçсе.
Эп çĕр каçрăм — шăпăрлан —
уткаласа çӳресе.

Эх, вăрман, хура вăрман.
Çул çухатрăм, ут утмасть.
Тусăм тухрĕ асăмран —
сивĕнтĕм, тек чун туртмасть.

Эх, вăрман, хура вăрман.
Сарă хĕрччĕ чун савни.
Ут-ха, утçăм, çĕрçăтман,
хуçăлчĕ ман пуш аври.

*1975*

## ЯШ ЧУХ ШУТЛАТТӐМ...

Утсан-утсан лараттӑм сак ҫине,
шухӑшлама пуҫлаттӑм йӗркипе.
Йӗрсе ярас килетчӗ хӑш чухне
пуҫа ытла та йывӑр килнипе.

Пулинччӗ йывӑр чух кукка, пичче.
Хута кӗме никам та манӑн ҫук.
Тӑшманӑмсем нумайччӗ, эп пӗччен,
кун кӑтартмастчӗҫ ӗнтӗ миҫе ҫул.

Памастчӗҫ ҫӗклеме те пуҫӑма.
Ӑҫта каяс йӑваш чӑваш ачин?
Ӑш ҫуннӑ чух ларса канашлама
ӑҫтан тупас хампа канашлӑ ҫын?

Ҫапла шутлаттӑм эп хӗвел ансан,
хӗвел тухсан та — шухӑшӑм ҫавах.
Аннем, ан хуйхӑр теттӗм, ан кулян,
пур йывӑра та тӳсӗп эп хамах.

*1975*

## АВАЛХИ КĔВĔ

Хура вăрман урлă каçнă чух
вуник кĕпер урлă каçмалла.
Хусан хули пекех Саврăшпуç —
епле пăрахса тухса каймалла?

Вуник кĕпер урлă каçнă чух
вуник тутар тухрĕ куç умне.
Сулахая пăхрăм — атте çук,
сылтăмалла пăхрăм — çук анне.

Хура вăрман урлă каçнă чух
виç йывăç курмарăм хăрăкне.
Атте-анне килĕнчен кайсан,
виçĕ кун курмарăм ырлăхне.

Ырлăх тетĕр. Ырлăх мĕн тени?
Ыратуллă чуншăн ырлăх çук.
Шыва ӳкрĕ манăн шурă ут
хура вăрман урлă каçнă чух.

*1975*

## СĂРЛĂ ÇУНА

Сăрлă çуна сирĕн тĕлĕрте.
Сар пĕкки çинче кăвак хăю.
Килме хушрăн. Килтĕм. Каяс теп.
Курмасăр юлатăн, курса юл.

Сăрлă çуна сирĕн тĕлĕрте.
Темшĕн калаçмарăн манпала.
Çакă пулчĕ пулĕ тĕлĕкре.
Ухмах кайрĕ тесе ан кала.

Сăрлă çуна сирĕн тĕлĕрте.
Ĕмĕр пирĕн пĕрре, иккĕ мар.
Савасси те пулĕ ĕмĕрте,
писесси те... сывă пул. Каçар.

*1975*

## ХĂНАРА

Çӳлтеех те çăлтăр, ай, миçе-ши,
миçе пăхмассерен куçмасть-ши?
Миçе пăхмассерен, ай, куçмасть-ши,
пирĕн çамрăк ĕмĕр иртмест-ши?

Пирĕн çамрăк ĕмĕр кăнтăрлара,
эпĕр хамăр кунта, хăнара.
Иртет иккен ĕмĕр, иртет ĕмĕр,
хăшĕ ĕнтĕ йăлтах ирттертĕмĕр.

Хăшĕ-пĕри ватлăх кураймарĕ,
умĕнчен хура-шур каймарĕ:
ахăрсаманара çуралтăмăр,
хунавлах хăртăмăр, вантăмăр.

Хăрманнисем ӳссе кĕреш пулчĕç.
Сехĕрленсе çичют хĕрес хучĕ.
Пирĕн çамрăк ĕмĕр илĕртӳллĕ.
Эпир каллех патвар, яштак, çӳллĕ.

Анчах яш юман та ватăлать-мĕн,
çут çăлтăр та сӳнсе ларать-мĕн.
Иртет иккен ĕмĕр, иртет ĕмĕр.
Эпир вăл иртмест пуль теттĕмĕр.

*1975*

## ХИРĔÇЛЕВ САВВИ

«Кам çӳрет халь, — тетĕн, — лашапа,
кур, мĕн чул машшин иртсе тăрать;
ут тени ут мар, юрри çапла,
сăмаххи кăна çапла пырать».

«Кам утать халь, — тетĕн, — арăмпа,
кур, мĕн чул савни кулать чеен;
арăмсем халь чăн-чăн арăм мар,
сăмаххи кăна çавах хальччен».

«Кам ларать халь, — тетĕн, — чăн туспа,
кур, мĕн чул «ĕç тумалли туссем»,
чăн тусу вăл халĕ чăн тус мар,
çиелтен кăна тус пек этем».

«Кам пурнать халь, — тетĕн, тĕрĕспе,
кур, мĕн чухлĕн хатĕр çаратма.
Çын тени çын мар халь тĕнчере.
Тен, эп хам та тахçанах çын мар?»

«Кам тăнлать халь, — тетĕн, — тепĕрне...»
Эп тăнларăм, куртăн пулĕ те?
Кам мĕнне калаймăп халь тӳрех,
эс камне калатăп: упăте.

*1975*

## ЛАЙĂХ ÇЫН

Усал çынсем тĕлне пуласран
сыхла теттĕм мана, талисман.
Усалсенче ырă шырамарăм,
талисман-çĕррĕме хывмарăм.

Ырăсенчех эпĕ ыр шырарăм,
хĕшпĕринче ăна тупмарăм.
Нумай-нумай çĕре эп çӳрерĕм,
санран лайăх çынсем курмарăм.

Ырă эсĕ ырă çынпала —
çурмалла мар, мĕнпур чунпала.
Лайăх эсĕ, анчах — шĕл-кăвар,
шĕл-кăвар пулин те ăссăр мар.

Никама та хальччен пуççапмарăн,
йывăр килсен пуçна усмарăн,
нумай-нумай çĕре эс çӳрерĕн,
аçу-аннӳ ятне ямарăн.

*1975*

## МАНĂН ÇĂЛТĂР

Ах, ĕмĕр, ылтăн ярапа.
Куллен ӳксе çĕтет пĕр ылтăн.
Иртет çак ĕмĕр юртăпа,
хыçран пăхса юлатăп хыттăн.

Ахаль-и утçăм кĕçенет,
ахрат тĕпне анасшăн мар вăл.
Ан ылхансамăр тĕнчене,
пурнăçăра та ан ылханăр.

Мĕн калăн ăнăçман ĕçе?
Сыв пул, теме кăна пултарăн.
Кĕçен, ыр утăмçăм, кĕçен,
чĕвен тăрса кĕçен, мăнтарăн.

Эп куç хупмастăп мĕн ирччен.
Каç айăплă-и хăй кĕскешĕн?
Çут çăлтăр тӳпере миçе?
Ман çăлтăр çунĕ хăçанччен-ши?

*1975*

## Ӳ П К Е В С Ӗ Р

Утпа, утпа тесе юрлатăп,
чăнахах-ши çынран юлатăп.
Утпа иртмест ĕмĕр, иртет машшинпа,
машшинпа та мар, ракетăпа.

Шурăмпуç шуралса килнĕ чух
чаршав карса чарнин усси çук.
Пурĕпĕрех килет шурăмпуç.
Пурĕпĕр ватăлать çамрăк пуç.

Ватăлать те пулать кăн-кăвак.
Ватăлăхран, яшлăх, ан кулах.
Иртет, иртет ĕмĕр, чарăнмасть.
Никамран та кулма юрамасть.

Хатĕр пулĕ такам тем пама,
пурпĕр иртет, иртет, тăхтамасть.
Иртен ĕмĕр ирттĕр, ма чарар,
ытах йăлăнма та кирлĕ мар.

*1975*

## ВАТ ÇЫН ЮРРИ

Ай-хай çил пăтранать, çил пăтранать,
хирти хурăнсене тапăнать.
Çамрăк вăхăтсене аса илсен,
ик куçăмран куççуль тăкăнать.

Ай-хай пĕлĕт юхать, пĕлĕт юхать,
йывăр тумлам пите çапăнать.
Пур курни-чăтнине аса илсен,
куç хуралса кăмăл пăтранать.

Çăвать кăна çумăр, çăвать çумăр,
эрнипе çусан та чарăнмĕ.
Иртет иккен яшлăх, çĕтет яшлăх,
йăваланса макăр — çаврăнмĕ.

Ай-хай çил пăтранать, çил пăтранать,
çилпе хурăн çулçи тăкăнать.
Халь çеç хама çамрăк теттĕмччĕ,
пăхăсăн — час кунçул татăлать.

*1975*

## ТУССЕМ ПАТĔНЧЕ

Саркайăксем ăçта юрлаççĕ?
Хурăнлăхра, Хусан çулĕ çинче.
Сениэльсем ăçта лараççĕ?
Акиверпе Айташ патĕнче.

Ылтăнĕ çук Мишшан, кĕмĕлĕ çук,
ĕнтĕ тусĕсене мĕн парать?
Çурри чунне çурса парĕччĕ,
çурри чунпа епле пурăнать?

Пусмĕччĕ вăл ярса кунталла,
пусмисем патиян йывăçĕ.
Килмĕччĕ те тусĕсем патне,
туссен чĕлхи — тĕнче ырлăхĕ.

Чӳрече тĕннинчен çил вĕрет,
ма хупмаççĕ — сунас пуçланать.
Мишшан, тусĕсенчен именсе,
çу пек çемçе чĕлхи çыхланать.

*1975*

## ШӐ́Т

Çӳлтеех вĕçекен тăрнисен
çĕлен çипрен çинçе мăйĕсем.
Хӳхĕм шерпет сыпнă йĕкĕтсен
панулмирен хĕрлĕ сăнĕсем.

Пĕлмен кĕпĕрнаттăр килессе,
кĕленчерен кĕпер хывас-мĕн.
Пĕлмен туссем çапла хĕрессе,
лимонад çеç лартса парас-мĕн.

*1975*

## МАЛАШНЕ ТЕ...

Антӑрах хӗвел, уйӑх пур,
ан кулян.
Ҫын хурлать тетне? Ҫирӗп пул,
ан хурлан.

Кам хурлать сана ҫав терех?
Турӑ мар.
Хӑй еплереххи витӗрех
курӑнать.

Ир те ҫи, тӑшман, каҫ та ҫи,
аппалан,
пулаймасть ҫапах иртесси
турӑран.

Пирӗн ҫамрӑк пуҫ ыр курма
ҫуралман,
хурланса та ларма
шутламан.

Малашне те, ҫӗнсе тӗрлӗрен
тӑшманне,
таптаса ҫӳрер пуҫӗсен
тӳпине.

*1975*

## КУНÇУЛ

Уйăхпала хĕвел хӳттинче
хуллен-хуллен иртет шур пĕлĕт.
Ырлăхпала хурлăх хушшинче
хуллен мĕскер иртет? Кам пĕлет?
Мĕскер иртсе мĕнле иртсен те,
кунçул ик хут килмест, тăвансем.
Кунçул чăнах ик хут килсессĕн,
пач вилмĕччĕç хăшпĕр этемсем.

*1975*

# РЕКВИЕМ

*Эрхип вилтӑпри ҫине*

1. Шӑпчӑксем юрлаҫҫӗ чак! тесе,
садсенчи ҫеҫкелӗхе кӗрсе.
Ӑш ҫунать, тӑванӑм, куҫ йӗрет,
пӗрле ӳснӗ тантӑша кӗтсе.

Пӗрле ӳснӗ тантӑш килес ҫук.
Килӗччӗ те, ҫук килмешкӗн ҫул.
Вӑл енчен ямаҫҫӗ каялла.
Мӑшкӑл тӳсрӗ тантӑш — ҫун ан ҫун.

Ир ҫухатрӗ ашшӗ-амӑшне,
курайманӑ нимӗн ыррине.
Вӑрҫӑ хыҫҫӑн ӳсрӗ, йывӑр чух,
хуҫӑлчӗ ҫитсе ҫын ҫуррине.

Шӑпчӑксем юрларӗҫ чак! тесе,
яш вӑхӑтсене асилтерсе.
Куҫ йӗрет, тӑванӑм, ӑш ҫунать,
пӗрле ӳснӗ тантӑш ҫук тесе...

2. Шур юр кӑна ҫӑвать,
шур юр ҫӑвать,
ҫырла ҫеҫки юрпа
хупланать.
Хупланмӗ вӑл, тухӗ
юр ирӗлсен.
Тухаймӑпӑр эпир
пӗр вилсен.

Улакайăк чĕппи
улăхра çук.
Ăçтан пултăр
шур юр çунă чух.
Ни ялта çук тантăш,
ни хулара,
тупайрас çук —
хăть ăçта шыра.

Манăн çиес килет
çĕр çырли.
Ĕмĕтĕме хуплать
юр çуни.
Манăн курас килет
çывăх туса —
хура тăпра тăрать
хупласа...

*1975*

## ĂС КИРЛĔ

Пирĕн çамрăк пуçра
миме пур,
тĕллĕн-тĕллĕн кăна
хывăх пур.

Пӳ-си пирĕн яштак,
сăн хитре,
тата мĕскер кирлĕ
халь пире?

Ут кирлĕ мар, туссем,
машшин пур.
Ют кирлĕ мар,
умра эсир пур.

Ут та кирлĕ пулĕ,
ют та кирлĕ.
Пуринчен те ытла
ăс кирлĕ.

Çĕр аллă пин сумлăх
ăсăра
ан хăвартăр çука
пыл-сăра.

Кĕçĕнрен пуçтарнă
çавă ăс,
шăтăк пуçран тухса,
пулĕ пăс.

Пур пек çук пек ăса
салатас мар,
атте-анне ятне
ярас мар.

*1975*

## ПАРАЛЛЕЛЬ

Тимĕр-бетон кĕпер, чул юпа,
çĕр машшин каçсан та авăнмĕ.
Çĕр машшин каçса та авăнманне
пĕр машшин каçнипе авăнмĕ.

Çакă çамрăк пуçпа, яш чунпа,
çĕр çын хурласан та хур пулмăп.
Çĕр çын хурласа та хур пулманне
пĕр çын хурланипе хур пулмăп.

*1975*

## ХУРЛАКАН

Вӗлтӗр кӑна вӗлтӗр ҫӳ́ҫӗм пур,
пӗрехмай хурлакан ҫыннӑм пур.
Ҫын хурлать те, ҫын хуррийӗ эп.
Шухӑшлап та, ыр ҫын ачиех.
Ӑҫта ҫитнӗ унта палласҫӗ,
куҫран пӑхса йӑл-йӑл куласҫӗ.
Пӗр ҫын хурлать пулин, ҫӗр ҫын мухтать.
Ҫамрӑк пуҫӑм, айван, епле чӑтать?
Йӑлтӑр кӑна йӑлтӑр куҫӑм пур,
пӗрехмай хурлакан ҫыннӑм пур.
Ҫын хурлать те, эпӗ — ҫын хурри.
Шухӑшлап та, манра мӗн ырри?

*1975*

## МАМАЛЕ

Тĕтĕм тухать шур пӳрт тăрринчен,
кайса çĕтет кăвак тӳпене.
Хамран начар çынран ят илтсен,
выртса йĕрес килет хăш чухне.

Ят та илтрĕм, илтрĕм йӳç элек.
Шанчĕç тĕрлĕрен кирлĕ мара.
Чунилли пекехчĕ мамеле,
тĕп тăвасшăнччĕ пурсăмăра.

Уншăн уяв — эпĕр макăрни.
Ылхан çиттĕр теттĕмĕр, ылхан.
Çич çул çирĕ пире чарăнми,
саккăрмĕшне тухрĕ çынлăхран.

Ăнланмасть-ха мĕскĕн халиччен:
кашкăр мар эс сикме çын çине —
этем тухать амăш варĕнчен,
кĕрсе выртать нӳрлĕ çĕр айне.

*1975*

* * *

Çынлăх çеç çынна çĕнетекен.
Тĕрĕслĕхпе тӳрĕлĕх, тасалăх
çылăха кĕмесĕр çӳрекен.
Çылăха кĕни — ялан усаллăх.
Çылăх турăн — тамăка лекен.
Тамăкран курнать-ши турă çĕрĕ?
Турă пулаять-ши чĕр шуйттан?
Вилĕ йытă пулаять-ши чĕрĕ?
Пулаять? Пулать? Епле? Ăçтан?
Ма ан пултăр... хытă тăрăшсан.

Мифсемпе кăна супмасть истори.
Чăнахах çуралчĕç тамăксем,
чăнласах пурнаççĕ шуйттансем.
Эп хамах мĕн чухлĕ куртăм турă,
йытă та эп куртăм, тăвансем.
Вилнĕскер, вăл чĕрĕлнĕ те чинлăн,
чĕрĕ пек вĕрет-çке çĕнĕрен.
Çын кăртарт-ха, тархаслатăп, чăнлăх.
Шăплансам, суймашкăн чĕнекен.
Эсĕ мар çынна çĕнетекен.

*1975*

## ПĔР ÇЫННА

Паттăрсем вилеççĕ ухмахла,
ухмахсем вилеççĕ паттăрла.

Эсĕ, паттăр мар та,
ухмахла вилмерĕн.
Эсĕ, ухмах мар та,
фронт мĕнне пĕлмерĕн.

Йĕп çăртийĕ витĕр
эс тухма пултартăн,
вилĕме çĕнмерĕн
вилĕмрен пытантăн.

Паттăрсенĕн ӳчĕ
тахçанах тăм пулнă.
Паттăрсем пуç хунă.
Эсĕ — сывă юлнă.

Мĕншĕн-ха çапах та
орденлă, миталлă?
Çĕнтермен пулин те,
çтан — çĕнтернĕ паллă?

Çтан паян эс паттăр?
Çамрăксем — пĕлмеççĕ.
Паттăрсем — пуç хунă.
Ыттисем — чĕнмеççĕ.

Пĕрре мар эс тухнă
йĕп çăртийĕ витĕр.
«Путмĕ те, путарĕ», —
шухăшлаççĕ питĕ.

Путнисем килмерĕç каялла,
килнисем час пулчĕç аяла...

*1975*

## ХАЯР ТАВĂРУ

Тăваткăл питлĕ эс, пĕвӳ те сан тăваткăл.
Тăван ялна манмастăн, килкелен.
Аçу-аннӳ ятне те астăватăн,
хăш чух çăва çине те кĕркелен.

Пурнан пĕр арăмпах, улăштарман,
ачусене те пăрахман, ӳстернĕ.
Чуну çапах йӳç шурлăх, сĕм вăрман,
пур пек вутне ача чухнех сӳнтернĕ.

Çынна çеç мар, хăвна те тепĕр чух
сутса яма пултарăн эс ултавлăн.
Тусна сутса пуласлăхна упрарăн,
тусу халь çук, юпи — çырууллă чул.

Кам сутнине вăл сиснĕ е сисмен?
Сиснех пулсан, сана начар пулатчĕ.
Тăван çĕре сутман эс, май килмен,
тылра эс пурăннă çисе кулачă.

Кулаччине çиетĕн халĕ те.
Хура вăлча, коньяк, банан усратăн.
Пĕччен эс çăвĕпе те хĕлĕпе.
Çук, пĕччен мар... леш тусупа ларатăн.

Сăмах чĕнмесĕр куçунтан пăхать:
ӳпкелемест, шанса пăхать йăвашшăн.
Курнакана сиресшĕн эс, манасшăн —
ĕçетĕн вăрттăн... вăл çаплах пăхать.

Кунсем-çĕрсем, çулсем шуса иртеççĕ.
Иртетĕн эс те, иртнĕн пур инкек.
Сана çынсем хисеплĕн ыр çын теççĕ —
чăнах иккен, чăнах та чăн иккен...

*1975*

## ПСИХОФАШИЗМ

Сăмахĕ çĕнĕ, ĕçĕ çĕнĕ мар.
Пăлхавлă чурана миçе çĕр çул
пăлхавшăн ăшаланă вут çинче.
Чиксе, пăвса, çакса та чарайман.
Тискеррĕн путарсассăн та тем чул,
пăлхав сӳнмен этем чун-чĕринче.

Канмасăр тăрăшнă чуниллисем.
Этем какайĕн çунăкĕ шăрши,
чĕр юн шăрши иртсе пĕтмен нихçан,
çапах та, пурпĕр, уйрăммăн илсен,
мĕнпур çынçиенрен сăххи — фашист,
çăхан куçне те чавакан çăхан.

Фашизмран этемлĕх пĕтесрен,
ытла çăткăнскере хăйнех çăтма
пуçлаççĕ те, вăл пытанать, тарать,
тĕсне улăштарать çав фашистах тесрен.
Вăл халь — психофашист.
Контроллеме çынна
çĕнрен те çĕнĕ ирсĕр мел шырать.

Çак тĕнчере ун çеç пуç пулмалла.
Вăйпа е ултавпа пăхăнтарса,
çынна чĕтретмелле. Чĕтремесен,
çут скальпельпе миме юсамалла.
Пуçа пăсса чуна тăпăлтарсан,
кирлех те мар-мĕн крематорисем.

Пурнать виле. Аван ку, тупата.
Пулать капла кирек мĕскер хушма,
йăвашлатса мăнаç паттăрсене.
Пăлхавлă паттăрсем! Астăвăр çак мĕнне,
ан парăнăр хăрушă фашиста,
ан парăр пуçăн мимине пăсма
суялăхпа тискерлĕх скальпельне!

*1975*

## ШУПАШКАРÇУМ ПОСЕЛОКРА

Чăваш пĕтет тесе калаççĕ
вырăссем мар, чăвашсемех.
Вырăсланать иккен тинех.
Вырăслатмашкăн тăрăшаççĕ
ачисене амăшсемех.
Ман кӳршĕ, эп пырсан, манпа та,
манпа, чăваш поэчĕпе,
вырăсла çеç пуплет. Унта та
хуллен çеç вăрттăн чĕпĕтет:
«Ан калаçсамччĕ чăвашла,
атьсем манаççĕ вырăсла».

Пурнатăп эп, куратăп эпĕ
Шупашкарçум поселокра:
пĕр тăхăрвун процент пуль тетĕп
чăваш çӳрет, анчах пĕлетĕп —
чăваш чĕлхи кунта çукрах.
Пурри вăл пур та, калаçмаççĕ.
Калаçтармаççĕ ачисем,
вăрçсах амăшсене чараççĕ.
Малтан — чаратчĕç амăшсем.
Ӳссе çын пулччăрччĕ теетчĕç,
тӳрех вĕренччĕр вырăсла.
Пепкисенчен çунса кĕтетчĕç
ӳссессĕн тухасса асла.
Асла пĕри те тухаймарĕ, —
пуç çукран мар, чĕри çукран, —
чăваш чĕриллĕ пулаймарĕ,
илме пĕлмерĕ вырăсран.

Курсамăр, ав, манкаллă икĕ
чăваш чĕппи лĕпĕртетет,
пĕрне-пĕри хăртать те чиксĕр,
тăрăхласа «чувашин» тет.
Çапла хăçан калана вырăс
историре пĕрне-пĕри?
Чăваш ачи! Ан пул эс вăрă,
чĕлхе вăрри те чун вăрри.
Сăмахĕ вырăсла пулни
вăл чĕлхех мар-ха, чухăн, типĕ
сăмах пуххи кăна. Вăл питĕ
вырăсла мар — эс калаçни.
Ăна эс илтнĕ чăвашран
килте, шкулта та урамра.
Чăн вырăсран илтсен пит ырă
пулатчĕ те, сахал-çке вырăс
Шупашкарçум поселокра.
Тен, телевизор, кĕнеке
сана çын тăвĕ? Тăваять-ши?
Хăвна эс вырăс пек туясшăн,
вилсен те — вырăс тенĕ пек.
Хăпма эс хăпнă чăвашран,
вырăс çумне çыпăçайман.
Аннӳ — чăваш, аçу — чăваш,
тĕпӳ-йăху чăваш сан пулнă,
епле-ха, пĕлĕшĕм, юлташ,
аннӳ чĕлхи çине ал сулăн,
аçу чăвашшинчен те кулăн?

Вĕсем çуралнă чăвашла,
ӳсме те ӳснĕ чăвашла,

юратнă-çуннă чăвашла,
сана çуратнă чăвашла,
анчах... анчах пăхса ӳстернĕ
ни чăвашла, ни вырăсла.
Яшка пĕçернĕ, тĕр тĕрленĕ,
сăпка сиктернĕ, ĕнĕрленĕ
мĕнле? Мур тем-и? Чăвашла.
Эппин эс те юрла-ташла,
ĕçле, кĕреш, çĕнтер, çĕнтернĕн
аçу таçта та — чăвашла.
Чăваш эс, халăху чăваш,
культури пур, истори, несĕл,
ун чунĕ пур, ăнлан та эсĕ,
чăваш ачи, пулсам чăваш,
вара вырăспала туслаш,
вĕрен чăваш культурине,
ил вырăсран чи ыррине,
ытти халăхсене юрат,
çӳре, туслаш та тăванлаш,
ан пул ниçта тăлăх-турат,
танлаш, çут тĕнчепе танлаш!

...Пĕлетпĕр, пур ассимиляци,
çапах упрар-ха халăха,
упрамасан юлатпăр ятсăр,
тен, кам пĕлет, яланлăха.

*1975*

## ТУКАЙ

Тутар пур чухне эсӗ пур, эс сывах.
Чӑваш асӗнче те пурнан яланах.
Тукай! Ҫиҫӗмле ҫиҫсе иртрӗн, ҫунса,
чӑна мухтаса, суяна ылханса.

Шӑпу, хуйхӑртса, чӗрене каскалать.
Юрру ҫулран-ҫул чаплӑрах янӑрать.
Чӗр мӑшкӑл тӳссе, ырӑ кун эс курман;
тусран ытларах пулнӑ санӑн тӑшман.

Кашни шӑл хӑйранӑ, кулса-йӗплесе.
Сана хӗрупраҫ юратман епресе.
Чи шанчӑклӑ та сивӗнми чун савни
вӑл Тӗрӗслӗх пулнӑ, — чӑнни, чӑн-чӑнни.

Пӗҫертнӗ сӑмах тӗрлӗрен йӑх-яха,
сип кӳнӗ куллен пусмӑрти халӑха.
Ҫав тӗрӗслӗхпе халӑх пухнӑ вӑй-хал.
Ҫав тӗрӗслӗх пек эсӗ вилӗмсӗр халь.
Ҫав тӗрӗслӗх халь чи малта тӗнчере.
Эс, унӑн хуҫи, ӗмӗрех чӗрере.

Сана пур тӗнче асӑнать ырӑпа.
Чӑваш та мухтать ытарми юрӑпа.
Ытти халӑхсем те, мӗнпур ҫӗршывпех,
сана йышӑнаҫҫӗ, хӑйсен ачи пек!

*1975*

## АЧАСЕМ

Çăлтăр ушкăнь — ачасем,
чĕререн калатăп эпĕ,
ĕмĕр чечекленччĕр тетĕп,
куç илми пăхас тесен.

Пирĕн шанчăк — ачасем,
çĕкленсе калатăп эпĕ,
ачасем сыв ӳсчĕр тетĕп,
уссине курас тесен.

Пирĕн шиклĕх — ачасем,
çепĕççĕн калатăп эпĕ.
(Хĕвелте лараççĕ ретĕн,
килсене кайман вĕсем).

Ашшĕсем те амăшсем,
бомба çĕр çинче тĕп пултăр,
еплерех пăхаççĕ, курăр,
шăпăртланнă ачăрсем...

*1975*

# 1976

* * *

Вил çынна вилнишĕн ӳпкелеймĕн,
йĕксĕккишĕн ӳпкелеймĕн йĕксĕке.
Вилĕ çын та, йĕксĕк те телейлĕ:
пĕлеймест — те вилĕ вилнĕскер,
ăнланмасть — те йĕксĕк йĕксĕкскер.
Вилене ӳпкевсĕр пытарар та,
«тĕп пулах» теер леш йĕксĕке:
ӳпкелеймĕ, ывăнчĕ пуль, кантăр
çын çисе нихçан тăранманскер,
çав майпа пĕр канăç курманскер...

*1976*

## **МĂККА**

Мăкка мăка. Çак пуçлăха
каллех тăват çулталăка
пĕр кашкăрпа юлташлипе
суйларĕç тахăш хушнипе.

Каллех, сĕтел шакка-шакка,
таса пуçрах шырать шăрка.
Каллех мăнаçлăн вĕрентет:
«Хальччен пĕлмен-тĕк, пĕлĕр», — тет.

Мăкка тискер. Ун чунĕ çук.
Кун кăтартмасть шăп вунă çул.
Çуралнăскер чуна илме,
пачах пĕлмест вăл хĕрхенме.

Ним калама хăрамалла —
йăлтах ăнланĕ урăхла.
Чисти шуйттан мăка Мăкка.
Мур та хырмасть ăçтиçука.

*1976*

* * *

Хĕçпăшалу мĕн пулнă — эп ыйтмастăп.
Çур ĕмĕр иртнĕ, эсĕ çав-çавах
çӳлте çӳрен. Вуншар талантлă маçтăр
сумсăрлăхра е вилĕ тахçанах.

Талантлă чунилли! Талантсăр литератор!
Мĕнле майпа, çур ĕмĕр таптаса,
эс хăв таптанманне аван чухлатпăр:
эс шит чакман, пĕр вĕçсĕр тапăнса.

Эс пурăннă пĕрре те йăл кулмасăр.
Пигмей титан пуласшăн çуннă чух,
сисмест те, пăрахать этем пулмашкăн.
Кулли çук пек, куççуль те унăн çук.

Хаяр кĕвĕçӳре ун чунĕ типнĕ...
Ун çук, чун типнĕскерĕн, хĕрхенӳ.
Хĕрхевсĕрскерĕн туйăм çук, вăл вилнĕ.
Вил туйăмăн çук шухăш, ӳкĕнӳ.

Çур ĕмĕр çынна мар, хăвна пĕтернĕ эсĕ.
Хаярлăхăн вăйне пĕртен-пĕр вăй туса,
ытти пур пек вăюсене шеллевсĕр
тĕп тунă, тек титанлăхшăн çунса.

Ан тив, сан аллă том. Мĕне пĕлтерĕ çакă.
Салхуллăн эс пăхатăн куçăмран.
Сана вăрçатăп, хама хам вăрçатăп,
çапах сивĕнейместĕп эп санран.

*1976*

## КУНÇУЛ ТĂМХИ

Эпир расна ик саслă.
Манпа эс тантăш мар,
ик хут манран эс аслă,
хисеплĕ тус-тăшман.

Сассу суя сан пулнă
мĕн ĕмĕр тăршшĕпе,
йĕрес чухне эс кулнă
ултавлăх хушнипе.

Халичченех хушать вăл.
Пултарăн-ши çĕнме?
Халь тин сана кам шанĕ
мĕн ĕмĕр шанманне?

Пире курсассăн, вут пек
эс çунмалла шалта.
Шăпа пек, приговор пек
тăратпăр умăнта.

Çунатăн, систерместĕн.
Çапать кунçул тăмха.
«Хăçан каян» теместĕп.
Тин çуралатăн-ха.

Ĕмĕрĕме пурнасчĕ
чĕре мĕн хушнă пек,
пурнаймасан калаччăр
«хăçан кăнать» тесех.

Пурнаймăпăр уявлăн
ик ĕмĕр ниепле:
пĕр ĕмĕрне — ултавлă,
тӳп-тӳрĕ — тепĕрне.

*1976*

## ТРАКТОР ТЕТПĔР...

Кам пĕлмест мĕнле пулнă авал...
Тарăхса ĕçлени-и аван
е урра кăшкăрса ĕçлени?
Ĕç пурне те туптать те авать.
Тăрăшулăх ыйтать ĕç тени,
килĕшӳлĕх ыйтать. Чăтăмли,
кам ĕçчен, çав тухать мухтава.

Тăрăшса ĕçлеме, шăл çыртма
мĕн хушать? Ах, çавна сăнама
хăш чух вăхăт çукрах. Танк айне
тăван çĕрĕн таса ячĕпе ыткăнма,
кăшкăрса-мĕкĕрсе тăшмана аркатма
Ирĕклĕх вăрçинче çынна мĕн хушнине
юрамасть,
юрамасть,
юрамасть-ха манма.

Трактор тетпĕр... Пулать, ма пулмасть?
Трактор вăйĕпеле чун вăйне юрамасть
тан туса вăрçтарма, тракторне
этемрен ирттерсе ытларах чыслама.
Трактора тракторшăн туптаман.
Çук, манмастпăр нихçан — мĕншĕнне:
Ирĕклĕх танк çунни кăна мар
икkенне...

*1976*

## ÇĔР ЧУНĔ

Эп пурриех вăл ырлăх. Курăк пек ӳсни.
Çилпе çунатлланса лĕп çумăрпа çуни
пĕве-сие. Çурхи хĕвел ачашшăн
пусран савать. Çĕрте — сĕткен. Тавра — уяв ĕшни.
Манпа тавралăх ăшшăн калаçасшăн.

Кашни сасса илтсе, кашни тĕсе курса,
ӳсесшĕн хам та. Çĕр тăрать парса
вăйне-халне. Ӳсетĕп те ӳсетĕп.
Эп пур. Аван. Паха. Анчах сисетĕп:
эп чунсăр, сасăсăр. Шырап чуна, сасса.

Шăтичченех хӳтлевсĕрскер, шăтсан,
Çĕр типесрен, вăл пĕтесрен хăрасчĕ ман.
Кайран кăна хам пĕтесрен хăрасчĕ.
Вил çын та илтмелле хаяррăн кăшкăрасчĕ
тĕнчешĕн сехĕрленнĕ пур чунран.

Эй, сасă, — ирĕк, уçă, аслă сасă, —
Çĕр чунĕ ахлатни эс пулмалла.
Эп Курăк, Çĕр, Хĕвел, Этем пулсассăн,
кăшкăрура ман сас çĕтсе кайсассăн,
сан, Çĕр, чĕрӳ çапла кăшкăрмалла.

*1976*

## ПУРРИ

Кашниех, çуралтăн-тăк, вилетĕн.
Приговорĕ пулнă, пур, пулать —
тĕнчене çуралнăшăн тӳлетĕн
тĕрĕс хак: хăв пурнăçна. Пĕлетĕн,
çакă вăл пит ăслă япала.

Çутăран пулса, пулсам эс çутă.
Йышăнма пултарччĕ хĕвеле
мимери, нерври, юнри кашни тĕле, —
ăшă пултăр, лăпкă, сиплĕ пултăр,
ӳт те, чун та талпăнтăр çӳле.

Çӳллĕ чун хĕвелпеле танлашĕ!
Чир-и, мĕн-и, ватлăх-и унта
шăпуна татмашкăн каварлашĕ —
сехĕрленмĕн: чупмăн тавăрасшăн
хăвну ху — каясскерне; тăн-тан
анраса та янраса çӳремĕн;
пĕр кулса, пĕр макăрса шеллемĕн
ылтăн пек пуçна; ылханмăн пурнăçа;
çаратас-асас та, çын çиес те темĕн —
пур хуйху та тухĕ манăçа.
Çеçпĕл эс. Йăху çинчен çеç шутлăн.
Çĕр, Хĕвел пурри — йăху пурри.
Йăх пуртан — эс пур, татах та пулăн,
ху, Хĕвел пулса, Çĕре упрасшăн çунăн.
Сывлăш, Пурнăç пулĕ — чун юрри!

Çĕр яланлăх мар, Тĕнче пурри —
иксĕлми матери — абсолютлă.
П у р ă н малашра та тĕл-йĕрри
п у р , — тĕтреллĕ, тĕксĕм, хутлă-хутлă
халлĕхе курнин те çав тери.

Çавăнпа та — Пуррине мухтар-ха.
Уçлăхра çухалмăпăр, чăнах.
Пурнăç пур. Савни. Туссем. Савар-ха.
Çуклăх пур. Чăрмав. Тăшман. Таптар-ха.
Çӳлĕрен çӳле çĕклер чуна!

*1976*

## ÇĂЛТĂР ÇУТИНЧЕ

Пĕртен-пĕр çăлтăр çутинче,
çыранĕпе те пуль пĕртен-пĕр,
тăратăп çур çĕр тĕлĕнче.
Шутлатăп эп: пурте пĕтетпĕр.

Пĕтетпĕр, — тинĕс те этем —
пăса та тăпрана куçатпăр,
пĕтессине сиссе уратпăр,
каятпăр кăтăрса çавтер.

Хура тĕттĕмлĕхри шух тинĕс,
тухса таратăн çырантан,
патак-çатак та курăк-тирĕс
килсе çапатăн, ывăтан.

Урхамахсем çие кĕреççĕ —
епле юлас-ши пăрăнса?
шур çилхисем çилпе вĕçеççĕ,
асилтереççĕ парăса.

Хăлха та, пуç та — аслатиллĕ.
Кама кĕтетĕп тинĕсрен?
Ан кĕт, килсен те парăс килмĕ,
пурте хăраççĕ пĕтесрен.

Кĕçех виле тухса выртассăн,
шăла çыртатăп çӳçенсе.
Вăл эп иккен. Йăтса илсе,
килет тинĕселле утассăм.

Путмасăр, эп инçе-инçе,
Христос пек, утăп, утăп, утăп,
путма та вăл путсан çеç путăп
пĕртен-пĕр çăлтăр çутинче.

*1976*

* * *

Ах, ах! тетĕп эпĕ, асăнатăп,
сана пĕр курасшăн çунатăп,
куриччен курасшăн эп çунатăп,
курсан — ним калама аптăратăп.

Мĕн вăл леш тĕнче те ку тĕнче?
Тусăм, пĕр вилсессĕн пурăнмастпăр.
Çитрĕмĕр пулать-и çитĕнсе,
чун уçма пачах та юратмастпăр.

Сивĕ — юратмастпăр юратма.
Тахçанахчĕ, такамаччĕ, савнă пекчĕ.
Халĕ темшĕн тăрăшатпăр юрама.
Юраймастпăр. Кӳренеççĕ. Сивĕнеççĕ.

Чун улать. Пул, тусăм, çак юпа.
Юрататни, юратмастни, тăр, ан кай эс.
Чун уçас килет ман, çавăнпа
тăнласам тусна кулмасăр, лайăх.

Шанчăклă пулар-и, йӳплешке,
ачалла шанар-и, юратар-и?
Эп вилсен, ан юл, пыр ман ĕçке,
эс вилсен, эп пырăп. Йăлăнтармăп.

Ах, ах! темĕп, эс те ах, ах! темĕн,
пĕр вилсен мĕн ахлатни — илтеймĕп,
куриччен курасшăн эп çунаймăп
курсан — ним калама аптăраймăп.

*1976*

## КУПЕ

Сентрере хартлатать ултă пăтлă сысна.
Эп, таппа лекнĕскер, çатмара ăшаланнăн,
улт сехет сыснана шухăшлатăп пусма;
сехетрен-пĕр тăрса шыв ĕçетĕп — ăш кантăр, —
куперех, тĕттĕмре, тапрататăп утма.
Мĕн тăвас? Миçе каç çывăрман. Хăçан çитĕп?
Сыснана калани — стенана калани.
Çывăртмасăр ыйтса тĕпчени çăмăл форма теç питĕ,
йывăр форма мĕнле, еплерех тĕпчени?
Тĕпчемеççĕ мана. Хартлатать çеç хăрушшăн,
килтерсе кустăрма кĕмсĕртетнĕ саспа,
иртнĕ куншăн, хальхи е çĕн куншăн
хартлатать паттăрла — ултă пăтлă сысна.

*1976*

## МОННА ЛИЗА

Да Винчи, ахальтен-и, хăй ӳкернĕскер,
ăна çынран çеç мар, хăй куçĕнчен пытарнă.
Çĕнетнĕçем, чĕрĕленсе, портрет вуншар тĕспе
чуна кисретмелле пăха пуçланă.

Хăруш вăрттăнлăха — мĕн чухлĕ çын вĕлернĕ,
мĕн чул çаратнă — чăн е шухăшра , —
мĕн чул эс тунă ыр ĕç е ирсĕрленнĕ, —
эс ху мансан та, веç курса тăрать.

Пăхать те сан çине, эс чĕтреве еретĕн,
кашни хусканăву аса килет.
Шеллет те вăл сана, хыт ӳпкелет те,
савать те — аннелле те савнилле.

Унран эс нимĕн пытараймăн, нимĕн! —
чунна касать синкерлĕ çынлăхпа.
Суда чĕнмест. Унта хăвах эс килĕн,
хăвна хăвах эс айăплăн судпа.

*1976*

## ЧӐВАШ АМӐШӖ

Ҫӗр ҫине тӳперен ҫумӑр евӗр ҫӑваҫҫӗ
ҫутӑ пайӑркисем.
Юнпа сывлӑш пӗрлешнӗ тӗлте палӑраҫҫӗ
аннесен сӑнӗсем.

Пиншер ҫул вӗҫсе иртнӗ; ҫулсем тӗлӗнеҫҫӗ:
уямасӑр ниме,
сӳрӗлмест-ҫухалмасть, ҫав-ҫавах илтӗнет-ха
«паппине-нянине!»

Ахаль чух-и, туйра-и, ӗҫре-вӑрҫӑра-и,
сывӑ чух, чирлӗ чух;
тӗлӗкре е янк уҫӑ куҫпах ҫывӑратӑн,
е умра йывӑр ҫул,

аннесен кӑвар пек кӗллисен пӗр пӗлтерӗш,
йӑлӑнни те пӗрре:
— Ырӑ пӳлӗх, айван ачасемӗр йӳтерӗҫ,
сыхласам пурпӗрех.

Халь ниҫта та ним пӳлӗх те ҫук, пушӑ ӗмӗт —
йӑлӑнса ыйтнисем.
Ӗмӗрхи нянькка эс, Чӑваш Амӑшӗ, ӗмӗр
пурӑнсам, ан вилсем.

*1976*

## ÇĔР ÇИНЧЕ

Сасăпа шăплăх,
çутăпа тĕттĕм,
пурнăçпа вилĕм чикки.
Эсĕ çав чикĕре
чи пысăк хĕрӳлĕх вăйне чăтаймасăр,
куçа курăнми çунса-тĕпренсе-саланса каясла,
чан çапатăн —
çынсем çĕр çинче çынла çеç выляни,
çынла выляма пăрахсан, пĕр-пĕрне
паллами те
пулни
çинчен.

Аннӳ вилнĕ чух эс турра илтнĕ пуль,
эс турра куçнă пулĕ.
Атеист чунлĕ турă,
эс пурне те куратăн —
чун тĕпĕпе,
ăс тĕпĕпе.

Куç çути, сас çути, чун çути
шăплăхăн çутинче
тархаслаççĕ пире çĕкленмешкĕн
чунăн чи çӳл шайне.

Сывлăшпа çутăран çеç пуль эс, çук пуль эс, —
турă сывлăшĕ.
Сана хăвалатпăр тăван çĕрсенчен,
ылханса мăшкăллатпăр.

Ан каçартăр пире нихăçан
куççулӳ —
оксюморон...

*1976*

## ЧУН

Шанчăк, эс сăрт мар, ан ван, ан ишĕл.
Хăшĕсем пиртен кăшт кулĕçин,
шăппăн савăнар-ха чун пурришĕн —
чунлă çын çапах та чунлă çын.

Шăппăн шухăшлар-ха. Эс ан тĕлĕн:
чун тенийĕн палăрăм нумай.
чун пулать тееççĕ хĕрĕх тĕрлĕ.
Хĕрĕх тĕрлĕ çеç-ши? Çук. Ай-хай!

Палăрăмăн тĕсĕ йышлă питĕ.
Кашни тĕс çĕр тĕрлĕ ялтрасан —
электрон шутлавĕн машини те
кăлараймĕ, тусăм, шутласа.

Ялтăрать кăна-и чун, янрать те!
Чун пурнать-тĕк çын та пурăнать.
Чунлă çын йăваш, хастар та паттăр.
ăна çеç пур йĕксĕк парăнать.

Чунăн тĕрлĕ кăлтăк пур, пытармăп.
Хăшĕ — сивĕ, хăшĕ — тарăн мар,
хăшĕ — вилĕ... Каласан хатарлă,
чун вилсен кирлех-ши пурăнма?

*1976*

## ЫР ÇЫН

Ырă усала, усал ырра
куçнине эпир сахал-и курнă?
Лайăх тенĕ чун туртман юррах;
йĕнĕ савăнăçлăн, кулнă хурлăн.

Ма апла-тăк эсĕ тĕлĕнен
Ыр çынах сана усал суннишĕн.
Туйнинчен кăшт çӳлерех çĕклен,
ан пулсам ытла аманчăк, нишлĕ.

Тĕп хуçа чун мар çапах та — пуç.
Е эс пуççăр-и? Ах, тусăм, тусăм.
Хупă куç эс. Уç ăна эс, уç.
Çĕтнĕ. Курăнмастăн. Таврăн. Тупăн.

Кам эпир кунçул танатинче?
Питĕ тĕплĕн хăй кунçул çеç калĕ.
Çуралман эпир — çураличчен,
пурăнман — пурăниччен, йăлт паллă.

Çын ырри ăçтан курнать, пăхсан?
Те кулса, те чăн каланă тахăш:
ыр çынах çынна усал сунсан,
вĕсенчен пĕри — çын мар, тухатмăш.

Улшăннă сан, тусăм, ыр çынну.
Пултăр. Кулянса пуçна ан çĕмĕр.
Лăпкă тăтăр кивелми чуну.
Ху та, чун пекех, пул лăпкă, çĕнĕ...

*1976*

## ВĂТ, ТИЛÇЕ!

Эй, тĕнче —
суккăрсем çĕр çухрăмран кураççĕ,
уксахсем пиртен малта пыраççĕ.
Эй, тĕнче.

Ну, тĕнче —
илтмен çын илтет маттур тесессĕн,
яшланать ватти пике иртсессĕн.
Ну, тĕнче.

Ай, тĕнче —
аскăнсем сăпайлăха мухтаççĕ,
путсĕрсем путлисене хăртаççĕ.
Ай, тĕнче.

Эх, тĕнче —
ӳсĕрсем уррисене вăрçаççĕ,
ухмахсем ăслисене тыллаççĕ.
Эх, тĕнче.

Вăт, тĕнче —
пуççăрсем пуç шучĕпе пурнаççĕ,
чунсăрсем тек чун çинчен павраççĕ;
Вăт, тилçе!

*1976*

* * *

Пурăнăç çапах та
хыткан мар халь, самăр.
Пурнăç аванланчĕ,
мĕнлерех-ши хамăр?

Ĕçлесессĕн лайăх,
кăшт канма та сĕнĕç.
Хуйхă çук та, суйхă
хăратать-и, мĕн эс?

Турă çук тесе пуль,
çылăха пĕлместпĕр,
пурăнатпăр чыссăр,
çын ретне кĕместпĕр.

Çăтмаха шанмасăр,
тамăкран кулатпăр,
çĕр çинчех çăтмах та,
тамăк та тăватпăр.

Ĕненӳ халь çĕтĕк,
саплăк çине саплăк.
Чунăмăр — пĕрех-çке,
чунăмăр — асаплă.

Пылчăка хуракăш
путнă — çăвăнасшăн.
Йывăр ăна, йывăр,
йывăр. Çăлăнасшăн.

Вĕçеймест мăнтарăн —
кам ăна путармĕ,
кам ăна хĕрхенĕ,
кам ăна хăтарĕ?

*1976*

## АН ИККĔЛЕН

Тĕнче пĕтмест, эс ан иккĕленсем...
Пурĕпĕрех, тĕнче пĕтет тесен,
чун хусканать, сăр-сăрлатать сивлеккĕн.
Эпир, паллах, пăхатпăр шӳтлеме,
сивлетпĕр тĕлĕнтермĕш этеме,
пӳртре утса çӳренĕ май тӳлеккĕн.

Хăшпĕрисен тĕп ĕçĕ — сивлесси.
Кăткăсах мар çак ĕç, мĕн каласси.
Ансатлăха саваççĕ — ман хăраххăм.
Тĕнче чăнах пĕтессĕн тăнă чух
хусканнă чун шӳтпе лăпланас çук,
лăпланчĕ-тĕк эп çын пулма пăрахрăм.

*1976*

## АННЕМЕ

Ачусем вулаççĕ,
эс кулянса итлетĕн.
Миçе поэта çын влаçĕ
тĕп тунă — пĕлетĕн.

Пусмăртисен хавалĕ
вут сăмахпа çĕкленнĕ.
Поэтсенчен хăранă,
поэтсене йĕрленĕ.

Поэтсенче ялтранă
Ирĕклĕхĕн илемĕ.
Поэтсене пуç янă,
поэтсене вĕлернĕ.

Ма сана вăл çывăх
çакă ыйту? Калаччĕ.
Ма тесен — çич ывăл,
виççĕшĕ — çыркалаççĕ.

Ма тесен хуть хăçан та
поэтсене хĕсĕрлеççĕ.
Вĕсем хальччен, тур каçартăр,
ыр вилĕмпе вилмеççĕ.

Эп — сăвăçă — пурнатăп —
нимле инкек курмасăр.
Поэтсене... вĕлереççĕ.
Эп поэт мар, аннеçĕм.

*1976*

## ФАУСТ

Чуна сутмасăр шуйттана
эп пурăнтăм, телей пулмарĕ.
Шуралчĕ çӳç, чун шуйханать,
пурăнасси нумай юлмарĕ.

Чуна сутмасăр шуйттана
эп вилĕп тенĕччĕ, пулмарĕ.
Нумай тивмерĕ шутлама —
хуйханнă чунăм чăтаймарĕ.

Чуна сутсассăн шуйттана,
телей тени пушшех пулмарĕ.
Ытла та намăс туйăнать:
ман чун — суту-илӳ таварĕ.

Чуна сутсассăн шуйттана,
тек сутмалли те ним юлмарĕ.
Йӳне-и патăм эп ăна?
Çапах телей илсе пулмарĕ...

*1976*

## ÇĂЛНĂÇ — РОССИЯ

Çил, шыв, çутă хайлавĕ
ирĕклĕ, иксĕлми.
Ун пĕр пайĕ пуль сăвăç;
чунĕ — вут, тăранми.

Чиксĕр аслă та тулăх...
Çĕр те пай çеç ара.
Эй, Çĕр амăш, матери,
пурте пулнă санран.

Ăслă пахалăхлă пурте —
вĕçĕмсĕр улшăну.
Тытăм-йĕрке ĕмĕр çавă —
кирлĕ мар ним шыру.

Ĕнтĕ вăхăт, ак, çитрĕ,
хĕсĕк, тачă вăл, ав,
космос вăйĕсем пек халь
çуклăх, чăнлăх, ултав.

Пĕтрĕмĕр пулĕ, пĕтетпĕр,
эс, чăн çын, ăçтарах?
Туй-ха, пур бомбăран та
вилĕ чун нумайрах.

Хĕвеле сӳнтересшĕн.
Мĕн хушать сӳнтерме?
Космос тĕттĕмĕ хуплĕ
ку майпа çĕрĕме.

Чӑнлӑх хӗмлӗ, хӗвеллӗ
ҫын та пур Раҫҫейре.
Аслӑ Пӗрлӗхшӗн тӑрӗҫ,
туслашса ӗмӗре.

Шанчӑк ҫукки — вил чунлӑх.
Ҫӗрӗм, ӑстӑн ӳстер.
Ҫӑлнӑҫ — Россия. Шанатӑп.
Сӑвӑҫ, ҫӑлнӑҫ эс те.

Эй, юнавлӑ пуласлӑх!
Эй, матери вӑйӑи!
...Ҫук, ӑнланмӗ-тӗр, ҫук-тӑр,
выҫ йытта тутӑ йыт.

*1976*

# ЮЛАШКИ ЮМАХ

*Поэма*

Пăхан кӳреннĕ ача пек.
Ӳкерчĕкре те эс чĕп-чĕрĕ.
Чунсем пĕрлешнĕ ячĕпе
парнелеймерĕм ылтăн çĕрĕ.

Чуптăваймарăм. Ан вăтан.
Çулсемваскарĕç, иртрĕ вăхăт.
Çапах та эсĕ манăçман,
манăçман пек ман пĕтĕм тăхăм.

Илсе çӳретĕп хампала,
тутунтанах халь чуптăватăп.
Аюх! тесе эс ан кала —
хальччен сана савса мухтатăп.

Хальччен янрать сассу чунра,
ăна типсе хăрма памасăр, —
ман юлашки юратура —
пĕтсе лармасăр, ылханмасăр.

Усал вăл эп çынна савни,
пурах унта эсрел хăвачĕ.
Тен, пурнăçна çăлса хăварчĕ
ун чух сана чуптуманни...

*Шăпланчĕ Прага ĕнтрĕкре.*
Р.М. Рильке

1. Карл Кĕперĕн карлăкĕ пит капăр,
сыпăкран-пĕр — палăк хуралта.

Шухăшра çеç санпала утатпăр,
чăннипе — эп пĕчченех кунта.

Тĕлĕрсе юхать асамлă Влтава.
Шăппăн куç хĕсеççĕ çутисем.
Юлашки юмахăмçăм, ултавăм,
Прага хĕрĕ, эс те тĕлĕрсем.

Тĕлĕкре мана курас тееймĕн —
манран мар хĕрелтĕн вăтанса.
Мĕн тери çут куçусем телейлĕ,
мĕн тери именчĕк те таса.

Пирвайхи тĕспе çиçсе вылятăн.
саншăн пурнăç — савăнăç, уяв.
Пуç тавра шутларăм та кулянтăм:
мĕн тери иккен шăпам хаяр.

Малтанах — чăн чĕрĕлтĕм, вĕрерĕм;
лăпланса пусарăнтăм унтан.
малтанах — ăсран каяп пуль терĕм,
пăхрăм та, юмах-мĕн çак, ултав.

Вилес умĕн сывлăх лайăхланнăн,
юлашки кĕрлерĕ пуль чĕре.
Çывăр, Анна, тутлă çывăр, Анна,
тĕлĕкре те уяврах çӳре.

2. Темĕн те пур Ылтăн Прагăра.
Юрлакан фонтан, курант, корона.
Çич çăра коронăна упрать.
Пĕр рубинĕ ун вуншар пин крон-мĕн.

Пур Градчаны тенĕ вырăн, Витков сăрчĕ,
тĕрлĕрен кермен те замок, пантеон.
Пур улах та лăпкă хăна çурчĕ.
Шыв çинче вăл, «Рацек» ячĕ ун.

Уйăх çутинче çынсем мăкăртатаççĕ,
кайăк кăвакалĕ нартлатать,
пулăсем пире курма тухаççĕ,
тăрăх та пăхаççĕ, урлă та.

Шыв çинче хуçкаланать мĕлкемĕр.
Темĕн те пур ман астумалли.
Чи хакли çапах та м ĕ н? Пĕлетĕн:
эсĕ, тусăм, эсĕ — чи хакли.

3. Пилĕк сăрт çинчи
пыллăхри хула,
килти пек туяп,
чăт, ан хăвала.
Пилĕк сăввăмра
киленсе пиллем
сывлăх, пархатар,
иксĕлми илем.

Сăруна ĕçсе
маттурлантăм эп.
Пикӳне курса
çамрăклантăм эп.
Илĕртет сăра
шур кăпăкĕпе.
Ӳсĕртет пике
йăл-йăл куллипе.

Шуранка çӳреп
шухă пуçăмпа.
Сасăсăр йĕреп
хурлă куçăмпа.
Пĕлейместĕп-и
тĕлĕ-йĕркине,
мĕн чарать ĕçме
савăш куркине?

4. Европа варринче çухалчĕ манăн канăç:
мĕскер çитмест миллиардер çынна,
ма вăрçăшăн çунать? Ма çуратмасть-ха Анăç
хитре хĕрсем, чăн поэтсем кăна?

Ăçта чун çӳллĕшĕ? Эс ăслă хĕр, тăванăм.
Куçусенче илемлĕ шухăш сан.
Чун-чĕрӳнти капланнă туйăм тарăн.
Талпас яшсем çине эс ан пăхсам.

Эс ху — кунта, таçта лере — Моравви.
Морависĕр эс вилĕн хуйхăрса.
Тăван çĕршывшăн пур вăя хурар-и,
кирлех пулсан, парар-и пурнăçа.

Эп ăнланмастăп, çын вăл выльăх мар,
кăшт та пулин пурах ун чыслăх, намăс.
Сексспа супать халь мĕн чухлех ухмах.
Мĕн чул ураççĕ... Пылчăксăр пурнаймĕç.

Пур формула: çын ангел мар, этем.
Кама калатăр? Камсенчен кулатăр?

Çын ангел мар, анчах та — çын иккен,
çак ĕмĕрте фашизма кăклать вăл.

Эп килтĕм ыр сунса. Ах, сапăр тăвăр.
Кунпа çеç пĕтмĕ тус-тăван юрри.
Эп кĕвĕлерĕм, Прага, пилĕк сăвă —
кашни сăртна пĕр палăк пултăр-и.

Кăмăлăра — мухтав тесе юрлатăп,
чечен хула, хаваслă хĕрача.
Юрланă май тăванлăха ырлатăп,
çак çут тĕнчешĕн хытă хăраса.

5. Таса куççуль сентименталлĕ мар.
Чун кӳтнипе йĕрекенсем сăваплă.
Хальрех кăна сана эп палламан,
халь, ак, питне куççульпеле çăватăн.

Епле маттур эс, пиçĕ, яштака.
Епле эс çамрăк, йĕкĕт пек хастарлă.
Тăван килтен каяссăн салтака,
çӳçне те йĕкĕтле хитре кастарнă.

Çат тытакан шур блузки — тамаша.
Çат тытакан хĕр брюкийĕ. Ах, мода...
Сана питрен пăхма эп тăрăшап,
чăрлаттарса пăхатăн эсĕ ху та.

Чĕрӳ сикет сан кайăк чĕппилле.
Куç хăрпăкĕ — çăра, хура та вăрăм.
Юлашки хут сăмах ман чĕнмелле —
çул айккинче ална сĕлтсе час тăрăн.

Черченкĕ эс, хăратăп сĕртĕнме.
Сыв пул теме чунтан-вартан хăратăп.
Сыв пул, сыв пул. Каятăп килĕме.
Ĕмĕрлĕхе çакна асра хăварăп.

Ун сӳнмĕ çулăмĕ мĕн ĕмĕрне.
Вăл çутăлнă мана телей кӳмешкĕн.
Тепре курмашкăн пӳрнĕ е пӳрмен?
Е çырнă çаплипех çĕре кĕмешкĕн?

Вилме выртсан та, вилĕм умĕнче
телейлĕ вăхăта умра укалăп,
тек пăшăлтатăп юрату çинчен,
сана каламанне турра эп калăп...

## Эпилог

*Ах, Прагăна каллех каяс килет ман.*
М.И. Цветаева

Йăлтах — пурте — яланлăха — пĕтет, иртет,
анчах унта, аллейăсен сулхăнĕнче,
е шавлă площадьре, е çӳллĕ кĕперте,
çаплах куратăп-ха, куратăп халиччен —
хама. Тен, хам вилсен те, чылайччен,
пĕр çул, ик çул, вун çул, çĕр çул,
эс пулнă, эс çӳренĕ çĕрсенче,
пуç янă мĕскĕн пек, тем шырĕ чун.

Хĕвеллĕ тĕтрере такам таçта уткалĕ.
Каç-каç, çап-çутă уйăх çĕкленсен,

çĕклениччен те, вăрттăн курăнкалĕç
темле сăнсем, тĕссем те мĕлкесем.
Тем пăшăлтатĕ, кăштăртатĕ, çĕтĕ.
Чун çеç — каллех — пĕртен-пĕр —
юлĕ шăплăхра.
Чунсен пĕрлешĕвĕ — телейĕм —
ылтăн çĕрĕ —
юмах пулса, чыс курĕ халăхра.

Ах, Прага, Прага...

*1976*

## ПУРĂНАТĂП

*Поэма*

1. Вăрçă чух эп килнĕ,
урлă килнĕ —
çуралаймĕ терĕр пуль.

Пĕчĕккĕех пулнă,
начар пулнă —
çын пулаймĕ терĕр пуль.

Пуçăмах айванччĕ,
чунăм çамрăк —
епле пурăнĕ-ши терĕр пуль.

Сăнăм та çук,
пĕвĕм те çук —
мĕнле хĕр пăхĕ-ши терĕр пуль.

Ăсăм та çук,
ятăм та çук —
ырă кун курмĕ те терĕр пуль.

2. Сăмахăр тăрантрĕ —
какăртăм.
Пуçа нуша ӳкрĕ —
макăртăм.

Çамрăк пуçа ятăм
эп ирĕке,
чĕлкĕм куç хупмарăм
çĕр-çĕрĕпе.

Хуйхăсенчен майпен иртрĕ
пуçăм.
Хура куççулĕсем типрĕç
куçăн.

3. Çуралтăм та пурăнатăп çав,
хăямат.
Çын пултăм та пурăнатăп,
хăямат.
Пурнатăп-ха, вилмерĕм вĕт,
хăямат.
Авлантăм та пурăнатăп,
хăямат.
Ыр кун, чăн та, курман ĕнтĕ,
хăямат!

4. Пуçтахсене пуçтах тенĕрен,
ухмахсене ухмах тенĕрен,
вăрăсене вăрă тенĕрен,
ӳсĕрсене ӳсĕр тенĕрен —

чаплă тетересшĕн чаплисем,
муллă тетересшĕн муллисем,
ăслă тетересшĕн ăслисем,
чунлă тетересшĕн чунлисем.

Чапли те тухать те чапсăра,
мулли те тухать те мулсăра,
ăсли те тухать те ăссăра,
чунли те тухать те чунсăра —

пуçтах терĕм эп пуçтахсене,
ухмах терĕм эп ухмахсене,

вăрă терĕм эп вăрăсене,
ӳсĕр терĕм эп ӳсĕрсене.

5. Пăхас килет
ыр çын кусĕнчен.
Пăхас килмест
эсрел кусĕнчен.

Ай, сахал-çке
ырă çынисем.
Ай, нумай-çке
эсрел-этемсем.

Курас килет
чун саваканне.
Курас килмест
чун савманнине.

Ай, сахал-çке
чун саваканни.
Ай, нумай-çке
чунăм савманни.

Юрлас килет
савăк вăхăтра,
йĕрес килет
хурлă самантра.

Ай, сахал-çке
савăк вăхăтсем.
Ай, нумай-çке
хурлă самантсем.

6. Эсĕр хурлă пулсан-и,
макăрмасăр тăрас çук.
Эсĕр хурлă пулас çук,
нихăçан та йĕрес çук.

Эсĕр юрăç пулсан-и,
юрламасăр тăрас çук.
Эсĕр юрăç пулас çук,
нихăçан та юрлас çук.

Эсĕр ташăç пулсан-и,
ташламасăр тăрас çук.
Эсĕр ташăç пулас çук,
нихăçан та ташлас çук.

Эсĕр сăвăç пулсан-и,
чăн-чăн этем пулсан-и,
алла перо тытас çук.
Эсĕр этем пулас çук,
перо алран ярас çук.

7. Çуралтăн-тăк, тăван,
ӳсес пулать —
çутçанталăк чысне
хаклас пулать.

Ĕçтереççĕ сана,
çитереççĕ,
таса тумпа шкула
çӳретеççĕ.

Вĕрентеççĕ сана,
ăс параççĕ,

маттур пултăр тесе
тăрăшаççĕ.

Маттур пулас пулать,
пĕлес пулать,
атте-анне чысне
çĕклес пулать.

Эпир вĕсен шанчăк
çуначĕсем,
пĕтĕм Чăваш çĕрĕн
ĕмĕчĕсем.

Тăван Раççей пулас
ĕçченçисем,
пĕтĕм çĕрĕн-шывăн
сыхлавçисем.

Пурнас пулать, тăван,
ĕçлес пулать,
Тăван çĕршыв чысне
упрас пулать.

Йĕксĕк нумай тетĕн.
Мĕн тăвар-ши?
Уншăн Тăван çĕршыв
айăплă-ши?

Хальччен хăçан йĕксĕк
сахал пулнă?
Малашне те пулĕç.
Çапла — пурнăç.

Тавăрас та пулать,
пулăшас та.
Тарăхас та пулать,
лăпланас та.

Выляс пулать, тăван,
кулас пулать —
çамрăк пуç та часах
ватта юлать.

Ĕçес пулать, тăван,
çиес пулать,
юрлас пулать, тăван,
ташлас пулать.

Юратас та пулать,
кĕвĕçес те.
Хирĕçес те пулать,
килĕшес те.

Пурнас пулать, тăван,
пурăннă чух.
Пурнăçран лерелле —
нимĕн те çук.

Пурнас пулать нумай —
мĕн виличчен,
куçран куç çутийĕ кайиччен,
куçран куç çутийĕ, ай, кайиччен,
йĕм тĕпĕсем çĕре перниччен.

Утайми пулсан та
пурнас пулать.

Пурнас килмесен те
пурнас пулать...

8. Сан патна пымасăр,
кам патне пырас-ха,
тăванăм?

Санпа калаçмасăр,
кампа калаçас-ха,
тăванăм?

9. Эпĕ пĕччен,
эсĕ пĕччен,
пиртен пĕчченни
татах пур-ши?

Эпĕ кичем,
эсĕ кичем,
пиртен кичемми
татах пур-ши?

Эсĕ тăлăх,
эпĕ тăлăх,
пиртен тăлăххи
татах пур-ши?

Эсĕ маттур,
эпĕ айван,
манран айванни
татах пур-ши?

Эсĕ ăслă,
эпĕ ухмах,

манран ухмаххи
татах пур-ши?

Эпĕ мĕскĕн,
эсĕ мĕскĕн,
пиртен мĕскĕнни
татах пур-ши?

Эпĕ чухăн,
эсĕ чухăн,
пиртен чухăнни
татах пур-ши?

Эсĕ халсăр,
эпĕ халсăр.
Эсĕ харсăр пуль хуть,
шеремет!

10. Улăхра теç
çĕлен шăхăрать —
шăхăрсан та,
сайра шăхăрать.

Ман пекки,
уйрăмах сан пекки,
çуралсан та,
сайра çуралать.

11. Çăкăрсăра çăкăр
парăттăмăр,
çĕтĕкскере тум-юм
парăттăмăр,

килсĕрскере кил-çурт
парăттăмăр,
сывлăхсăра сывлăх
парăттăмăр,
мăшăрсăра мăшăр
парăттăмăр,
савнисĕре савни
парăттăмăр,
телейсĕре телей
парăттăмăр,
укçасăра укça...
памăттăмăр,
ик аллине пĕр ĕç
парăттăмăр.

12. Мĕн пуррине, тăван,
парас пулать.
Пирĕн мĕн пур, кала,
хăçан пулать?

Пирĕн мĕн çук, кала!
Чухлас пулать.
Чунра мĕн пуррине
парас пулать.

13. Сăмахăма вырăна хумарăр —
чул касаймĕ терĕр пуль.

Юррăма хăлхана чикмерĕр —
кĕр-кĕрлеймĕ терĕр пуль.

Ĕмĕтĕмрен кулма шутларăр —
пурнăçланмĕ терĕр пуль.

Тӗрӗс ҫултан пӑрма хӑтлантӑр —
ҫул тупаймӗ терӗр пуль.

14. Сывӑ пулӑр, тес-и?
сывӑ пулӑр.
Кунсем вӗлт! иртеҫҫӗ.
Сыхӑ пулӑр.

Сиссе те юлаймӑр,
иртӗ ӗмӗр.
Ҫитсе те ҫитеймӗр,
ҫӗтӗ ӗмӗр.

Пурӑннӑ чух, туссем,
пурӑннӑ чух,
курса-илтсе пурнӑр,
пурӑннӑ чух.

Туйса-сиссе тӑрӑр
ҫак тӗнчене,
куҫ ҫути пек упрӑр
ун ҫутине.

Сывӑ пулӑр, атьсем,
сывӑ пулӑр.
Ан ҫухатӑр ҫутта,
сыхӑ пулӑр.

*1976*

**ТУПМАЛЛИ**

Кăнтăр çилĕ . . . . . . . . . . . . . . 5
Доярка . . . . . . . . . . . . . . 6
Хĕр юрăçа . . . . . . . . . . . . . 7
Пăхма кăна... . . . . . . . . . . . 8
Талант çук пирки ӳпкелешни . . . . . . 9
Куçăхасран хăракан хĕрсене . . . . . . 10
Лида . . . . . . . . . . . . . . 11
«Тул çути хура вăрман çинче» . . . . . 12
Çурхи . . . . . . . . . . . . . . 13
«Ман санпа ăнăçмасть калаçу» . . . . . 14
Хулари тăкăрлăк . . . . . . . . . . 15
Лантăш . . . . . . . . . . . . . 16
Эсĕ . . . . . . . . . . . . . . 17
Вутăш . . . . . . . . . . . . . 18
Муза . . . . . . . . . . . . . . 19
Киреметай . . . . . . . . . . . . 20
Çĕрлехи шăплăх . . . . . . . . . . 22
Чистай паркĕ . . . . . . . . . . . 23
Тĕттĕм çĕр . . . . . . . . . . . . 24
Тавах . . . . . . . . . . . . . . 25
Этем хăраххи . . . . . . . . . . . 26
Усал сунакансене . . . . . . . . . . 27
«Сĕт» . . . . . . . . . . . . . . 28
Чĕкеçĕм, таврăн . . . . . . . . . . 29
Кăвайт . . . . . . . . . . . . . 30
«Çук çур та, шăпчăк та çак пĕчĕк хулара» . 31
Лайăх ачана . . . . . . . . . . . . 32
Хула çĕрле . . . . . . . . . . . . 33
«Тулта сенкер март... Сан енне» . . . . . 35
Вутчуль . . . . . . . . . . . . . 36
Чĕкеç чĕпĕ кăларсан . . . . . . . . . 37
Аксу вальсĕ . . . . . . . . . . . . 38
Медсестрана . . . . . . . . . . . . 39

Палатăра . . . . . . . . . . . . . . 40
Юрату пĕтни . . . . . . . . . . . . . 41
Ачаллă арăм . . . . . . . . . . . . . 42
«Училище хĕрĕсемех» . . . . . . . . . 43
Чиперккесем . . . . . . . . . . . . . 44
Тĕрме сачĕ . . . . . . . . . . . . . 45
Пĕчĕкçеççĕ хула . . . . . . . . . . . 46
«Çул инçе. Ăшăнсан, чей ĕçсен» . . . . . 47
«Хăш те пĕри, те кулянать, те хĕпĕртет» . . 48
Украина хĕрĕ . . . . . . . . . . . . 49
Йăнăш . . . . . . . . . . . . . . 50
Куба симфонийĕ . . . . . . . . . . . 51
Епле майпа? . . . . . . . . . . . . 53
Айăпли . . . . . . . . . . . . . . 54
Сестра . . . . . . . . . . . . . . 55
Çутă ир . . . . . . . . . . . . . . 56
Ерçейменрен . . . . . . . . . . . . 57
Шухăш-ĕмĕт . . . . . . . . . . . . 58
Пульницара . . . . . . . . . . . . 59
Хăват . . . . . . . . . . . . . . 60
Уйăхлă каç . . . . . . . . . . . . . 61
Эп çӳрекен садра . . . . . . . . . . . 62
Йăмăк . . . . . . . . . . . . . . 63
Ан юл . . . . . . . . . . . . . . 64
Илемпи . . . . . . . . . . . . . . 65
Çурхи кушаксем . . . . . . . . . . . 68
Ăнăçу . . . . . . . . . . . . . . 70
Автоэпиграмма . . . . . . . . . . . 71
Пăру пăхакана . . . . . . . . . . . 72
Юратнă пике . . . . . . . . . . . . 73
Хĕвел аннă чух . . . . . . . . . . . 75
Августра та... . . . . . . . . . . . 76
«Çак пурнăçăн шак хытă мăйăрне» . . . . 77
«Хама хам эп чăн-чăн çын тесен» . . . . . 78
Ссылкăри Митта . . . . . . . . . . . 79

Йăрăм çутă ўкрĕ пĕлĕте . . . . . . . . . . 80
Моряк саламĕ . . . . . . . . . . . . . 81
Тĕллев — умри çутă . . . . . . . . . . 82
Уйăх хĕрĕ . . . . . . . . . . . . . 83
Романтик . . . . . . . . . . . . . 84
Çамрăксен ĕçкинче . . . . . . . . . . 85
Вăл . . . . . . . . . . . . . . . 87
Шурă пион . . . . . . . . . . . . . 88
Кĕтни . . . . . . . . . . . . . . 89
Шухăшсемĕн юхăмĕ . . . . . . . . . . 91
Хусканнă чун . . . . . . . . . . . . 92
Тантăшăмсене . . . . . . . . . . . . 93
Хĕвелсем . . . . . . . . . . . . . 94
Тамара — Джульетта . . . . . . . . . . 95
Уралта . . . . . . . . . . . . . . 98
Аннеме . . . . . . . . . . . . . . 99
Çĕнĕ тусăма . . . . . . . . . . . . 100
Йĕкĕт . . . . . . . . . . . . . . 101
Ленин çулĕпе . . . . . . . . . . . . 102
Ан пăшăрхан эс, аннемĕр . . . . . . . 103
«Вера, Вера, асамат кĕперĕ» . . . . . . 104
«Пĕррене анчах савар тени вăл догма» . . 105
«Хыт йăнăшатăп, хытă йăнăшатăп» . . . . 106
Яшлăх иртсен . . . . . . . . . . . . 107
Каçхи хулара . . . . . . . . . . . . 108
Юр тасалăхĕ . . . . . . . . . . . . 109
«Ан тив, суха тăвам» . . . . . . . . . 110
«Хурласассăн ĕлĕк питĕ хурланаттăм» . . 111
«Вăхăтлăха кĕрсе тухасшăн» . . . . . . . 112
«Тăратăн эсĕ çичĕ хĕр тĕшне» . . . . . 113
Чăтăмлăх . . . . . . . . . . . . . 114
«Мессалина пек асса пурнасшăн» . . . . 115
«Пусрăнчăк ман юррăм, пăтрануллă» . . . 116
«Мĕн чухлĕ пурăннă — ним туманпа пĕрех» . 117
«Эп пĕлместĕп: мĕн туртать мана» . . . . 118

«Ман пекки вуншар-тăр пулнă санăн?» . . 119
«Сан куç хĕлхемĕсен ӳпкевĕ» . . . . . . 120
«Çырă çӳçлĕ тусăм, лăпкă тусăм» . . . . 121
«Пуриншĕн те кунта эп ют» . . . . . . 122
Тавтапуç . . . . . . . . . . . . . 123
«Пĕр çĕрте ларма эп кăлăк чăххи мар-ха» . 124
Чалăш çумăр . . . . . . . . . . 125
Салтак ачисем . . . . . . . . . . 126
Пилеш . . . . . . . . . . . . . 127
Инçетри çăлтăр . . . . . . . . . 128
Трактористка . . . . . . . . . . 129
Икĕ кĕпер . . . . . . . . . . . 131
«Çитменлĕхĕм ман çитмĕл. Майсăр-шывсăр» . 132
Хĕр поэт . . . . . . . . . . . . 133
Çулçăсем . . . . . . . . . . . 134
Сӳнмĕп эп . . . . . . . . . . . 135
Шурăмпуç . . . . . . . . . . . 136
«Пурччĕ шанчăкăм ман, юлашкиччĕ» . . 138
Сольвейг юрри . . . . . . . . . . 139
«Çырупа пĕрле тюльпан чиксе эс янă» . . 140
Аслă саккун . . . . . . . . . . 141
Университет . . . . . . . . . . 142
Вива Куба . . . . . . . . . . . 143
Пĕр мистере . . . . . . . . . . 144
Салам . . . . . . . . . . . . 145
Чыс (поэма) . . . . . . . . . . 147
Уяв ĕшни (поэма) . . . . . . . . . 154
Ĕмĕтри курăнусем . . . . . . . . . 217
Хусанти университетра . . . . . . . 218
Юратнă поэт . . . . . . . . . . 219
Çыннăмсем . . . . . . . . . . . 220
Хĕрачасем . . . . . . . . . . . 221
«Çырă Люся. Шурă юр...» . . . . . . 223
Суялăх . . . . . . . . . . . . 224
Тӳпе . . . . . . . . . . . . . 225

«Пикесемшĕн çунаттăм, çунаттăм» . . . . 226
«Çил-тăманлă сивĕ тĕттĕм çĕрĕн» . . . . . 227
«Ял хĕрри çăкалăх» . . . . . . . . . . 228
Хăшпĕрисене . . . . . . . . . . . . 229
Атăл хĕрринче . . . . . . . . . . . 230
Кинсене хӳтĕлесе . . . . . . . . . . 231
«Çурхи васан мĕскер юрлать ыр чунлăн?» . 232
Вĕçев . . . . . . . . . . . . . . . 233
Хумхану . . . . . . . . . . . . . . 234
Çулçăсем тăкăнаççĕ . . . . . . . . . 235
«Шанатăп. Ĕмĕте усратăп... (поэма) . . . . . 236
«Çирĕммĕш ĕмĕр...» . . . . . . . . . . 245
Çерем çĕрсен çути . . . . . . . . . . 246
Отряд уставĕ . . . . . . . . . . . . —
Стройка кĕвви . . . . . . . . . . . . 247
Вăрăмтунасем . . . . . . . . . . . . 248
Стройка поэми . . . . . . . . . . . . 249
Вăрăмтунапа кашкăр . . . . . . . . . 250
Традици . . . . . . . . . . . . . . 251
Юрлатпăр... . . . . . . . . . . . . . 252
Студент фольклорĕнчен . . . . . . . . 253
Квартирьерсем . . . . . . . . . . . . 254
Шефсем . . . . . . . . . . . . . . 255
Мĕн хитре? . . . . . . . . . . . . . 257
Королева . . . . . . . . . . . . . . 258
Кирпĕчпе тăм . . . . . . . . . . . . 259
Повар . . . . . . . . . . . . . . . 260
Соня тантăш . . . . . . . . . . . . 261
Тарантулпа скорпион . . . . . . . . . 262
Çеçенхирте . . . . . . . . . . . . . 263
Ялав . . . . . . . . . . . . . . . 264
Кĕрешӳре... . . . . . . . . . . . . . 265
Пĕр йĕкĕте . . . . . . . . . . . . . 266
Хамăр ирĕкпе . . . . . . . . . . . . 267
Пирĕн ăнăçу . . . . . . . . . . . . 268

Çăкăр . . . . . . . . . . . . . . 269
«Çерем çĕр» планета . . . . . . . . 270
Анчăк юрри . . . . . . . . . . . 271
Мунча тăвакансен юрри . . . . . . . 272
Стройотряд гимнĕ . . . . . . . . . 273
Комиссар . . . . . . . . . . . . 274
Çерем çĕрсен çути . . . . . . . . . 277
Сăвă таврăнни . . . . . . . . . . 278
Çеçенхир варринче . . . . . . . . 279
Çулсем . . . . . . . . . . . . . 280
Пĕлмеççĕ . . . . . . . . . . . . 281
Хĕвел аннă вăхăт . . . . . . . . . 282
Çурта . . . . . . . . . . . . . . 283
Акростих . . . . . . . . . . . . 285
Ачалăхăм, ачалăх . . . . . . . . . 286
Пĕлĕш . . . . . . . . . . . . . 287
Саврăшпуç . . . . . . . . . . . . 288
«Урамсенче — çурхи хавас шывсем» . . . 289
«Тухрăм эпĕ урама» . . . . . . . . 290
«Ĕненмелле илемлĕ суйрăмăр» . . . . . 291
Хавaслă хĕрача . . . . . . . . . . 292
Эс килмесессĕн те килен . . . . . . 293
Савнин савниййĕ . . . . . . . . . 294
Çумăрлă каç . . . . . . . . . . . 295
Инçе çулсем (поэма) . . . . . . . . 298
Саврăш енĕ (поэма) . . . . . . . . 312
Пултарулăх . . . . . . . . . . . 323
«Эп сана вăрçмастăп, кӳренместĕп» . . . 324
Йĕкĕтсене . . . . . . . . . . . . 325
«Мĕншĕн манăн савнисем нумаййăн» . . 326
«Пĕртен-пĕр тус, чи шанчăклă юлташăм» . 327
«Тус нумай. Чăнни пĕр иккĕ-виççĕ» . . . 328
Нăйăлтисем . . . . . . . . . . . 329
Общежити . . . . . . . . . . . . 330
Туййăмсем . . . . . . . . . . . . 332

«Туссем, туссем, хастарлă ачасем» . . . . 333
«Ĕнтĕ эс хĕвелĕн туйăнатăн» . . . . . . 334
«Лăпкă тунсăхлă, лăпкă хаваслă» . . . . . 335
«Паян эс, Люся, хăю çыхман» . . . . . . 336
Тĕнче хĕрри . . . . . . . . . . . . . 337
«Черкке чанклаттарса черкке тĕплетпĕр» . . 339
Хурăнлăхра . . . . . . . . . . . . . 340
Мĕскершĕн? . . . . . . . . . . . . . 341
Савкаçри урам . . . . . . . . . . . . 342
Ютра . . . . . . . . . . . . . . . 343
Паянтан . . . . . . . . . . . . . . 344
Мĕнле капла? . . . . . . . . . . . . 345
Хреснай анне . . . . . . . . . . . . 346
Сениэль тăваççĕ . . . . . . . . . . . 347
Вăрттăнлăх . . . . . . . . . . . . . 349
Ĕмĕртенхи . . . . . . . . . . . . . 350
Тĕлĕксем . . . . . . . . . . . . . . 351
Çыврăр, çыврăр . . . . . . . . . . . 354
Шăплăх . . . . . . . . . . . . . . 356
Хама хам калани . . . . . . . . . . . 357
Юр çăвать . . . . . . . . . . . . . 358
Эрхип, Эрхип . . . . . . . . . . . . 360
«Тĕттĕм çĕр. Уçă çил. Йĕпе тăман» . . . . 361
Пархатарлă меланхоли . . . . . . . . 362
«Нумай пулать ятлаçманни» . . . . . . 364
«Ялйышăмăн поэзийĕ — çăкăр-тăвар» . . . 365
Кĕрхи уяр кунсем . . . . . . . . . . 367
«Чуна парса эп туртăнман ĕçке» . . . . . 368
«Пĕччен чухне хама эп хам хуçа» . . . . . 369
Вăрăм çул . . . . . . . . . . . . . 370
Ăс вĕрентни . . . . . . . . . . . . 371
Импровизаци . . . . . . . . . . . . 373
«Пĕчченлĕхе мухтасшăн çунса мар» . . . 374
«Ытла та ир эп ывăнтăм, ытла та» . . . . 375
«Манпа ĕçсене татсассăн» . . . . . . . 376

Поэт . . . . . . . . . . . . . . 377
Вĕçĕмсĕрлĕх баллади . . . . . . . . . 378
«Эс мана ютпа улăштарсассăн» . . . . . 379
Ялта . . . . . . . . . . . . . . 380
«Такăнтăм. Çакна нумайййăн курчĕç» . . . . 381
Çĕмĕртсем çеçкере . . . . . . . . . 382
Çĕр хăлăпĕ . . . . . . . . . . . . 383
Çăлтăр . . . . . . . . . . . . . 385
«Ĕнтĕ иккĕ сывлăх сунтăн» . . . . . . 386
Эпĕ çыратăп . . . . . . . . . . . 387
Юлашки юн тумламĕсем (поэма) . . . . . 388
Çеçпĕл монологĕсем . . . . . . . . . 390
Кам мĕнле хушать . . . . . . . . . . 408
Ялта чухне . . . . . . . . . . . . 409
Гамзатов . . . . . . . . . . . . . 410
Тăван çĕршыв . . . . . . . . . . . 411
Сывă пултăр Вьетнам! . . . . . . . . 412
Шăллĕсен сăмахĕ . . . . . . . . . . 414
Июль касĕ . . . . . . . . . . . . 415
Ылтăн хăйăр . . . . . . . . . . . 416
Шаланкă . . . . . . . . . . . . . 417
Хĕлхем . . . . . . . . . . . . . 418
Юраманни . . . . . . . . . . . . 419
Хумсем . . . . . . . . . . . . . 420
Хунарсем . . . . . . . . . . . . 421
Халь эпĕр... . . . . . . . . . . . 422
Çарран ачалăх . . . . . . . . . . 423
Çамрăк кĕтӳç юрри . . . . . . . . . 424
Чечек çыххи . . . . . . . . . . . 425
Тĕпсĕр çăл . . . . . . . . . . . . 426
Вăрман çулĕ . . . . . . . . . . . 427
Утарта . . . . . . . . . . . . . 428
«Самолетсем вĕçеççĕ» . . . . . . . . 429
Музыка . . . . . . . . . . . . . 430
Мăкăнь çеçки . . . . . . . . . . . 431

Асаилӳ . . . . . . . . . . . . . . 432
Сыснасем . . . . . . . . . . . . . 433
Каçхи çилсем . . . . . . . . . . . 434
Шухăшлатăп та... . . . . . . . . . 435
Вальс . . . . . . . . . . . . . . 436
Апрельти çил-тăман . . . . . . . . 437
Çулла . . . . . . . . . . . . . . 438
Çуллахи ир . . . . . . . . . . . . 439
Ачалăхри аслатиллĕ çумăр . . . . . 440
Вĕрене çулçи . . . . . . . . . . . 441
Çуралнă çĕршыв . . . . . . . . . . 442
Тĕтре витĕр . . . . . . . . . . . 443
Пĕве хĕрринче . . . . . . . . . . 444
Есенина асăнса . . . . . . . . . . 445
Кĕтӳпе сывпуллашни . . . . . . . . 446
Пĕр поэта . . . . . . . . . . . . 447
Хветĕр Хурăнай . . . . . . . . . . 448
Хусанкай . . . . . . . . . . . . . 449
Сăмахăмсем... . . . . . . . . . . 450
Евĕр юрă . . . . . . . . . . . . . 451
Çил çинчи çулçăсем . . . . . . . . 452
«Шăпа пире кастет та пуля» . . . . . 453
Манăн айăп . . . . . . . . . . . . 454
Иртнĕ кунсем . . . . . . . . . . . 455
«Юр та юр... Юр çăвать... пуш-пушă» . . . . 457
Анне, анне . . . . . . . . . . . . 458
Чăнлăх вучĕ . . . . . . . . . . . 460
Чĕр чечексем . . . . . . . . . . . 462
Хаяр тиркевçĕ . . . . . . . . . . 464
«Хĕр турă пекчĕ эс сăнанăçемĕн» . . . . . 465
«Сан пек чух алхасса эпир те» . . . . . . 466
Çын ăшшине туйса . . . . . . . . . 467
Мухтаççĕ . . . . . . . . . . . . . 468
«Нумай çĕре çитсе нумай юлташ эп куртăм» 470
«Эс, муза, тĕрĕс шухăшлатăн» . . . . . . 471

Эпир мар . . . . . . . . . . . . . 472
«Эс сӳнтĕн чĕрере, тен, асăмран та тухăн» . 473
Шанăç . . . . . . . . . . . . . 474
Турă . . . . . . . . . . . . . 475
Инкек . . . . . . . . . . . . . 477
«Ман юрату — шуйханнă шăпчăк» . . . . . 478
«Эпĕр пурте ăçта-тăрваскатпăр» . . . . . 479
Тĕнче палачĕсене . . . . . . . . . 480
Мăнаçлă пикесем . . . . . . . . . 481
Эсрел . . . . . . . . . . . . . 483
«Çĕр шуйттан çынра пĕр харăс» . . . . . 484
Шиклĕх . . . . . . . . . . . . . 485
«Эс йăнăшăтăн, Ипполит» . . . . . . . 486
«Сăмахпала мĕн калани» . . . . . . . 487
«Санпа сывпуллашни шăп вунă çул» . . . . 489
«Эпир каламасан чăн сăмаха кам калĕ» . . 490
«Ай! Çулçăсем...» . . . . . . . . . 491
«Эс чун тӳпине çиçсе хăпартăн» . . . . . 492
Мĕн пулчĕ? . . . . . . . . . . . . 493
«Çула тухрăм çуран, тур лашам çук» . . . . 495
Яла çитсен... . . . . . . . . . . . 496
«Пулар-и туслă, хура куçăм» . . . . . . 497
Ман пĕтĕм пурăнăç . . . . . . . . . 498
Саврăшпуç чечекĕ . . . . . . . . . 500
Килмерĕ... . . . . . . . . . . . . 502
«Епле сăпайлă çын! Хаваслă та типтерлĕ» . . 504
«Сăмах эс кĕтрĕн, кĕтрĕн, кĕтрĕн» . . . . 506
«Пĕлес çук çын ăспе пурăнмашкăн» . . . . 507
«Пуç сĕлтетĕп сире йăл кулса» . . . . . 508
Туслăх . . . . . . . . . . . . . 509
«Çук, ан кала мана ун пек» . . . . . . . 511
«Таçта та пĕр çутă, пĕр чун» . . . . . . 512
«О, яр-уççăн çуталнă самант» . . . . . . 513
Икĕ сăвă . . . . . . . . . . . . . 514
Пизо Пия! . . . . . . . . . . . . . 515

Сан йăл куллу . . . . . . . . . . . . . 516
«Яр ирĕке чунна, ан хăрасам» . . . . . . 517
Çук çын . . . . . . . . . . . . . . . 518
«Юрламăттăм эпĕ юррăма» . . . . . . . 519
«Сăнран пăхса çынна пĕлес» . . . . . . 520
«Ан пăхсам куçран, иментерен» . . . . . 522
«Пĕчченлĕх туййăмĕ... Мăнтарăн» . . . . . 523
Савнисем . . . . . . . . . . . . . . 524
Ах, эсĕ, пуçăм... . . . . . . . . . . . 526
Туй парни . . . . . . . . . . . . . . 528
Океан . . . . . . . . . . . . . . . 529
Çеçпĕл таврăнни (баллада) . . . . . . . 530
Хырсем шавлаççĕ . . . . . . . . . . . 531
Кунçул çырми . . . . . . . . . . . . 532
Офелия, аçу сана... . . . . . . . . . . 535
«Пĕр эрнере ик паллă поэта пытартăмăр» . 536
Поэзийĕм... . . . . . . . . . . . . . 537
Юлташ калавĕ . . . . . . . . . . . . 538
Космонавтсене . . . . . . . . . . . . 540
Пĕртен-пĕр пурнăçăм... . . . . . . . . . 542
Ан ӳпкеле мана... . . . . . . . . . . . 543
Камсем телейлĕ? . . . . . . . . . . . 544
Н-нари те кн-нари . . . . . . . . . . 545
Вьетнам! Вьетнам! . . . . . . . . . . 547
Ялта курнă тĕлĕк . . . . . . . . . . . 549
Шаккать сехет . . . . . . . . . . . . 550
Тускай . . . . . . . . . . . . . . . 552
Пускил . . . . . . . . . . . . . . . 553
Юратупа Ирĕклĕх (сонет кăшăлĕ) . . . . 554
«Сана кĕскен, ытарлăн мĕн каларĕç?» . . . 563
«Инçетре, пит инçетре» . . . . . . . . . 564
«Хула-и Шупашкар? Хула-тăр» . . . . . . 565
«Кала-ха, мĕншĕн пурăнатпăр» . . . . . . 566
«Савнисем ялан илемлĕ» . . . . . . . . 567
«Пит пĕлесшĕн-и, эппин пĕлсемĕр» . . . . 568

«Çĕрĕпе çĕрĕпе, çĕрĕпе» . . . . . . . 569
«Е савнăçлă эп, е кулянчăк» . . . . . . 570
«Çут тĕнче! Тĕлĕннипе» . . . . . . . 571
«Пĕр кĕпе пур, шăлавар пур» . . . . . 572
Çуртасем . . . . . . . . . . . 573
Çумăрсем (романс) . . . . . . . . 575
Ĕмĕт . . . . . . . . . . . . 576
Шыв типнĕ çул . . . . . . . . . 577
Пурнăç кĕввисем (поэма) . . . . . . 578
Чили поэчĕсене . . . . . . . . . 586
Фестиваль . . . . . . . . . . . 587
Чилири трагеди . . . . . . . . . 588
Халăх çилли . . . . . . . . . . 591
Тракторострой çути . . . . . . . . 595
Манăн çылăх . . . . . . . . . . 598
Вăрманта . . . . . . . . . . . 599
Хурăнсем кашлаççĕ . . . . . . . . 600
Çынсем, çынсем... . . . . . . . . 601
Сухара . . . . . . . . . . . . 602
Стройотряд . . . . . . . . . . 603
Рак . . . . . . . . . . . . . 604
Хĕрĕнкĕ этем . . . . . . . . . . 606
Урлов . . . . . . . . . . . . 607
Пирĕн умра . . . . . . . . . . 608
Юрланăçем . . . . . . . . . . 609
Хамăр савни . . . . . . . . . . 610
Ватăсем . . . . . . . . . . . . 611
Çĕнĕ кин . . . . . . . . . . . 612
Авăтать-ши куккук? . . . . . . . 613
Хура чĕкеç . . . . . . . . . . 614
Хуракăш . . . . . . . . . . . 615
Ăсату . . . . . . . . . . . . 618
Аттепеле анне çуртĕнче . . . . . . 619
Ăçта? . . . . . . . . . . . . 620
Пехилле-ха... . . . . . . . . . . 622

Савни . . . . . . . . . . . . . . . 623
Ултшар йёркен . . . . . . . . . 624
Çамрăк ĕмĕр . . . . . . . . . . 626
Салтак юрри . . . . . . . . . . 627
«Шурă кĕпе лайăх — ут çулма» . . . . . 628
Чун савни . . . . . . . . . . . . 629
Яш чух шутлаттăм... . . . . . . . . 630
Авалхи кĕвĕ . . . . . . . . . . . 631
Сăрлă çуна . . . . . . . . . . . 632
Хăнара . . . . . . . . . . . . . 633
Хирĕçлев сăвви . . . . . . . . . 634
Лайăх çын . . . . . . . . . . . . 635
Манăн çăлтăр . . . . . . . . . . 636
Ӳпкевсĕр . . . . . . . . . . . . 637
Ват çын юрри . . . . . . . . . . 638
Туссем патĕнче . . . . . . . . . 639
Шӳт . . . . . . . . . . . . . . . 640
Малашне те... . . . . . . . . . . 641
Кунçул . . . . . . . . . . . . . 642
Реквием . . . . . . . . . . . . . 643
Ăс кирлĕ . . . . . . . . . . . . 645
Параллель . . . . . . . . . . . . 646
Хурлакан . . . . . . . . . . . . 647
Мамале . . . . . . . . . . . . . 648
«Çынлăх çеç çынна çĕнетекен» . . . . . 649
Пĕр çынна . . . . . . . . . . . . 650
Хаяр тавăру . . . . . . . . . . . 651
Психофашизм . . . . . . . . . . 652
Шупашкарçум поселокра . . . . . 653
Тукай . . . . . . . . . . . . . . 656
Ачасем . . . . . . . . . . . . . 657
«Вил çынна вилнишĕн ӳпкелеймĕн» . . . 658
Мăкка . . . . . . . . . . . . . . 659
«Хĕçпăшалу мĕн пулнă — эп ыйтмастăп» . . 660
Кунçул тăмхи . . . . . . . . . . 661

Трактор тетпĕр... . . . . . . . . . . . . . 662
Çĕр чунĕ . . . . . . . . . . . . . . 663
Пурри . . . . . . . . . . . . . . 664
Çăлтăр çутинче . . . . . . . . . . . . . 666
«Ах, ах! тетĕп эпĕ, асăнатăп» . . . . . . . 667
Купе . . . . . . . . . . . . . . . 668
Монна Лиза . . . . . . . . . . . . . 669
Чăваш амăшĕ . . . . . . . . . . . . . 670
Çĕр çинче . . . . . . . . . . . . . . 671
Чун . . . . . . . . . . . . . . . 672
Ыр çын . . . . . . . . . . . . . . 673
Вăт, тилçе . . . . . . . . . . . . . . 674
«Пурăнăç çапах та» . . . . . . . . . . 675
Ан иккĕлен . . . . . . . . . . . . . 676
Аннеме . . . . . . . . . . . . . . 677
Фауст . . . . . . . . . . . . . . 678
Çăлнăç — Россия . . . . . . . . . . . 679
Юлашки юмах (поэма) . . . . . . . . . 681
Пурăнатăп (поэма) . . . . . . . . . . 688

**Михаил СЕНИЭЛЬ**
**(Михаил Павлович Егоров)**

# ÇЫРНИСЕН ПУХХИ
# СОБРАНИЕ СОЧИНЕНИЙ

**Том третий**

*Стихотворения и поэмы*
*на чувашском языке*


Редактор *И.П. Турган*
Художественный редактор *В.В. Садкова*
Корректор *И.П. Егоров*
Оригинал-макет *Э.В. Кирилловой*

Подписано в печать 30.09.2014
Формат $70\times108^{1}/_{32}$
Бумага офсетная
Тираж 200 экз.
Печать офсетная
Гарнитура Times
Физ. печ. л. 44,5
Заказ № К-346

Отпечатано в типографии «Новое Время»
г. Чебоксары, ул. М. Павлова, 50/1.
E-mail: newtime1@mail.ru; тел.: (8352) 41-27-98.